К814ув-921
С 32
4-47179

Л.П. СЕРГЕЕВ
Е.А. АНДРЕЕВА
Г.Ф. БРУСОВА

# Чăваш чĕлхи

# 5

Национальная библиотека ЧР
4-047179

К 81 Чув-921
С32

Л.П. СЕРГЕЕВ
Е.А. АНДРЕЕВА
Г.Ф. БРУСОВА

# Чăваш чĕлхи

**5-мĕш класс валли**

Чăваш Республикин
Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма сĕннĕ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2014

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

УДК 373.167.1:811.512.111
ББК 81.2Чув-922
С 32

«Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи» темăна ***Л.П. Сергеев,***
«Пуçламăш классенче вĕреннине аса илесси», «Синтаксис. Пунктуаци»,
«Сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ. Орфографи»,
«V класра вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси» темăсене ***Е.А. Андреева,***
«Лексика» темăна ***Г.Ф. Брусова*** çырнă

## Йышăннă паллăсем:

— теори материалĕ;

— вĕренекен хăй тĕллĕн сăнаса ăса хывмалли чĕлхе материалĕ;

— пуплев этикечĕпе çыхăннă ĕç;

— иккĕн е ушкăнпа тумалли ĕç;

— хутшăну хăнăхăвĕсене аталантармалли ĕç;

— словарьпе усă курса тумалли ĕç;

— Интернетпа усă курса тумалли ĕç;

• — хăнăхтару çумне хушса панă ĕç;

*юман*[1] — фонетика тишкерĕвĕ тумалли сăмах;

*сĕнÿсемпе*[2] — пулăвне тата тытăмне тишкермелли сăмах;

*сăпайлă*[3] — морфологи енчен тишкермелли сăмах;

*Ырă ĕçĕн хакĕ çук*[4] — синтаксис тишкерĕвĕ тумалли предложени;

*шупăр*[5] — лексика тишкерĕвĕ тумалли сăмах;

*шерепе** — ăнлантару словарĕнче пăхмалли сăмах.

**Сергеев Л.П.**

С 32 Чăваш чĕлхи: 5-мĕш класс валли / Л.П. Сергеев, Е.А. Андреева, Г.Ф. Брусова. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014. — 239 с.: ил.
ISBN 978-5-7670-2255-7

УДК 373.167.1:811.512.111
ББК 81.2Чув-922

И-47179

ISBN 978-5-7670-2255-7

© Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Брусова Г.Ф., 2014
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2014

Национальная библиотека Чувашской Республики

Проверено 16 МАР 2017

## *Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ ячĕпе сире, хаклă ачасем!*

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Чĕлхе хайне туса хунă халăхпа çеç вилет, çавăнпа халăха тăван чĕлхене манма хушни çав халăха вилме хушнипе пĕрех...

*И.Я. Яковлев*

**1.** Вулăр. Тăван чĕлхе пирки паллă ăсчах мĕн каланине ăнланма тăрăшăр. Тăван чĕлхене лайăх пĕлни пурнăçра питĕ кирлĕ пулнине тĕслĕхсемпе ĕнентерсе парăр.

Хайне хисеплекен кирек мĕнле халăх та тăван чĕлхине пысăк пуянлăх вырăнне хурса хаклать, мĕншĕн тесен ăна вăл нумай ĕмĕрсем тăршшĕнче тĕрлĕ йывăрлăх тӳссе, аталантарса, ӳстерсе пынă, хăй ăс-тăнĕпе кăмăлĕн уççи туса çитĕнтернĕ. Тăван чĕлхе пулăшнипе кашни çын мĕн ачаран хăй таврашĕнчи тĕнчене ăнкарса пырать, пурнăç пулăмĕсене ăнланма, ăс-хакăлне ӳстерме вĕренсе пырать. Этем тени тăван амăш, тăван халăх чĕлхисĕр йĕркеллĕ, пур енлĕ ӳсеймест.

Тăван чĕлхе пуянлăхне аван пĕлекен çын ытти чĕлхесене те хăвăртрах тата ансатрах вĕренсе çитни нумай çыншăн паллă. Ахаль мар И.Я. Яковлев нумай чĕлхе пĕлекенсене картса: «Икĕ чĕлхе — икĕ ăс, виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс», — тенĕ.

Тăван чĕлхене лайăх пĕлни тепĕр чĕлхене вĕренме, унăн уйрăмлăхĕсене тĕплĕнрех ăнланма, çавна май ытларах пĕлӳ туянма пулăшать. Пĕр чĕлхене кăна пĕлнипе кăнăçни*, паллах, çын тавра курăмне ирĕксĕрех ансăрлатать. (*М.Я. Сироткин*, профессор.)

**2.** Вулăр. Сирĕн шутпа, текстăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Ку шухăшпа эсир килĕшетĕр-и? Мĕншĕнне ăнлантарăр.

«Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен», — тетпĕр эпир. Эпĕ хам та ĕмĕр тăршшĕпех вĕренме ĕмĕтленетĕп.

Чи кирлĕ, чи хисеплĕ предмет вăл — тăван чĕлхе. Унта тăван çĕршыв, пурнăç, тăван халăх, унăн ĕмĕчĕ, телейĕ. Ĕмĕр пурăн тăван çĕршывра, ĕмĕр вĕрен тăрăшса тăван чĕлхене. (*Г.Н. Волков,* академик.)

**3.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр. Вĕсен пĕлтерĕшне ăнланăр. Çывăх пĕлтерĕшлĕ тĕслĕхсене тупса палăртăр.

1. Ăс тенине мĕн виличчен пухаççĕ. 2. Шур хут çине çырнине кĕреçепе хырма çук. 3. Сăмахпа каличчен пуç тавра виççĕ çавăрса шухăшла. 4. Çăвартан тухнине утпа хуса çитеймĕн. 5. Этем ырă ăсĕпе. 6. Çăкăра чăмласа çи, сăмаха шухăшласа калаç. 7. Ырă сăмах тутлă апатран та лайăх. 8. Чĕлхеллĕ çын Чĕмпĕрте* те вилмен. 9. Чĕлхӳ каланине пуçу пĕлсе тăтăр. 10. Чĕлхе Мускава çитернĕ.

- Асăннă пĕлтерĕшлĕ ваттисен сăмахĕсене татах пĕлетĕр-и?
- Кунта кăтартнă ваттисен сăмахĕсене астуса юлăр.

**4.** Кам нумайрах? Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çĕр çинче пилĕк пине яхăн чĕлхе пур. Эсир мĕнле чĕлхесем çинчен пĕлетĕр? Вĕсемпе хăш çĕршывсенче усă кураççĕ? Каласа пама хатĕрленĕр.

# ПУÇЛАМĂШ КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛЕССИ

## 1. Сасă тата сас палли. Алфавит

**5.** Çак сăмахсенче миçе сасă тата миçе сас палли?

Лайăх, аван, *юман*, япала, *турат*, *турать*, суя, кая, уяр, пуян.

- Мĕншĕн сасăсемпе сас паллисен хисепĕ пĕрешкел мар?
- Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса калăр.

**Аса илĕр!**

Пуплеври сасăсем сăмахсен пĕлтерĕшне уйăрса илме пулăшаççĕ: *курак — кушак, сава — çава, авăк — авăн, пур — пăр.*

**6.** Сăмахсене вулăр, тишкерĕр. Вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăнине калăр.

Пар, пер, пур, пӳр, пыр, пир, пăр, пĕр; курак, кушак; çумăр, çухăр; тăван, пăван; савăн, савăл; карап, карас; вĕрен, кĕрен.

- Малтанхи виçĕ ушкăна кĕрекен сăмахсенчен икшер сăмах суйласа илĕр те предложенисем туса çырăр.

**7.** Çак сăмахсен пуçламăшĕнчи хупă сасăсене улăштарса пырса миçе сăмах тума пулать? Уçă сасăсене улăштарса пырсан мĕнле сăмахсем тума май пур?

Сар, каç, пуç, тат.

Тĕслĕх: *сар — тар, кар, пар...; сар — сур, сир, сăр...*

• Пулнă сăмахсем пĕр-перинчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

**8.** Кам маларах? Вулăр, тупсăмĕсене тупăр. Мĕнле сас паллисем сăмах пĕлтерĕшне улăштарчĕç?



1. Т-пала чухне, паллах,
Татăлса ÿкетĕп.
Пуçлансассăн К-пала
Мана эс кÿлетĕн.
Улăштар çеç Х-пала,
Питĕ çÿллĕ тетĕн.



2. Кушакран ялан хăратăп,
Таратăп эп ăна курсан.
Йывăççене хĕлле кăшлатăп
Пĕр сас палли улăштарсан.

(*«Тантăш»* хаçатран.)

**9.** Текста вулăр, ят парăр. Паллă тунă сăмахсенчи сасăсемпе сас паллисен шутне калăр. Сасăсемпе сас паллисен хисепĕ мĕншĕн пĕрешкел маррине ăнлантарăр.

Тăван *ял*, тăван кĕтес... Унран хакли, лайăххи мĕн пултăр-ха тĕнчере! Эпир унта ÿссе çунат сарнă. Ĕçе хăнăхса çын шутне кĕнĕ. Урăх вырăнта ĕçлеме, пурăнма тÿр килсен те тăван ял пурпĕрех манăça тухмасть[3]: чĕрере, чи шалта сыхланса юлать. Нимĕн те калаймăн: тăван ял вăл — пĕртенпĕрре.

Акă *хальхинче* те яла çав тери çĕкленÿллĕн, телейлĕн, кайăк пек çунатланса çитсе кĕтĕм. Тăван ял йăмрисем *тÿлеккĕн* пăшăлтатса ырă сунчĕç, чун-чĕре ăшă туйăмпа тулчĕ. (*В. Алентей* çырни тăрăх.)

• Алфавит йĕркипе текстран пĕрер сăмах суйласа çырăр. Хăш сас паллисемпе сăмахсем тĕл пулмарĕç? Çав сас паллисемпе пуçланакан сăмахсене хăвăртан тупса çырăр.

**10.** Çак сăмахсен ушкăнĕсене вулăр, вĕсене танлаштарăр. Сăмахсенчи *е, ю, я* сас паллисем пĕр е икĕ сасса пĕлтернине сăнăр, пĕтĕмлетӳ тăвăр.

1) Выля, салют, ĕне; 2) япала, юман, ешĕл; 3) хăяр, каю, чее.

## 2. *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллисене çырасси

**11.** Сăмахсене вулăр. Вĕсенчен хăшĕсене вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннине калăр.

Паян, бригадир, паттăр, герой, подъезд, пахча, шăнкăрав, галстук, дневник, сад, тăван, библиотека, завод, диван, шурлăх, журнал, мухтав, балкон, юмах, запас, жираф, футбол, орден, çыру, диктант, клуб, лагерь.

- Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илĕр. Вĕсене мĕнле çырмаллине астуса юлăр.
- Çав сăмахсенчен икĕ сăмах суйлăр та вĕсемпе предложенисем туса çырăр.

**12.** *Б, г, д, ж, з* сас паллисем мĕнле сăмахсенче тĕл пулаççĕ? Сăмах вĕçĕнче вĕсем мĕнле вуланаççĕ?

**Астăвăр!**

**Б, г, д, ж, з** сас паллисем вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулаççĕ.

**13.** Вулăр. Сăмах вĕçĕнчи *б, г, д, ж, з* сас паллисем мĕнле вуланнине сăнăр. Сăмахсене мĕнле çырмалли çинчен пĕтĕмлетӳ тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| клуб | герб | масштаб |
| лозунг | митинг | утюг |
| сад | доклад | склад |
| гараж | багаж | падеж |
| таз | газ | заказ |

• Çакӑн йышши сӑмахсене тата мӗнлисене пӗлетӗр? Тӗслӗхсем тупӑр. Асӑннӑ сас паллисемпе пӗтекен сӑмахсене пӗрер суйласа илӗр те вӗсемпе предложенисем туса çырӑр.

**14.** Вулӑр. Вырӑс чӗлхинчен çырупа йышӑннӑ сӑмахсене тупӑр, вӗсене мӗнле çырнине ӑнлантарӑр.

Çумӑр пуласса чӗрӗ барометрсем те систереççӗ. Ӑмансем çӗр çине шуса тухаççӗ. Моллюсксем вырӑнтан куçаççӗ. Раксем çыран хӗррине тухаççӗ.

Клевер çулçисем пӗрӗнеççӗ. Йӳçӗ курӑк пуçӗ усӑнать. Йыт пырши хӑйӗн илемлӗ чашкисене хупса хурать...

**15.** Текста вулӑр. Вырӑс чӗлхинчен çырупа йышӑннӑ сӑмахсене тупӑр, вӗсене мӗнле çырнине ӑнлантарӑр.

Паян мӗн иртенпех тавралӑха кӗрхи хӗвел ӑшшӑн ачашлать. Унӑн çутинче бульвар хӗррипе лартса тухнӑ яштака чӑрӑшсем кӗмӗлпе витнӗн ялкӑшаççӗ. Тӳлек. Йывӑççем çинчи пӗр çулçӑ та, клумбӑсемпе газонсем çинчи пӗр чечек те хускалмасть. Паянхи кӗр кунӗнче сиввине те туймастӑн, шӑрӑх та текех аптратмасть. (*Г. Ефремов* çырни тӑрӑх.)

• Калава ят парӑр. Кам ӑнаçлӑрах ят тупать? Пӗр-пӗрин хуравӗсене танлаштарӑр, чи ӑнаçлине палӑртӑр.

**16.** Панӑ сӑмахсене *г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллисем лартса тӗрӗс çырса илӗр, вӗсене мӗнле çырмаллине ӑнлантарӑр.

..ерма, ..иркуль, А..рика, ..ит, раз..езд, универма.., *кру..ок,* мор.., ..окладчик, черте.., тормо.., ..абрика, ..илиндр, шпри.., аквареле.., *гра..ин.*

• Палӑртнӑ сӑмахсемпе предложенисем туса çырӑр.

**17.** Орфографи словарӗнчен *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисемпе пуçланакан тата пӗтекен сӑмахсем пӗрер çырса илӗр. Кашни сас паллипе пуçланакан сӑмахпа пӗрер предложени çырӑр.

## 3. Сӑмах тымарӗ. Аффикссем

**18.** Вулӑр. Сӑмахсен тымарне тата аффиксӗсене тупӑр. Тымарне кура сӑмахсене миҫе ушкӑна уйӑрма май пур? Мӗншӗн?

Суйлавҫӑ, калаҫатӑп, савӑнӑҫ, суйлав, калав, савӑнать, калаҫу, суйлакан, савӑнӑҫлӑ, калавҫӑ, суйлавҫӑсем.

> **Аса илӗр!**
>
> Пӗр тымарлӑ сӑмахсем пӗр-пӗринчен сӑмах тӑвакан аффикссемпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ: *ҫыр, ҫыр-у, ҫыр-у-ҫӑ.*

**19.** Кам нумайрах? Ҫак сӑмахсем ҫумне сӑмах тӑвакан аффикссем хушса калӑр.

Пӗлтер, куҫ, пахча, лар, юман, савӑн, илем, вӑй, пуҫ.

**20.** Сӑмахсене вулӑр. Вӗсене миҫе ушкӑна уйӑрма пулать? Мӗне кура?

Пулӑ, юман, ҫыр, суйла, ӗҫ, шут, уҫ, вӗрен, пулӑҫӑ, ҫыру, юманлӑх, ӗҫчен, шутла, уҫӑ, вӗренекен, суйлав, ҫырулӑх, ӗҫле, шутлав, суйлавҫӑ, уҫҫӑн, вӗренӳ, уҫкӑч, вӗрент.

**21.** Сӑмахсене вулӑр. Вӗсенчен хӑшӗсем аффикслӑ, хӑшӗсем аффикссӑр, тымартан ҫеҫ тӑраҫҫӗ? Мӗншӗнне ӑнлантарӑр.

Ҫӑкалӑх, шӗшкӗ, пӗлӳ, урам, калав, юмахҫӑ, шӑнкӑрч, лару, ҫыру, ларкӑч, питлӗх, ӗҫчен, парӑм, хуравла, пылчӑк, пӗлӗтлӗ, хӑмлаҫӑ, ҫырла.

**22.** Сӑмах тымарӗсем ҫумне аффикссем хушса калӑр.

*-ҫӑ(-ҫӗ)*: калав, пулӑ, халап, суйлав, тимӗр, пӑхӑр, суха, эмел, сунар, ӑста;

*-лӑх(-лӗх)*: куҫ, пуҫ, пит, ҫирӗк, юман, пуян, тӗрӗс, шур, тавра;

*-в*: кала, сӑна, тӗпче, мухта, шыра;

*-ла(-ле)*: ӗҫ, шут, юрӑ, юмах;

*-у(-ӳ)*: çыр, пĕл, лар, кан, юптар, каçар, паллаш, ыйт, ăмăрт, çитĕн, кĕт;

*-тат(-тет)*: кăштăр, вĕлтĕр, чăштăр;

*-лат(-лет)*: илем, капăр, хитре, кăтра, пысăк, вăрăм.

**• Аффикс хушăннă сăмахсен пĕлтерĕшне сăнăр. Мĕн улшăнчĕ? Пĕтĕмлетӳ тăвăр.**

**23. Вулăр. Паллă тунă сăмахсен аффиксĕсене калăр.**

Акă вăл *мăнаçлă* Атăл, куç тулли сарăлса выртать. Мĕнле туллин юхать вăл. Хăйĕн яланхи çулĕпе вĕçĕмсĕрваскать, васкать. *Телейлĕ* эсĕ, ытарайми Атăл, эсĕ пин-пин çул пурăнса таçти инçетри çĕрсенче те пулса куратăн. Эсĕ, *хăватлă* Атăл, этемлĕхĕн иксĕлми пурнăçне тулли, савăнăçлă *шанчăк* кӳрсе тăратăн. Чыс та *мухтав* пултăр сана, *илемлĕ* Атăл! (*Е. Осипова* çырни тăрăх.)

**• Калавра мĕн çинчен каланă?**

**• Эсир Атăл курнă-и? Ун çинчен мĕн калама пултаратăр?**

**24. Точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем хушса текста илемлĕ вулăр.**

Шурă хурăн. Илем.. те вăл, усă.. та. Çулталăкăн кашни вăхăтĕнчех хитре. Çулла унăн вăрăм, пиçĕ турачĕсем çĕрелле сип-симĕс шерепе* евĕрлĕ усăнса тăраççĕ, хуллен чӳхенеççĕ. Кĕркунне вĕсем сап-сарă, ытарма çук илем.. . Хĕлле те çав тери капăр ку йывăç. Шап-шурă пас тытнăскерне пăхса ытараймастăн. (*Н. Матвеев* çырни тăрăх.)

**• Автор хурăна мĕнле-мĕнле паллă ячĕсемпе сăнласа кăтартнă? Вĕсене тупăр.**

**• Хурăн çынна мĕнле усă пани çинчен тантăшăрсене кĕскен каласа парăр.**

**25. Калава вулăр, ят парăр.** ***Вăхăт, кайăк, каç, кун, çул, çулçă, çырла, улшăн, усă*** **сăмахсен формисене тупăр, çырса илĕр. Вĕсен аффиксĕсене палăртăр.**

Кунсем кĕскелеççĕ, ирхине çырмасенче, юхан шывсем çинче сĕт пек çăра тĕтре саралса выртать. Ку вăл кĕркуннен пĕрремĕш уйăхĕ — сентябрь (авăн) уйăхĕ. Каçсерен сивĕ пулин те кăнтăрла хĕвел самаях ăшăтать. Температура улшăнса тăни çулçăсем тăкăнассине хăвăртлатать. Анчах пур ÿсен-тăран та кĕркуннене парăнма васкамасть-ха. Салтак тÿми, кукша пуç тепĕр хут çурăлаççĕ. Ку вăхăтра çырласенчен пилеш, кĕтмел, шăлан пиççе çитеççĕ. Шăлан çын сывлăхĕшĕн питĕ усăллă.

Пыл хурчĕсем çуллахи пекех пыл пухаççĕ. Тухтăрсем шутланă тăрăх, çын апатĕнче пыл яланах пулсан ăна нихăçан та чир-чĕр çакланмасть.

Кайăксем майĕпен кăнтăр енне вĕçме пуçлаççĕ. Инçете вĕçме вĕсене, паллах, çăмăл мар — ывăнаççĕ. Тĕслĕхрен, тăрнасем вĕçнĕ çĕртех çывăраççĕ. Çулран пăрăнса каяс мар тесе çывăраканнисем ушкăн варрипе вĕçеççĕ. Кайран вĕсен вырăнне ыттисем йышăнаççĕ. (*«Тантăш»* хаçатран.)

**26.** «Кĕрхи кунсем» темăпа сочинени çырăр. Ăна çырма 15-мĕш, 25-мĕш хăнăхтарусемпе усă курăр.

## 4. Пуплев пайĕсем: япала ячĕ, паллă ячĕ, местоимени, глагол

Класс йĕри-тавра çаврăнса пăхăр та мĕн-мĕн курнине каласа парăр. Эсир халĕ çеç асăннă сăмахсене мĕнле пуплев пайĕ теççĕ? Вĕсем мĕнле ыйтура тăраççĕ?

**27.** Текста вулăр та палăртнă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине ăнлантарăр. Вĕсен ыйтăвне калăр.

Кăçалхи *кĕр* типĕ килчĕ. Çавăнпа *мăн* çул çинче те, ялпа яла çыхăнтаракан пĕчĕк сукмаксем те тап-такăр, пĕр тумхахсăр. Уйра ĕç вĕçленмен-ха, унта çĕр улми кăларса *пуçтараççĕ.* (*Е. Осипова* çырни тăрăх.)

**28.** Текста вулăр, ят парăр. Палăртнă япала ячĕсен падежне тата хисепне калăр.

Пĕлтĕр аван *уйăхĕ* питĕ хитре тăначчĕ. Ир те каç сулхăнрахчĕ. Кăнтăрла *хĕвел* аванах ăшăтатчĕ. *Ачасем* кĕпе вĕççĕнех *шкула* чупатчĕç. Кăçалхи *авăн уйăхĕ* ун пек мар. Ялан тенĕ пекех пĕлĕтлĕ *çанталăк*. *Хĕвелĕ* кăшт кулса илнĕ пек пулать те каллех тĕксĕм *пĕлĕтсем* хыçне кайса пытанать. Кĕтмен-туман çĕртенех пĕрер касă *çумăр* çуса иртет. (*И. Егоров* çырни тăрăх.)

• Калав хăш вăхăта сăнласа парать? Эсир мĕн те пулин хушса калама пултаратăр-и?

**29.** Текстсене вулăр, танлаштарăр. Хăшĕнче çĕмĕрт йывăçне сăнарлăрах кăтартса панă? Мĕншĕн?

1. Шăпах пирĕн кантăк тĕлĕнче çĕмĕрт йывăççи саркаланса ӳсет. Унăн турачĕсем карта урлă урамалла усăннă. Ик-виç кун каялла çеç вăл пĕркенчĕкпе витĕннĕ çураçнă хĕре аса илтеретчĕ.

2. Шăпах пирĕн кантăк тĕлĕнче *çамрăк* çĕмĕрт йывăççи саркаланса ӳсет. Унăн *лапсака* турачĕсем карта урлă урамалла усăннă. Ик-виç кун каялла çеç вăл *шап-шурă* пĕркенчĕкпе витĕннĕ çураçнă хĕре аса илтеретчĕ. (*А. Артемьев* çырни тăрăх.)

• Паллă тунă сăмахсен ыйтăвне калăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

• Çĕмĕрт йывăçĕ çинчен тата мĕн пĕлетĕр? Унăн çырли пирки мĕн калама пултаратăр?

**30.** Кам нумайрах? Панă япала ячĕсем çумне паллă ячĕсем тупса çырăр.

Тĕслĕх: *йывăç — çӳллĕ, лутра, çамрăк, ватă, лапсака.*

Чечек, уçланкă, кӳлĕ, вăрман.

• Паллă ячĕсен тата япала ячĕсен пĕрлешĕвĕсемпе усă курса кĕрхи вăрман çинчен кĕске калав çырăр.

**31.** Ӳкерчӗксене сӑнӑр. Ачасем ӑҫта килнӗ? Вӗсем мӗн тӑхӑннӑ? Ачасем мӗнле выляма хатӗрленеҫҫӗ? Ҫамрӑк футболистсем калаҫнӑ хушӑра йытӑ мӗн тунӑ? Калав ҫырӑр, панӑ сӑмах пӗрлешӗвӗсемпе усӑ курӑр.



Пысӑк стадион, интереслӗ вӑййӑ, ҫамрӑк футболистсем, ула мечӗк, ҫӳллӗ хапха, маттур вратарь, ӑслӑ йытӑ, симӗс курӑк.

**32.** Текста вулӑр. Паллӑ ячӗсене тупӑр, вӗсем хӑш сӑмахпа ҫыхӑннине калӑр.

### Сентябрь

Сентябрь пуҫланчӗ. Пирӗн тавралӑх ӑна кӗр тырри акса хӑварнӑ анасемпе, ешӗл улӑх-ҫаранпа, шупкалнӑ-хӗрелнӗ вӑрманпа кӗтсе илет.

Ҫанталӑк самаях усӑ. Хӗвеллӗ кунсен вӑхӑчӗ те ирт-мен-ха. Шыв сивӗнсех ҫитеймен.

Уяр та тӳлек кунсем сентябрьте уйрӑмах илемлӗ пек. Тавралӑх инҫе-инҫе курӑнать. Сывлӑшра та, хӑмӑл хушшинче те, ем-ешӗл кӗр калчи уйӗнче те эрешмен картисем вылянса ялтӑраҫҫӗ. Садсенче юлашки улмасем йӑмӑхаҫҫӗ. (*Г. Орлов* ҫырни тӑрӑх.)

Ху ҫинчен калаҫнӑ чухне эсӗ мӗнле местоименипе усӑ куратӑн? Юлташупа калаҫнӑ чухне? Урӑх ҫын ҫинчен калаҫнӑ чухне?

Чăвашла çапла калама тата çырма юрать:
*эпĕ, эп, эпир, эпĕр* (1-мĕш сăп.)
*эсĕ, эс, эсир, эсĕр* (2-мĕш сăп.)
*вăл, вĕсем* (3-мĕш сăп.)

**33.** *Эпĕ, эсĕ, вăл* местоименисене вĕçлĕр (çырмасăр).

**34.** Текста вулăр, ят парăр. Паллă тунă сăмахсен ыйтăвне калăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

Кăткăсем ирхине вăрман тăрăх таçта çитиех *саланаççĕ*, çапах та каç енне киле *таврăнаççĕ*.

Мĕнле майпа тупаççĕ-ха вĕсем хăйсен йăвине? Кăткăсен куçĕ çук вĕт.

Кашни кăткăн мăйăхсем пур. Вĕсем шăршă пĕлекен органсем. Мăйăхĕсем пулăшнипе кăткăсем вăрманта çухалса каймаççĕ, юлташĕсене палласа илеççĕ.

Малтанхи çулпа кайма май çук пулсан кăткă çĕнĕ çул хывать. Çул хывнă чух темĕнле шĕвек кăларса *пырать*. Çав шĕвек шăрши тăрăх вăл каялла *таврăнать*. (*В. Козлов* çырни тăрăх.)

• Текстри местоименисене тупăр. Вĕсене мĕнле сăмахсем вырăнне каланине сăнăр.

• Эсир çут çанталăк пулăмĕсене сăнама юрататăр-и? Хăвăр асăрханă мĕнле те пулин кăсăклă пулăма сăнлăр.

**35.** Глаголсене ĕç хăш вăхăтра пулнине кура ушкăнлăр, çырса илĕр. Çав ушкăнсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать?

Вуларăмăр, вулатăп, вулĕ, вуларăм, вулатпăр, вулĕç, вулăн, вуларăн, вулаççĕ, вуларĕ, вулатăн, вуларĕç, вулать, вулăр, вулатăр, вулăпăр, вуларăр.

**36.** Точкăсем вырăнне кирлĕ глаголсене лартса текста вулăр. Глаголсен вăхăтне, сăпатне тата хисепне палăртăр.

Ӳсен-тăрансем — чĕрĕ организмсем. Вĕсем тепĕр чухне шывсăр ... . Час-часах вĕсене сăтăр тăвакан хурт-кăп-

шанкă ... . Анчах йывăç-курăк чĕлхесĕр, çынсене хăйсен нуши çинчен каласа пама ... . Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ... те ... . Çавăнпа та эпир хамăр лартса тăвакан ӳсен-тăрана çийĕнчех пулăшу ... .

Кирлĕ сăмахсем: *паратпăр, тапăнать, аптăраççĕ, пултараймасть, вилет, шанать.*

**37.** Глаголсене вулăр та танлаштарăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине аса илĕр.

| | |
|---|---|
| вулать | вĕренет |
| ларать | пĕлет |
| çырать | килет |
| ăнланать | илет |
| сăнать | çиет |

Хальхи вăхăтри глаголсен пĕрреллĕ хисепĕн 3-мĕш сăпатĕнче **-ать** е **-ет** аффикссем çыраççĕ: сăмахра уçă сасăсем хытă пулсан — **-ать**, çемçе пулсан **-ет** аффикссем çырмалла.

**38.** Скобкăри глаголсене нумайлă хисепре лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр. Глаголсене мĕнле çырмаллине калăр.

1. Туй иртсен шăпăр* (каламасть). 2. Ват çынсем хурăнтан туя (тумасть). 3. Пиçнĕ-пиçмен çимĕçе хăна умне (лартмасть). 4. Ăçта кайсассăн та ăса кура (хаклать). 5. Вĕçкĕн хыççăн вĕсме (хушмасть). 6. Лайăха сăнран пĕлмеççĕ, ăсран (пĕлет). 7. Тума кура кĕтсе илеççĕ, ăса кура ăсатса (ярать).

**39.** Чăваш халăхĕн музыка инструменчĕсем çинчен презентаци хатĕрлĕр, тантăшсем умĕнче тухса калаçăр.

**Аса илĕр!**

Хальхи вăхăтри 3-мĕш сăпатри нумайлă хисепри глаголсенче яланах икĕ **ç** çырмалла: *вулаççĕ, вуламаççĕ, килеççĕ, килмеççĕ.*

**40.** Точкăсем вырăнне панă глаголсене лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр. Глаголсене мĕнле çырмаллине аса илĕр.

1. Сивĕ яшка сивĕтмест, сивĕ сăмах ... . 2. Чăнлăх вилĕмрен ... . 3. Ырра ырăпа тав ... . 4. Пуш хирте те çăл куç ... . 5. Ĕнсе хыçнипе ĕç ... . 6. Ĕç тăрантарать, кахал ... .

Усă курмалли сăмахсем: *пулмасть, тăваççĕ, пăсать, хăтарать, сивĕтет, тупăнать.*

**41.** Çырса илĕр. Скобкăри глаголсене хальхи вăхăтра пĕрреллĕ хисепре 3-мĕш сăпатра лартăр.

1. Ĕçрен куç (хăра) те, алă тăвать. 2. Çут çанталăк илемĕ этемрен (кил). 3. Ар хурласан ял (хурла), ар ырласан ял (ырла). 4. Чĕререн тухакан сăмах чĕре патнех (çит). 5. Тикĕс çулпа пыракан та тепĕр чух (такăн) теççĕ.

• Эсир ваттисен сăмахĕсене тата пĕлетĕр-и? Хăвăр аçăр-аннĕртен ыйтса икĕ ваттисен сăмахĕ çырса килĕр.

**42.** Вулăр. Глаголсен вăхăтне, сăпатне тата хисепне палăртăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине калăр.

### Путек



Пĕчĕк путек макăрать,
Аннене çухатрăм тет.
Вăл пĕччен юлма хăрать,
Кил тĕлне тупаймăп тет.

### Çĕлен



Манран çынсем пурте хăраççĕ,
Мана усал тесе вăрçаççĕ.
Калам-ха чăннине, туссем,
Сăхмастăп эп хама тĕкĕнмесен.

*(Юхма Мишши.)*

## 5. Предложени, унăн членěсем. Пěр йышши членсем, вěсене чарăну паллисемпе уйăрасси

**43.** Текста вулăр. Предложенисен чиккине тупăр. Палăртнă сăмахсен ыйтăвěсене калăр. Вěсем предложенин мěнле членěсем пулаççě? Ыттисем мěнле членсем?

*Хěвел* анаçалла *тайăлчě* таçта аякра *аслати кěмсěртетрě* часах вăйлă *çумăр пуçланчě.*

**44.** Сăвва вулăр. Кěр кашни киле мěнпе кěчě? Ку сăмахсем предложенире мěнле член пулаççě?

**Кěрхи ÿкерчěксем**



Пилешпе те паланпа,
Шăланпа та йěкелпе,
Тахçан кěтнě шăрттанпа,
Çěнě тырă çăкрипе
Кěчě кěр кашни киле.

Мăрьере çил шăхăрать,
Кашкăр евěр те улать.
Шăнкăрчсен вěллисенче
Çерçи çеç хуçаланать.

*(Г. Ефимов.)*

• Предложенисенче запятойсем тěл пулаççě. Вěсене мěншěн лартнине каласа парăр.

**45.** Текста вулăр. Ăна ăнланма мěн чăрмантарать? Предложенисен чиккине тупăр та чарăну палли лартса çырса илěр. Пурě миçе предложени?

Сентябрь уйăхě çитрě ачасем шкула çÿреме тытăнчěç. Пěррехинче шкула Меркури пичче те пычě вăл класри ачасен çуллахи хастар ěçě пирки каларě унтан вăл вěренекенсене доска патне список тăрăх пěрерěн-пěрерěн чěнчě

И-47179
Национальная библиотека
Чувашской Республики

те колхоз пахчинче тăрăшса ĕçленĕшĕн парнесем пачĕ пĕртен-пĕр Ванюк ячĕ çеç тухмарĕ вăл пĕрре *хĕрелчĕ*, тепре *шуралчĕ*, доска патнелле пăхма та *вăтанчĕ*. (*Н. Иванов* çырни тăрăх.)

• Палăртнă сăмахсем мĕнле ыйтура тăраççĕ? Вĕсем предложенин мĕнле членĕсем?

**46.** Текста вулăр, ят парăр. Предложенисенче лартнă чарăну паллисене ăнлантарăр.

Пирĕн лупас тăрринче чĕкеç йăви пур. Вăл пире мĕн чухлĕ савăнăç кӳмен пулĕ! Картишĕнче, çурт таврашĕнче ирех чĕкеççем вĕçнине курса савăнатпăр вара. Вĕсен ырă, илемлĕ сасси чуна уçса ярать.

Пĕр хĕвеллĕ ăшă кун эпĕ чĕкеç йăви çине чылайччен пăхса тăтăм та тĕлĕнмелле япала куртăм. Чĕкеç чĕпписем пуçĕсене йăваран кăларнă та каçса кайсах чĕвĕлтетеççĕ, ирĕке тухса каясшăн çӳлелле туртăнаççĕ...

Тепĕр кунне вара эпĕ чĕкеç чĕпписем ирĕке тухнине куртăм. (*В. Давыдов-Анатри* çырни тăрăх.)

**47.** Вулăр. Текстра мĕнле-мĕнле предложенисем пур? Вĕсен вĕçне мĕнле чарăну палли лартнă?

Пуян Сăр таврашĕнчи вăрман. Çырла кăна мĕн чухлĕ унта!

Чи малтан *хурăн çырли* пиçет. Унтан *хăмла çырли, хура çырла,* хурлăхан, палан... Пилеш вара юр çăвиччен ларать.

Кăмпа та питĕ нумай. *Яка кăмпа, хурăн кăмпи, ăвăс кăмпи*, уплюнкка, *шур кăмпа*, кăрăç, *хыр кăмпи*...

Эпĕ пуринчен те ытла шур кăмпа татма юрататăп. Эсĕ мĕнле кăмпа юрататăн? (*Г. Харлампьев* çырни тăрăх.)

• Паллă тунă сăмах пĕрлешĕвĕсене Интернетри «Чăвашла-вырăсла словарьпе» усă курса куçарăр.

## 6. Ыйтусӑр тата ыйтуллӑ предложенисем. Туйӑмлӑ (кӑшкӑруллӑ) предложенисем

Вуласа тухӑр. Предложенисенчен хӑшӗ каласа панине, хӑшӗ ыйтнине пӗлтерет?

*1. Авал чӑваш ташшине кӗвӗ каласа е ушкӑнпа юрласа ташланӑ.*

*2. Чӑваш ӑстисем музыка инструменчӗсене мӗнрен тунӑ?*

*3. Хӗлӗхлӗ инструментсем шутне купӑс, тӑмра, тӗрлӗ кӗсле кӗрет.*

**Аса илӗр!**

**Мӗнле тӗллевпе каланине кура предложенисем ыйтусӑр тата ыйтуллӑ пулаҫҫӗ. Ыйтусӑр предложени ыйтуллинчен ыйту ҫуккипе ҫеҫ уйрӑлса тӑрать. Ыйтуллӑ предложени мӗн ҫинчен те пулин ыйтса каланине пӗлтерет.**

**Ыйтӑва ыйтуллӑ сӑмахсемпе тата ыйту татӑкӗсемпе палӑртма пулать.**

**48.** Предложенисене илемлӗ вулӑр, вӗсем ыйтуллӑ е ыйтусӑр пулнине калӑр.

1. Шыв ҫийӗн ирхи шур тӗтре вӑрах ҫӗкленсе сирӗлет. *(Уйӑп Мишши.)* 2. Лаштра юман, ват юман, йӗкелне силле. *(Е. Афанасьев.)* 3. Ҫывӑр, ачам, ҫывӑрах, ыйху тутлӑ пултӑрах. *(А. Майков.)* 4. Ах, ӑҫтаччӗ-ши ҫав пӗлтӗр хывса хунӑ йӗлме йӗлтӗр? *(Уйӑп Мишши.)* 5. Вӑл нихҫан та кайӑксене хӑратса кӳрентермест. *(В. Петров.)* 6. Ма шӑплантӑн, кинемейҫӗм, шӑннӑ кантӑк умӗнче? *(А. Пушкин.)*

**49.** Тӗрӗс чарӑнусем туса вулӑр. Текста ят парӑр.

Сан йӗри-тавра мӗн пур — пурте вӑрмантан килнӗ. Сӗтел, тенкел, кравать, кӗнеке ҫӳлӗкӗ. Урай, мачча. Кӑранташ, тетрадь. *Тӑмра*, гитара, *сӗрме купӑс.*

Çĕр çырлинчен, хăмла çырлинчен, хура çырларан пĕçернĕ варени тата? Кăмпа, мăйăр ăçта пуçтаратăн эсĕ?

Вăрманти сиплĕ çăл шывĕ, хырлăх шăрши! Вăрманта кашни утăмрах тĕл пулакан вăрттăнлăхсем, кĕтмен мыскарасем! Хăлха тулли янăракан çĕршер кайăк юрри!

Хутпа кăранташ ил те хăвна вăрман мĕн-мĕн парнелениние çырса тух. Çавăншăн эсĕ ăна ху мĕнле тав тунине çырма ан ман. (*Н. Сладков* çырни тăрăх.)

- **Ыйтуллă предложенисене тупăр.**
- **Паллă тунă сăмахсене вырăсла куçарăр, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса парăр.**

**50.** **Предложенисене тĕрлĕ интонаципе вулăр: а) хăратса; б) тархасласа; в) йĕкĕлтесе.**

1. Эсĕ ку кĕнекене мана паратăн-и? 2. Хăçан урок тума ларăн эсĕ? 3. Каласа пар-ха пире кун пирки.

**51.** **Предложенисене ăнланса вулăр. Вĕсем ыйтуллă е ыйтусăр пулнине калăр.**

Хăвăрăн ырă ĕçĕрсемпе, ĕçри çитĕнĕвĕрсемпе çын умĕнче ан мухтанăр.

Хăвăра ырă тунăшăн, пулăшу панăшăн тав тума ан ўркенĕр.

Тепĕр çын сăмахне ан пўлĕр.

- **Вĕрентсе каланисене ăша хывма тăрăшăр.**

**52.** **Хуравсем тăрăх ыйтуллă предложенисем йĕркелĕр. Ыйтăва мĕнпе палăртнине калăр.**

... ? — Вĕсем юман йĕкелĕсене *вăрманта* пуçтарнă.
... ? — Вĕсем вăрманта *юман йĕкелĕсене* пуçтарнă.
... ? — Вăрманта юман йĕкелĕсене *вĕсем* пуçтарнă.

**53.** **Сăвă йĕркисене тĕрĕс интонаципе вулăр, ыйтăва мĕнле палăртнине калăр.**

Тĕвик-тĕвик текерлĕк, текерлĕк,
Ăҫта каятăн, текерлĕк, текерлĕк?

* * *

Ҫинҫе хăҫан ҫитĕ-ши?
Ҫимĕк кунĕ инҫе-ши?
Епле унччен тӳсес?

* * *

Хирти сарă чечеке
Ăшă куҫпа кам пăхмĕ?

*(К. Иванов.)*

Ыйту сăмахĕсем:

*кам?*
*мĕн?*
*хăҫан?*
*ăҫта?*
*епле?*
*мĕнле?*
*миҫе?*
*хăш?*

• Сирĕн патра халĕ мĕнле халăх уявĕсене ирттереҫҫĕ? Пĕр-пĕр уява мĕнле ирттерни ҫинчен каласа парăр.

**54.** Ыйтуллă предложенисене пĕр-перинпе танлаштарăр. *-И, -ши, -им, -шим* татăксемпе хăҫан усă курнине каласа парăр.

1. Марине шкулта-и? — Марине шкулта-ши? — Марине шкулта-им? — Марине шкулта-шим?

2. Петĕр чăваш чĕлхи урокне хатĕр мар-и? — Петĕр чăваш чĕлхи урокне хатĕр мар-ши? — Петĕр чăваш чĕлхи урокне хатĕр мар-им? — Петĕр чăваш чĕлхи урокне хатĕр мар-шим?

3. Эсир паян вăрманта пулнă-и? — Эсир паян вăрманта пулнă-им? — Эсир паян вăрманта пулнă-ши?

• Ыйтуллă предложенире хăш сăмаха сасса ӳстерсе каланине сăнăр.

Юпасенчи предложенисене вулăр. Вĕсем пĕр-перинчен мĕнпе уйрăлса тăраҫҫĕ?

| | |
|---|---|
| *Тĕкĕр пек ҫиҫет пĕве.* | *Тĕкĕр пек ҫиҫет пĕве!* |
| *Ăҫта-ши ҫепĕҫ тăрисем?* | *Ăҫта-ши ҫепĕҫ тăрисем?!* |
| *Ачасем, шкула каяр,* | *Ачасем, шкула каяр,* |
| *Тăрăшса пĕлӳ илер.* | *Тăрăшса пĕлӳ илер!* |

Калаçу интонацийĕнчен калаканни мĕн пĕлтересшĕн пулнине кăна мар, унăн кăмăл-туйăмне, хăй каланине мĕнле хакланине те пĕлме пулать.

Пысăк туйăмпа сасса ÿстерсе каланă предложение **туйăмлă (кăшкăруллă) предложени** теççĕ. Туйăмлă предложенисем хыççăн çырура кăшкăру палли лартаççĕ.

**55.** Текста вулăр, унăн планне тăвăр, çырса хурăр.

Хĕл пуçланнă тĕле пăши мăйракисем аран-аран тытăнса тăракан пулаççĕ. Йывăç çумне çаклат çеç ăна — юр çине ÿкет. Е тата йывăç тураттисумне çакăнса юлать.

Мăйрака шырама çуркунне каймалла. Вăрманта курăк шăтайман-ха, йывăç çулçисем те сарăлайман. Пыратăн утса — вăл çĕр çинче йăваланса выртать. Çĕнĕ пулсан юман пек хăмăр. Тахçанхи пулсан хĕвел çинче шупкаланнăскер.

Хуçăлман лайăх мăйрака тупсан саншăн мĕн тери савăнăç! Сарлака та нумай вĕçлĕ вăл, сарса янă пысăк-пысăк ала пек. Йывăр тата!

Мăйрака тăк мăйрака! Пуçĕ çинче епле йăтса çÿренĕ-ши ăна пăши?! Мĕнле чăтнă-ши? Шел пулман-ши çавнашкал япалана пăрахса хăварма? Эпĕ ăна тем тусан та пăрахмастăп, пурпĕрех киле илсе çитеретĕп. Килте вара стена çумне çакса хуратăп. Çынсем пăхса савăнччăр. (*Н. Сладков* çырни тăрăх.)

• Туйăмлă предложенисене тупăр. Каланин тĕллевне кура вĕсем мĕнле предложенисем пулнине калăр.

• Эсир пăши мăйраки курнă-и? Мĕнлерех вăл? Каласа парăр.

## 7. Текст. Унăн пайĕсем

**56.** Ÿкерчĕке сăнăр. Унта эсир камсене куратăр? Вĕсем мĕн тăваççĕ? Шкул ачисен кăмăлĕ епле? Ÿкерчĕк тăрăх 4—5 предложениллĕ текст çырăр. Ăна ят парăр.



57. Вуласа тухăр. Текста ят парăр.

Пирĕн çывăхри катара пурăнакан пĕр ула такка сивĕсем умĕн кашни кĕркуннех яла килетчĕ. Кунсеренех пӳрт чӳречи айккинчи кăсăясен апатне çиме çӳретчĕ. Малтан пахчари çĕмĕрт çине пырса ларатчĕ, кăштахран, *шикленме* сăлтав çуккине сăнаса пĕлсен, апат патне вĕçсе анатчĕ. (*Г. Орлов* çырни тăрăх.)

- Предложенисем шухăшĕ енчен пĕр-пĕринпе çыхăннă-и?
- Паллă тунă сăмаха çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тупăр.

58. Текста вулăр, ят парăр.

*Текерлĕк* — пысăк шыв чăххи. Пирĕн пата *текерлĕксем* тĕрлĕ енчен вĕçсе килеççĕ. *Вĕсем* Кăнтăр Европăра, Кăнтăр Азире тата Çурçĕр Африкăра хĕл каçаççĕ, çуркунне шăнкăрчсемпе тата тăрисемпе пĕрле таврăнаççĕ. *Шыв чăххисем* малтан юрсăр çырансене, шурлăхсем таврашне вырнаçаççĕ, каярах нӳрĕ улăхсене, юхан шыв çыранĕсене, кĕрхи тулă анисене куçаççĕ. Çавăнта йăва туса ĕрчеççĕ, апатланаççĕ. (*Н. Игнатьев* çырнинчен.)

- Текстра мĕнле сăмахсене паллă тунă? Вĕсем текстри предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнма пулăшаççĕ-и?

**Текст** — шухăшĕ енчен пĕр-пĕринпе çыхăннă предложенисен ушкăнĕ.

Текстри предложенисем пĕр-пĕринпе тĕрлĕ мелпе çыхăнма пултараççĕ. Вĕсен шутĕнче местоименисем, пĕр сăмаха юнашар предложенисенче темиçе хут асăнни, çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе уса курни т. ыт. те.

Тĕслĕх: *Пирĕн мăн асаттесем тăмран çирĕп тата илемлĕ* ***савăт-сапа*** *тума пĕлнĕ.* ***Вĕсен*** *аврисемпе тыткăчисем çине чĕр чунсен сăнĕ-кĕлеткине ӳкернĕ.* ***Çакă*** *савăт-сапари япаласене усал вăйсенчен сыхлать тесе шутланă.*

Ку текстри предложенисем пĕр-пĕринпе çыхăннă. Иккĕмĕшпе пĕрремĕш предложенисене **вĕсен** местоимени çыхăнтарать. Виççĕмĕшĕ иккĕмĕшĕпе **çакă** местоимени пулăшнипе çыхăнать.

**59.** Точкăсем вырăнне предложенисене çыхăнтаракан сăмахсем лартса текста вулăр. Ăна ят парăр.

Çерçипе шăши питĕ туслă пурăннă. Пĕррехинче ... ыраш акнă. Шăшийĕ чакаланă, çерçийĕ сӳреленĕ.

Ыраш *паха* ӳссе çитĕннĕ. Шăши хăйĕн çивĕч шăлĕсемпе ... хăвăрт вырнă. Çерçи çунаттисемпе авăн çапнă. Тупăша пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса хунă та уйăрма пуçланă. Пĕтĕм тупăша уйăрнă ... . Акă юлашки пĕрчĕ тăрса юлнă. Юлташсем тавлашса кайнă. Кашниех пĕрче хăйне валли илесшĕн.

Юлашкинчен çерçи пĕрче сăхса илнĕ те вĕççе кайнă. Шăши çерçие хăвалама шутламан та. Тавлашнăшăн çеç кулянна ... . Хăйĕн пĕрчисене шăтăка йăтса тултарнă. Çерçипе *çураçасшăн* пулнă, анчах ... тем чухлĕ кĕтсен те кĕтсе илеймен. Унăн пайне те хăйĕн кĕлетне хывнă шăши. Хĕлĕпе тутă пурăннă вара ... .

Çерçи нимĕнсĕрех юлнă. ... çуркуннеччченех выçă сиккелесе çӳренĕ. *(Удмурт халăх юмахĕ.)*

- Паллă тунă сăмахсене çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тупăр.
- Мĕнле чăваш юмахĕсене пĕлетĕр? Аса илĕр.

**60.** Ҫакӑнта панӑ предложенисенчен ҫыхӑнуллӑ икӗ текст тӑвӑр, ҫырса хурӑр. Вӗсен тӗсне калӑр.

Йӗри-тавра хыр-чӑрӑш вӑрманӗ. Пирӗн Йӑлтӑркка ятлӑ кушак пур. Йывӑҫсем тунсӑхлӑн кашлаҫҫӗ. Хура ҫӑмӗ хӗвел ҫинче йӑлтӑртатнӑран ҫапла чӗннӗ ӑна. Курӑк сарӑхманха. Ҫамки шурӑ. Тӗллӗн-тӗллӗн шултра шурӑ кӑмпасем куҫа илӗртеҫҫӗ. Ура лапписем те шурӑ, шурӑ чӑлха тӑхӑннӑ тейӗн. Кӗтмел ҫырлисем вут-кӑвар пек хӗп-хӗрлӗ курӑнаҫҫӗ. Куҫӗсем унӑн хура пир ҫинчи икӗ сарӑ пӑнчӑ пек курӑнаҫҫӗ, тӗттӗмре сип-симӗссӗн ҫуталаҫҫӗ. (*Н. Карай, В. Алентей* ҫырнисем тӑрӑх.)

• Сирӗн текстсенче миҫешер предложени пулчӗ? Текстсене ят пама пулать-и?

**61.** План ыйтӑвӗсемпе усӑ курса текста пайӑн-пайӑн вулӑр.

План:

1. Яштака хырсем.
2. Кӑтра тӑрӑллӑ хурӑнсем.
3. Тӗкӗр пек ҫап-ҫутӑ кӳлӗ.

| |
|---|
| *талккӑшпех хушши туратти* |

Пирӗн ҫул вӑрман витӗр тӳп-тӳрӗ тӑсӑлса выртать[4]. Вӑрманта сывлӑш сулхӑнрах. Яштака хырсем пӗлӗтелле кармашаҫҫӗ. Вӗсен парка тураттисем хушшипе сенкер тӳпе курӑнкаласа каять.

Ак пирӗн умра талккӑшпех шап-шурӑ, яштака та кӑтра тӑрӑллӑ хурӑнсем. Шӳлкеме* тенкисем евӗр ҫулҫисем варкӑш ҫилпе ластӑртатса ташлаҫҫӗ.

Ерипен утса эпир вӑрман варринчи кӳлӗ хӗррине ҫитсе тӑтӑмӑр. Вӑл хӗвел ӑшшинче тем пысӑкӑш тӗкӗр пекех ҫап-ҫутӑ курӑнать. Ҫырансенчен шывалла ем-ешӗл курӑк усӑнса анать. (*А. Лазарева* ҫырни тӑрӑх.)

**62.** Чӑваш хӗрарӑмӗн тумӗ ҫинчен презентаци тӑвӑр, тантӑшсем умӗнче тухса калаҫма хатӗрленӗр.

**63.** **Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йěркелесе вулăр.**



План:

1. Ачасем шăкăлчисене кěтеççě.
2. Илемлě кайăк вěçсе килчě.
3. Кайăксен концерчě пуçланчě.

*йăмăх хěрлě*
*шупка кăвак*
*йăм хура*
*тěксěм симěс*

1. — Шăкăл-шăкăл! — сас пачě шăкăлчи. «Кунта хăрушлăх çук», — терě пулмалла хăйěн мăшăрне.

Самантрах тепěр кайăк вěçсе килсе унпа юнашар ларчě. Пуçларěç хайхи хăйсен концертне.

2. Ачасем хурлăхан тěмě хыçне лăпчăнса ларчěç те шăкăлчисене чăтăмсăррăн кěтме пуçларěç.

3. Йăр та йăр вěçсе турат çине калама çук *илемлě* кайăк пырса ларчě. Вăл асамат кěперěнчен çěлетнě асамлă тум тăхăннă тейěн. Пуçěнчи йăмăх хěрлě тăрăхěсем хěвел шевли ӳкнипе йăм-йăм юхса тăнăн курăнаççě. Хура çунаттисене сап-сарă тěксěм йěрсем чăпарлатаççě. Хӳрине те хура сăр лекнě иккен. Çут çанталăк ăна *юриех* çапла сăрласа эрешленě пекех туйăнать. (*Ю. Петров-Вирьял* çырни тăрăх.)

• **Текстăн виççěмěш пайě мěн (калав, сăнлав, ăслав) пулать? Мěншěнне ăнлантарăр.**

• **Паллă тунă сăмахсене çывăх пěлтерěшлě сăмахсем тупăр.**

**64.** Вуласа тухăр. Юнашар тăракан предложенисене пěр-пěринпе çыхăнма пулăшакан сăмахсене тупăр.

*çут çанталăк*
*çут тěнче*

Елми халапěсенче мана пуринчен ытла тěлěнмелле асамлă япаласем килěшетчěç[4]. Вěсене эпě е чăнах çапла пулнă тесе ěненнě, е ман ěненес килнě. Хам илтнě юмах-халап, ваттисен сăмахěсем таврари пурнăç ӳкерчěкěсемпе пěрлех ман ăс-тăна хытă кěрсе ларнă. Çут çанталăкпа çут тěнчене эп çавсем витěр кура пуçланă. (*Н. Охотников* çырни тăрăх.)

# СИНТАКСИС. ПУНКТУАЦИ

## 8. Чĕнÿ сăмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси

**65.** Предложенисене вулăр. Кама е мĕне чĕнсе калакан сăмахсене интонаципе палăртăр.

1. Чĕлхем! Санпа тĕнче уççи тытатăп,
   Шухăшлама вĕрентрĕн эс мана. *(П. Хусанкай.)*

2. Ĕмĕрхи симĕс тусăм, вăрманăм,
   Эс пурнăç, илемлĕ юмах. *(П. Эйзин.)*

3. Аннеçĕм, эсĕ маншăн чи хакли.

Кама е мĕне чĕнсе каланине кăтартакан сăмахсене **чĕнÿ сăмахĕсем** теççĕ. Вĕсем предложенин нихăш членне те пăхăнмаççĕ, нимĕнле ыйтура та тăмаççĕ, çавăнпа предложени членĕ пулмаççĕ.

Чĕнÿ сăмахĕсене каланă чух сасă хăпарать, ун хыççăн кĕске чарăну (пауза) пулать.

Чĕнÿ сăмахĕ предложенире тĕрлĕ вырăнта тăма пултарать.

**66.** Вуласа тухăр. Чĕнÿ сăмахĕсене тупăр. Çырура вĕсене мĕнле палăртнине калăр.

1. Шкул садĕнче сире, ачасем, çав тери тирпейлĕ пăхса усракан улмуççие кăтартĕç. 2. Ывăлăм, çĕнĕ çурт умне эпир пилеш лартăпăр. 3. Сивĕ шыва ан ĕç, шăллăмçăм. 4. Сывă-и, юратнă аннем! 5. Хырсем, хырсем! Эсир пуртан илемлĕ сăрттусем.

Чĕнӳ сăмахĕсене çырура запятой лартса уйăраççĕ.

Чĕнӳ сăмахне кăшкăрулла интонаципе калаççĕ пулсан ун хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ. Тепĕр сăмахне пысăк сас паллирен пуçласа çыраççĕ. Тĕслĕх: *Вăрман! Эс пире хӳтĕлесе тус-тăван пулнă ялан.*

**67.** Предложенисене çырса илĕр, вĕсене тытăмĕ тăрăх тишкерĕр. Чĕнӳ сăмахĕсем предложени членĕ пулманнине ĕнентерĕр.

1. Ачасем, эпĕ сире çак вырăн вăрттăнлăхне уçса парăп. 2. Эсир пире хăвăр кĕнекĕрпе питĕ савăнтартăр. 3. Петĕр, ман пирки мĕн çырнă хаçатра? 4. Йăмăкăм, пукан çине тăр та хăвна килĕшекен сăвва каласа пар. 5. Шăллăм чăваш халăх юмахĕсене вулама юратать.

**68.** Вуласа тухăр. Текста ят парăр. Текст содержанине 3-мĕш сăпатран калăр.

| |
|---|
| *укăлча* |
| *мунча* |
| *пылчăк* |

Эпĕ васкаса сăхман* тăхăнтăм, тутăр çыхрăм, вара çĕнĕ çăпатана шăтăртаттарса килтен чупса тухрăм.

Урамра Епхинпе пĕрле тата икĕ хĕр ача тăраççĕ. Вĕсем Хусана каяççĕ иккен. Пĕри, пысăкраххи, манăн кутамккана хăй аллине илчĕ.

Анне мана ăсатма урама тухрĕ. Эпĕ унпа сывпуллашсан вăл куçне шăлкаласа хурлăхлăн пăхса тăрса юлчĕ.

Укăлчара Иван пиччене тĕл пултăмăр. Вăл лашине пирĕн карта çумĕнчи çерем çине кăкарса тăрать.

— Вĕçрĕн-и, çерçи? — кулкаласа илчĕ старик.

— Вĕçрĕм. Сывă пул, Иван пичче, — терĕм эпĕ чарăнса тăрса.

— Телей пултăр, — терĕ вăл, унтан ман патăма пырса, пĕчĕк чухнехи пек, çурăмран лăпкаса илчĕ.

— Эс калашле пултăрччĕ, Иван пичче, — терĕм те эпĕ юлташсене çитес тесе малалла чупрăм. *(М. Трубина.)*

• Чĕнӳ сăмахĕсене тупăр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

**69.** Чӗнӳ сӑмахӗсене кӗртсе 2—3 предложени ҫырӑр. Вӗсем калаканнин кӑмӑл-туйӑмне палӑртчӑр.

**70.** Тӗрӗс интонаципе вулӑр. Палӑртнӑ сӑмахсенчен хӑшӗсем япалана ят парса чӗнеҫҫӗ, хӑшӗсем ят панипе пӗрлех хаклаҫҫӗ те?

1. Улӑх, улӑх! Мӗн чухлӗ сан *пурлӑх!*

2. Тӑван чӗлхем! *Таса* хӗлхем
Парсам пӑлхавлӑ чунӑма.

3. Атӑл, Атӑл! *Кӗрле* те юрла!

4. Ӗҫре ҫунан чӗрем хӗлхемӗ,
Чӗрем, пӗр саншӑн ывӑнмасть.

*(Митта Ваҫлейӗ.)*

• Паллӑ тунӑ сӑмахсене ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тупӑр.

**71.** Предложенири подлежащие чӗнӳ сӑмахӗ туса ҫырӑр. Каланин тӗллевне кура предложенисем мӗнле пулнине калӑр. Тӗп членсене аялтан туртӑр.

Тӗслӗх: *Шкул ачисем ҫут ҫанталӑка сыхлаҫҫӗ. — Шкул ачисем, ҫут ҫанталӑка сыхлӑр!*

1. Павел Петрович ачасене чӑрӑшлӑ *ҫӑра* вӑрмана илсе кӗчӗ. 2. Ачасем вӑрман ӳстерес ӗҫе пикенсех хутшӑнаҫҫӗ. 3. Тухтӑрсем ача-пӑча сывлӑхӗшӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

• Паллӑ тунӑ сӑмаха хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмах тупӑр.

**72.** Вуласа тухӑр. Палӑртнӑ сӑмахсем подлежащи е чӗнӳ сӑмахӗ пулнине калӑр.

1. Ай, шӑнкӑрти *ҫӑл куҫӗ*, санпа эп калаҫам куҫран пӑхса. 2. Хӗрлӗ *чечексем*, тек ан ларӑр пуҫсене пӗксе. *(Н. Исмуков.)* 3. Ҫырмари шӑнкӑрти *ҫӑл куҫӗ* шӑрӑх кунсенче пурне те илӗртет. 4. Вӑрман уҫланкинчи хӗрлӗ *чечексем* аякранах курӑнаҫҫӗ. 5. Савнӑ *Шупашкарӑм,* эп сана хам юррӑмра мухтарӑм. 6. Кунсерен хӑнасем йышӑнать *Шупашкарӑм.*

**73.** Шупашкар ҫинчен презентаци тăвăр, тантăшăрсем умĕнче тухса калаҫма хатĕрленĕр.

**74.** Сăмахсемпе усă курса икшер предложени ҫырăр. Пĕринче вĕсем подлежащи, тепринче чĕнӳ сăмахĕ пулчăр.

| |
|---|
| *сывă-и?* |
| *сывă пулăр* |
| *тавтапуҫ* |
| *тархасшăн* |
| *каҫарăр* |

Тĕслĕх: *Ачасем, ыран ирех пулла кайăпăр. — Ачасем ыран ирех пулла каяҫҫĕ.*

1. Тусăм. 2. (Тăван) ҫĕршыв. 3. Анне.

**75.** Чĕнӳ сăмахĕсене кĕртсе 2—3 предложени тăвăр. Рамка ăшĕнчи сăмахсемпе усă курăр.

**76.** Ҫырса илĕр. Чарăну паллисене тĕрĕс лартăр. Чĕнӳ сăмахĕсене аялтан туртăр.

1. Тавах сана вăй панăшăн чĕлхем! 2. Сывă-и вата юман? Кунĕпех ача-пăча сан туйру* айĕнче туй тăвать. *(Митта Ваҫлейĕ.)* 3. Чуна пырса тивет кашни сăмах. Тавах тăван чĕлхем сана тавах. *(А. Смолин.)*

**77.** Тус-юлташăр е асаннӳпе аслаҫу, е кукамупа кукаҫу патне ҫыру ҫырăр. Ҫырура чĕнӳ сăмахĕсемпе усă курăр: *хаклă ҫыннăм, юратнă тусăм, хисеплĕ асаннем, хаклă кукамайăм, тăванăм.*

**78.** Мăшăрлă предложенисене вулăр, уйрăмлăхĕсене кăтартăр.

1. Ачасем уроксене тĕплĕ хатĕрленеҫҫĕ-и? — Ачасем, эсир уроксене тĕплĕ хатĕрленетĕр-и? 2. Шкул ачисем хĕлле кайăксене пулăшаҫҫĕ-и? — Шкул ачисем, эсир хĕлле кайăксене пулăшатăр-и? 3. Ҫамрăксем чăваш халăх юррисене пĕлеҫҫĕ-и? — Ҫамрăксем, эсир чăваш халăх юррисене пĕлетĕр-и?

**79.** Чăваш халăх юррисем ҫинчен ватă ҫынсенчен ыйтса пĕлĕр, тантăшăрсем умĕнче тухса калаҫăр.

## 9. Текст теми, тĕп шухăшĕ

**80.** Сочинени темисене вулăр, танлаштарăр. Хăшĕ вĕсенчен чи анли, хăшĕ ансăр? Мĕншĕн? Иккĕмĕш тема валли конкретлăрах, ансăртарах ятсем тупса çырăр.

1. Çуллахи каникул.
2. Çуллахи каникулти пĕр кун.
3. Çуллахи канăвăн юлашки кунĕсем.

> **Аса илĕр!**
>
> Текст мĕн çинчен те пулин пĕлтерет. Вăл **текст теми** пулать.
>
> Текстăн **тĕп шухăшĕ** — автор мĕн каласшăн пулни.
>
> Текст темипе тĕп шухăшĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ. Текст ячĕ темăпа тĕп шухăша кĕскен палăртма пултарать.

**81.** Вуласа тухăр. Текст темине палăртăр.

*ула такка*
*кукăр сăмса*
*вĕлтрен тăрри*

Акă ман умрах ула такка. Ун çине пăхнă май эпĕ тухтăра аса илтĕм. Вăл йывăçа сăмсипе таккать-таккать те итлесе тăрать. *Мĕнле янăрать-ха йывăç?* Хăвăлланма пуçланă йывăç хант! хант! туса сасă кăларать. Пиçĕ йывăç вара шак! шак! туса тăрать çирĕппĕн.

Хант-хант! туса тăракан йывăçăн çиелти хытă пайне шăтарать те ула такка çĕрĕшме пуçланă йывăç варрине самантрах тасатать. Акă унăн йăви хатĕр те. Ула такка йăва çавăрасшăн çеç таккамасть йывăçа. Вăл йывăçа сăтăрлакан хуртсемпе лĕпĕшсене хускатать, вĕсен пытарса хунă çăмартисене вырăнтан тапратать. Хĕлĕн-çăвĕн таккать ула такка. Тепĕр майлă каласан, йывăççен чĕрине итлет. Чир ернĕ пулсан çийĕнчех сиплеме тытăнать.

*Акă мĕнлерех маттур тухтăр вăл ула такка!* (Г. Ефимов.)

• Текста миçе вĕçленнĕ пая уйăрма пулать? Пайĕсене ят парăр. Текстăн тĕп шухăшĕ хăш предложенире палăрать? Эсир автор шухăшĕпе килĕшетĕр-и?

• Паллă тунă предложенисене çырса илĕр. Каланин тĕллевне кура вĕсем мĕнле предложенисем пулаççĕ?

• Эсир ула такка курнă-и? Ăна кĕскен сăнласа парăр.

**82.** Пиллĕкмĕш класра вĕренекенĕн сочиненине вулăр, ят парăр. Ăна миçе пая уйăрма пулать?

Иртнĕ вырсарни кун пĕтĕм класпа кану йĕркелес терĕмĕр. Вокзала çити эпир троллейбуспа çитрĕмĕр, унтан автобус çине ларса Атăл леш енне каçрăмăр та хурăн вăрманне çул тытрăмăр. Хĕр ачасем апат хатĕрлеме пуçларĕç. Арçын ачасем типĕ туратсем пуçтарчĕç те вут чĕртрĕç. Апат хыççăн волейболла вылярăмăр, юрăсем юрларăмăр, кĕрхи илемлĕ çулçăсене пуçтартăмăр. Киле каç еннелле çеç таврăнтăмăр.

• Ачасем вырсарни кун вăхăта интереслĕ, усăллă иртternине пĕлтерес тесен мĕн çинчен анлăрах та туллинрех çырмалла, текстри хăш предложенисене кăларса пăрахма та пулать? Çав сочинени ячĕ мĕнлерех пулмалла-ши? Хăвăр çавăн пек сочинени çырăр.

**83.** Вуласа тухăр. Текстăн тĕп шухăшне палăртакан предложение тупăр.

### Виçĕ пулă

Атăла юхса тухакан Шур шывра виçĕ пулă пурăннă: çутка, хураçка, уланкă.

Пĕрре çакăнта ачасем пулă тытма пынă[4]. Ăслă та чее çутка пулă ачасене курсанах инкеке сиснĕ те Атăлалла ишсе кайнă. Хураçка пулă ачасем мĕн тума килнине тавçăрса илнĕ çĕре лешсем Шур шыв пуçне атма* карнă та. Вара чее хураçка вилнĕ пек пулнă та атма урлă çурăм çине выртса каçма шутланă. Ачасем ку чăнахах вилнĕ пуль тесе ăна Атăлалла ывăтнă. Уланкă Шур шывра пĕчченех тăрса юлнине кура унтал-

| |
|---|
| *Атăл* |
| *Сĕве* |
| *Пăла* |

ла-кунталла çапкаланма пуçланă та тӳрех атмана пырса çакланнă.

Çапла çав, инкек-синкекрен хăтăлас тесен ăс та, чеелĕх те кирлĕ. *(Чăваш халăх юмахĕ.)*

• Кам нумайрах? Чăваш Республикинчи юхан шывсене калăр.

**84.** Панă темăсенчен хăшĕ сочиненин тĕп шухăшне туллинрех палăртма пултарать?

Каникулти пĕр кун. — Каникулти чи интереслĕ кун.
Кăсăклă истори. — Пурнăçри пĕр истори.
Пирĕн кушак. — Пирĕн юратнă тусăмăр.
Лантăш. — Манăн юратнă чечек.
Кĕрхи вăрман. — Мĕн тери илемлĕ кĕрхи вăрман!

• Панă темăсенчен пĕрне суйласа илĕр, сочинени çырăр.

**85.** Вуласа тухăр. Текстăн темине, тĕп шухăшне палăртăр.

### Çĕр улмипе măян

Пахчара çĕр улмипе юнашар măян вырнаçса юлнă. *Çĕр улми* çĕр айĕнчен çĕкленме çеç пуçланă — *çум курăкĕ* метр тăршшĕ ӳссе те ларнă. Унăн тымарĕ те çав тери мăнăлан-са кайнă. Хайхискер кăшкăрма тытăннă:

— Эпĕ кунта чи пысăкки, пуринчен те хитри!

Пĕр кунхине ачасем пахчана тухнă та йăрансене çум курăкран тасатма пикеннĕ.

Пирĕн çĕр улми ӳсекен ретре юлхав ача ĕçленĕ. Вăл хăйĕн пайне хăвăртрах пĕтерес тесе măян тăррине татнă та малалла талкăшнă. Лешĕ вара тепĕр кунне каллех тăсăлса кайнă, хăйĕн каппай юррине юрланă:

— Эпĕ чи пысăкки, чи хитри! Мана никам та çĕнтерей-мест!

Çу кунĕсем хăвăрт иртсе кайнă. Кĕркунне çитсе тăнă. Сынсем пахчана çĕр улми кăларма тухнă. Măяна кăкланă та айккине пăрахнă. Çĕр улми кӳршине çапла каланă вара:

— Вĕçкĕнленни ырă патне çитермест çав. (*«Тантăш»* хаçатран.)

• Туйăмлă предложенисене тупăр. Вĕсем каланин тĕллевне кура мĕнле предложенисем пулнине калăр.

• Паллă тунă сăмах пĕрлешĕвĕсене вырăсла куçарăр, ăнлантарăр.

## 10. Хутлă предложени. Çыхăну паллисĕр хутлă тата сыпăнуллă хутлă предложенисем

Вулăр, предложенисенчи подлежащипе сказуемăя тупăр. Предложенисем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

*1. Тăмана кăнтăрла чăтлăхра канать.*

*2. Вăл тĕттĕмре вичкĕн курать, хăлхисем те унăн çивĕч илтеççĕ.*

*3. Кĕркунне çитрĕ те, кайăк хурсем çырма-çатраллă чăваш çĕршывĕпе сывпуллашса кăнтăралла ăсанчĕç.*

Предложенисем хутсăр тата хутлă пулаççĕ. **Хутлă предложени** икĕ е темиçе хутсăр предложенирен тăрать.

**86.** Çырса илĕр. Тĕп членсене аялтан йĕр туртса палăртăр. Хутлă предложенисен схемине тăвăр.

Тĕслĕх: *Пĕр ирхине çурçĕр енчен питĕ сивĕ çил вĕрчĕ те, тӳпене хура пĕлĕтсем хупласа илчĕç.*

[1] те, [2].

1. Çерçи чĕпписем вунă-вун икĕ кунтан вĕçме тытăнаççĕ, хăйсемех апат тупса тăранаççĕ. 2. Кашни вĕçен кайăк хăйĕн вĕçсе килес вăхăтне çав тери тĕрĕс палăртать, хăш-пĕр чухне çеç кăшт кая юлса е маларах вĕççе çитет. 3. Чĕрĕпĕн хырăмĕ айĕ шултра та хытă çăм пĕрчисемпе витĕннĕ, анчах вĕсем йĕпсĕр. 4. Темиçе кун хушши юрпа хутăш çумăр çурĕ те, Атăл çинче пăр муклашкисем пула пуçларĕç.

Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе **интонаципе** тата **союзсемпе** çыхăнаççĕ.

Çырура хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисене ытларах чухне пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

**87.** Вуласа тухăр. Текста ят парăр.

Çанталăк кĕр еннелле сулăннă та, ирсерен шап-шурă тăм ӳкет. Кăнтăрла янкăр тăрă тӳпере хĕвел йăлтăртататать[2], анчах унăн ăшши иксĕлнĕ ĕнтĕ. Хирсем пушаннă. Йĕтем çинче çеç шавлаççĕ: унта кунĕн-çĕрĕн авăн çапакан машина кĕрлет. Ирсерен ялта çĕнĕ тулăран пĕçернĕ тутлă кулач шăрши кĕрет. (*М. Трубина* çырнинчен.)

• Хутлă предложенисене тупăр. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннине калăр.

**88.** Кирлĕ чарăну паллисем лартса предложенисене çырса илĕр.

1. Шăтса тухрĕç тулă калчисем сарăлаççĕ йывăç çулçисем. *(И. Малкай.)* 2. Каç та пулса çывхарать тăмана та вăранать. *(Хумма Çеменĕ.)* 3. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса Силпи чăваш ялĕнче юр ирĕлчĕ васкаса. *(К. Иванов.)*

**89.** Текста вулăр. Хутлă предложенисене çырса илĕр. Вĕсенчи хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннине калăр, тĕп членĕсене аялтан туртăр.

Çут çанталăкăн пайĕсемпе пулăмĕсем пĕр-пĕринпе çыхăннă. Сăмахран, температура талăк хушшинче улшăнать пулсан сывлăш пусăмĕпе нӳрĕлĕхĕ те улшăнать. Ирхине ирех çанталăк сулхăн пулать. Хĕвел хăпарать те, çĕр пичĕ ăшăнма пуçлать. Сывлăш ăшăнать те, атмосфера пусăмĕ урăхланать. Çил тухать, шыв хытăрах пăсланать. Ăшă нӳрĕ сывлăш çӳлелле хăпарсан сивĕнет те, кăтра çумăр пĕлĕчĕсем пулса каяççĕ.

| Союзсем: |
| --- |
| *тата* |
| *та (те)* |
| *ни-ни* |
| *анчах* |
| *çапах* |
| *атту* |

• Эсир ҫанталăка сăнама пĕлетĕр-и? Ҫанталăк улшăнасси мĕнрен килет?

**90.** Вуласа тухăр. Предложенисенче чарăну ăҫта пулнине асăрхăр. Ҫырса илĕр, подлежащипе сказуемăя аялтан туртса палăртăр, чарăну тумалли вырăна ‖ паллă лартăр. Хутлă предложенири хутсăр предложенисене кăтартăр, союзсене тупăр.

Тĕслĕх: *Чĕрĕпĕн куҫĕ начар курать, ‖ анчах хăлхи питĕ лайăх илтет.*

1. Кĕркунне айккинчен пăхакан хĕвелĕн ăшши вăйсăр, ҫапах унăн пайăркисем ҫутă та хаваслă. 2. Юпа уйăхĕн вĕҫнелле юр вĕҫкелеме тытăнать те, тавралăха шурă виткĕҫ хупласа лартать. 3. Чĕр чунсем хĕле тăрăшса хатĕрленеҫҫĕ, тата вĕсене ку енĕпе ҫут ҫанталăк та пулăшать.

**91.** Вуласа тухăр. Текстăн планне тăвăр. План тăрăх кĕскен каласа парăр.

### Вĕршĕн

Вĕршĕнĕн ҫуначĕ те, хӳри те ял чĕкеҫĕнни евĕрлех. Йăлтах хуп-хура хăй, янах айĕнче шурă тĕс палăрать. Вăл сехетре 150 км хăвăртлăхпа вĕҫме пултарать. Ăна тĕнчере чи *хăвăрт* вĕҫекен кайăк тесе шутлаҫҫĕ. Вĕҫнĕ вăхăтрах вăл ҫĕр-ҫĕр хурт-кăпшанка тытса ҫиет, шыв сыпса илме те ĕлкĕрет. Вĕҫеврех канма та, тĕлĕрсе илме те май тупать.

Вĕршĕн ҫĕр ҫине те, телефон пралукĕ ҫине те ларма пултараймасть, мĕншĕн тесен унăн[3] чĕрнисем малалла вырнаҫнă. Ҫавăнпа турат е пралук ҫине ларса чĕрнисемпе ҫавăрса тытаймасть, ҫаклатаймасть. Ҫитменнине, кĕске вĕсем.

Йăвине вăл хăш чухне хăвăла, тепĕр чухне шăнкăрч йăвине йышăнса хатĕрлет, ҫăмарта туса чĕпсем кăларать. Шăнкăрчсем вăл вăхăтра чĕп кăларса вĕҫеве илсе тухаҫҫĕ те, вĕршĕн *пушă* вĕллесене йышăнать вара.

Хăйĕн йăвине питĕ ăста ҫавăрать вăл. Вĕҫсе пынă ҫĕртех *вĕтĕ* тусан, кайăк тĕкĕ пухать, ҫыпăҫтарса йăва тăвать.

• Хутлӑ предложенисене тупӑр. Хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисем мӗнле союзпа ҫыхӑннине калӑр.

• Паллӑ тунӑ сӑмахсене хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тупӑр.

**92.** Пӗри хутсӑр предложенисене, тепри хутлисене ҫырса илӗр. Тӗп членсене аялтан йӗр туртса палӑртӑр. Пӗр-пӗрин тетрачӗсене улӑштарса тӗрӗслӗр. *Та (те)* союз хыҫҫӑн запятой мӗншӗн лартнипе лартманнине ӑнлантарӑр.

1. Шкул ачисем ирхи апат ҫирӗҫ те кӗнекесем илсе садри йӑрӑс тирексемпе лапсака хурамасем айне тухса ларчӗҫ. *(А. Артемьев.)* 2. Вӑрманӗ ҫӳллӗ сӑрт ҫинче вырнаҫнӑ та, тунката ҫинче ларакан Васли мучие тӑван тавралӑх ал тупанӗ ҫинчи пекех курӑнать. *(Н. Мартынов.)* 3. Вара паттӑрсем пӗр-пӗринпе ыталашса сывпуллашнӑ та тӑшман ҫине арӑслансем пек ыткӑннӑ. 4. Ир енне юр ӳккелерӗ те, кӑнтӑрла тӗлне пӗлӗтсем капланчӗҫ. 5. Йывӑҫсем пахча картинчен ҫӳлерех те, симӗс ҫулҫӑллӑ турачӗсем тулалла усӑна-усӑна аннӑ.

**93.** Хутсӑр предложенисене пӗрлештерсе хутлӑ предложени тӑвӑр. Кирлӗ ҫӗрте запятой лартӑр.

I. *Тата* хушса: 1. Хӳшӗ хыҫӗнче темӗнле сасӑ илтӗнчӗ. 2. Вӑйӑран таврӑнакан ҫамрӑксен юрри хӑлхана пырса кӗчӗ.

II. *Та (те)* хушса: 1. Ҫамрӑксем пӗр пысӑк ункӑ пулса тӑчӗҫ. 2. Ташӑ пуҫланчӗ.

III. *Анчах* хушса: 1. Вӑл салма яшки пӗҫермеваскать. 2. Вутти чӗрӗ, ҫунасшӑн мар.

**94.** Вуласа тухӑр. Текста ят парӑр. Текст тӗсне (сӑнлав, калав, ӑслав пулнине) калӑр.

Захар мана шӑхлич тума вӗрентет. Вӑл хушӑран ман пӳрнесене хӑй пӳрнисемпе[3] пусать те, тӑм лапчӑнать, тӑсӑлать. Самантрах кайӑк кӗлетки пулса тӑрать. Кайӑксем пурте хурчканни пек сарлака кӑкӑрлӑ, сӑмсисем шӗвӗр.

Акӑ вӑл кайӑкӑн хырӑмне алтӑкласа* илет, ҫиелтен тӑваткал шӑтӑк хӑварса питӗрет. Унтан ҫунат вырӑнӗсене,

хӳри выранне шатарать. Асарханса вĕретĕн те, асамлă кайăк сас пама тытăнать. (*А. Емельянов* çырни тăрăх.)

• Хутлă предложенисене тупăр, вĕсен тĕсне калăр.

• Эсир шăхлич туса курнă-и? Шăхличе мĕнрен тума пулать? Шăхличсем мĕнлисем пулаççĕ? Çак ыйтусене хуравласа презентаци тăвăр, каласа парăр.

**95.** Предложени пуçламăшĕпе усă курса икшер предложени çырăр: пĕри хутлă, тепри пĕр йышши членлă предложени пултăр. Кирлĕ çĕрте тивĕçлĕ чарăну палли лартăр.

Тĕслĕх: *Çемен асламăшне çĕр улми пуçтарса пĕтерме пулăшрĕ те ... — Çемен асламăшне çĕр улми пуçтарса пĕтерме пулăшрĕ те кĕнеке вулама ларчĕ. Çемен асламăшне çĕр улми пуçтарса пĕтерме пулăшрĕ те, амăшĕ ăна мухтарĕ.*

1. Хĕвел анаçĕнчен[2] тĕксĕм пĕлĕтсем шуса тухрĕç те ... . 2. Сивĕ çил вĕрме пуçларĕ те ... . 3. Каçхи тӳпере çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ тата ... . 4. Иртенпех йĕпе юр çурĕ, анчах ... .

**96.** Ӳкерчĕке сăнăр. Ун тăрăх калав çырăр. Хутлă предложенисемпе усă курăр.



**97.** Вулӑр. Текстӑн тӗп шухӑшне палӑртакан предложение тупӑр.

## Чарусӑр кушак ҫури

| |
|---|
| *анчӑк* |
| *калча* |
| *ванчӑк* |

Шӑп чӳрече тӗлӗнче *анчӑк ҫури* ҫывӑрнӑ, чӳрече витӗр тулалла кушак ҫури пӑхса ларнӑ. Сасартӑк *кушак ҫури* анчӑк ҫурине курах каять.

— Чим-ха, хӑратам эп ку анчӑка. Ак ҫак чечек чӳлмекне тӗртсе ярам та тӳрех пуҫӗ ҫине лектерем, — тесе шутлать чарусӑр кушак ҫури. Унтан чечек чӳлмекне тӗртсе ярать.

Чӳлмек сӗвентерсе хунӑ кӗрепле ҫине кӗрӗс! туса ӳкет те, шап! туса ҫаврӑнса тивет кӗрепле аври кушак ҫурине хӑйнех ҫамкинчен.

Анчӑк ҫури вӑранса каять те кушак ҫурине курать. Вӑл ҫамкине хыпашласа ларать иккен.

— Ҫапла ҫав, ҫапма пӗлмен пушӑ хӑйнех ҫаврӑнса тивет вӑл, — тет анчӑк ҫури кулса. (*И. Тукташ* ҫырни тӑрӑх.)

- Хутлӑ предложенисене тупӑр, вӗсен схемине ӳкерӗр. Хутсӑр предложенисем пӗр-пӗринпе мӗнле мелпе ҫыхӑннине калӑр.
- Паллӑ тунӑ сӑмах пӗрлешӗвӗсене вырӑсла куҫарӑр.

**98.** Чӑрӑну паллисем лартса ваттисен сӑмахӗсене ҫырса илӗр. Хӑш предложенире *анчах, ҫапах* союзсем пӗр йышши членсене ҫыхӑнтараҫҫӗ, хӑшӗсенче — хутсӑр предложенисене?

1. Шӑши пысӑк мар анчах шӑлӗ вӑрӑм. 2. Ҫӗнӗ пусӑ алт анчах кивӗ пусса ан варала. 3. Ӑвӑс хитре анчах хуппи йӳҫӗ. 4. Кайӑк темӗн чухлӗ ҫӳле вӗҫет ҫапах ҫӗр ҫинех анать. 5. Ҫӗлен ҫӗртен шӑвать ҫапах ҫын сисет.

**99.** Текста вулӑр, унӑн планне тӑвӑр. План тӑрӑх каласа парӑр, изложени ҫырӑр. Хутлӑ предложенисемпе усӑ курӑр.

## Кушакпа йытӑ мӗншӗн пӗр-пӗрне юратмаҫҫӗ?

Ӗлӗк-авал кушакпа йытӑ пӗр-пӗринпе питӗ туслӑ пурӑннӑ, пӗрле сунара ҫӳренӗ, тӗм айӗнче юнашар выртса ҫывӑрнӑ.

| |
|---|
| *çиллен* |
| *кулян* |
| *кӳллен* |

Пурӑнсан-пурӑнсан çӗр çинче сивӗтме тытӑннӑ, хӗл ларнӑ. Йытӑпа кушакӑн йывӑр пурнăç пуçланнӑ. Мӗн тумалла ӗнтӗ? Шухӑшлаççӗ-шухӑшлаççӗ те этемпе туслашма шутлаççӗ. Кушакпа йытӑ ун патне çитеççӗ. Йытӑ ниепле те этем патне кӗме хăяймасть, вара чееленме шутлать. «Кушака малтан кӗртсе ярам. Хуçи тивмесен вӑл мана уçса кӗртӗ», — тет.

Кушак тусне ӗненет, çурт алӑкӗ патне пырса мяуклатма тытӑнать. Этем алӑка уçать те, кушак пӳрте кӗрет. Хуçи ӑна ӑшӑ сӗт ӗçтерет те кӑмака çине хăпартса ярать. Кушак çывӑрса каять.

Йытти тулта кушака кӗтсе йӑлтах шӑнса хытать, анчах вӑл тухмасть те тухмасть.

Ирхине кушак йытӑ çинчен аса илет, анчах çурт хуçи алӑка питӗрсе ӗçе кайнӑ. Кушак ним тӑвайман енне чӳрече витӗр мяуклатма пуçлать. Йытӑ çакна курать те кушак юри кӗртмест тесе çилленсе каять. Çавӑнтанпа вӗсен[3] туслӑхӗ пӗтет, кушакпа йытӑ пӗр-пӗрне курайми пулаççӗ. (*«Çилçунат»* журналтан.)

**100.** Кирлӗ çӗрте *та (те)* хыççӑн запятой лартса çырса илӗр.

1. Эпир ку йӑмрана çырма хӗррине лартӑпӑр та вӑл аякран-аякран курӑнса ларӗ. 2. Хӗлле тилӗсем ял çывăхнерех пыраççӗ те килти хур-кӑвакала, чӑхсене тытма тӑрăшаççӗ. 3. Йывӑçа хурт-кӑпшанкӑ ернӗ те вӗсене ула такка кӑларса çиет. 4. Пӑрӑнтӑк авӑнпа юпа уйăхӗсенче çывӑрма кӗрсе выртать те пушăпа ака уйăхӗсенче ыйхăран вӑранса йӑваран тухать.

**101.** Вуласа тухӑр, текст тӗсне калӑр.

### Сӑсар

Сӑсарӑн кӗлетки вӑрӑмрах, урисем кӗске, пилӗк чӗрнеллӗ. Чӗрнисем вӗсен питӗ çивӗч, кушаксенни пек, пӳрне ӑшне каялла кӗмеççӗ. Кӗлеткипе танлаштарсан пуçӗ

пĕчĕкрех, хӳри кĕлеткинчен кĕскерех. Сăсарăн кусĕ ҫивĕч, лайăх курать. Хăлха ҫунатти ҫаврака. Сăсар ҫемҫе те хитре, йăлтăркка мамăк тирпе витĕннĕ. Мамăк тирĕ питĕ хаклă, мĕншĕн тесен ҫăм айĕ нумайăшĕн ҫинҫе те кăтра. (*Н. Игнатьев* ҫырнинчен).

• Предложенисем хутсăр е хутлă пулнине калăр, вĕсен тĕп членĕсене тупăр. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем мĕнле мелпе ҫыхăннине калăр.

**102.** Вуласа тухăр. Текста ят парăр, унăн темине палăртăр. Текст планне тăвăр, план тăрăх каласа парăр.

| |
|---|
| *йăлт-ялт* |
| *кăлт-калт* |
| *шăлт-шалт* |

Турат ҫинче кĕпшĕл ларать, унталла-кунталла йăлт-ялт пăхкалать[4]. Тытăнчĕ хайхи турат ҫинчен турат ҫине пăр-р! та пăр-р! вĕҫме. Пĕрре унталла вĕҫет, тепре кунталла. Унтан каллех, каллех. Ҫăварĕнче апат унăн. Анчах ҫав апата чĕпписене ҫитермест-ха, унпа илĕртет кăна.

Акă тепĕр кĕпшĕл вĕҫсе ҫитрĕ. Иккĕшĕ те йăва тавра кускалаҫҫĕ. Кайран килни кунта вĕҫкелесе ҫӳрет-ҫӳрет те вăрман еннелле ыткăнать, унтан каллех таврăнать. Эпĕ ăнланса илтĕм: кусем чĕпписене вĕҫтересшĕн иккен, вăрмана ертсе каясшăн.

Кĕҫех пĕр чĕппи, чи паттăрри ĕнтĕ, йăваран вĕҫсе тухрĕ те вĕренен аялти турачĕ ҫине ларчĕ. Хăй иккĕленет, хăрать пулас. Амăшĕ ăна ҫӳлерехри турат ҫине хăпарма чĕнет, чăк-чăк тукаласа илет, анчах чĕппи ҫинҫе турат ҫинче ҫаплах чĕтрене-чĕтрене ларать-ха. Акă чĕпĕ ҫӳлерехри турат ҫине вĕҫсе хăпарчĕ, амăшĕ тата ҫӳлерехри ҫине йыхăрать. Чĕппи ывăннă ĕнтĕ, ҫапах вĕҫес хаваслăх малаллах тапаланма хушать ăна. Вăл ҫӳлелле улăхма тытăнчĕ, тинех чи ҫӳлти турат ҫине хăпарчĕ. (*В. Алентей* ҫырни тăрăх.)

• Хутлă предложенисене тупăр, вĕсенчи чарăну паллисене ăнлантарăр. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе ҫыхăннине калăр.

## 11. Текст планӗ

**103.** Текста вуласа тухӑр. Шухӑшӗ енчен ӑна миҫе пая уйӑрма пулать? Пайсене ят парӑр.

### Инкек куҫа курӑнса килмест

Пӗрремӗш класра вӗренекен Ирина пӗве хӗрне пӗчченех кайрӗ. Ытти чух ӑшӑх ҫӗрте шӑмпӑлтататчӗ-ха вӑл. Халӗ те ҫав вырӑнах пырса тӑчӗ, анчах паян шыв хӗрринче никам та ҫук. Пӗччен чух шыва кӗме хӑрушӑ!

Шыва кӗрес кӑмӑл ҫӗнтерчӗ-ҫӗнтерчех. Ирина кӗпине хӑпӑл-хапӑл хывса пӑрахрӗ те шывалла пӗр[3] утӑм ярса пусрӗ. Анчах хӑнӑхнӑ пек ӑшӑх вырӑн пулмарӗ — Ирина *пуҫ тӳпи* курӑнмалла мар анса кайрӗ, пута пуҫларӗ. Темиҫе хут шыв ҫине тухса хӑрушшӑн кӑшкӑрнине ҫеҫ астӑвать вӑл. Кайран тӑнне ҫухатнӑ.

Юрать-ха, ҫав вӑхӑтра пиллӗкмӗш класра вӗренекен Алешӑпа Андрей пӗве хӗрне ҫитсе тӑнӑ. Андрей пӗр тӑхтаса тӑмасӑр шыва сикнӗ, кӑвакарса кайнӑ Иринӑна ҫӳҫрен ярса тытса ҫыран еннелле талпӑннӑ. Ҫыран хӗррине тухсан халтан кайнӑ хӗр ачана пирвайхи пулӑшу парса тӑна кӗртнӗ. (*В. Афанасьев* ҫырни тӑрӑх.)

• Паллӑ тунӑ сӑмах пӗрлешӗвне вырӑсла куҫарӑр.

> Текст вӗҫленнӗ пайсенчен тӑрать. Вӗсен кашнин тӗп шухӑшӗ пур. Пайӗсене ят пама пулать.
>
> Текст планне тӑвас тесен ӑна малтан вӗҫленнӗ пайсене пайламалла, унтан кашни пайне ят памалла.

**104.** Текста вулӑр, ӑна ят парӑр. Текст планне тӑвӑр.

Ачасем чана чӗпписене ҫӗр ҫине ячӗҫ те аяккалла пӑрӑнчӗҫ[4]. Чӗпсем пуҫӗсене каҫӑртрӗҫ, ҫуначӗсене сарчӗҫ, карклатма тытӑнчӗҫ. Ҫав хушӑра чӗпсем патне икӗ пысӑк чана вӗҫсе анчӗ. Чанасем чӗпписем патне сиксе пычӗҫ те ҫуна-

чĕсемпе вĕсене тĕккелеме тытăнчĕç. Тĕкеççĕ те тирекĕн аялти туратти çине вĕçсе хăпараççĕ. Пăртак ларсан каллех чĕпписем патне анаççĕ.

*чана чĕппи*
*вăрман хĕрри*
*йывăç туратти*

Сасартăк чана чĕпписем çуначĕсене сарса лăпăстатрĕç-лăпăстатрĕç те аслисемпе пĕрле тирекĕн аялти[1] турачĕ çине вĕçсе ларчĕç. (*«Çилçунат»* журналтан.)

• Чана мĕнле кайăк? Ăна кĕскен сăнласа парăр.

**105.** Ӳкерчĕк тăрăх план тăвăр, калав çырăр.



**106.** Хатĕр план тăрăх пăтраштарнă пайсенчен çыхăнуллă текст туса вулăр.

План:

1. Йывăççен кĕрхи тумĕ.
2. Чăрсăр çил.
3. Сивĕ çумăр.
4. Кайăксем хӳтĕ вырăнсене туртăнаççĕ.

**Кĕркунне**

1. Час-часах сивĕ çумăр пĕрĕхет[4]. Пӳртрен тухас та килмест ун пек кунсенче.

| |
|---|
| *хăш-пĕр* |
| *пит-куç* |
| *ăс-тăн* |
| *ăс-пуç* |

2. Хăш-пĕр чух çил кĕрлеме тытăнать те сарă кĕрен çулçăсене çерем çинчен çĕклесе таçта çитиех вĕçтерсе, сапаласа каять. Сĕм тĕттĕм ана питне тĕллĕн-тĕллĕн саратса хурать.

3. Кайăксем те çынсен çывăхне, яла, хуралтăсен хӳттине, туртăнаççĕ, мĕншĕн тесен вăрман *хăтсăрланчĕ*, çăткăнсенчен пытанма йывăр. Вар-улăхра та апат сахал.

4. Çырма-çатра хĕрринчи йывăç тăрăхĕсем сарăхма, кĕренленме тытăнчĕç. Çатракаллă çĕмĕртсем, хĕп-хĕрлĕ[3] çупкăм-çупкăм çырлаллă вуллисене çĕрелле уснă пилешсем тăм ӳкнĕ-ӳкменех çаралса юлчĕç.

• Паллă тунă сăмахăн синонимĕсене тупăр.

**107.** Сочинени темисенчен пĕрне суйласа илĕр, план тăвăр. Сочинени çырăр.

1. Пĕррехинче çулла.
2. Чи телейлĕ кун.
3. Ман юратнă тусăм.

**108.** План ыйтăвĕсем пулăшнипе калава пайăн-пайăн вуласа тухăр.

План:

1. Ирхине.
2. Ытарайми ывăл.
3. Амăшĕн çутă сăн-пичĕ.
4. Амăшĕпе ывăлĕ — чи телейлисем.

**Амăшĕпе ывăлĕ**

Ирхине амăшĕ картишĕнчен асăрхануллăн кĕретчĕ. Ывăлĕн тутлă ыйхине татасран хăратчĕ пулĕ. Ачи вăраннă пулсан вара ăшшăн кулса илетчĕ. Унтан амăшĕ кăмака çумĕнче çакăнса тăракан ал шăллипе аллине шăлатчĕ те ывăлĕ патне пыратчĕ. Васкамасăр утса пыратчĕ вăл, юратнă ывăлĕ çине ытараймасăр пăхатчĕ. Çав вăхăтра амăшĕн çутă

сăн-пичĕ ытла та илемлĕччĕ[4]. Çак илеме кулнă вăхăтра пăт путакан сылтăм пичĕ татах та ўстеретчĕ. Амăшĕ ывăлне вырăн çинчен йăтса илсе ăшшăн чуптуса илетчĕ, ачашлатчĕ. Çак самантра амăшĕ те, ывăлĕ те тĕнчере чи телейличчĕ. (*Р. Шевлепи* çырни тăрăх.)

*асăрханулллăн*
*ăшшăн*
*симĕссĕн*
*кăмăллăн*

**109.** «Ылтăн кĕркунне тĕсĕсем» сочинени планне пăхса тухăр. Планăн хăш пайĕсем темăпа килĕшсе тăмаççĕ? Хăвăр шухăша ĕнентерĕр.

1. Кĕрхи хурăнсем.
2. Хĕрлĕ тутăрлă пилеш.
3. Сарă хĕрлĕ вĕрене.
4. Сип-симĕс чăрăш.
5. Уй-хирти кĕрхи ĕçсем.
6. Кайăксем кăнтăра пуçтарăнаççĕ.

**110.** Текста вулăр. Кашни пайне ят парса план тăвăр. *Илюш* сăмах вырăнне *эпĕ* сăмах лартса изложени çырăр.

### Кайăксен апатланăвĕ

Илюш вăрмана шалтан шала кĕчĕ. Тăвайккинче пилешпе палан тĕмĕсем кăвайт пек хĕмленсе лараççĕ. Вĕсем çинче хаваслăн чилете-чилете кайăксем кĕшĕлтетеççĕ, тăртанса пысăкланнă çемçе çырласене пĕр-пĕринпе ăмăртса çиеççĕ.

*тăвайкки*
*карçинкка*
*вăрттăн*

Илюш хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпсемпе хура тĕпеклĕ кайăксене *чылайччен* вăрттăн сăнаса тăчĕ. Уйăпсем пилешпе палан вăррисене кăна çиеççĕ иккен. Хура тĕпеклĕ кайăксем вăрă суйласа чăрманмаççĕ, çырласене пĕтĕмпех хыпаççĕ.

Унччен те пулмарĕ — хайхи кайăксенчен иккĕшĕ пилеш çинчен пат! татăлса анчĕç. Çĕре ўксен вĕсем йăшăл та хускалмарĕç. Илюш тĕлĕнсех кайрĕ. Вăл пилеш патне чупрĕ. Çырла нумай çинипе тăнран кайнă иккен кайăксем. («*Çилçунат*» журналтан.)

• Хура тӗпеклӗ кайӑкӑн ячӗ мӗнле? Ун ҫинчен эсир мӗн пӗлетӗр?

• Паллӑ тунӑ сӑмаха ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тупӑр, вӗсемпе предложенисем тӑвӑр.

## 12. Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисем

Вуласа тухӑр. Предложенисене танлаштарӑр.

*«Икӗ чӗлхе — икӗ ӑс, виҫӗ чӗлхе — виҫӗ ӑс»,* — тенӗ И.Я. Яковлев.

И.Я. Яковлев *икӗ чӗлхе икӗ ӑс, виҫӗ чӗлхе виҫӗ ӑс* пулни ҫинчен каланӑ.

Паллӑ тунӑ сӑмахсене кам каланӑ? Хӑш предложенире И.Я. Яковлев сӑмахӗсене пӗрре те улӑштарман? Пӗтӗмлетӳ тӑвӑр.

Кам та пулин каланине нимӗн улӑштармасӑр пӗлтерекен сӑмахсене **тӳрӗ пуплев** теҫҫӗ.

Тӳрӗ пуплевпе юнашар автор сӑмахӗсем пулаҫҫӗ. Вӗсем кам каланине е шухӑшланине пӗлтереҫҫӗ.

| Автор сӑмахӗсем: | Тӳрӗ пуплев: |
| --- | --- |
| *Ваттисем ҫапла калаҫҫӗ:* | *«Чӗлхӳпе ан васка, ӗҫӳпе васка».* |

**111.** Предложенисене вулӑр. Тӳрӗ пуплев хыҫҫӑн тӑракан автор сӑмахӗсене хӑвӑртрах тата сасса антарса вулӑр. Тӳрӗ пуплеве автор сӑмахӗсенчен мӗнле чарӑну паллисемпе уйӑрнине калӑр.

1. «Ҫумӑр хыҫҫӑн хӗвел хӗртме пуҫласан кӑмпа нумай шӑтса тухать», — терӗ аппӑшӗ. 2. «Акӑ ӑҫта иккен юмах тӗнчи!» — шухӑшларӗ Палькка рашча ҫине пӑхса. 3. Хальхинче Палькка аппӑшӗнчен шалт тӗлӗннӗ: «Мӗн пулнӑ пирӗн Вальӑна?» 4. «Валя, итле-ха, кӑрӑҫ кӑмписем хӑш вӑрманта ӳсеҫҫӗ?» — ыйтать Палькка аппӑшӗнчен. *(И. Егоров.)*

**112.** Предложенисене тĕрĕс интонаципе вулăр. Тӳрĕ пуплев предложенире хăш вырăнта тăнине, ăна мĕнле чарăну паллисемпе уйăрнине сăнăр, пĕтĕмлетӳ тăвăр.

1. Вĕçелис эпĕ хуравласса кĕтмерĕ, çавăнтах хăвăрт, хĕрӳллĕн каласа хучĕ: «Кĕнеке вăл тус-юлташ пекех, юрат ăна, вула». 2. «Мĕнле кăна çул çук-ши йăлăмра!» — тĕлĕнет йăмăк. 3. «Йывăç — пирĕн тус, вăл нумайрах пулсан тус-сен йышĕ те ӳсет», — терĕ Курмил пичче. 4. Вăрман çывăхĕнчи чăвашсем çапла калатчĕç: «Тăм ӳксессĕн хырай тухать». 5. «Мĕн кăмпи тухтăр-ха çуркунне?» — тĕлĕнетчĕ хăшĕ-пĕри темиçе çул каялла. 6. «Пурăнан пурнăçра тем те курма тивет иккен», — вĕçлерĕ юлташ хăй калавне.

**113.** Схемăсемпе усă курса тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче мĕнле чарăну паллисем лартмаллине тата тӳрĕ пуплевпе автор сăмахĕсене мĕнле сас паллипе пуçласа çырмаллине сăнăр, пĕтĕмлетӳ тăвăр.

**Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисен схемисем**

| Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕнче: | Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем хыççăн: |
|---|---|
| «Т □ ?» — а □ . | А □ : «Т □ ?» |
| «Т □ !» — а □ . | А □ : «Т □ !» |
| «Т □ », — а □ . | А □ : «Т □ ». |

**114.** Автор сăмахĕсем умне тӳрĕ пуплев хушса çырăр.

1. ___ ___, — ăнлантарнă вĕрентекен. 2. ___ ___? — интересленчĕ хăна. 3. ___ ___, — ăнлантарчĕ пĕчĕк ывăлне амăшĕ. 4. ___ ___? — ыйтрĕ хĕр ача вăрман хĕрринчи кайăксене курсан. 5. ___ ___! — хушрĕ бригадир.

**115.** Илемлĕ вулăр. Текста ят парăр, унăн планне тăвăр. Пĕр-пĕрин планĕпе паллашăр, танлаштарăр. Камăн ăнăçлăрах пулса тухнă? Мĕншĕнне ăнлантарăр.

| |
|---|
| *килеччен* |
| *кайиччен* |
| *тупиччен* |

Пусă çумĕнче тап-таса[3] шыв кӳлленсе тăрать. Хур чĕппи çакна курчĕ те унта чупса пычĕ, тăп-тăрă шыва килениччен ĕçрĕ. Кайран çăвăнма тытăнчĕ. Хĕп-хĕрлĕ пĕчĕк сăмсипе шыв илет те хăй тăрăх ярать: «Эх, лайăх та, пĕтĕм тусанран тĕкĕсене тасатать».

Инçех те мар сысна çури нăриклетсе çӳрет. Хур чĕппи çăваннине курчĕ те ун патне пычĕ. «Атя эс те çăван, атту сăмсу вараланнă сан», — тет хур чĕппи. «Айван, таса шывпа кам çăвăнать?» — терĕ сысна çури тарăхса.

Сысна çури çапла каларĕ те юнашарти шăршлă лачака еннелле уттарчĕ. Унта çитсен пылчăк çăра-çăра шăп варрине кĕрсе выртрĕ. Ним тума та çук: кашни чĕрĕ чунăн хăйĕн йăли-йĕрки. (*«Çилçунат»* журналтан.)

• Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тупăр, вĕсен схемине тăвăр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

**116.** Автор сăмахĕсем çумне тӳрĕ пуплев хушса çырăр. Чарăну паллисене ăнлантарăр.

1. Ача йытă çури çумне ларчĕ те тарăн шухăша кайрĕ: — — ? 2. Ĕнер амăшĕ ывăлĕ ырăн çинчен тăманнине курса пăшăрхансах ыйтрĕ: — — ? 3. Асламăшĕ итлесе тăчĕ-тăчĕ те йăл кулчĕ: — — . 4. Матĕрне кинемей уçă сассипе чĕпсене йыхăрать: — —! (*В. Игнатьева* çырнинчен.)

**117.** Вуласа тухăр. Текст планне тăвăр, изложени çырăр.

### Мăй пăран

Пĕррехинче эпир ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Пĕр сарлака юман кутĕнче чарăнтăмăр. Максăм çӳлелле пăхрĕ, кĕçех хырăмпа шуса йывăç тăрăх хăпарса кайрĕ. Эпĕ унталла пăхрăм та юман хăвăлне курах кайрăм.

Макçăм хăвăл ăшнелле пăхрĕ, часах çĕрелле васкаса анчĕ. «Çĕлен!» — тесе кăшкăрса ячĕ те хурăнлăха тапса сикрĕ. Эпĕ ĕненмесĕр ун хыççăн чупрăм.

*Çав вăхăтра пирĕн пата Анна Ивановнăпа ачасем пырса тăчĕç те, эпир мĕн курнине вĕсене каласа патăмăр.*

Анна Ивановна вара пире çапла ăнлантарса пачĕ.

Хăвăлта кайăк пурăнать иккен. Халĕ вăл чĕпĕ кăларма ларнă, çавăнпа хăйĕн тăшманĕсене çĕлен сассипе хăратать.

*Акă хăвăлтан кайăк вĕçсе тухрĕ те турат çине ларчĕ.* «Курăр-ха, ачасем, ку кайăк мĕнле курнăçланать!» — кăшкăрса ятăм эпĕ тĕлĕннипе. «Майне пăрать вăл, çавăнпа ăна май пăран теççĕ», — терĕ Анна Ивановна. (*П. Емельянов.*)

- **Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тупăр, схемисене тăвăр.**
- **Паллă тунă предложенисем хутсăр е хутлă пулнине калăр, чăрăну паллисене ăнлантарăр.**

**118.** **Предложенисене çырса илĕр. Тӳрĕ пуплевпе автор сăмахĕсенче кирлĕ чарăну паллисем лартăр.**

1. Акă епле маттур ачасем пур пирĕн ялта[1] терĕ унăн куçĕ çав самантра. 2. Эсир ун çинчен калаçнă чух ман пуçра тĕлĕнмелле ырă шухăш çуралчĕ терĕ Витя хăлаçланса. 3. Алăк сассине илтсе Костя асламăшĕ тухрĕ те сăмах хушрĕ Ачасем, Костьăна шырама килтĕр-и. 4. Ваттисем çапла калаççĕ Сар кайăк тăрăшсах юрласан тепĕр кунне çанталăк уяр пулать. 5. Çак ĕçсене пурне те вĕренсе çитмелле сирĕн терĕ Михаç ачасене.

**119.** **Вуласа тухăр. Калава малалла тăсăр, тӳрĕ пуплевлĕ предложенисемпе усă курăр.**

### Шăкăлчисем

Читлĕхре икĕ шăкăлчи йăлт та ялт сиккелеççĕ, хăйсем канăçсăррăн шăкăлтатаççĕ, уçса кăларма ыйтаççĕ пулмалла.

Вĕсене Витя пĕр ывăç *хĕвел çаврăнăш* пачĕ. Темшĕн-çке питех кăмăлласа çимеççĕ ăна. «Урăх ӳсен-тăран вăррисене

килĕштерессĕ-тĕр вĕсем. Вăрмана кайса пусарар», — сă-мах хушрĕ Миша.

Ачасем вăрмана кайрĕç, усланкăра *шăлан çырли* татрĕç, çăкапа вĕрене вăррисене пухрĕç.

Куллен тăрăшрĕç ачасем пўртри кайăксемшĕн. Анчах шăкăлчисем сайрарах та сайрарах юрлама тытăнчĕç, çăмарта туса чĕпĕ те кăлармарĕç. Юлашкинчен юрăçă кайăксем пачах сас пама пăрахрĕç. (*Ю. Петров* çырни тăрăх.)

- Текстри тўрĕ пуплевлĕ предложение тупăр, унăн схемине тăвăр.
- Паллă тунă сăмах пĕрлешĕвĕсене вырăсла куçарăр.

**120.** Илемлĕ литература произведенийĕсенчен çак схемăсене тивĕçлĕ тўрĕ пуплевлĕ предложенисем тупса çырăр.

«Т ☐?» — а ☐. «Т ☐!» — а ☐.

А ☐: «Т ☐».

**121.** Панă предложени схемине тăвăр.

«Çĕнĕ çĕре кайса килтĕмĕр!» — терĕ атте çынсем ыйтасса кĕтсе тăмасăрах.

**122.** Вуласа тухăр, текста ят парăр, унăн тĕп шухăшне палăртăр. Тўрĕ пуплевлĕ предложенисене çырса илĕр.

Çўллĕ сăрт çинче кутамас* юман ўснĕ. Вăл питĕ куштан пулнă, хăй тавралĕнчи ытти йывăççене ним шута та хуман. «Сирĕнпе мĕн тумалла? Эсир манăн ята çеç яратăр», — тенĕ вăл хăйпе юнашар ўсекен çăкана, хурăна, ăвăса.

Пĕррехинче çынсем килнĕ те пĕтĕм йывăçа касса пăрахнă. «Ну, халь пурăнма лайăх пулать ĕнтĕ, мана никам та чăрмантармасть», — савăннă юман.

Нумай та пурăнайман юман, пĕррехинче çил-тăвăл тухнă. Хайхискер пĕччен лараканскере силлеме тытăннă. Ĕлĕк тăвăл сăрт тăррине килме те хăранă, мĕншĕн тесен йывăçсем пĕр-пĕрне пулăшнă, тăвăла енчен енне çапа-çапа хуса кăларнă. Халĕ вара тăвăла никам та хăратман — вăл пĕч-

чен юмана ласканӑ та ласканӑ. «Ах, пӗччен чухне тӑшманпа ҫапӑҫма йывӑр иккен!» — тенӗ юман чунӗ кӳтсе ҫитнӗрен.

Анчах касса пӑрахнӑ йывӑҫсене чӗртеймӗн. Тӑвӑл ӑна пыра-пыра ҫапнӑ, юлашкинчен тымарӗ-мӗнӗпех кӑкласа сирпӗтнӗ. Кутамас юманран нимӗн те тӑрса юлман. (*Юхма Мишши* ҫырни тӑрӑх.)

Икӗ е темиҫе ҫын калаҫӑвне **диалог** теҫҫӗ.

Диалогри кашни ҫын сӑмахне ҫӗнӗ йӗркерен пуҫласа ҫырмалла. Кашни сӑмахӗ умӗн тире лартмалла. Кун пек чухне кавычка кирлӗ мар. Тӗслӗх:

*Ачасем пулла кимӗ патне илсе пыраҫҫӗ.*

— *Ҫупах-и ку?*

— *Ҫук, ҫупах мар, хӗҫ пулӑ...*

— *Тен, партас пуль?*

— *Курмастӑн-и пуҫне? Партасӑн пуҫӗ кӗске пулать.*

— *Ну, кервен те вара!*

— *Ҫурӑмӗ мӗнле! Хӗҫ пек тӑрать вӗт.*

— *Ҫавӑнпа ятне те хӗҫ пулӑ тенӗ.* (Хв. Уяр.)

**123.** Ӳкерчӗке сӑнаса пӑхӑр. Ун тӑрӑх калав ҫырӑр. Калавра диалогпа усӑ курӑр.



**124.** Пана предложени схемине тавар. Предложенири чарану паллисене анлантарар.

«Хисепе тивеçлĕ çын, — саванса шухашларам[2] хам ассан. — Вай-халне шеллемен, халах ĕçĕнче нумай ĕçленĕ, чылай хура-шур курна».

**125.** Текста вулар, ана ят парар. Кирлĕ чарану паллисем лартса çырса илĕр.

Пĕчĕкçĕ хыр капашка тапрана сирсе тухрĕ те яп-янкар тара тупене тинкерчĕ
Ах, мĕн тери ыра терĕ вал
Çав вахатра инçех те мар уçамсар шав илтĕнчĕ
Ай-ай-ай Мĕн вара ку харaса ыйтрĕ хыр
Варман шавлать хуравларĕ ана пĕр йарас йывaç
Эсĕ вара кам
Эпĕ — бук Кунта бук варманĕ Лере сан евĕр хырсем ўсеççĕ
Хырсем — манаçла йываçсем самах хушрĕ пĕр çап-çамрак хуран
Эппин, манан та манаçла пулмалла шутласа илчĕ те пĕчĕкçĕ хыр самсине каçартрĕ... (*Р. Сарпи* çырнинчен.)

## 13. Санлав. Калав. Аслав

Пирĕн таврара мĕнле кана япала, пулам *(кам вал? мĕн вал?)* çук-ши? Вĕсен хайне евĕр уйрамлахĕсем, паллисем *(мĕнле вĕсем?)* пур, кашниех мĕнпе те пулин паларать *(вĕсем мĕн таваççĕ?)*. Япала е пулам уйрамлахĕсене, паллисене, пуламсен салтавĕсене хак парса пĕтĕмлетўсем тума пулать *(мĕншĕн вĕсем пĕрешкел мар, уйрамлахĕ мĕнрен килет?)*.

Текстсене вулар, санаса пахар та танлаштарар. Вĕсенче пĕр пекки мĕн пур? Мĕнпе уйралса тараççĕ-ши вĕсем? Пĕтĕмлетў тавар.

1. Чакак питĕ чипер, хитре. Тумĕ унăн капăр. Аякран вăл хура шурă тĕслĕ анчах пек. Çывăхран пăхсан çакна асăрхатăн: хӳри ун хура мар иккен, хура симĕс. Çунаттисем — кăвак симĕс, тĕксĕм, таса, йăлтăркка.

2. Икĕ шапа ăнсăртран хăйма чӳлмекне кĕрсе ӳкнĕ. Вĕсенчен пĕри çемçешкерех те шиклĕрех пулнă. Вăл кăштах ишкеленĕ те: «Мĕн пустуй тапаçланас, манран пурпĕрех ишсе тухасси пулмасть», — тенĕ. Путнă вара вăл.

Тепри вара вăйĕ пĕтсе çитиччен ишме шутланă.

Нумай иртнĕ-и вăхăт, сахал-и. Ку мĕн? Шапа хăй айĕнче хăйма мар, темĕнле хытă япала пуррине туйнă. Пăхнă та хăй çу чăмăркки çинче ларнине курах кайнă. Промыше-иш шапа хăех çу ӳкернĕ иккен! Çакă çăлса хăварнă та ăна.

3. Чакак этеме, çут çанталăка самаях усă кӳрет, мĕншĕн тесен вăл уй-хирте, вăрманта шăши нумай тытать. Хуртсене, нăрăсене, çав шутра тыр-пулшăн питĕ сиенлисене те, чылай пĕтерет. Çавăнпа чакак усăллă кайăк шутланать.

Хăш текстра каланине пĕр сăн ӳкерчĕке кĕртме пулать?

Калав тата çыру кĕввине (манерне) кура текстсене виçĕ ушкăна уйăрма пулать: сăнлав, калав, ăслав.

**Сăнлавра** пĕр-пĕр япалана, чĕр чуна, çынна, вăл пурăнакан вырăна е ĕçе, тĕрлĕ пулăма сăнласа кăтартаççĕ.

**Калавра** йĕркипе пулса пыракан ĕçсене е пулăмсене каласа е çырса кăтартаççĕ.

**Ăславра** пулăмсене, япаласене, ĕç-хĕле хак параççĕ, сăлтавласа çирĕплетеççĕ, пĕтĕмлетӳсем тăваççĕ.

**126.** Текстсене вуласа тухăр. Вĕсен тĕсне (сăнлав, калав, ăслав) калăр. Мĕншĕн çавăн пек пулнине ăнлантарăр.

1. Йывăç турачĕ çинче кăсăя ларать. Пичĕ шап-шурă, пуçне тĕксĕм çĕлĕк тăхăннă. Çинçе те вăрăм «галстукне» кăкăрĕ урлă сарăрах-симĕсрех хырăмĕ айнех тăсса янă. Икĕ

çунатти хěрринче те — пилěкě тěлěнче — кěсье ани пек шурă йěр палăрать.

*çӳлтен çӳле*
*килтен киле*
*çултан çула*
*çултан-çул*
*кунран-кун*

2. Тепěр чух кăсăясем пěр-пěр йывăçа сырса илеççě те пуçлаççě хěвěшме. Вулă е турат тавра вěçкелесе-сиккелесе çӳлтен çӳле хăпараççě те аялалла анаççě. Хальхаль татăлса ӳкес пек çулçăран çакăнса пуçхěрлě тăраççě.

3. Кăсăя — çав тери усăллă кайăк. Мěншěн тесен йывăççене сиен кӳрекен хурт-кăпшанка вăл çу каçиччен темиçе пин пěтерет. Ěмěрěпех çут çанталăк илемěпе пуянлăхěн сыхлавçи вырăнěнче тăрать. (*Г. Орлов* çырни тăрăх.)

• Хăвăр тăрăхра хěл каçакан пěр-пěр кайăка ӳкерěр, ăна сăнласа парăр. Хăвăр сăнлавпа тантăшăрсене паллаштарăр.

**127.** Сочинени темисене танлаштарăр. Вăл е ку темăна уçса пама мěнле (сăнлав, калав, ăслав) текстпа усă курни вырăнлă? Мěншěн?

1. Манăн йытă.
2. Мěншěн йытта çыннăн тусě теççě?
3. Йытăпа пулса иртнě кулăшла пěр ěç.

Текст темине текст тěсěпе пăтраштармалла мар. Текстсен теми тěрлě, анчах тěсě пěрешкел пулма пултарать.

**128.** Текстсене танлаштарăр. Мěнпе уйрăлса тăраççě вěсем? Вěсен пěрешкелли мěн пур? Пěтěмлетӳ тăвăр.

1. Робикăн питě çывăх тусě анчăк пур. Йытти хитрескер, пуçě шурăрах, кěлетки ула-чăла. Урисем хуп-хурах вара. Пысăк та усăк хăлхисем чупнă чухне, икерчě çакса янă евěрлех, çапкаланса пыраççě. (*В. Петров* çырни тăрăх.)

2. Халě ěнтě Ленăн кушак çури пур. Чăнах та, мěнле чипер вăл, виçě тěслě. Çурăмěпе хăлхисем сарăрах, аякěсемпе урисем шурă. Кăкăрě çинче вара юри ятарласа сăрласа хунă пек хура «галстук» палăрать. Куçěсем пысăк, тěлěнмелле хěлхем сапса тăраççě. (*Р. Шевлепи* çырни тăрăх.)

• Хăвăра çывăх пěр-пěр чěр чуна сăнласа парăр.

**129.** Ӳкерчӗкри кайӑк сире килӗшет-и? Ӑна сӑнласа пама хатӗрленӗр.

Кӗске сӑнлав ҫырӑр, кайӑк тӗкӗн тӗсӗсене лайӑхрах палӑртакан сӑмах майлашӑвӗсемпе усӑ курӑр: *тӗксӗм кӑвак, ҫутӑ хӑмӑр, сарӑрах хӑмӑр, сарӑрах симӗс.*



**130.** Илемлӗ литература произведенийӗсенчен сӑнласа тата каласа паракан текстсем шыраса тупӑр. Вӑл сӑнлав е калав пулнине тӗслӗхре кӑтартнӑ пек ӗнентерӗр.

Тӗслӗх:

*Эпӗ шухӑшланӑ тӑрӑх, ...*
*Ман шутпа, ...*
*Ваттисем калашле, ...*

1. Пӑши — пысӑк пуҫлӑ, пысӑк кӗлеткеллӗ, вӑрӑм ураллӑ чӗр чун. Сӑмси курпунлӑ. Ҫӳлти тути пысӑк, аялалла усӑнса тӑрать. Хӑлха ҫунаттисем сарлака та вӑрӑм. Пӑши ҫӑмӗ хурарах хӑмӑр тӗслӗ. Мӑйӗпе ҫурӑмӗ кӑштах тӗксӗмрех, урисем ҫутӑрах.

Ман шутпа, ку сӑнлав пулать, мӗншӗн тесен кунта каланине ӳкерсе илес пулсан пӗр сӑн ӳкерчӗке кӗртме пулать. Вӑл пӑшие сӑнласа парать.

2. Кӑвакарчӑнӑн хӑрах ҫуначӗ аманнӑччӗ. Эпӗ ӑна питӗ хӗрхентӗм, аманнӑ ҫунатне эмел сӗртӗм, кайран тутӑрпа ҫыхса ятӑм. Ирхине те, каҫхине те тырӑ пӗрчи сапса патӑм, ҫӑкӑр тӗпретсе ҫитертӗм, шыв ӗҫтертӗм. (*Илпек Микулайӗ* ҫырни тӑрӑх.)

Ман шутпа, ку калав, мӗншӗн тесен кунта йӗркипе пулса пынӑ ӗҫсем ҫинчен каласа кайнӑ. Текстра каланине пӗр сӑн ӳкерчӗке кӗртме ҫук.

## ХĂВĂР ПĚЛĚВĚРЕ ТĚРĚСЛĚР

### I. Ыйтусене хуравлăр.

1. Каланин тĕллевне кура предложенисене мĕнле ушкăнлаççĕ?
2. Мĕнле членсене пĕр йышши теççĕ?
3. Чĕнӳ сăмахĕ тесе мĕне калаççĕ?
4. Мĕнле предложение хутлă теççĕ?
5. Мĕн вăл тӳрĕ пуплев?
6. Мĕне диалог теççĕ?
7. Мĕн вăл текст?

### II. Предложенисене çырса пĕтерĕр.

1. Каланин тĕллевне кура предложенисене ... .
2. Пĕр йышши членсем тесе ... .
3. Чĕнӳ сăмахĕ тесе ... .
4. Хутлă предложени тесе ... .
5. Тӳрĕ пуплев тесе ... .
6. Диалог вăл — ... .
7. Текст вăл — ... .

### III. Тест ыйтăвĕсене хуравлăр.

**1.** Предложенин хăш членĕсем пĕр йышши пулма пултараççĕ?

а) Сказуемăй кăна;
ă) предложенин кĕçĕн членĕсем кăна;
б) предложенин тĕп членĕсем кăна;
в) предложенин пур членĕ те.

**2.** Чĕнӳ хыççăн хăçан кăшкăру палли лартаççĕ?

а) Вăл предложени пуçламăшĕнче тăнă чух;
ă) ăна вăйлă туйăмпа каланă чух;
б) вăл предложени вĕçĕнче тăнă чух;
в) вăл предложени варринче тăнă чух.

# ФОНЕТИКА. ОРФОЭПИ. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ

## 14. Алфавит. Вĕреннине аса илни

**131.** Алфавита аса илĕр те тĕрĕс каласа парăр.

1. Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли?
2. Уçă сас палли миçе? Хăшĕсем?
3. Хупă сас палли миçе? Хăшĕсем?
4. Хăш сас паллисем сасăсене пĕлтермеççĕ?
5. Хăш сас паллисем икĕ сасса пĕлтереççĕ?

**132.** Хăвăр класри ачасен хушамачĕсене алфавит йĕркипе çырăр. Эсир çырса тухнă сăмахсем хăш пуплев пайĕ пулаççĕ? Вĕсене мĕнле çырмалла?

**133.** Çак хушаматсене вулăр та алфавит йĕркипе калăр.

Хусанкай П.П., Ухсай Я.Г., Артемьев А.С., Паймен В.З., Осипов П.Н., Яковлев И.Я., Элкер С.В., Уяр Ф.Е., Иванов К.В., Ефимов Г.А., Ваçанкка Н.Т., Кăлкан А.Д., Трубина М.Д., Шавли С.А., Лазарева А.Н., Бурнаевский В.Г., Кузьмин М.К., Янкас Н.К., Скворцов Ю.И., Давыдов-Анатри В.И., Мранькка Н.Ф., Григорьев И.Г., Ĕçхĕл А.А.

- Кусем камсен хушамачĕсем? Вĕсем çинчен мĕн пĕлетĕр?
- Хăвăр таврари ял ячĕсене алфавит йĕркипе çырса тухăр.

**134.** Сасăпа сас паллине уйăрма пĕлетĕр-и? Вĕсен уйрăмлăхĕсене каласа парăр. Вĕренекен çакăн пек хуравланă:

1. *Юман* сăмахра 4 сасă: [ю], [м], [а], [н].
2. *Каю* сăмахра 3 сасă: [к], [а], [ю].

- Тĕрĕс хуравланă-и вĕренекен?

**135.** Панă сăмахсенче миçе сасă тата миçе сас палли? Кашни сассине сас паллипе танлаштарăр.

Шĕвек, пылчăк, калак, арпа, кĕпе, мухтав, тĕтре.

**136.** Панă сăмахсенче хупă сасăсене мĕнле сас паллисемпе кăтартнă?

Тĕслĕх: *палăк* сăмахра *пă* сас палли [п] сасса, *лă* сас палли [л] сасса, *кă* сас палли [к] сасса пĕлтерет.

Çарăк, тăпра, хулăн.

**Асăрхăр!**

Сасăсене сас паллисенчен уйăрса илме тăваткал скобкăра кăтартаççĕ: [б], [л], [а].

**137.** Орфографи словарĕнчен алфавитри кашни сас паллипе пуçланакан пĕрер сăмах çырса илĕр. Асăрхăр: хăш сас паллисемпе пуçланаканнисем нумай? Хăшĕсемпе пуçланаканнисем сахал? Хăш сас паллисемпе пуçланакан сăмахсем пачах çук? *Е, ё, ю, я* сас паллисемпе пуçланакан сăмахсен пĕрремĕш сасси хăшĕ?

**138.** Хăш ушкăнри сăмахсенче сасăсен шучĕ сас паллисен шутĕнчен нумайрах?

1) Ятуллă, юрать, ешĕллет; 2) юман, ешер, ялан; 3) имшеркке, паянччен, уялла; 4) кĕнекере, вăрман, сукмак.

**139.** Вулăр. Миçе сăмах пытаннă-ши кунта? Ăна пĕлме майлă та, хирĕçле те вуласа пăхăр.

Ăвăсавăкуçипуçакăтăшелару.

- Шыраса тупнă хыççăн сăмахсене алфавит йĕркипе çырса тухăр.

**140.** Орфографи словарĕнчен пилĕкшер сăмах çырса илĕр. Вĕсенче сассисем сас паллисенчен: а) ытларах пулччăр; ă) сахалрах пулччăр.

- Чăваш чĕлхинчи сасăсем çинчен эсир мĕн пĕлетĕр? Каласа парăр.
- Ӳкерчĕксене пăхăр. Çак фотоӳкерчĕксем сирĕн умра «чĕрĕлсе тăрсан» эсир мĕнле сасăсем илтнĕ пулăттăр? Çав сасăсем пуплеври сасăсенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?











• Кирек мӗнле чӗлхене те вӗренме малтан фонетикӑран тытӑнаҫҫӗ. Мӗншӗн? Эсир мӗнле шутлатӑр? Ӑнлантарӑр.

## 15. Уҫӑ сасӑсем, вӗсен мӑшӑрлӑхӗ

**141.** [А], [э], [ы], [и], [у], [ӳ], [ӑ], [ӗ] сасӑсене калӑр. Ҫак сасӑсене калана чух тута мӗнле (хупӑ е уҫӑ) пулать?

Халӗ [в], [с], [т], [п] сасӑсене каласа пӑхӑр. Вӗсене калана чух тута мӗнле (хупӑ е уҫӑ) тӑрать?

**Аса илӗр!**

Пуплеври сасӑсем икӗ ушкӑна уйӑрӑлаҫҫӗ: **уҫӑ сасӑсем** тата **хупӑ сасӑсем.**

Уҫӑ сасӑсене калана чух сывлӑш юхӑмӗ ҫӑвартан ирӗклӗн тухать, нимӗнле чӑрмав та тӗл пулмасть.

Сăмахсене вуласа танлаштарăр. Вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? Çав уйрăмлăхсене тупса палăртăр. Ăнлантарăр.

*пар* *пыр* *пур* *пăр*
*пер* *пир* *пӳр* *пĕр*

• Таблицăри сасăсене уйрăмшарăн вуласа тухăр. Вĕсене калакă чух пуплев органĕсем мĕнле вырăнта тăнине сăнăр.

• Халĕ сасăсене мăшăрлатса вулăр: [а]—[э], ... . Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăх куратăр?

• Хăш сасăсем çемçен, хăш сасăсем хыттăн илтĕнеççĕ? Сасăсене çавăн пек ушкăнсене пайласси, сирĕн шутпа, мĕнпе çыхăннă? Ăнлантарăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| [а] | [ă] | [ы] | [у] | [о] |
| [э] | [ĕ] | [и] | [ӳ] | |

Чăваш чĕлхинчи уçă сасăсем, **[о]** сасăсăр пусне, мăшăрлă: пĕрисем — хытă, теприсем — çемçе. **[О]** сассăн çемçе мăшăрĕ çук. Вăл вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулать: *орден, пальто, домино, радио, герой, поэма.*

**[А], [ă], [ы], [у], [о]** — хытă уçă сасăсем.
**[Э], [ĕ], [и], [ӳ]** — çемçе уçă сасăсем.

**142.** Вулăр. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсене каласа тухăр.

Вĕрене, йăмра, шĕшкĕ, хурăн, çирĕк, çăка, хурама, ăвăс, кашкăр, пилеш, палан, тирек, чăрăш.

• Кунта хăш сăмах ытлашши? Мĕншĕн?
• Эсир тата мĕнле-мĕнле йывăç ячĕсене пĕлетĕр?

**143.** Сăмахсене вулăр. Хытă уçă сасăсене çемçисемпе ылмаштарса пăхăр. Мĕн улшăнчĕ? Ăнлантарăр.

Тĕслĕх: *сывă — сивĕ, сăрла — сĕрле.*

Сывă, сăрла, кăмăл, выçă, çапăç, улăм, çуран, тата, кулă.

• Кашни сăмахĕпе пĕрер сăмах майлашăвĕ туса калăр.

Тĕслĕх: *сывă çын — сивĕ çил, доска сăрла — кăпшанкă сĕрлет.*

**144.** Точкăсем вырăнне хытă е çемçе уçă сас палли лартса çырăр.

П..лăм — пӳл..м, ..ла — ӳл.., т..ра — тӳр.., ..тлă — ӳтл.., с..вла — сивл.., шӳтл.. — шутл.., ĕм..р — ..мăр, пырл.. — п..рлĕ, çулт.. — ç..лте.

**145.** Сăвва вулăр. Хытă тата çемçе сăмахсене икшер тупăр.

### Кĕрхи хурăнсем

Çуталса выртать пĕве
Йăлтăр тĕкĕр евĕрех.
Тӳперен кĕрхи хĕвел
Йĕпкĕн çутă ӳкерет.

Сарă-сарă тутăрне
Салтнă шурă хурăнсем.
Шыв çинче курма сăнне
Хыт пăхаççĕ тинкерсе.

*(П. Ялкир.)*

• Сăвăра хăш вăхăта сăнласа панă? Ăна хăвăр сăмахпа каласа парăр.
• Сăвăра паллă ячĕсем пур-и? Хăшĕсем? Вĕсем хăш сăмахсене ăнлантараççĕ?

**146.** Çырса панă сăмахсенчен хăшĕ ытлашши? Мĕншĕн?

Хурама, ăвăс, хăва, йĕлме, палан.

**147.** Калава вулăр. Палăртнă сăмахсенче мĕнле уçă сасăсем пулнине калăр.

### Ноябрь

Ноябрь çанталăкĕ çав тери вылянчăк *кăмăллă*, мартри майлах. Хăш-пĕр чух пĕр талăкрах темиçе хут улшăнать. Çумăр та çăвать, уяртса та пăрахать. Сивĕтет те, юр *вĕçтерме* тытăнать. Çĕр ула-чăла. Çаралса, хуралса юлнă йывăççем вĕтĕ туратсемпе[3] перкелешеççĕ. *Юмансем* кăна хăмăр çулçисене çаплах тăкасшăн мар.

• Кăçалхи ноябрь çанталăкне сăнăр, ун пирки каласа пама хатĕрленĕр.

**148.** Вулăр. Ăнланма пулать-и? Тӳрлетсе çырса илĕр.

Çер хурачче, халь шап-шур.
Çерепех-çке çуре юр.
Çавра кӳле варринче,
Мамак сарна пар çинче
Шавласа та çуйхашса
Яранатпар амартса.

*(В. Давыдов-Анатри.)*

• Ку сăвва мĕншĕн ăнланма май çук? Мĕнле сас паллисене тĕрĕс çырман?

**149.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр, пĕлтерĕшĕсене аса илĕр. Кашнин çумне пĕр-пĕр сăмах хушса сăмах майлашăвĕ туса çырăр.

Тĕслĕх: *парăс — шурă парăс, парас — кĕнеке парас; виçĕ — виçĕ йывăç, виçе — тĕрĕс виçе.*

Парăс — парас, виçĕ — виçе, кĕскĕ — кĕске, тимлĕ — тимле, вырăс — вырас, кăвар — кавар, çăра — çара, шăпа — шапа, тарлă — тарла, пĕлĕт — пĕлет, ăман — аман, çавă — çава, лăпкă — лăпка, тăлă — тăла, майлă — майла.

**150.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. Уçă сасăсене палăртăр. Çав сасăсене кайран уйрăмшарăн каласа пăхăр.

| | |
|---|---|
| вăрăм | пăтă |
| вăтăр | пĕлĕт |
| ĕмĕр | çĕмĕрт |
| кĕмĕл | тăм |

**151.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. Пуçламăш сас паллисене мĕнле вуламаллине калăр. Ытти сыпăксенчи *е* сас палли мĕнле сасса пĕлтерет? Вĕсене тĕрĕс вуламаллине ăша хывăр.

Епле, *ерипен*, евĕр, енче, *Етĕрне*, Егоров, *ерçӳ*, *ен*, еннелле, евчĕ, енчĕк.

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр.

## 16. Уҫӑ сасӑсене палӑртакан сас паллисем

Чӑваш алфавитӗнче тӑхӑр уҫӑ сас палли: **а, ӑ, е, ё, у, ӳ, ы, и, э.**

**Э, ы** сас паллисемсӗр пуҫне ыттисене сӑмах пуҫламӑшӗнче те, сӑмах варринче те, вӗҫӗнче те ҫыраҫҫӗ: *арман, ӑшӑ, пер, пӗр, улӑх, пулӑ, ӳлӗм, ҫӳллӗ, ҫирӗм, иккӗ.*

**Э** сас паллине сӑмах пуҫламӑшӗнче ҫеҫ ҫыраҫҫӗ: *эрне, эпӗ, этем.*

**Ы** сас паллине сӑмах пуҫламӑшӗнче тата варринче (*ыран, сывӑ, шыв*) ҫеҫ ҫыраҫҫӗ, сӑмах вӗҫӗнче ҫырмаҫҫӗ.

Чӑваш чӗлхинче **ю, я** сас паллисем пур. Ҫак сас паллисем сӑмах пуҫламӑшӗнче тата вӗҫӗнче, уҫӑ сас паллисем хыҫҫӑн икӗ сасса пӗлтереҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *юрӑ* [йурӑ], *каю* [кайу], *ят* [йат], *суя* [суйа].

**Ю, я** сас паллисем ҫемҫе хупӑ сасса пӗлтерекен хупӑ сас палли хыҫҫӑн тӑрса **[у], [а]** сасӑсене кӑтартаҫҫӗ: *выля* [выл'а], *атя* [ат'а].

Чӑваш чӗлхинче **[э]** сасса икӗ сас паллипе палӑртаҫҫӗ:

а) **е** сас паллипе (сӑмах варринче тата вӗҫӗнче): *телей, чипер, лере, мӗнле, хӗвел, кӗске, вӗрене*;

ӑ) **э** сас паллипе (сӑмах пуҫламӑшӗнче): *этем, эмел.*

**Е** сас палли сӑмах пуҫламӑшӗнче **[йэ]** сасӑсене пӗлтерет: *епле* [йэпле], *ешер* [йэшер], *ерӗҫ* [йэрӗҫ], *Етӗрне* [йэтӗрне].

**Е** сас палли сӑмах варринче тата вӗҫӗнче **[э]** сасса палӑртать:

а) варринче: *телей* [телей], *ёнен* [ёнен], *ешер* [йэшер];

ӑ) вӗҫӗнче: *чӗре* [чӗрэ], *ӳпре* [ӳпрэ], *пичче* [пиччэ], *йӗрле* [йӗрлэ].

**152.** Сӑмахсене вулӑр та икӗ юпа туса ҫырса илӗр: пӗрремӗшӗнче *е, ю, я* сас паллисем икӗ сасса, иккӗмӗшӗнче пӗр сасса пӗлтерекеннисем пулчӑр.

Хăю, юрать, меню, кăсăя, выля, дыня, Аня, тяпка, юра, тюлень, люстра, енчĕк, ерçӳ, ентеш, телей, тетте, çемье, кĕсье, тĕнче.

• *Э* тата *Е* сас паллисемпе пуçланакан район центрĕсен ячĕсене çырса илĕр те çав сас паллисем мĕнле сасса пĕлтернине калăр. Асăннă сăмахсене тĕрĕс калама вĕренĕр.

Çапла вара, икĕ сасса палăртакан сас паллисем шутне **е, ю, я** сас паллисем кĕреççĕ: *евчĕ, ейӳ, ерипе, юрат, юса, ялав, яшка.*

Чăваш чĕлхинче **[й]** хупă сасă ытти уçă сасăсем **[ă], [ĕ], [ӳ], [ы], [и]** умĕн те тăма пултарать. Тĕслĕхрен: *йăва, йăнăш, йĕкел, йĕкĕт, йӳнĕ, йӳрĕк, йывăç, йытă, кĕсйи, мăрйи.*

**153.** Хăш сăмахсенче *е* сас палли икĕ сасса пĕлтерет?

Мĕнле, ентеш, çерем, ешĕл, илем.

**154.** Сăмахсене вулăр. Вĕсенче миçе сасăпа сас палли пулнине калăр.

Çемье, миçе, мăрье, кĕсье, ялкăш, енчĕк, кухня, ешĕл, ер, юшкăн, ялав, выля, суя, хăю, кăсăя.

• Мĕншĕн сас паллисемпе сасăсен шучĕ пĕр пек мар?

## 17. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ

Сăмахсене вулăр, танлаштарăр. Хăш сăмахсенче уçă сасăсем пурте хытă? Хăшĕсенче çемçе?

1. *Сухан, купăста, çарăк, ыхра, кăшман.*
2. *Çерçи, чĕкеç, вĕршĕн, чĕпĕ, кĕпшĕл.*

Чăваш сăмахĕсенче уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăраççĕ. Тĕслĕхсем:

а) *кушак, лаша, сысна, така, йытă, сурăх, качака* — ку сăмахсенче уçă сасăсем пурте хытă. Унашкал сăмахсене **хытă сăмахсем** теççĕ;

ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пиллĕк, çиччĕ, çирĕм, хĕрĕх* — ку сăмахсенче уçă сасăсем пурте çемçе. Унашкал сăмахсене **çемçе сăмахсем** теççĕ.

Сăмахри уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăнине **уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм)** теççĕ. Чылай чăваш сăмахĕ сингармонизма пăхăнать. Тĕслĕхрен: *алă, ура, чĕре, çурăм, ӳпке, шăмă, чĕлхе, кăкăр.*

**155.** Сăмахсене вулăр та вĕсенчен хăшĕ хытă, хăшĕ çемçе сăмах пулнине калăр.

Çуна, кĕреçе, урапа, кĕрепле, сенĕк, хапха, витре, алăк, кĕвенте, пусма, картлашка, кимĕ, кĕсмен.

• Çак сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать? Вĕсем çумне тата мĕнле сăмахсене хушса калама пултаратăр?

**156.** 155-мĕш хăнăхтарура панă сăмахсем çумне паллă ячĕ лартса сăмах майлашăвĕсем туса çырăр.

Тĕслĕх: *çуна — çара çуна, кĕреçе — çивĕч кĕреçе.*

Хăш-пĕр чăваш сăмахĕсенче уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм) пăсăлнă: *путек, пукане, путене, тăри, пăри, шăши, кавле, пăши, тиха, атте, анне, мучи, валли, куклен, парне, чухне.*

Ку тĕслĕхсенче хытă уçă сасăсем те, çемçе уçă сасăсем те пур. Çавăнпа ун пек сăмахсене **хутăш сăмахсем** теççĕ.

**157.** Сăмахсене вулăр. Хăшĕ хытă сăмах, хăшĕ çемçе, хăшĕ хутăш пулнине калăр.

Асанне, кинемей, пичче, инке, анне, мучи, асатте, аппа, мăнакка, шăллăм, кукка, хĕр, йăмăк, кукаçи, кукамай, кин, атте, тете, ывăл, кĕрӳ.

• Ҫак сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать? Эсир сăмахсен пĕлтерĕшне пурне те пĕлетĕр-и? Сирĕн ялта хăш сăмахсене урăхла каласҫĕ? Вĕсене ҫырса килĕр.

**158.** Калава вулăр. Сингармонизма пăхăнакан сăмахсене ҫырса илĕр: хытă сăмахсем — 5, ҫемҫе сăмахсем — 5. Хутăш сăмахсене тупăр.

### Чĕрĕп

Чĕрĕп ҫĕлене те тытать, анчах ăна ятарласа шырамасть. Ҫакă вĕсем хăш вырăнта пурăннинчен килет. Сăнаса пăхнă тăрăх, чĕрĕп ҫук вырăнсенче ҫĕленсен йышĕ ӳсни палăрнă. Апла пулсан чĕрĕп вăрмансенче[3] пурăнни унта ҫĕленсен йышне пĕр шайра тытма пулăшать. *(Н. Матвеев.)*

• Чĕрĕпсĕр пусне вăрманти чĕр чунсене тата хăшĕсене пĕлетĕр? Вĕсен ячĕсене алфавит йĕркипе ҫырăр.

• Хăвăр таврари йывăҫ ячĕсене икĕ юпа туса ҫырăр. Пĕринче хытă сăмахсем, тепринче ҫемҫе сăмахсем пулччăр. Виҫĕ сăмахĕпе предложенисем тупса ҫырăр.

Сăмахсене вулăр. Танлаштарăр. Сăмахсен вĕҫĕнче мĕнле хупă сасăсем?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *турат* | *хал* | *юрат* | *супăн* | *ҫунат* |
| *турать* | *халь* | *юрать* | *супăнь* | *ҫунать* |

Хăш-пĕр чăваш сăмахĕсенче хытă уҫă сасăпа юнашар ҫемҫе хупă сасă пулма пултарать. Унашкал сăмахра хупă сасăсен ҫемҫелĕхĕ юнашар уҫă сасăран килмест. Ҫав сасăсене **[л’], [н’], [т’]** уйрăммăн та калама ҫăмăл: *выльăх, мăкăнь, тьху*.

**159.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. Мĕне пула сăмахсен пĕлтерĕшĕ улшăнать? Ҫырура вĕсене мĕнле палăртнă? Ҫырса кăтартăр.

Тĕслĕх: *юра[т] — юра[т’].*

Юрат — юрать, турат — турать, мăкăн — мăкăнь, хал — халь, супăн — супăнь.

**160.** Хăш ушкăнри сăмахсенче пуринче те ь çырмалла?

1) Кĕс..и, мăр..и, тух..и; 2) çем..е, кĕс..е, стат..я; 3) супăн..ĕн, хун..ăм, октябр..ĕн; 4) шинел..не, медал..е, кухн..ăра.

**161.** Вулăр. Хупă сасăсем мĕнле илтĕннине каласа тухăр.

Кукăль, мăкăнь, çунать, мăкăль, вулать, выльăх, ахаль.

**162.** Точкăсем вырăнне кирлĕ сас паллисем лартса çырса илĕр. Мĕншĕн ун пек çырнине каласа парăр.

1. Анне купăста тура.. . 2. Ку улмуççин пилĕк тура.. , вĕсенчен пĕри хăрма пуçланă. 3. Юра.. эппин, ыран ирех килĕп. 4. Аçу-аннӳне юра.. , вĕсем чи хаклă çынсем. 5. Анне тутлă кукă.. пĕçернĕ. 6. Чавса пĕрене пуçне çапăнчĕ те, пĕчĕк мăкă.. тухса ларчĕ. 7. Мăйракаллă вы..ăх хуçалăха пысăк тупăш пара.. .

**163.** Хăш сăмахра уçă сасăсен килĕшĕвĕ пăсăлнă?

Пăрçа, пăри, урпа, тулă, ыраш.

**164.** Сăмахсене вулăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине аса илĕр те тетраде куçарса çырăр.

Пыл..чăк, шан..чăк, пан..ча, кал..ча, мун..ча, хупăл..ча, шал..ча, пăн..чă.

• Ку сăмахсенче мĕнле хупă сасăсем çемçен илтĕнеççĕ? Çемçе хупă сасăсене çырура мĕнле палăртма йышăннă?

> Чăваш сăмахĕсенче хытă сыпăкри **[л]**, **[н]** хупă сасăсем **ç**, **ч** умĕн калаçура çемçен илтĕнме пултараççĕ, анчах çырура **ь** лартмаççĕ: *мунча, пылчăк, çулçă*.

**165.** Хăш сăмахра орфографи йăнăшĕ пур?

Хальлĕхе, вăльча, калча, тухья.

**166.** Вулăр. Сăмах тĕпĕ çумне хушăннă аффикссене палăртăр.

*Юлташ* — юлташăн, юлташа, юлташра, юлташран[3].
*Кĕнеке* — кĕнекен, кĕнекене, кĕнекере, кĕнекерен.

- Хытă сăмах çумне мĕнле уçă сасăллă аффикссем хушăнаççĕ?
- Çемçе сăмах çумне мĕнле уçă сасăллă аффикссем хушăнаççĕ?

Сăмах тĕпĕсем пекех, аффикссем те е хытă, е çемçе уçă сасăллă пулаççĕ. Çавăнпа пĕр аффиксах икĕ вариантлă пулать. Хытă сăмах çумне аффиксăн хытă варианчĕ хушăнать: *шкул-ăн, шкул-а, шкул-та, шкул-тан, шкул-па; çыр-нă, çыр-ас, çыр-малла, çыр-акан, кур-нă, лар-у, çыру-лăх.*

Çемçе сăмах çумне аффиксăн çемçе варианчĕ хушăнать: *сĕтел-ĕн, сĕтел-е, сĕтел-те, сĕтел-тен, сĕтел-пе; ил-нĕ, ил-ес, ил-мелле, ил-екен, çитмен-лĕх, кĕт-ÿ, пĕчĕк-çĕ.*

**167.** Текста тимлĕ вуласа тухăр, ят парăр, тĕп шухăшне палăртăр. Палăртнă сăмахсен аффиксĕсене кăтартăр. Сăмах çумне аффиксăн хытă е çемçе варианчĕ хушăнасси мĕнрен килет? Шухăшăра тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

Мăнтарăн çуралнă *çĕршывĕ*, мĕн пур-ши *тĕнчере* санран хакли?! Эпир аякра чухне эсĕ пирĕн чĕре варринче пурăнатăн, тăван анне пек йăпатса ху *еннелле* кăчăк туртатăн: «Кил, *ывăлăм*, ĕçле, паттăр пул!» Çывăхра чухне эсĕ вăй парса тăратăн, ху *илемÿпе* илĕртсе ĕçе хавхалантаратăн. Куçа хупсан та эсĕ, хĕвел пек, куç умĕнчех, куçа уççан та эсĕ — пирĕн умра. Сан савăнăçу — яланах пирĕн савăнăç, сан *сурану* — пирĕн суран, сан хуйху — пирĕн хуйхă. *(Хв. Уяр.)*

Чăваш чĕлхинче чылай аффикс икĕ вариантлă.

Аффикссене уйрăм çырнă чух вĕсен çемçе вариантне яланах скобкăра çыраççĕ: *-а(-е), -та(-те), -тан(-тен), -па(-пе), -лăх(-лĕх), -у(-ÿ), -нă(-нĕ), -са(-се), -лан(-лен), -акан(-екен), -ма(-ме), -малла(-мелле)* т. ыт. те.

**168.** **Сӑмахсене вулӑр. Вӗсем ҫумне аффикссен хытӑ е ҫемҫе варианчӗсене хушса ҫырса илӗр.**

1. Юман, *пилеш*, йӑмӑк, хӗвел.
2. Ҫыр, итле, *вӗри*, чун.

• **Палӑртнӑ сӑмахсемпе предложенисем туса ҫырӑр.**

**169.** **Текста вулӑр. Палӑртнӑ сӑмахсем хытӑ е ҫемҫе пулнине калӑр, ҫырса илӗр, мӗнле аффикс йышӑннине кӑтартӑр.**

Чугун ҫул кукӑрӗнче пуйӑс кӑшкӑртни илтӗнчӗ. Хӗрлӗ *ҫӑлтӑрлӑ* тепловоз тӑвалла *хӑпарнӑ* чухнехи пек хаш-хаш! хашкать. Хыҫӗнче ун вӑрӑм состав. Кустӑрмисем пиллӗкӗн сӳс тӗвеҫҫӗ: тӑк-тӑк-тӑкӑртик! Тӑк-тӑк-тӑкӑртик! *Хытӑ* чупать пуйӑс. Вакунсенче ларса пыракан ҫынсемпе пӗр *шухӑшлӑ* тейӗн. *(В. Элпи.)*

• **Эсир пуйӑс курнӑ-и? Мӗн вӑл тепловоз? Текстра вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсем пур-и? Вӗсене мӗнле ҫырнӑ? Мӗншӗн?**

Чӑваш чӗлхинче сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвне пӑсакан аффикссем пур. Вӗсем пурте ҫемҫе вариантлӑ:

**-сем:** *лаша-сем, сурӑх-сем, чӗп-сем;*

**-мӗш:** *тӑватта-мӗш, улттӑ-мӗш, ҫиччӗ-мӗш, виҫҫӗ-мӗш;*

**-иччен:** *ҫыр-иччен, туп-иччен, вӗрен-иччен, пӗл-иччен;*

**-чен(-ччен):** *каҫ-чен, ҫулла-ччен, ыран-ччен;*

**-серен:** *каҫ-серен, ир-серен;*

**-скер:** *вӑйлӑ-скер, канакан-скер, чипер-скер, вӗреннӗ-скер;*

**-ӗ(-и):** *шкул-ӗ, сӗтел-ӗ, качак-и, пӗв-и, юрр-и.*

**170.** **Текста вулӑр. Палӑртнӑ сӑмахсен аффиксӗсене тупӑр. Вӗсем уҫӑ сасӑсен килӗшӗвне пӑхӑнаҫҫӗ-и?**

*Улӑхпа* утнӑ чухне курӑк хушшинчен ӑшшӑн *пӑхакан чечеке* кам асӑрхаман пулӗ. *Чарӑнса* тӑрсах тинкеретӗн,

унтан кукленсе ларса ун еннелле алла тăсатăн. *Тытса* ачашлас килет чечен те çинçешке чечеке. Ку чечек чакăр куçĕпе такама та илĕртме пултарать. Вырăссем ăна ахальтен мар «анютины глазки» теççĕ. Чăвашсем тĕрлĕ ят панă ăна: куçлă чечек, аслати куракĕ, çĕлен куçĕ... (*«Тантăш»* хаçатран.)

• Эсир ку чечеке курнă-и? Тата мĕнле чечексене пĕлетĕр?

**171.** Ӳкерчĕке пăхăр, унта мĕн-мĕн ӳкернине каласа тухăр. Япала ячĕсене алфавит йĕркипе çырса хурăр.




• Çак ыйтусене хуравлăр:

1. Çырса хунă япала ячĕсенчи уçă сасăсем хыттăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăраççĕ-и?

2. Хăш сăмахсенче уçă сасăсен килĕшĕвĕ пăсăлнă?

3. Çырса тухнă япала ячĕсем йышĕнче вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем пур-и? Хăшĕсем?

**172.** Ӳкерчĕк тăрăх маларах асăннă сăмахсене кĕртсе «Пирĕн класс» ятлă калав çырăр. Ачасене ят парса тухăр.

## 18. Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă саса юнашар тăма пултараймanni

Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултараймасть. Тĕслĕхрен: *çумăр, хĕлле, тăван, кăмăллă, çумла.* Ку вăл чăваш фонетикин çирĕп саккунĕ.

Уçă сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикссем хушăннă чухне ирĕксĕрех икĕ уçă сасă юнашар килсе тухать, ун пек чухне: а) икĕ уçă сасă хушшине пĕр-пĕр хупă сасă кĕрсе ларать: *лаша+а* (пару пад. аф.) *>лашана, шăши+е>шăшие* [шăшийэ]; ă) пĕр уçă сасси тухса ӳкет: *вула+акан>вулакан, ĕçле+екен>ĕçлекен.*

**173.** Çак сăмахсене камăнлăх тата пару падежĕсенче çырăр. Мĕн асăрхарăр?

Упа, упăте, пăши, качака, ĕне, кĕсре, сысна.

**174.** Сăмахсене вулăр. Вĕсем пирки мĕн калама пултаратăр?

Вăхăт, ветеран, гараж, кăмака, елка, директор, икерчĕ, поэт, çăрттан, сăпса.

Чăваш чĕлхинче вырăсларан йышăннă сăмах сахал мар, вĕсенчен чылайăшĕнче икĕ уçă сасă юнашар тăраканнисем те пур: *поэт, поэма, аэродром, аэропорт, дуэт* т. ыт. те. Унашкал сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çыраççĕ, каласса та вырăс чĕлхинчи пекех калаççĕ.

## 19. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем сингармонизма пăхăнманни

Сăмахсене тĕрĕс вулăр.

*Учитель, дневник, глобус, учительница, директор, класс, коридор, стена, тетрадь, портфель, предмет, отметка, орден, циркуль, отличник, ударник, предложени, дежурнăй, депо.*

Çак сăмахсене пурне те пĕлетĕр-и? Калаçура усă куратăр-и? Хăш чĕлхе сăмахĕсем-ши вĕсем?

**Чăваш чĕлхинче вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмах нумай. Вĕсем уçă сасăсен килĕшĕвне (сингармонизма) пăхăнмаççĕ. Тĕслĕхсем:** ***учительница, директор, герой, физкультурник, ферма, машина, звено, театр.***

**175.** Сăмахсене вулăр, сингармонизма пăхăннипе пăхăнманнине калăр.

Секретарь, пристань, спектакль, библиотекарь, преподаватель, карамель.

**176.** Текста вулăр, ят парăр. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тупăр. Вĕсенчи уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăнипе тăманнине калăр.

Бригадăри чĕп ферми Чулкаç çырми хĕрринче. Аякран пăхсан ферма вĕтлĕх вăрмана вырнаçнă тейĕн. Хăмаран тытнă карта йĕри-тавра акаци, слива, чие йывăççисем лартса тухнă. Вĕсем, чечеке ларнăскерсем[2], картаран та çӳллĕ. Сывлăшĕ кунта уçă, таса...

Картишĕнче пурте пур: хăмла çырлийĕ те, хĕрлĕ хурлăханĕ те, хура хурлăханĕ те, крыжовникĕ те... Вĕсене ретĕн-ретĕн лартса тухнă. Йывăççем айĕнче талккăшпех чĕпсем çӳреççĕ. (*А. Медведев* çырни тăрăх.)

**177.** Орфографи словарĕнчи *м, н, о* сас паллисемпе пуçланакан сăмахсен йышĕнчен вырăс чĕлхинчен йышăннă виçшер сăмах суйласа çырса илĕр.

Тĕслĕх: ***макет, максимум, макулатура.***

**Вырăсларан çырупа йышăннă сăмахсем çумне хушăнакан аффикссен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ сăмах мĕнле сасăпа пĕтнинчен килет: а) хытă хупă сасăпа тата [й] сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне хытă вариантлă аффикс**

хушӑнать: *критик — критика, критикпа; бензин — бензинпа, бензинсӑр; старик — старикӑн, старика; музей — музейӑн, музейра; хоккей — хоккейла.*

Хӑш-пӗр чухне хытӑ хупӑ сасӑпа тата **[й]** хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмах ҫумне аффиксӑн ҫемҫе варианчӗ хушӑнма пултарать: *номер — номерте, номертен; интерес — интереслӗ, интереслен; ответ — ответле; критик — критикле; музей — музейӗн, музейре* т. ыт. те.

**178.** Сӑмахсене вулӑр, вӗсем ҫумне камӑнлӑх, вырӑн падежӗсен аффиксӗсене хушса калӑр.

Кабинет, телевизор, микроскоп, универмаг, дружина, бинт, газон.

• Аффиксӑн хӑш варианчӗ хушӑннине ӑнлантарӑр.

## 20. Стильсем

Текстсене вулӑр. Вӗсемпе ӑҫта (кулленхи калаҫура, илемлӗ литературӑра, ӗҫлӗ документсенче) усӑ курнине калӑр.

1. Паян ҫанталӑк пӗрмай йӗрмӗшсе ҫӳрекен ачана аса илтерет. Тапхӑр-тапхӑр тачка та йӑраланчӑк пӗлӗтсем сулхӑнлатса килеҫҫӗ те — часах ҫумӑр чашлаттарса илет. Унтан тӳпе каллех ҫурхи тинӗс пек пӑр татӑкӗсенчен тасалнӑ евӗр уҫӑлса каять. Хӗвел те йӗме чарӑннӑ ачалла ялкӑшса кулкаласа илет. Вара татах ҫурҫӗр енчен шыв тиенӗ пӗлӗтсем персе ҫитеҫҫӗ. *(А. Артемьев.)*

2. — Пӑхӑр-ха, кӑнтӑр енче ҫумӑр пӗлӗчӗсем курӑнма пуҫларӗҫ. Ҫумӑр пулатех-ши вара паян?

— Пулма та пултарать. Паян ирхине пахчара сывлӑм ӳкнине асӑрхамарӑм. Сывлӑм ӳкмесен ҫумӑр пулать тетчӗҫ.

3. Чӑваш тата вырӑс чӗлхисем Чӑваш Республикин патшалӑх чӗлхисем пулса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш тата вырӑс чӗлхисен статусне патшалӑх чӗлхисем вырӑнне хурса ҫирӗплетни ытти халӑхсен представи-

телĕсен хăйсен чĕлхисемпе усă курмалли тата хăйсен чĕлхине аталантармалли правилăсене хĕсĕрлемест. *(1-мĕш статья.)*

**Калаçу стилĕпе** ытларах кулленхи калаçура, хутшăнура усă кураççĕ.

**Илемлĕ литература чĕлхи** литература произведенийĕсенче тĕп вырăнта тăрать. Илемлĕ стиль сăнарлă. Унта куçăмлă пĕлтерĕшпе каланă сăмахсем, танлаштарусем, эпитетсем тăтăшах тĕл пулаççĕ.

**Ĕçлĕ стильпе** документсенче (законсемпе постановленисенче, приказсенче, ĕç хучĕсенче) усă кураççĕ.

**179.** Вуласа тухăр. Текста мĕнле чĕлхепе çырнине калăр.

Эх, анлă тӳпе! Вăл темиçе тĕрлĕ улшăнать. Е янкăр тăрă çуталать те, тĕнче сар хĕр пек ăшшăн кулать. Е шап-шурă кăтра пĕлĕтсем капланса килеççĕ. *Çав пĕлĕтсем пĕчĕк ачан шурă та кăтра çӳçне аса илтереççĕ.* Е тӳпе сасартăк тĕксĕмленсе, кăвакарса каять, тарăн шухăша путнă çын пек туйăнать. (*В. Алентей* çырни тăрăх.)

- Текста илемлетекен мелсене тупăр.
- Паллă тунă предложение çырса илĕр, тĕп тата кĕçĕн членсене йĕр туртса палăртăр.

**180.** Вуласа тухăр. Текст чĕлхине палăртăр.

Чăваш чĕлхин кунне туса хурас, ăна чăвашсене çутта кăларнă, чăвашсен çĕнĕ çырулăхне йĕркелесе янă И. Я. Яковлев çуралнă кун — ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче паллă тăвас.

- Эсир Чăваш чĕлхи кунне мĕнле уявлатăр?

**181.** Вуласа тухăр. Текст планне тăвăр. План тăрăх каласа парăр.

Вăрман хуралçи кӳлĕ тепĕр енне пăхрĕ те тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ. Хăяхлăх çывăхĕнче, тап-таса шыв çинче, ытарма çук илемлĕ икĕ кайăк ишсе çӳрет. Вĕсем тӳпери шурă

пӗлӗт пекех шап-шурӑ, авӑнчӑк вӑрӑм мӑйлӑ, чӑн-чӑн юмахри пекех курӑнаҫҫӗ[4].

*чылайччен*
*каҫчен*
*нумайччен*

— Акӑшсем! — тӳрех тавҫӑрса илчӗ вӑрман хуралҫи. — Ах, епле илемлӗ-ҫке вӗсем! — тесе темӗнччен пӑхса савӑнчӗ вӑл ҫав кайӑксене.

Лешсем те, хӑйсене пӑхса савӑннине пӗлнӗ пекех, йӗритавра мӑнаҫлӑн ҫаврӑнкаласа пӑхрӗҫ. Вӗсем чылайччен пӗр вырӑнта тӑчӗҫ, шур мамӑк тӗклӗ тумӗсене якатса *шукӑльлетрӗҫ*, унтан ҫаврӑнчӗҫ те васкамасӑр кӑна пӗр авӑра ишсе кӗрсе куҫран ҫухалчӗҫ.

Ҫак иртен пуҫласа вӑрман хуралҫи акӑшсене кашни кун курчӗ. Кайӑксем ҫак улах кӳлле куҫсах килме шут тытнӑ пулмалла. Пӗр пӗчӗк утрав ҫинче вӗсем часах йӑва ҫавӑрма тытӑнчӗҫ. Йӑва ҫавӑрса ҫитерсен акӑш ами шупка сарӑ ҫӑмартасем турӗ.

Ҫапла кун хыҫҫӑн кун иртрӗ. Вӑрман хуралҫи акӑшсем мӗнле пурӑннине тимлӗ сӑнарӗ. Вӑл тӑвата акӑш чӗппи пуррине, вӗсене ашшӗпе амӑшӗ апат тупма вӗрентнине курчӗ. (*М. Белов* ҫырнинчен.)

- Пӗр йышши членлӑ предложенисене тупӑр. Чарӑну палли лартассине ӑнлантарӑр.
- Паллӑ тунӑ сӑмаха ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тупса ҫырӑр.

**182.** Текстсене вулӑр, танлаштарӑр. Вӗсене мӗнле чӗлхепе ҫырнине калӑр.

1. Тӳлек, хӗвеллӗ ҫанталӑкра сарӑхнӑ ҫулҫӑсем туратсем ҫинчен вӗл-вӗл вӗҫсе анаҫҫӗ, нӳрлӗ ҫӗр ҫине пӗр-пӗрин ҫумне лӑп выртаҫҫӗ. Кӗрхи ҫилпе вӑрман кашлама тытӑнсан ҫулҫӑсем хӑратнӑ кайӑксем пек пӑлханаҫҫӗ, вӑрмантан явӑнса вӗҫсе тухаҫҫӗ те хир тӑрӑх вӗлтӗртетеҫҫӗ. (*М. Трубина* ҫырнинчен.)

2. Сарӑ ҫулҫӑсем туратсем ҫинчен вӗҫсе анаҫҫӗ те ҫӗр ҫине выртаҫҫӗ. Кӗрхи ҫилпе ҫулҫӑсем пӑлханаҫҫӗ, вӑрмантан хирелле вӗҫсе тухаҫҫӗ.

**183.** Паянхи çанталăка сăнăр. Мĕнлерех вăл: ăшă е сивĕ, хĕвеллĕ е тĕксĕм, уяр е çумăрлă, тӳлек е çиллĕ? Тавралăха илемлĕ стильпе тата калаçу стилĕпе сăнласа парăр.

**184.** Ĕç хучĕсене çырасси çирĕп йĕркене пăхăнать. Пĕлтерĕве вулăр, унăн пайĕсене палăртăр: 1) кама пĕлтернĕ, 2) мĕн пĕлтернĕ, 3) кам пĕлтернĕ.

***Хисеплĕ вĕренекенсем!***

Вырсарни[2] кун, чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче, клубра пуканесен театрĕн спектаклĕ пулать. 11 сехетре пуçланать. Пурне те кĕтетпĕр!

*Шкул администрацийĕ*

• Шкулта пĕр-пĕр конкурс («Чи лайăх сочинени», «Чи лайăх сăвă вулакан», «Чи лайăх стена хаçачĕ»), спорт ăмăртăвĕ т.ыт.те ирттересси пирки пĕлтерӳ çырăр.

**185.** Вуласа тухăр. Текст тĕсне калăр. Ăна мĕнле стильпе çырнине ăнлантарăр. Хăнăхтарури материала тĕпе хурса ӳкерчĕкри хĕр ачана сăнласа парăр. Вăл сирте мĕнле туйăм çуратать? Хăвăр шухăшăра уçса парăр.

| пӳ-силлĕ<br>сăн-питлĕ<br>ăс-тăнлă |
|---|

Микулай — йăрăс пӳ-силлĕ, кăшт ырхантарах хул-çурăмлă, çавракапитлĕ, чакăр хура куçлă йĕкĕт. Куç харшийĕ çӳп-çӳхе йĕр хăварса куç çийĕн пĕкĕ пек авăнать те сăмси çинех çитсе пĕрлешет. Сăмси каçăр, тути тăп-тăп та çӳхе. Сĕм каç евĕр хура çӳçĕ вирелле çав тери меллĕн йĕркеленсе выртать.

**186.** Икĕ çын калаçăвне вулăр. Ку текст мĕнле стиле çывăх? Мĕншĕн?

— Автобус хăçан килет?

— Расписани тăрăх вăл вунă сехетре пулмалла.

— Вăл вокзалта миçе минут тăрать?

— Вун пилĕк.
— Сирĕн ăçта каймалла?
— Шупашкара.

**187.** Текста вулăр. Ăна мĕнле стильпе çырнине калăр.

Чăваш Республикин территорийĕнче транспортпа çыхăну[3] сферинче чăваш тата вырăс чĕлхисемпе усă кураççĕ.

Транспорт çӳремелли расписание, плакатсене, аэропортсенчи, чугун çул вокзалĕсемпе станцийĕсенчи, юхан шыв порчĕсенчи, автовокзалсемпе автостанцисенчи пĕлтерӳсене чăвашла тата вырăсла çырса çапаççĕ, транспорт мĕнле çӳрени çинчен чăвашла тата вырăсла каласа пĕлтереççĕ.

**188.** Текста вулăр, ят парăр.

Шап-шурă така тирĕ пек курăнакан кăтра пĕлĕтсем пуç тăрринчех çакăнса тăраççĕ. Вĕсене тĕллĕн-тĕллĕн чул тăвăн шĕвĕр вĕçĕсем чике-чике шăтарнă. Унта та кунта акаци тĕмĕсем, тĕреклĕ каштансемпе кедр йывăççисем, Çĕпĕр хырĕпе тирексем кашласа ӳсеççĕ. Хушăран шурă хурăн та курăнать[4]. Таçта аялта ирхи тĕтре витĕр пĕчĕк пӳртсем, садсемпе çутă кӳлĕсем палăраççĕ. Лере, сулахайри айлăмра, юхан шыв авкаланса выртать. Çывăхрах стена пек чăнкă чул ту çинчен чĕр кĕмĕл евĕр таса шыв çĕре тăкăнать. Шыв сикки кĕрлевĕ çав тери хăватлă — кайăк юрри те илтĕнмест. Ирхи таса сывлăм çĕр-шывĕ! (*А. Артемьев* çырнинчен.)

- Текста мĕнле стильпе çырнă? Ăна сăнарлă тума пулăшакан сăмахсене, танлаштарусене тупăр.
- Текстри хутлă предложенисене тупăр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

**189.** Маша икĕ çыру янă. Çырусенчи чарăну паллисене ăнлантарăр, чĕлхине сăнăр. Вĕсен хушшинче мĕнле уйрăмлăхсем пур? Вĕсем мĕнпе çыхăннă? Пĕтĕмлетӳ тăвăр. Хăвăр пĕр-пĕр паллакан патне çыру çырăр.

| | |
|---|---|
| Сывлăх сунатăп,<br>хаклă учителĕмĕр<br>***Елизавета Семеновна!***<br><br>«Орленок» лагере килни икĕ кун иртрĕ, анчах Сире хам епле çитни çинчен çырса пĕлтерейменрĕм.<br><br>Эпĕ аванах çитрĕм. Çул çинче юлташсемпе кичем пулмарĕ.<br><br>Лагерьте тĕлĕнмелли темĕн чухлех.<br><br>Елизавета Семеновна, Эсир хушнă пекех, хамăн «Орленокри» кашни кун епле иртни çинчен дневника çырса пыратăп. Таврăнсан ачасене вуласа парăп.<br><br>Хĕрӳллĕ салампа<br>*Маша Пыркина* | Хĕрӳллĕ салам, тусăмсем<br>***Оля, Галя!***<br><br>Эпĕ сире «Орленок» çинчен çырса пĕлтерес терĕм. «Орленок» калама çук чаплă лагерь. Тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Кунти вырăнсем тĕлĕнмелле илемлĕ! Лагерьте тĕрлĕ çĕртен килнĕ ачасем канаççĕ. Эпир тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем иртteретпĕр, вăйăсем вылятпăр. Ĕнер теплоход çине ларса Крым çĕрĕсене курса çӳрерĕмĕр. Вĕсем ман асăмра ĕмĕрлĕхех юлĕç.<br><br>Манăн сирĕн çинчен те питĕ пĕлес килет. Мĕнле пурăнатăр эсир, мĕн ĕç тăватăр? Чăтăмсăррăн сиртен хыпар кĕтетĕп, çырса пĕлтерĕр.<br><br>Сирĕн тусăр ***Маша*** |

## 21. Хупă сасăсем

Вулăр, алфавитри мĕнле сас паллисем хупă сасăсене пĕлтернине каласа тухăр. Уçă сасăсемпе хупă сасăсене танлаштарса калăр. Пуплев органĕсем мĕнле ĕçленине сăнăр. Мĕнле уйрăмлăх куратăр? Ăнлантарăр.

[а]—[п] [ă]—[к] [ы]—[т] [у]—[р] [о]—[л]

[э]—[с] [ĕ]—[ç] [и]—[х] [ӳ]—[ч]

Хупă сасăсене каланă чух сывлăш юхăмĕ çавар хăвăлĕнчен ирĕккĕн тухаймасть: ăна ирĕккĕн тухма е чĕлхе, е тута, е шăлсем чăрмантараççĕ. Сывлăш юхăмĕ çав чăрмавсене çĕнтерсе тухать те, тĕрлĕ хупă сасă пулать.

Чăваш алфавитĕнче пурĕ 22 хупă сас палли: **б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ.**

**190.** Сăмахсене вулăр. Кашни сăмах умне пĕрер хупă сасă лартса сăмах пĕлтерĕшне улăштарма май пуррине сăнăр.

Тĕслĕх: *ил — кил, çил, пил.*

Уç, ӳс, ут, ĕç, ар, ир.

**191.** Вулăр та юпан-юпан сăмах пуçламăшĕнчи сасăсене уйрăмшар каласа танлаштарăр. Вĕсем мĕнле хупă сасăсем пулнине ăнлантарăр, пĕтĕмлетӳ тăвăр.

| | | |
|---|---|---|
| кам | тымар | лаç |
| пулă | хачă | мамăк |
| сасă | вăл | начар |
| çумăр | йывăç | район |

Чăваш чĕлхинче хупă сасăсем икĕ ушкăна уйрăлаççĕ:

1) ялан янăравлă хупă сасăсем: **[в], [й], [л], [л’], [м], [н], [н’], [р];**

2) шавлă хупă сасăсем: **[к], [п], [с], [ç], [т], [х], [ч], [ш].**

**192.** Вулăр. Текстран ялан янăравлă тата шавлă хупă сасăсемпе çыхăннă сакăршар сăмах тупса çырăр.

Тӳрккес ачасем пурах çав. Натюш вара апла мар. Ăшă сăмах унăн кашни валлиех тупăнать. «Ырă кун пултăр», «телей сунатăп», «сывă-и?», «тархасшăн», «каçарăр», «ыйтма юрать-и», «тавах», «чипер кайăр», «тепре куриччен», «вăй патăр» тата ытти сăмахсемпе вырăнлă усă курать вăл. Аслисене «Эсир» тесе хисеплет.

Пирĕн мăн асаттесем ĕлĕк пĕр-пĕрне: «Аван-и, ман килес», — тенипе пĕрлех çĕлĕкне хывнă, пуç тайса пĕр-пĕрне

сывлăх суннă. Хитре вĕт! Чăваш ĕмĕрех: «Аван-и, мĕнле тăратăр? Епле çӳретĕр?» — тенĕ.

«Салам» сăмахпа чăвашсем сайра усă курнă: урамра е пасарта пачах та усă курман, пĕр-пĕр киле кĕнĕ чух пӳртре çеç усă курма пултарнă. Ку сăмаха еврейсем, Хĕвел тухăçĕнчи халăхсем ытларах калаççĕ. Салам «сирĕн килĕшӳллĕ, тăнăç пурнăç пултăр», «хисеп те чыс манран» тенине пĕлтерет. Халĕ ăна ытларах çамрăк ăру çыннисен сăмахĕ теес килет.

Пурнăç вăл малаллах чупать. Сăмах тĕнчи те пĕр вырăнта тăмасть, çынсемпе пĕрлех улшăнса пырать. Тепĕр чух чĕлхен, халăхăн илемлĕхне, кирлĕлĕхне курма пĕлесси тата ăна сыхласа хăварасси, шел пулин те, пурнăçри тĕрлĕ ача пекех, кирлĕ шайра пулса пымасть. *(Г. Брусова.)*

• Текста ят парăр. Кам ăнăçлăрах ят тупать? Пĕр-пĕрин хуравĕсене танлаштарăр, чи ăнăçлине палăртăр.

• Текстăн тĕп шухăшĕ хăш предложенире палăрать? Эсир автор шухăшĕпе килĕшетĕр-и?

• Эсир çак сăмахсемпе пур чухне те кирлĕ çĕрте усă куратăр-и? Çынпа сывпуллашнă чух тата мĕнле каласа уйрăлма май пур? Икĕ ушкăна пайланса ĕçлĕр. Хăш ушкăн ĕçе лайăхрах тума пултарчĕ? Мĕншĕнне ăнлантарăр.

## 22. Ялан янăравлă хупă сасăсем

[в], [й], [л], [м], [н], [р] хупă сасăсем мĕнле вырăнта тăраççĕ? Мĕнле сасăсем умĕн е хушшинче? Сăмах пуçламăшĕнче-и е вĕçĕнче-и? Сăмахăн тĕрлĕ вырăнĕнче мĕнле илтĕнеççĕ? Сăмахсенчи сасăсене мĕн тĕллевпе тĕрлĕ тĕспе палăртнă? Тĕслĕхсене сăнаса ăнлантарăр. Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| вăрман | йăмра | лаша | мухта | нăрă | Раман |
| автан | вăйлă | калта | йăмра | анра | сăрла |
| авал | вăйă | улăм | шăмă | ана | урам |
| лав | нумай | сахал | вăтам | юман | çăкăр |

**[в], [й], [л], [л’], [м], [н], [н’], [р]** хупă сасăсем сăмахăн тĕрлĕ вырăнĕнче (пуçламăшĕнче, варринче, вĕçĕнче) тĕл пулаççĕ, пур чухне те янăраса илтĕнеççĕ. Çавăнпа **ялан янăравлă хупă сасăсем** шутне кĕреççĕ.

**193.** Сăмахсене вулăр. *Ль, нь* сас паллисемпе кăтартнă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ?

| | |
|---|---|
| мăкăнь | мăкăль |
| супăнь | шукăль |
| ахаль | хальхи |
| кукăль | выльăх |

**194.** Орфографи словарĕнчен *в, й, л, м, н, р* сас паллисемпе пуçланакан икшер сăмах суйласа çырса илĕр, пĕринпе предложени тăвăр. 12 сăмахран хăшĕ хытă, хăшĕ çемçе сăмах пулнине калăр.

**195.** Тупмалли юмахсене вулăр. Тупсăмĕсене калăр. Çав сăмахсенче ялан янăравлă хупă сасăсем пур-и? Тупсăм сăмахĕсенчи сасăсенчен пĕрне урăххипе ылмаштарса урăх сăмах тума май пур-и?

1. Аллупа мана тытсан
Сан çӳçне эп якататăп.
Пĕр сас палли улăштарсан
Çурт лартмалли эп пулатăп.

2. Колхозра уя тухсан
Мана эсĕ курăн.
Сас палли улăштарсан
Шыври чĕр чун пулăп.

(*«Тантăш»* хаçатран.)

**196.** Тĕрлĕ словарь, справочник материалĕсемпе усă курса хăвăрт каламалли 4—5 сăмах çаврăнăшĕ çырса илĕр. Мĕншĕн вĕсене хăвăрт каламалли сăмахсем теççĕ? Вĕсем мĕнле сасăсене калама хăнăхтарассипе çыхăннă? Ăнлантарса парăр.

Хăвăрт каламалли сăмах çаврăнăшĕсене кам тĕрĕс те хăвăртрах калама вĕренсе çитнине тĕрĕслĕр.

**197.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр. Хăш сăмахсенче ялан янăравлă хупă сасă пур? Ялан янăравлă хупă сасă хыççăн тăракан хупă сасă мĕнле илтĕнет — янăраса е янăрамасăр? Мĕншĕн?

1. Чавса çывăх та — çыртма çук. 2. Лайăх ĕçлесен халăх курать, чыс пулать. 3. Ватта сума су: ху та ватă пулăн. 4. Çĕр сум укçа пуличчен çĕр тус пултăр.

- Эсир ваттисен сăмахĕсене тата пĕлетĕр-и? Каласа парăр.

Сăмахсене вулăр та хăш юпара тĕп чăваш сăмахĕсене, хăшĕнче вырăс чĕлхинчен йышăннисене кăтартнине калăр. Сăмах вĕçĕнче çырнă *в* сас палли мĕнле сасса пĕлтерет?

| | | | |
|---|---|---|---|
| *лав* | *пролив* | *пуплев* | *объектив* |
| *калав* | *архив* | *мухтав* | *кооператив* |
| *ялав* | *актив* | *вĕçев* | *плов* |

Чăваш чĕлхинче **[в]** сасă — ялан янăравлă хупă сасă, çавăнпа сăмах пуçламăшĕнче те, варринче те, вĕçĕнче те янăраса илтĕнет. Т ĕ с л ĕ х с е м: ***вăрман, çава, ялав.***

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсен вĕçĕнчи **в** сас палли **[ф]** сасса пĕлтерет: ***пролив*** [пролиф], ***архив*** [архиф], ***плов*** [плоф], ***кооператив*** [кооператиф]. Çавăн пекех хушаматсен вĕçĕнчи **в** сас паллине те **[ф]** сасă пек вулама̀лла: *Иванов* [Иваноф], *Петров* [Петроф].

**[Ф]** сасă сăмахсем çумне аффикс хушăнсан та сыхланать, анчах **в** çырмалла: ***проливăн, пролива; активăн, актива; Ивановăн, Иванова; проливпа*** [пролифпа], ***проливра*** [пролифра]; ***Ивановсăр*** [Иванофсăр], ***Петровшăн*** [Петрофшăн].

**198.** Панă сăмахсене тĕрĕс вулăр.

1. Штатив, штатива, штативран, штативпа.
2. Архив, архивăн, архива, архивра, архивран.
3. Коллектив, коллективăн, коллектива, коллективран, коллективпа.

**199.** Çак сăмахсене танлаштарса вулăр.

| | |
|---|---|
| калав — югослав | тĕрĕслев — залив |
| пустав — устав | ан тив — штатив |
| чĕтрев — взрыв | сăлтав — детектив |

• **Халĕ çак сăмахсенех аффикссем хушса вулăр. Мĕнле вуламаллине тата çырмаллине калăр.**

## 23. Шавлă хупă сасăсем

Сăмахсене вулăр. Пĕрремĕш юпари сăмахсен вĕçĕнчи, иккĕмĕш юпари сăмахсен пуçламăшĕнчи хупă сасăсем виççĕмĕш юпарисемпе танлаштарсан мĕнле илтĕннине сăнăр. Хăш юпари хупă сасăсем янăраса илтĕнеççĕ, хăшĕсем янăрамаççĕ? Янăраса илтĕнекен хупă сасăсем мĕнле сасăсем хушшинче тăраççĕ? Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ак | куç | акă | автан |
| сып | пуç | сыпă | карта |
| кас | сак | касăк | вăлта |
| уç | çăл | уçă | çавăнта |
| тат | тус | татăк | айтăр |
| пух | хуп | пуху | лавпа |
| мулкач | чак | мулкачăн | вайпа |
| хуш | шав | хушу | хăмпă |

Чăваш сăмахĕсенче янăравсăр **[к], [п], [с], [ç], [т], [х], [ч], [ш]** хупă сасăсем икĕ уçă сасă хушшинче тата янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче янăраса илтĕнеççĕ: *така* [таГа], *упа* [уБа], *сасă* [саЗă], *каçă* [каÇă], *атă* [аДă], *пуху* [пуХу], *ача* [аЧа], *пушă* [пуЖă].

Чăваш чĕлхинчи хупă сасăсен янăравлăхĕ вырăс чĕлхинчи янăракан хупă сасăсен янăравлăхĕпе тан мар.

**Янăраса илтĕнеççĕ пулин те çырура вĕсене урăх сас паллисемпе кăтартмаççĕ.**

**200.** Вулăр. Хăш хупă сасăсем тата мĕншĕн янăраса илтĕннине калăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| купа | çăка | утă | ăшă | ăсан |
| арпа | çамка | вăлта | аршăн | харсăр |
| тупă | така | хытă | пушă | усă |
| кĕпе | йĕке | кĕлте | тӳшек | ĕнсе |

**201.** Сăмахсене вулăр. Хăш хупă сасăсем янăраса илтĕнеççĕ? Мĕнле сасăсем хушшинче?

| | | |
|---|---|---|
| хурçă | хачă | пăхăр |
| çулçă | вăчăра | сахал |
| виçĕ | ĕрче | ӳхĕ |
| выçă | арча | çывхар |

• Çакăн евĕр сăмахсене тата пĕлетĕр-и? Тупса калăр.

**202.** Вулăр. Сăмахсен пуçламăшĕнче мĕнле хупă сасă тăнине калăр.

Баян, бас, бартер, драп.

• Халĕ сăмах пуçламăшĕнчи сасăсене янăраманнисемпе ылмаштарса вулăр. Сăмах пĕлтерĕшĕ улшăнчĕ-и?

**203.** Янăраса илтĕнекен хупă сасăллă килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсене суйласа çырса илĕр. Виçĕ сăмахĕпе предложени туса çырăр.

**204.** Вулăр. Палăртнă сăмахсенче янăраса илтĕнекен хупă сасăсене тупăр. Вĕсем мĕнле сасăсем хушшинче янăраса илтĕннине калăр.

Ĕнер *кунĕпех* лапка-лапка юр çăватчĕ. Каçпа та вăл *часах* чарăнмарĕ пулас. Ирхине ирех урама тухрăм та, çанталăк çав тери *чиперленнĕн туйăнчĕ.* Йывăç *тĕмĕсем,* çурт *çийĕсем,* çерем — пĕтĕм тавралăх шап-шурă. Сывлăш уçă. *Сывласа* тăранаймăн. Çил пачах çук. Кун пек чух пӳлĕмре *пăчăхса* ларăн-ши? *(Г. Орлов.)*

• Калава мӗнле ят пама пулать? Ку ҫанталӑк пирки мӗн каласа пама пултаратӑр?

**205.** Ушкӑнпа пӗчӗк тӗпчев ӗҫӗ ирттерӗр. Чӑвашла калаҫнӑ чух пуплеври мӗнле сасӑсем ытларах тӗл пулнине шыраса тупма тӑрӑшӑр. Хупӑ е уҫӑ сасӑсем? Ӑна мӗнле йӗркепе ирттересси ҫинчен тӗплӗн шухӑшлӑр. Чи малтан мӗн тишкернӗ пулӑттӑр?

Транскрипципе усӑ курӑттӑр-и? Мӗншӗн? Хупӑ сасӑсемпе уҫӑ сасӑсен шутне мӗнле палӑртнӑ пулӑттӑр?

Ку ӗҫре сире компьютерпа калькулятор пулӑшнӑ пулӗччӗҫ-и? Мӗнле майпа? Ӗҫе пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн пӗтӗмлетӳ тӑвӑр. Шухӑшӑра тӗслӗхсемпе ҫирӗплетӗр.

**206.** Текста вулӑр. Янӑраса илтӗнекен хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене ҫырса илӗр: малтан икӗ уҫӑ сасӑ хушшинче тӑракан сасӑллисене, кайран — умри ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑпа хыҫалти уҫӑ сасӑ хушшинче тӑракан сасӑллисене.

## Декабрь

Ҫулталӑкри[2] чи кӗске кунсем, чи вӑрӑм каҫсем пуҫланчӗҫ. Хӗвел те сайра хутра кӑна курӑнать. Чи кӗске кун вӑл — декабрӗн 22-мӗшӗ. Тепӗр талӑкран кун вӑрӑмланма пуҫлать, анчах ку хӗл халех иртессине пӗлтермест.

Хӗл — кайӑксемшӗн[3] чи йывӑр вӑхӑт. Чылайӑшӗ сивӗпе мар, выҫӑпа вилет. Ҫавӑнпа ачасен вӗсене пулӑшмалла.

Виҫӗ уйӑх иртсен ҫанталӑка ҫурхи сӑн ҫапӗ. Вӑрман каллех кайӑк-кӗшӗк шавӗпе тулӗ. (*«Тантӑш»* хаҫатран.)

• Декабрь уйӑхӗ пирки мӗн хушса калама пултаратӑр?

**207.** Сӑмахсене вулӑр. Хӑш падеж форминче хупӑ сасӑ янӑраса илтӗнет, хӑшӗнче — янӑрамасӑр?

*Юлташӑн,* юлташра, юлташран, юлташа, юлташ, юлташсӑр, *юлташпа,* юлташшӑн; *пӗлӗтре,* пӗлӗтшӗн, пӗлӗтпе, пӗлӗтӗн, пӗлӗт, пӗлӗтсӗр, *пӗлӗте,* пӗлӗтрен.

• Сӑмах формисене падежсен йӗркипе ҫырса илӗр. Янӑраса илтӗнекен сас паллисене аялтан йӗр туртса палӑртӑр.

• Палӑртнӑ сӑмахсемпе предложенисем тупса ҫырӑр.

**208.** Сăмахсене вулăр. Вĕсен вĕçĕнчи хупă сасă мĕнле илтĕннине калăр. Сăмахсене урăх формăра лартăр, унта çав хупă сасăсем янăраса илтĕнччĕр.

Тĕслĕх: *апат — апатшăн, апата.*

Чăкăт, кулач, çимĕç, аш, укроп, рис, çăмах.

• Асăннă сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать? Ку ушкăна ытти сăмахсене хушса çырма пулать-и? Мĕнлисене?

**209.** Сăмахсене вулăр. Вĕçĕнчи хупă сасă мĕнле илтĕнет? Халĕ çав сăмахсене вĕçĕнчи хупă сасси янăраса илтĕнмелле формăра калăр. Палăртнă сăмах формисемпе пĕрер предложени туса çырăр.

Вĕç, *тыт*, çап, çак, *кас*, чыш, *тух*.

**210.** Вулăр. [К], [п], [с], [ç], [т], [х], [ч], [ш] сасăсем янăраса илтĕнекен сăмахсене пĕрер тупăр.

Хĕллехи вăрман шăп тăрать. Пас тытнă туратсем питĕ илемлĕн курăнаççĕ — вĕсене такам юриех шурă путек тирĕпе хăнтăр тыттарнă евĕр туйăнать. Кăпăшка хăнтăр çине пин-пин кĕмĕл пĕрчи сапнă тейĕн: хĕвелпе çиçет, вылять, йăлтăртататать. Унтан вăрман тăррипе çил касси ĕрĕхтерсе чупса иртет те — туратсем сулăмлăн хумханса илеççĕ. Вара пас катрамăн катăлать, тусан пек вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçме тапратать. (*Г.Ефимов* çырни тăрăх.)

• Калавра мĕнле вăхăта сăнласа кăтартнă? Унашкал вăхăтра эсир вăрманта пулнă-и?

Калава мĕнле ят пама пулать?

**211.** Кил-çуртри япаласен ячĕсене икĕ юпа туса çырăр. Пĕринче янăраса илтĕнекен хупă сасăллисем пулччăр, тепринче — ыттисем. Кашни япала ячĕ çумне пĕрер паллă ячĕ хушса калăр.

## 24. Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ

Сăмахсене умлă-хыçлă каласа пăхăр. Ун хыççăн хупă сасăсене уйрăмшарăн калăр.

| | | |
|---|---|---|
| *пар — пер* | *пыр — пир* | *кулă — кӳлĕ* |
| *вăр — вĕр* | *тат — тет* | *тăм — тĕм* |
| *тупа — тӳпе* | *тылă — тилĕ* | *курăк — кĕрĕк* |

Пĕрешкел сас паллисемпе кăтартнă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ?

Асăннă мăшăрсенче пĕрремĕш сăмахсен уçă сассисем мĕнлисем? Иккĕмĕшĕнчи уçă сасăсем мĕнлисем? Хăвăр шухăша пĕтĕмлетĕр.

Хытă уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем пурте хыттăн илтĕнеççĕ: *пар, пыр, кулă, тат, тăм.*

Çемçе уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем пурте çемçен илтĕнеççĕ: *пер, пир, кӳлĕ, тет, тĕм.*

Сăмахри çемçе уçă сасă хăй умĕнчи хупă сасса та, хыçĕнчине те çемçетет: кил — [к’ил’], пĕл — [п’ĕл’].

**212.** Сăмахсене вулăр, хупă сасăсем мĕнле илтĕннине сăнăр. Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

1. Кулă — кӳлĕ, пурлă — пӳрлĕ, лăпăш — лĕпĕш, Сурăм (ял ячĕ) — сӳрĕм, çапăç — çепĕç, кăрăс — кĕрĕс, турă — тӳрĕ, ăмăр — ĕмĕр.
2. Вĕлтрен, пултран, пиçен, мăян, серте.

Хупă сасăсенчен чылайăшĕ хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен мăшăрлă:

**[в] [к] [л] [м] [н] [п] [р] [т] [х]**
**[в’] [к’] [л’] [м’] [н’] [п’] [р’] [т’] [х’]**

Çемçе хупă сасăсене транскрипцире сас палли тăррине сылтăм енчен ’ паллă лартса палăртаççĕ: *ха[л’], мăкă[н’], вула[т’].*

**213.** Вулăр. Сăмах вĕçĕнчи хупă сасăсем мĕнле — хыттăн е çемçен илтĕннине каласа парăр. Хупă сасăсен мăшăрĕсене тупăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| хĕвел | авал | ӳркен | тăван |
| йĕкел | сывал | кĕскет | айван |
| йĕвен | кăвакал | кĕлет | салат |

**214.** Сăвва вулăр. Хупă сасăсем мĕншĕн хыттăн е çемçен илтĕннине ăнлантарăр. Текстра миçе сăмах хыттăн, миçе сăмах çемçен илтĕнет?

### Йăмра

Эп ӳсетĕп айлăмра,
Мансăр килмĕ ял илемĕ.
Янăравлă ят — йăмра,
Çӳçепе эп пĕр килтен-мĕн.
Анчах вĕçкĕн çӳçе пек
Эп ытла авкаланмастăп,
Авăнас тее-теех
Шăтăр-шатăр хуçăлатăп.

*(П. Хусанкай.)*



**215.** Сăмахсемпе паллашăр, тишкерĕр. Малтан хытă хупă сасăллă сăмахсене вуласа парăр, кайран — çемçе хупă сасăллисене.

**Пичке, витре, тĕкĕр, кашăк, чӳлмек, тӳшек, тура, сĕтел, пукан, йĕп, шăпăр, михĕ, сăпка, çĕçĕ, кăкшăм, минтер.**

• Асăннă сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама май пур? Çак ушкăна кĕрекен сăмахсене татах тупса калама пулать-и?

Хăш-пĕр сăмахра хытă уçă сасăпа юнашар çемçе хупă сасăсем тĕл пулаççĕ. Унашкал сăмах чăваш чĕлхинче нумай мар: *шукă[л']*, *аха[л']*, *мăкă[л']*, *мăкă[н']*, *супă[н']*, *вы[л']ăх*, *ха[л']*, *хă[т']*, *ху[т']*, *вă[л']т*.

Глаголсен 3-мĕш сăпат форминче те хытă уçă сасăпа юнашар тăракан **[т]** сасă çемçен илтĕнет: *ута[т']*, *çыра[т']*.

**216.** Хăш сăмахсенче çемçе хупă сасăсем пур?

Çуллă, хаяр, нӳрĕ, ачам, хулăн.

• Çак сăмахсем çумне япала ячĕсем хушса сăмах майлашăвĕсем тăвăр.

**217.** Малтан çемçе хупă сасăллă сăмахсене çырса илĕр, унтан — хытă хупă сасăллисене.

Çерçи, çăхан, курак, чĕкеç, шăпчăк, хĕрен, кăвакарчăн, пăрчăкан, кăсăя, куккук, ӳхĕ, тăрна, кăйкăр, акăш, уйăп, вĕршĕн, чарлан, текерлĕк, шăнкăрч, тăмана, хăлат, чана, хурчка, ула такка, ăмăрт кайăк, шăркалчă.

• Çемçе усă сасăллă сăмахсенчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? Хытă усă сасăллисенче мĕнле?

• Эсир ку ятсенчен хăшĕсене пĕлместĕр? Вĕсен кайăк ячĕсене тата пĕлетĕр-и?

• Асăннă кайăк ячĕсенчен хăшĕсене сирĕн ялта урăхларах калаççĕ?

**218.** Сăмахсене вулăр, вĕсен пусламăш сассисемпе юнашар мĕнле усă сасăсем пулнине каласа парăр.

Йăва, йĕвен, сурăх, сӳре, çарăк, çĕрĕк, чăлха, чĕрĕ, çăра, йăмăк, сӳт, йĕнер, чĕпĕ, чăпар, çимĕç.

> Чăваш чĕлхинче **[й]**, **[с]**, **[ç]**, **[ч]** сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх йĕркине пăхăнмаççĕ, хытă усă сасăпа та, çемçе усă сасăпа та юнашар тăма пултараççĕ, хăйĕн пахалăхне çухатмаççĕ. Тĕслĕхсем: *юрă* [йурă] — *йăнăш* — *йĕкел*, *сарă* — *симĕс*, *сут* — *сӳт*, *çăка* — *çĕтĕк*, *хăмăр* — *хирĕç*.

**219.** Хăш ушкăнри сăмахсенче пĕтĕмпех *ы* çырмалла?

1) Ç..вăх, ç..лĕм, ч..лай; 2) ч..шкă, ç..рла, ç..рлахтар; 3) ç..ру, ç..ччĕ, краçç..н; 4) ч..слă, ч..пер, ч..кан.

**220.** Сăмах диктанчĕ.

1. Хĕвел, шĕвел, кивел, йĕкел, тенкел, кĕскел, çĕмел, кĕтмел, эмел, çĕнел, хĕрел, нӳрел, сĕтел, шел.

2. Çекĕл, кĕмĕл, çитмĕл, пĕл, чĕрĕл, ирĕл, сирĕл, несĕл, çĕтĕл, хĕл.

3. Ил, кил, пил, пускил, çил, кӳл, пӳл, çӳл.

## 25. Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртасси

Сăмахсене вулăр.

*Пĕлĕт, хĕвел, хĕрлĕ, кĕрен, вĕрене, хĕрен, пилеш.*

Сăмахсенчи хупă сасăсене тупăр, вĕсем мĕнле илтĕннине калăр. Çемçен илтĕнни мĕнрен килет? Хупă сасă çемçен илтĕннине ятарлă паллăпа кăтартнă-и?

Халĕ çак сăмахсене вулăр, вĕсенчи хупă сасăсем мĕнле илтĕннине калăр.

*Вăрман, лаша, хурăн, кăвак, ыраш, тăмана, палан.*

Ку сăмахсенче уçă сасăсем мĕнлисем?

Çемçе уçă сасăпа юнашар (е умĕнче, е хыçĕнче) тăракан хупă сасăсем яланах çемçен илтĕнеççĕ. Çавăнпа тивĕçлĕ сас паллисем хыççăн çемçелĕх палли çырмаççĕ: *пĕлĕтлĕ, çителĕклĕ, кĕнеке, вĕрене.*

Хытă уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем хыттăн илтĕнеççĕ: *арман, юман, пăтă, кăвар.*

**221.** Сăмахсене вулăр. Вĕсенче хăш хупă сасă çемçе? Ăна мĕнле палăртнă? Уçă сассисем мĕнлисем?

Кукăль, мăкăнь, шукăль, мăкăль, вулать, ларать, çырать, супăнь, юрать.

Хытă сăмахсенчи хупă сасă çемçе пулсан ăна хупă сас палли хыççăн çемçелĕх палли çырса палăртаççĕ: *кукăль, турать, ахаль, мăкăнь, халь, супăнь, куççуль, сухалать, канать, вăльть-вальть, атьăр, мăкăльть.*

*фестиваль*
*медаль*
*хрусталь*
*кастрюль*
*календарь*

• Рамкăри сăмахсене вулăр, вĕсене мĕнле çырмаллине астуса юлăр. Вĕсенчен 3 сăмахне суйласа илĕр те предложенисем туса çырăр.

**222.** Вулăр. Хăшĕнче хупă сасăсем хыттăн, хăшĕнче çемçен илтĕннине каласа парăр. Çемçе хупă сасăсене мĕнле палăртнине аса илĕр.

Хĕвел, уçă, тăман, çил, сивĕ, тĕтре, шăрăх, типĕ, çиçĕм, сывлăш, пĕлĕт, сарă.

• Япала ячĕсем çумне паллă ячĕсем, паллă ячĕсем çумне япала ячĕсем тупса калăр.

Тĕслĕх: *хĕвел — сарă хĕвел, шăрăх — шăрăх çанталăк.*

**223.** Çак глаголсене хальхи вăхăтра пĕрреллĕ хисепре 3-мĕш сăпатра çырăр. Палăртнă сăмах формисемпе предложенисем тупса калăр.

Вĕрен, *вула*, асăрха, çыр, пĕл, итле, *тăрăш*, пурнăçла, тимле, хăнăх, вĕçле, *хисепле*, пулăш, *савăн*, пĕлтер.

**224.** Аса илĕр: [ч] сасă умĕнчи [л], [н] сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? Сăмахсене тĕрĕс çырса илĕр. Палăртнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр.

Кал..ча, *мун..ча*, шал..ча, *укăл..ча*, пан..ча, вăл..ча, *пыл..чăк*, ван..чăк, *шан..чăк*, ан..чах, пăн..чă, *пăтран..чăк*.

> **Асра тытăр!**
>
> Çемçелĕх палли **(ь)** çырнипе çырманни сăмахсем расна пулнине кăтартать. Танлаштарăр: *турат — турать, хурат — хурать, хал — халь, çунат — çунать, сурат — сурать, мăкăл — мăкăль.*

**225.** Сăмах диктанчĕ. Панă сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем туса çырăр.

Тĕслĕх: *ахаль каларăм, халь пымасть, пысăк мăкăль.*

Ахаль, халь, мăкăль, кукăль, шукăль, курпăль, куççуль, мăкăнь, супăнь, хунь, юрать, кăть, кăть-кăть, хăть, хуть, вальть, вăльть-вальть, вăльть, мăкăльть.

**226.** Вулăр. Сăмахсене мĕнле çырмаллине аса илĕр.

Тетрад.. , букварь.. , топол.. , сирен.. , Севастопол.. , Астрахан.. , председател.. , шинел.. , ртут.. , детал.. , библиотекар.. , словар.. , портфел.. , корол.. .

• Шухăшлăр: вĕсем тĕп чăваш сăмахĕсем-ши е йышăннă сăмахсем-ши?

*диагональ*
*бинокль*
*госпиталь*
*токарь*
*декабрь*

**227.** Сăмахсене вулăр. Хăш падеж формисенче çемçелĕх палли *(ь)* çырнипе çырманнине сăнăр. Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

Тетрадь, календарь, тетрадĕн, календарĕн, тетраде, календаре, тетрадьре, календарьте, тетрадьрен, календарьтен, тетрадьне, календарьне, тетрадьсĕр, календарьсĕр, тетрадьшĕн, календарьшĕн, писатель, писателĕн, писателе, писательте, писательтен, писательсем.

*табель*
*шинель*
*сирень*
*акварель*
*писатель*
*числитель*

Тĕп падежра çемçелĕх палли **(ь)** çыракан сăмахсене вĕçленĕ чухне камăнлăхпа пару падежĕсенче **ь** çырмалла мар: *площадĕн, площаде,* ытти падежсенче **ь** çырмалла: *площадьре, площадьрен, площадьне, площадьсĕр.*

Хытă сăмах варринчи пĕртен-пĕр хупă сасă çемçе пулсан ăна çемçелĕх паллипе **(ь)** кăтартаççĕ: *выльăх, атьăр.* Çемçе хупă сасă хыççăн ку сăмахсенче **ă** уçă сасă тăрать.

**228.** Рамка ăшĕнчи сăмахсене вулăр, пĕлтерĕшĕсене аса илĕр. Çав сăмахсене пару тата вырăн падежĕсенче каласа пăхăр. Мĕнле çырмаллине калăр, астуса юлăр.

Хытă сыпăк пуçламăшĕнчи **[л'], [н'], [т']** хупă сасăсен çемçелĕхне **ю, я** сас паллисем умĕн **ь** паллăпа кăтартмаççĕ: *атя* [ат'а], *Михаля* [Михал'а], *выля* [выл'а], *Лява* [Л'ава], *хуню* [хун'у].

*портфель*
*вермишель*
*Кремль*
*модель*
*площадь*

**229.** Вулăр. Кирлĕ сас паллисем лартса текста çырса илĕр. Çемçе хупă сас паллисене аялтан йĕр туртса палăртăр.

1. Ван..к, ат.. библиотекăна кайса килĕпĕр. 2. Канмалли кун улттăмĕш класс ачисемпе футбол вăййи выл..рăмăр. 3. Пирĕн кӳршĕ — Михал.. пичче. Вăл паллă механизатор. 4. Эпĕ Ван..кпа юнашар ларатăп. Вăл манăн тантăш. 5. Манăн кукаçи Л..ва ятлă, таврари паллă сунарçă шутланать.

**230.** Вулăр. *Ю, я* сас паллисем хăш сăмахсенче икĕ сасса, хăшĕсенче пĕр сасса пĕлтернине калăр. Çав сăмахсенче хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ: хытă-и, çемçе-и?

Выля, туя, *юнашар,* паян, Аня, атя, юмах, каю, марля, Ванюк, хăю, суя, ятла, *хăях,* тухья, явап, кая, яшка, юрă, Анюта, янах, кухня, ялав, хăюлăх, юлташ, меню, ярăм, *Санюк,* юмах.

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

**231.** Сăмахсенчи *ю, я* сас паллисем мĕнле сасăсене пĕлтернине калăр. Икĕ сăмахĕпе предложени тăвăр.

Юхăм, хăюллă, ярапа, юшкăн, Ванюк.

## 26. Хупă сасăсем вăраммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси

Вулăр. Палăртнă сăмахсене уйрăмшарăн каласа пăхăр, танлаштарăр. Мĕн асăрхарăр?

| | |
|---|---|
| *ана* çинче | *Анна* вулать |
| манăн *алă* | *аллă* (50) |
| *пилĕк* ыратать | *пиллĕк* (5) |
| *тăри* юрлать | йывăç *тăрри* |
| *çула* тух | *çулла* пулчĕ |
| хура *тăла* | лашана *тăлла* |

| | |
|---|---|
| çăра *тĕтĕм* | *тĕттĕм* пулчĕ |
| шурă *така* | кĕреçепе *такка* |
| мана *патăр* | *паттăр* салтак |

Хăш юпари сăмахсенче хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнеççĕ? Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕннине мĕнле палăртнă?

Чăваш сăмахĕсен варринче хупă сасăсем кĕскен те, вăрăммăн та илтĕнме пултараççĕ. Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасса çырура икĕ пĕр пек сас паллипе палăртаççĕ: *алă — аллă, патăр — паттăр, тĕтĕм — тĕттĕм, пилĕк — пиллĕк, сăвă — сăвва, чалăш — чалăшшăн, хаяр — хаяррăн, çирĕп — çирĕппĕн* т. ыт. те.

Вăрăммăн илтĕнекен хупă сасă сăмах пуçламăшĕпе вĕçĕнче тĕл пулмасть.

**232.** Вулăр. Аса илĕр: *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăннă сăмахсенче миçе *л* çыраççĕ?

1. Чап..ă, илем..ĕ, укçа..ă, чечек..ĕ, тĕтре..ĕ, тăвар..ă, чĕрне..ĕ, калу..ă, хĕрӳ..ĕ, пăр..ă, чăтăм..ă, тĕрек..ĕ.

2. Пукане..е, лаша..а, çутă..а, моряк..а, ача..а, нимĕç..е, шашкă..а, вырăс..а, пӳске..е, çĕнĕ..е, лапта..а.

Уçă тата [л] сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне **-лă(-лĕ), -ла(-ле)** аффикссем хушăнсан икĕ **л** çырмалла:

а) *кăшкăруллă, укçаллă, йăмраллă, хӳреллĕ, йĕркеллĕ, хĕвеллĕ, пăшаллă, кăмăллă, тĕмескеллĕ;*

*ă) ачалла, çутăлла, кивĕлле, кĕмĕлле, баскетболла, кăшăлла, нӳрĕлле, сивĕлле.*

Ытти чухне пĕр **л** çыраççĕ:

а) *хурăнташлă, чаплă, çăмлă, телейлĕ, хистевлĕ;*

ă) *чăвашла, этемле, выльăхла, мечĕкле, çĕленле, мĕскĕнле, кулăшла.*

**233.** Текста вулăр. Вăрăм хупă сасăллă сăмахсене çырса илĕр.

## Вăрманта

Чун вăрмана туртăнчĕ те, халĕ эпĕ хĕл илемĕпе савăнса çӳретĕп. Сăнатăп. Тăнлатăп. Курма, пĕлме тăрăшатăп.

Хыр-чăрăш ĕнтĕ тĕксĕм симĕс мар, шурă симĕс, чылайăшĕн лăссисем лаштăрах усăннă. Туратсене ăнсăртран кăштах перĕнетĕн çеç — кăпăшка юр лăстăр вĕçсе анать те пит-куçа хупласах хурать. Хăвăрт силленсе каллех малалла каятăп. Йĕлтĕр çăмăллăн шăвать. Юр кăчăртатмасть: ытлашши сивĕ мар.

Чарăнкаласа тăратăп. Ара, илемпе киленнĕ чухне кам васкатăр? Çывăххрах ула такка сасси илтĕнчĕ: так-так! так-так-так! Чăтаймарăм, лапсака йывăçсем айĕпе шăппăн-шăппăн кайăк патнелле çывхарма пуçларăм. Авă! Тăрри хуçăлнă турат çинче ларать вăл. Хыр йĕкелне çурăка хĕстернĕ те шĕвĕр сăмсипе таккать те таккать, çав хушăрах унталла-кунталла пăхкалать. Акă аялалла чăмрĕ те самантрах çӳлелле çĕкленсе çăра лăсăсем хушшинче çухалчĕ. *(Г. Орлов.)*

• Эсир хĕллехи вăрманта пулнă-и? Ун пирки мĕн калама пултаратăр? Мĕн курнине аса илсе тата ӳкерчĕкпе усă курса «Хĕллехи вăрманта» ятлă сочинени çырăр.



**234.** Калава вулӑр. Вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене ҫырса илӗр.

### Хӑва

Март уйӑхӗн вӗҫӗнче хӑва кӑчкӑ кӑларать. Малтан кӑчкӑсем мӑнтӑрланса ӳссе пыраҫҫӗ, унтан хӑмӑр тӗслӗ хупӑсем ӳкеҫҫӗ. Хуппisене хывса пӑрахнӑ хӑва кӑчкисем кайӑксен ҫамрӑк чӗппisем евӗрлех курӑнаҫҫӗ[4].

Пирӗн таврара темиҫе тӗрлӗ хӑва ӳсет. Пӗрисем вӑрӑм та яштака, теприсен вара турачӗсем ҫӗре авӑнса аннӑ. Пӗрисене тытнӑ-тытманах хуҫса илме пулать, теприсем хуҫӑлмаҫҫӗ. Час-часах юхан шывсен хӗррисенче симӗс, шурӑ, хӗрлӗ вӑрӑллӑ хӑвасем ӳснине курма пулать. *(Н. Матвеев.)*

• Эсир хӑва курнӑ-и? Сирӗн ялта ӑна мӗнле калаҫҫӗ?

**235.** Япала ячӗсемпе паллӑ ячӗсем ҫумне *-и* аффикс хушса вулӑр, ҫырса илӗр.

Т ӗ с л ӗ х: а) *пӑтӑ — рис пӑтти, пулӑ — ҫырма пулли;* ӑ) *шурӑ — шурри, пысӑк — пысӑкки.*

1. Сӑвӑ, вӑййӑ, шӑмӑ, кӳлӗ, тырӑ, михӗ, йытӑ.
2. Ырӑ, хӑмӑр, пӑчӑ, ҫӗнӗ, йӳнӗ, тӳрӗ, чӗрӗ, кӑвак.

**-И** аффикс хушӑннӑ чухне икӗ пӗр пек хупӑ сас палли **[ӑ]**, **[ӗ]** сасӑсемпе пӗтекен ҫакӑн пек сӑмахсенче ҫырмалла: а) япала ячӗсенче — *тулӑ — тулли, пӑтӑ — пӑтти, пулӑ — пулли, атӑ — атти, сасӑ — сасси*; ӑ) паллӑ ячӗсенче — *сарӑ — сарри, ырӑ — ырри, шурӑ — шурри, ватӑ — ватти.*

Хупӑ сасӑпа пӗтекен паллӑ ячӗсенче те **-и** аффикс умӗн икӗ пӗр пек хупӑ сас палли ҫырмалла: *кӑвак — кӑвакки, симӗс — симӗсси, пӗчӗк — пӗчӗкки.*

**236.** Ҫак сӑмахсем ҫумне аффикс хушса ҫырӑр, мӗнле ҫырмаллине ӑнлантарӑр.

1. Ҫанӑ, сыпӑ, чӗпӗ, тупӑ, нӑрӑ, вутӑ, ташӑ, пӗкӗ, тилӗ.

2. Хытă, çырă, кивĕ, шĕвĕ, ăшă, йӳнĕ, çĕнĕ, нӳрĕ.
3. Хастар, çирĕп, çамрăк, чипер, лайăх, капăр, самăр.

**237.** Вулăр. Çак сăмахсем хăш чĕлхерен кĕнĕ-ши? Сăмахсене мĕнле çырнине асăрхăр.

Аккордеон, аттестат, аффикс, аппарат, баллон, программа, ванна, кассир, телеграмма, троллейбус.

• Асăннă сăмахсенче хупă сасă вăрăммăн илтĕннине мĕнле палăртнă?

Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăнакан сăмахсенчи вăрăм хупă сасăсене икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртмалла. Унашкал сăмахсене мĕнле çырмаллине орфографи словарĕнче пăхмалла.

**238.** Вулăр. Сăмахсене мĕнле çырмаллине сăнăр, астуса юлăр.

Балл, грамм, грипп, Донбасс, класс, компресс, конгресс, кросс, килограмм, прогресс, процесс, Филипп, финн.

• Ку сăмахсене хăш чĕлхерен йышăннине чухласа илтĕр-и?

Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă хăш-пĕр сăмах вĕçĕнче тĕп падежра икĕ пĕр пек хупă сас палли çыраççĕ. Ытти падеж формисенче вара пĕр хупă сас палли çеç çырмалла. Танлаштарăр:

класс — класăн, класа, класра...
грамм — грамăн, грама, грамра...
грипп — грипăн, грипа, грипра...
металл — металăн, метала, металпа...

**239.** Панă сăмахсенчен хăшĕ ытлашши? Мĕншĕн?

1. Карттус, çĕлĕк, пиçиххи, сараппан, саппун.
2. Атте, анне, пичче, инке, шăллăм.

**240.** Текста вулӑр, ят парӑр. Вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тупӑр. Ун пек сӑмахсене мӗнле ҫырмаллине каласа парӑр.

Вӑрманта ҫемҫе те ӑшӑ каҫ тӑрать. Лапсӑркка кӗлеткеллӗ[2] каҫ тӗттӗмӗ лупас тӑрринче упаленсе ҫӳрет пек, мӗнпур хуралта хӑйӗн темле асамлӑ кӗлеткипе ҫупӑрласа илнӗн туйӑнать. Шӑп. Хушӑран кӑна картари ӗнесем канлӗн мӑшлатса ярӑҫҫӗ. (*В. Игнатьев* ҫырни тӑрӑх.)

• *-Лӑ(-лӗ)* аффикслӑ 4—5 сӑмах тупӑр, мӗнле ҫырмаллине калӑр.

**241.** Калава вулӑр, ят парӑр. Вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тупӑр та ҫырса илӗр. Кашни сӑмахӗпе юнашар ҫавнашкал сӑмахсем хушса ҫырӑр. Вӑл сӑмахсенче те икӗ хупӑ сас палли ҫырмалла пултӑр.

Тӗслӗх: *пулаҫҫӗ — вулаҫҫӗ, вӗренеҫҫӗ.*

Ноябрь уйӑхӗнче ӑшӑ кунсем питӗ сахал пулаҫҫӗ, хӗвел те асра-тӗсре кӑна курӑнкаласа илет. Тӗксӗм тачка пӗлӗтсем ҫӗре аннӑ пекех. Час-часах ҫӑра тӗтре тапса тухать, кӑнтӑрлах вара машинӑсен фара ҫутма тивет.

Пӗве-кӳлӗри шыв пӑрпа витӗнмен пулин те, сивӗнсех пырать. Хӗл каҫма хатӗрленекен уланкӑпа ҫӑрттан калама ҫук ҫӑткӑнланнӑ, пурне те хыпса ҫӑтма хатӗр. Ҫавӑнпа пулӑҫсен аллине халь нихҫанхинчен ҫӑмӑллӑнрах лекеҫҫӗ.

Вӑрман нихӑш вӑхӑтринчен те кичем пек. Чӑрӑшӑн хӑшпӗр лӑссисем, ватӑлса ҫитнисем, тӑкӑнаҫҫӗ. Вӑйлӑ ҫилсем хыҫҫӑн шап-шурӑ ҫӳхе юр ҫине сарӑ хӑмӑр йӗп уйрӑмах нумай выртса юлать. (*«Тантӑш»* хаҫатран.)

**242.** Илемлӗ вулӑр. Вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тупӑр, вӗсене мӗнле ҫырмаллине калӑр.

**Тӑватшар йӗркен**

Утар пӗрле, юлташӑм, малалла,
Парар ҫӗршывшӑн вӑй-хала.
Тата ҫакна асра тытар —
Ӗҫре маттур, хастар пулар.

* * *

Куккук чӑрӑш тӑрринче,
Кӑвак пӗлӗт айӗнче.
Пӗвӗм ыр ҫын умӗнче,
Шухӑш — атте килӗнче.

*(В. Давыдов-Анатри.)*

• *Маттур* сӑмахӑн синонимӗсенчен пӗринче вӑрӑм хупӑ сасӑ пур. Мӗнле сӑмах вӑл?

• Чӑваш чӗлхинче, *куккук* сӑмахсӑр пусне, тепӗр кайӑк ятӗнче те икӗ *к* ҫыраҫҫӗ. Мӗнле сӑмах-ши вӑл?

**243.** Текста вулӑр. Ҫырма йывӑртарах сӑмахсене лайӑх сӑнӑр, тишкерӗр. Текста тепӗр хут вулӑр та изложени ҫырӑр. Хӑвӑр ҫырнӑ текстри орфограммӑсене тупса палӑртӑр.

## Ӑман

— Ҫӗр чӑмӑрӗ витӗр шӑтарса тепӗр енне тухатӑп та пӗтӗм тӗнчере чи чаплӑ чӗр чун пулса тӑратӑп! — каппайланнӑ ӑман. Ҫавӑнтах вара ҫӗре чавса шалалла кӗрсе кайнӑ.

Пӗтӗм тӗнче ӑман Ҫӗр чӑмӑрӗн тепӗр енне шӑтарса тухасса кӗтнӗ. Пӗр ҫул, икӗ ҫул, виҫӗ ҫул кӗтнӗ... Тепле кӗтсессӗн те ӑмана кӗтсе илеймен. Ни каялла тухман, ни Ҫӗр чӑмӑрӗн тепӗр енче курӑнман. (*Юхма Мишши* ҫырни тӑрӑх.)

**244.** Текста вулӑр. Унти вӑрӑм хупӑ сасаллӑ сӑмахсене алфавит йӗркипе вырнаҫтарса ҫырса илӗр. Тӳрӗ пуплевлӗ предложение тупӑр, схемине ӳкерӗр.

## Ҫӑрттан

Ҫӑрттан хӑй пурӑнакан ҫырмара иртӗхсех кайнӑ: нимӗнле пулла та кун кӑтартман, ӗрчеме те паман. «Манран вӑйли никам та, нимӗн те ҫук! Пурте манран хӑраҫҫӗ!» — кӑшкӑрашнӑ вӑл. Кашни курнӑ пулла хыпнӑ та ҫӑтнӑ, нихӑшне те шеллесе тӑман.

Пӗррехинче ҫырма тӑрӑх моторлӑ кимӗ кӗрлеттерсе пынӑ. Ҫӑрттан ҫакна асӑрханӑ та хыпса ҫӑтас тесе тӳрех ун

еннелле тапса сикнĕ, анчах кимме хыпса çăтайман. Винт çумне пырса çапăннă та пуççăр тăрса юлнă. (*Юхма Мишши çырни тăрăх.*)

- Эсир çăрттан пулла курнă-и? Тата мĕнле пулă ячĕсене пĕлетĕр?
- Хăвăр тăрăхри юхан шывсенчи пулăсем çинчен презентаци хатĕрлесе тантăшсем умĕнче каласа парăр.

## 27. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ

Сăмахсене вулăр. Кашни сăмахри хупă сасăсене уйрăм каласа тухăр. Сăмах вĕçĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ — хыттăн-и е çемçен-и?

*кит — кĕт*   *макет — тĕкет*   *билет — пĕлет*
*тир — пир*   *комитет — вĕлтĕртет*   *сатин — тин*

> Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăнакан сăмахсенчи хупă сасăсем çемçе усă сасăсем умĕнче çеç çемçелеççĕ, хыççăн тăраканнисем çемçелмеççĕ: *отличник, ударник, студент, билет.*

**245.** Вулăр, хупă сасăсем мĕнле илтĕннине сăнăр. Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

Учебник, историк, питомник, художник.

**246.** Панă сăмахсенче çемçе усă сасăсене тупăр та вĕсем çумĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕннине сăнăр, каласа парăр.

Помидор, актер, генерал, перо, бизнес.

**247.** Сăмахсене вулăр. Çемçе усă сасă çумĕнчи хытă хупă сасăсене тĕрĕс калама хăнăхăр.

Макет, пакет, банкет, жилет, канфет, буфет, щит, гранит, магнит, проект, проспект; вымпел, крокодил; член, экзамен, спортсмен, магазин, вазелин, пластилин, трамплин, термин, маргарин, аспирин, апельсин, сатин, графин, гимн.

- Сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илĕр.

Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăнакан сăмахсем хытă хупă сасăпа пĕтеççĕ пулсан вĕсем çумне аффиксăн хытă варианчĕ хушăнать: *дневник — дневникăн, дневника, дневникпа; старик — старикăн, старика; бригадир — бригадирăн, бригадира.*

Сăмах çемçе хупă сасăпа пĕтет пулсан аффиксăн çемçе варианчĕ хушăнать: *февраль — февралĕн, феврале, февральте; июль — июлĕн, июльтен.*

**248.** Сăмахсем çумне тĕрлĕ аффикс хушса калăр, кайран сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илĕр.

Бензин, инженер, шинель, ноябрь, мавзолей, командир, автомобиль, питомник, математик, вермишель.

**249.** Вулăр. Икĕ юпари сăмахсен вĕçĕсене танлаштарăр. Вĕсем мĕнле хупă сасăсемпе пĕтнине калăр.

| | |
|---|---|
| шинель | кĕтмел |
| клевер | пĕвер |
| отличник | кутник |
| багажник | чăрик |
| карамель | çĕмел |
| орден | çӳлтен |
| базилик* | шĕвик |

• Кашни сăмах çумне пĕрер аффикс хушса çырăр. Мĕнле уйрăмлăх пуррине каласа парăр.

Вырăс чĕлхинче **ль, нь, рь** çыракан сăмахсене чăваш чĕлхине çырупа йышăннă, çавăнпа унашкал тĕслĕхсене вырăс чĕлхинчи пекех çырмалла: а) сăмах варринче — *коньки, культура, рельс, фильм, пульс;* ă) сăмах вĕçĕнче — *учитель, словарь, нуль, медаль, портфель, фасоль, рояль, тюлень, контроль.*

Кун йышши сăмахсене мĕнле çырмаллине орфографи словарĕнче пăхса пĕлмелле.

**250.** Сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илĕр. Çемçелĕх паллипе кăтартнă хупă сас паллисене аялтан йĕр туртса палăртăр.

Тюлень, пульс, учитель, фильм, словарь, портфель, нуль, коньки, рояль, рельс, культура, фасоль, медаль, контроль, культиваци, фельдшер, пельмень, ателье, модель.

## 28. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси

Сăмахсене вулăр, танлаштарăр. Хăшĕ вĕсенчен чăваш сăмахĕ, хăшĕ вырăс чĕлхинчен йышăнни пулнине калăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| *батон* | *гараж* | *дача* | *журнал* | *завод* |
| *патак* | *карăш* | *тачă* | *шурал* | *савăн* |

Сăмах пуçламăшĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ?

**[Б], [г], [д], [ж], [з]** — вырăс чĕлхин янăравлă хупă сассисем. Вĕсем вырăс чĕлхинче çеç тĕл пулаççĕ. Чăваш сăмахĕсенче ун пек сасăсем çук.

**Б, г, д, ж, з** сас паллисемпе кăтартакан сасăсем сăмах вĕçĕнче тата янăравсăр хупă сасă умĕнче янăравсăр илтĕнеççĕ: *багаж* [багаш], *клуб* [клуп], *газ* [гас], *доклад* [доклат].

**251.** Сăмахсене вулăр. Сăмах пуçламăшĕнчи тата вĕçĕнчи хупă сасăсене тĕрĕс калама хăнăхăр.

Завод, жираф, библиотека, зонтик, орден, музей, диван, булка, бензин, автомобиль, зоологи, клуб, общежити, билет.

- Сăмахсене алфавит йĕркипе çырса илĕр.

**252.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. *Б, г, д, ж, з* сас паллисем пĕлтерекен сасăсем хăш сăмахсенче янăраса, хăшĕсенче янăрамасăр илтĕннине калăр. Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

*Диктант*, агитатор, заметка, этажерка, звено, агроном, банк, *утюг*, герой, легенда, скобка, округ, бригада, комбайн, радио, магнитофон, съезд, *грипп*.

**253.** Кирлĕ сас паллисем лартса сăмахсене çырса илĕр. Икĕ сăмахне суйласа илĕр те предложенисем туса çырăр.

Эта..ерка, гру..овик, пара..раф, клу..ра, би..он, а..ажур, аккор..еон, про..рамма, теле..рамма, авто..ус, телеви..ор, гара..сăр, фа..рика.

**254.** Вулăр. Сăмах вĕçĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕннине калăр. Халĕ çав сăмахсем çумне камăнлăх падежĕн *-ăн(-ĕн)* аффиксне хушса каласа пăхăр. Вĕçĕнчи сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ?

Гараж, клуб, утюг, *завод*, заказ, доклад, универмаг, *герб*, стеллаж.

• Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

> **Б, г, д, ж, з** сас паллисемпе пĕтекен сăмахсем çумне уçă сасăпа пуçланакан аффикссем хушăнсан çав сас паллисемпе тӳр килекен сасăсем янăраса илтĕнеççĕ.

**255.** Сăмах диктанчĕ. Сăмахсене малтан тĕрĕс калама хăнăхăр, унтан вĕсене пăхмасăр çыра-çыра илĕр. Кайран тĕрĕслĕр.

1. Масштаб, универмаг, доклад, падеж, приз.
2. Абзац, банан, генерал, делегат, жилет, зоологи.
3. Массаж, шоколад, водолаз, микроб, куб, баскетбол, диалог.

**256.** Шупашкара экскурсие кайса килни çинчен сочинени çырăр. Унта çак сăмахсемпе усă курăр.

Автобус, троллейбус, фабрика, завод, кондуктор, банк, площадь, больница, библиотека, универмаг, залив, музей, фонтан, театр.

**257.** 255-мӗш, 256-мӗш хӑнӑхтарусенче панӑ сӑмахсене пӗрлештерсе алфавит йӗркипе ҫырса тухӑр. Сӑмахсене мӗнле ҫырмаллине астӑвӑр.

**258.** Тупмалли юмахсен тупсӑмӗсене тупӑр та ҫырса хурӑр. Мӗнле ҫырнине орфографи словарӗпе тӗрӗслӗр.

1. Тӑвата кӑлтӑркка, икӗ йӑлтӑркка, пӗр мӑрӑлкка. 2. Вӑрманта ӳсет, алӑра макӑрать, урайӗнче ташлатать. 3. Сарӑ тинӗсре карап ҫӳрет. 4. Уйра утсӑр урапа кусать. 5. Килсерен пӗртӑван ӑртиван. 6. Пӗр йӑвара виҫ ҫӗр утмӑл пилӗк кайӑк пур, кашни кун пӗр кайӑкӗ вӗҫсе каять.

**259.** Калава вулӑр. Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсене алфавит йӗркипе ҫырса илӗр, вӗсене мӗнле ҫырмаллине астуса юлӑр.

## Кӑсӑя

*Олегпа Валерик* иртенпех сарай хыҫӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Олег пиччӗшӗн *пилоткипе, гимнастеркипе.* Малтан вӗсем *кролик* валли апат хатӗрлерӗҫ. Унтан *помидор* калчисем ҫыхма йӑран ҫине патаксем лартса тухрӗҫ. Редиспа фасоль йӑранӗсене кӑпкалатрӗҫ.

Ҫав вӑхӑтра *сарай* ҫинчен кушак сиксе анчӗ[4]. Пӑхаҫҫӗ: кушак ҫӑварӗнче кӑсӑя. Олег кушака ачашласа алла илчӗ те ун ҫӑварӗнчен кӑсӑяна хуллен кӑларчӗ.

Олегпа Валерик кӑсӑяна сиплеме тытӑнчӗҫ: аманнӑ вырӑна йод тумлатрӗҫ, *маҫпа* сӗрчӗҫ, ҫунатне *бинтпа* ҫыхрӗҫ. Кӑсӑяна ҫимешкӗн тулӑ кӗрпи сапса пачӗҫ, пӗчӗк чашӑкпа шыв лартрӗҫ.

Кӑсӑя майӗпен хӑнӑхса пычӗ, ҫиме тытӑнчӗ. *(Г. Мальцев.)*

• Калав тӑрӑх изложени ҫырӑр.

## 29. Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсенче ф, ц, щ, ъ сас паллисене ҫырасси

Сӑмахсене вулӑр, сӑнӑр. Вӗсем чӑваш сӑмахӗсем-и?

| | | |
|---|---|---|
| *ферма* | *училище* | *съезд* |
| *жираф* | *центнер* | *щетка* |

Чăваш алфавитĕнче **ф, ц, щ, ъ** сас паллисем пур. Вĕсене вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче çеç çыраççĕ: *фабрика, кофта, жираф, цифра, циркуль, цистерна, процент, плащ, съезд, подъезд.*

Чăваш сăмахĕсенче **ф, ц, щ, ъ** сас паллисене çырмаççĕ, мĕншĕн тесен чăваш сăмахĕсенче ун пек сасăсем çук.

**260.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине астуса юлма тăрăшăр.

Концерт, рефлекс, цинк, сцена, щетка, подъезд, рацион, съезд, разъезд, цемент, плащ, цитата*.

- *Ф, ц, щ, ъ* сас паллиллĕ сăмахсене пĕрер суйласа илĕр те предложени туса çырăр.

**261.** Сăмахсене тĕрĕс вулăр. Алфавит йĕркипе çырса илĕр.

*Акаци*, патефон, реферат*, *магнитофон*, професси, процесс, иллюстраци, финн, электросварщик, фуфайка, *кофе*, кафе, газосварщик, фарфор.

- Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса калăр.
- Хăнăхтарури япала ячĕсемпе сăмах майлашăвĕсем тăвăр.

Тĕслĕх: *акаци — çамрăк акаци, çÿллĕ акаци, акаци йывăççĕ, акаци чечекĕ.*

**262.** Сăмах диктанчĕ.

1. Фигура, центнер, щетка, подъезд, параграф.
2. Абзац, финиш, съезд, цыган, гвардеец, фотограф, цитата.

**263.** Ÿкерчĕке тимлĕ сăнаса пăхăр. Унта ÿкернĕ япаласен ячĕсене каласа тухăр та вĕсене алфавит йĕркипе вырнаçтарса çырăр. Çав сăмахсем хушшинче вырăс чĕлхинчен йышăннисем пур-и? Вĕсене калăр.




• Маларах асăннă сăмахсене кĕртсе «Пирĕн стена хаçачĕ» ятлă калав çырăр.

**264.** Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах лартса предложенисене çырса илĕр. Сăмахсене мĕнле çырмаллине лайăх астуса юлăр.

1. Пушмаксене тасатрăм та ... хура крем сĕртĕм. 2. Ял çумĕнчи ... тĕрлĕ кайăк юрри янăрать. 3. ... шкул ачине яланах кирлĕ. 4. Манăн пичче ... ĕçлет. 5. Эпир ... усă курма пĕлетпĕр. 6. Фаина аппа сурăх ... ĕçлет, Федя пичче — пир-авăр ... . 7. Кирпĕч çурт купалама ... кирлĕ.

Кирлĕ сăмахсем: *ферма, циркуль, щетка, цемент, магнитофон, фотограф, комбинат, сад.*

**265.** Кам хăвăртрах? Панă сăмахсене çакăн пек суйласа ушкăнлăр:

а) хытă хупă сасăллисем;
ă) çемçе хупă сасăллисем;
б) янăравлă хупă сасăллисем;
в) янăраман хупă сасăллисем;
г) вырăс чĕлхинчен йышăннисем.

| |
|---|
| *ручка* |
| *кисть* |
| *костюм* |
| *жилет* |

Закон, çӳпçе, нăрă, *сăпса*, графин, çиччĕ, кашта, пакша, *глобус*, тĕттĕм, кашăк, фотограф, нӳрĕ, вăрман, ташă, кĕтес,

флята, ăшă, арман, *портфель*, варала, кофта, физкультура, *эмел*, отряд, тăхта.

- Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

## 30. Ударени (пусăм)

Сăмахсене вулăр. Сыпăксем çине уйăрăр.

| | | |
|---|---|---|
| *вăрман* | *кĕнеке* | *каю* |
| *лаша* | *япала* | *журнал* |
| *çĕмĕртлĕх* | *юман* | *станци* |

Хăш сыпăка вăйлăрах пусăмпа калаççĕ?

Сăмах сыпăкĕсенчен пĕрне вăйлăрах каланине **ударени (пусăм)** теççĕ. Тĕслĕхсем: *ти́мĕрçĕ, тăва́нлăх, пĕлтеру́*.

**266.** Сăмахсене вулăр. Хăш сыпăк çине ударени ӳкнине калăр.

1. Самана, пахча, çырмасем, килтисемпе, вăтăр, хĕрĕх.
2. Пĕлĕтлĕ, шĕшкĕлĕх, кăмăллă, тăрăшрăмăр.
3. Пулă, пулăçă, пулăçăсăр, патшалăх.
4. Пĕлтерӳ, пĕлĕтлĕрех.

Чăваш ударенийĕн йĕрки çакăн пек:

1. Сăмахра **[ă], [ĕ]** сасăсем çук пулсан ударени яланах юлашки сыпăк çине ӳкет: *калаçу́, миçе́, килелле́, пукане́.*

2. Сăмах сыпăкĕсенчи уçă сасăсем пурте **[ă], [ĕ]** пулсан ударени пĕрремĕш сыпăк çине ӳкет: *кĕ́мĕл, вắрăм, тắнăçлăх, пĕ́чĕкçĕ.*

3. Сăмах сыпăкĕсенче **[ă], [ĕ]** сасăсемпе пĕрле ытти уçă сасăсем те пулсан ударени ӳкесси çакăн пек:

а) ударени нихăçан та **[ă], [ĕ]** сасăллă сыпăк çине ӳкмест;

а) **[ă], [ĕ]** сасăсем юлашки сыпăкра мар чухне ударени юлашки сыпăк çине ӳкет: *пăтá, пăтасéм, вĕрéн, вĕренӳ́, кĕнекé, кăмакá;*

б) **[ă], [ĕ]** сасăсем юлашки сыпăкра е юлашки сыпăксенче пулсан ударени вĕсем умĕнчи сыпăк çине ӳкет: *пáттăр, пáттăрлăх, çи́рĕк, çи́рĕклĕх, саламлáрăм, ăнланáтпăр.*

**267.** Сăмахсене умлă-хыçлă вуласа пырăр. Ударени хăш сыпăк çине ӳкнине тимлĕ сăнăр, хăвăр шухăша пĕтĕмлетĕр те каласа парăр.

1. Лаша, лашасем, лашасемпе, лашасемпеле.
2. Çĕн, çĕнтер, çĕнтерӳ, çĕнтерӳпе, çĕнтерӳпеле.
3. Тус, туслă, туслăх, туслăхшăн.

**268.** Сăмахсене сыпăксем çине уйăрăр. Тĕрĕс ударенипе вулăр. Ударени хăш сыпăк çине ӳкнине калăр.

Илемлĕ, йăваш, йăрă, кăмăллă, кахал, лайăх, лутра, наян, маттур, мăнтăр, мухтавлă, пуян, пысăк, савăнăçлă.

- Панă сăмахсен ыйтăвне калăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?
- Кашни сăмах çумне япала ячĕ тупса сăмах майлашăвĕ тăвăр.

**269.** Сăмахсене вулăр. Ударени хăш сыпăк çине ӳкнине калăр.

Пахчаçă, çăмламас, пулăçăсемпе, куçлăх, савăнăç, савăнăçлă, мухтанчăк, çыракан, кăвакарать, кĕнекеллĕ, ылтăн, вăрманалла, хаçат, улмуççи, пĕлĕт.

**270.** Вулăр. Танлаштарăр. Ударени хăш сыпăк çине ӳкнине асăрхăр, каласа парăр.

Эпĕр, эпир, эсĕр, эсир, пăтă, пăта, пата, çăкăр, çакăр, çакар, *тăвăр, тавар, тавăр, тăвар*, сава, сăвă, сарă, сăрă, сăра, пурăн, пурăнăç, пурнăçла, пурнăçламалла.

- Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса калăр.

**271.** Сăмахсене вулăр, ударени хăш сыпăк çине ӳкнине палăртăр. Сăмахсен формине улăштарса ударени урăх сыпăк çине ӳкмелле тăвăр.

Тĕслĕх: *çĕн — çĕнтер, çĕнтерӳ, çĕнтерӳçĕ, çĕнтерӳçĕ-пеле, çĕнтерӳçĕсемшĕн.*

Лар, пĕл, вĕрен, сăвă, юман.

**272.** Сăмахсене вулăр, ударени палли лартса çырса илĕр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| лаша | вăрман | пĕлĕт | халăх |
| юман | сĕтел | çăкăр | кукăль |
| путене | кăвак | кĕмĕл | çеçпĕл |
| телей | хĕвел | тăлăп* | кӳлĕ |

• Çак сăмахсем çумне пару тата вырăн падежĕсен аффиксĕсене хушса каласа пăхăр. Ударени çаван пекех юлчĕ-и? Хăвăр шухăшăра пĕтĕмлетсе калăр.

**273.** Сăвва илемлĕ вулăр. Пăхмасăр калама вĕренĕр. Çырса илĕр, ударени палли лартса тухăр.

Пур тесе ан мухтан,
Çук тесе ан хурлан.
Пуçра сывлăх пулсан
Эс телейлĕ ялан.

*(В. Давыдов-Анатри.)*

**274.** Вулăр. Хăш сăмахра ударени пĕрремĕш сыпăк çине, хăшĕнче иккĕмĕш сыпăк çине ӳкнине калăр.

Ешĕл, кăвак, сарă, хура, симĕс, шурă, кĕрен, хăмăр, сенкер.

• Эсир мĕне пĕлтерекен сăмахсене вуларăр? Вĕсем хăш пуплев пайĕ пулаççĕ?

• Панă сăмахсем çумне икшер-виçшер япала ячĕ хушса çырса илĕр.

Тĕслĕх: *ешĕл калча, вăрман, çаран; кăвак чечек, кофта, кăранташ.*

**275.** Калава вулăр, ят парăр. Пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш сыпăксем çине ударени ÿкекен сăмахсене икшер тупăр та çырса илĕр.

Хĕрлĕ пĕсехеллĕ уйăпа тытасси çăмăл ĕç мар. Уйăп кил хушшине кĕмест, ытларах сад пахчинче пулать[4]. Хĕле юлнă пилеш çырлине тата-тата çиет. Шап-шурă таса юр çинче уйăпăн кăвар пекех çунса тăракан хĕп-хĕрлĕ пĕсехи калама çук илемлĕн курăнать. Шилеп! шилеп! шилеп! текелесе юрласа ларать-ларать те вăл пăр-р! вĕçсе каять, курса та юлаймастăн. Айван кайăк. Алăкăн-тĕпелĕн вĕçсе çÿрет. Кантăка пыра-пыра çапăнать. Çунакан кăмакана та кĕрсе каймa пултарать. *(Уйăп Мишши.)*

• Эсир уйăп курнă-и? Ун пирки мĕн те пулин хушса каласа пама пултаратăр-и?

• Калав содержанине хăвăр сăмахсемпе каласа парăр.

**276.** Хăш сăмахра пусăм пĕрремĕш сыпăк çине ÿкет?

Ăнсăртран, ĕмĕтсĕррĕн, хăватлăрах, вăйланнă.

## 31. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи ударени

**277.** Вулăр. Ударени хăш сыпăк çине ÿкнине калăр.

Пальто, костюм, кепка, галстук, свитер, куртка, майка, фуфайка, кофта, плащ, юбка.

• Çак сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать?
• Кашни сăмахпа пĕрер сăмах майлашăвĕ тăвăр.

Вырăс чĕлхинчен улăштармасăр йышăннă сăмахсен ударенийĕ вырăс чĕлхинчи пекех: *дневни́к, учи́тель, доска́, гло́бус.*

Унашкал сăмахсем çумне **-а(-е)** сасăллă аффикс хушăнсан ударени аффикс çине куçать: *магази́н — магазинта́, магазинсемпе́; фе́рма — фермăра́, фермăпа́, фермăсе́м, фермăсемпе́.*

Енчен те вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмах ҫумне **-ӑ(-ӗ)** сасӑллӑ аффикс хушӑнать пулсан ударени хӑй вырӑнӗнчех юлать: *га́лстук — га́лстуксӑр, га́лстукӑн, га́лстукшӑн* (анчах: *галстукпа́*); *авто́бус — авто́буссӑр, авто́бусшӑн* (анчах: *автобуспа́*).

**278.** Вулӑр. Кашни сӑмах ҫумне пӗрер аффикс хушса ҫырӑр. Ударени хӑй вырӑнӗнчех юлтӑр.

Тӗслӗх: *морфоло́ги — морфоло́гин* (е *морфоло́гисӗр*).

Морфологи, фонетика, лексика, синоним, антоним, синтаксис, алфавит, графика, грамматика.

Ҫакӑн йышши сӑмахсене **терминсем** теҫҫӗ. Кусем — чӗлхе ӑслӑлӑхӗн терминӗсем.

**279.** Сӑмахсем ҫумне аффикссем хушса ҫырӑр. Ударени аффикс ҫине ӳктӗр.

Тӗслӗх: *кино́ — кинора́, кинора́н.*

Кино, спектакль, театр, пьеса, драма, цирк, кинофильм, опера, балет, артист, артистка, музыка, рояль.

**280.** Сӑмахсене тӗрӗс вулӑр. Аффикссем хушса ҫырӑр, ударени палли лартӑр.

Портфель, линейка, циркуль, транспортир, ручка, пенал, дневник, тетрадь, журнал, сумка, фломастер.

• Ҫак сӑмахсене пӗтӗмлетсе мӗнле ят пама пулать? Ку ушкӑна тата мӗнле сӑмахсем кӗреҫҫӗ? Вӗсене хушса ҫырӑр.

**281.** Сӑмахсене алфавит йӗркипе ҫырӑр, ударени палли лартӑр. Кашни ушкӑна пӗтӗмлетсе мӗнле ят пама пулать?

1. Кит, акула, тюлень, морж, дельфин, рак, треска, карп.
2. Телевизор, утюг, магнитофон, этажерка, радиоприемник, термос, стакан, телефон, тумбочка, щетка, шифоньер.

**282.** Сăвва илемлĕ вулăр.

### Помидор

Çĕр аннен хăвачĕ пур:
Вĕççĕр-хĕрсĕр помидор
Ӳсрĕ пирĕн пахчара,
Чăмăркка та шултăра.
Хĕрлĕ, сарă, симĕс тĕс...
Гирляндăсем тейĕн çав.
Ир те, каç та уншăн эс
Сахал мар вăй хунă ав.
Çитеймен чух витамин
Терт-асап курать-мĕн çын.
Юрать-ха, пур помидор.
Унпала пач курмăн хур.



*(А. Юман.)*

• Ку сăвăра вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсем пур-и? Хăшĕсем? Вĕсенче ударени хăш сыпăк çине ӳкет?

• Эсир тата мĕнле пахча çимĕç ячĕсене пĕлетĕр? Вăл ятсен ретĕнче вырăс чĕлхинчен йышăннисем пур-и?

**283.** Сăмахсене тĕрĕс ударенипе вулăр. Аффикс хушса улăштарса пăхăр: ударени вырăнтах юлчĕ-и е аффикс çине куçрĕ?

Арбуз, дыня, кабачок, петрушка, помидор, редис, салат, томат, укроп, фасоль.

• Виçĕ сăмахĕпе сăмах майлашăвĕсем туса çырăр.

**284.** Сăмахсене вулăр, ударени хăш сыпăк çине ӳкнине калăр. Вĕсем çумне аффикссем хушăр, икĕ юпана вырнаçтарăр. Пĕрисем ударени хăй вырăнĕнчех юлакан тĕслĕхсене, теприсем ударени аффикс çинче пулаканнисене çырăр.

*Больница,* врач, фельдшер, аптека, хирург, укол, *сестра,* санитарка, шприц, грипп, витамин, рецепт.

• Паллă тунă сăмахсен аффикслă формисемпе предложенисем туса çырăр.

## 32. Сăмахри усă сасăсем тухса ӳкме пултарни

Сăмахсене вулăр, танлаштарăр. Мĕн асăрханине пĕтĕмлетсе каласа парăр.

*икĕ — ик* *нихăсан — нихсан*
*виçĕ — виç* *пултăран — пултран*
*вунă — вун* *савăнăç — савнăç*
*эпĕ — эп* *шултăра — шултра*
*çутă — çут* *пăрчăкан — пăрчкан*

Сăмахра мĕнле усă сасăсем тухса ӳкеççĕ? Вăл сасăсем хăш вырăнта тăраççĕ?

Хăш-пĕр чăваш сăмахĕсен варринчи е вĕçĕнчи **[ă]**, **[ĕ]** усă сасăсем тухса ӳкме пултараççĕ: *вĕлтĕрен — вĕлтрен, кантăра — кантра, пурăнăç — пурнăç, ватă — ват* (çын), *шурă — шур* (юр) т. ыт. те.

*Вĕлтĕрен, кантăра, ватă, шурă, пурăнăç, тимĕрçĕ* — сăмахсен тулли формисем.

*Вĕлтрен, кантра, ват, шур, пурнăç, тимĕрç* — сăмахсен кĕске формисем.

Сасă тухса ӳкнĕшĕн сăмах пĕлтерĕшĕ улшăнмасть.

Унашкал сăмахсене икĕ тĕрлĕ — тулли тата кĕске формăсенче — калама тата çырма юрать.

**285.** Сăмахсене вулăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине калăр. Сăмахсемпе юнашар вĕсен кĕске формисене, скобкăра пĕр-пĕр япала ятне çырăр.

Тĕслĕх: *сарă — сар* (*мăйăр*).

Сарă, шурă, çутă, ватă, вĕтĕ, хытă, йӳнĕ, мăнă.

**286.** Çак сăмахсемпе юнашар вĕсен тулли формисене çырăр.

Çывхар, *таврăн*, пултран, тахçан, нихçан, *савнăç*, пурнăç, пăрнăç, *янра*, *шултра*, пăрчкан, турчка, кантра, пулăç.

• Паллă тунă сăмахсен тулли формипе предложенисем туса çырăр.

**287.** [Ă], [ĕ] сасăсемпе пĕтекен сăмахсене вулăр. Вĕсенчен хăшĕ кĕске формăра пулма пултарнине калăр, вĕсене мăшăрласа çырса илĕр.

Тĕслĕх: *тимĕрçĕ — тимĕрç*.

Тимĕрçĕ, çыравçă, пулăçă, сăвăçă, суйлавçă, ватă, пăтă, икĕ, виçĕ, çичĕ, хытă, çакă, çавă, усă, ăслă, эпĕ, эсĕ, сăвă.

• Кашни сăмахпа пĕрер сăмах майлашăвĕ тăвăр.

**288.** Сăвва илемлĕ вулăр. [Ă], [ĕ] сасăсем тухса ӳкнĕ сăмахсене тупăр. Сăвăç мĕншĕн вĕсене кĕске формăра çырни пирки мĕн калама пултаратăр?

**Çĕнĕ çул уявĕ**

Епле лăс чăрăш хӳхĕм,
Епле хитре ун теттисем!
Çуса тăрать йĕпхӳ — хĕм —
Вут кайăк евĕр çутисем.
Чечек пек илĕртӳллĕ
Çут çăлтăр чăрăш тăрринче.
Ав йăпшăнать сар тилĕ,
Пакши сикет турат çинче.
Килсе кĕрет те вашаватлăн
Шур Хĕл Мучи туяпала
Пире хавассăн саламлать вăл,
Телей сунать Çĕнĕ çула.

*(Г. Юмарт.)*



**289.** Тупмалли юмахсене тантăшăрсене вуласа парăр, тупсăмне ыйтăр. Сăмахри [ă], [ĕ] сасăсем тухса ӳкнĕ тĕслĕхсене тупăр.

1. Хир варринче шур кĕтӳ çӳрет. 2. Сар ачи килет — сар хĕрĕ пытанать, сар хĕрĕ килет — сар ачи пытанать. 3. Пӳрте шур сурăх кĕртсе ятăм — пăхса тăрсах çухатрăм. 4. Мăн хуранăн пătти йӳçĕ. 5. Виç кĕтеслĕ пӳртĕм пур — тухса кĕме шăтăк çук. 6. Ай, хуп вите, хуп вите, хуп витере шăм вите, шăм витере çӳрен ут, çӳрен учĕ кĕçенет.

**290.** Ваттисен сӑмахӗсене вулӑр. [Ӑ], [ӗ] сасӑсем тухса ӳкнӗ сӑмахсене тупӑр. Вӗсене [ӑ], [ӗ] хушса каласа пӑхӑр. Уйрӑмлӑх пур-и?

1. Ват ҫын — тӑват ҫын. 2. Кахал ҫине виҫ кун малтан ҫумӑр ӳкнӗ. 3. Ыр сӑмах ылтӑнтан хаклӑ. 4. Ыр ӗҫӗн хакӗ пысӑк. 5. Пуш пичке туллинчен хытӑрах янрать.

**Фонетика тишкерӗвӗ**

1. Сӑмаха сыпӑксем ҫине уйӑрмалла: *юман* [йу-ман].
2. Ударенине кӑтартмалла: *юма́н.*
3. Сӑмахра миҫе сасӑ тата сас палли? 5 сасӑ, 4 сас палли.
4. Уҫӑ сасӑсене палӑртмалла, вӗсем мӗнле сасӑсем пулнине каламалла: [у], [а]; [у] — хытӑ уҫӑ сасӑ, [а] — хытӑ уҫӑ сасӑ.
5. Хупӑ сасӑсене палӑртмалла, вӗсем мӗнле сасӑ пулнине каламалла: [й], [м], [н]; [й] — ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑ, [м] — ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑ, [н] — ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑ.
6. Сас паллисен ячӗсене каласа тухмалла: «йӑ», «у», «мӑ», «а», «нӑ».
7. Сасӑсемпе сас паллисен шучӗ тан мар пулсан ӑна ӑнлантарса памалла: *юман* [йуман] сӑмахра «ю» сас палли икӗ сасса [йу] пӗлтерет, ҫавӑнпа сасӑсемпе сас паллисен шучӗ сӑмахра пӗрешкел мар.

**291.** Сӑмахсене вулӑр. Кашни сӑмахра миҫе сасӑ тата сас палли пулнине калӑр. Сасӑсемпе сас паллисен шучӗ пӗрешкел мар пулсан ӑна ӑнлантарса парӑр.

Ял, ҫӗнӗ, хӑю, выльӑх, кӗпер.

**292.** Сӑвва илемлӗ вулӑр.

Тӑван[1] ҫӗршыва суйламаҫҫӗ —
Такамшӑн та вӑл пӗрре.
Тӑван ҫӗршыва пайламаҫҫӗ —
Вӑл ӗмӗрлӗх[1] чӗрере.

*(Ю. Айташ.)*

## 33. Сасăсен ылмашăвĕ

Панă сăмахсене вулăр та 3-мĕш сăпат форминче калăр.

*хут — унăн ...* *чăкăт — асанне ...*
*билет — театр ...* *вăхăт — каникул ...*
*халат — тухтăр ...* *ответ — вĕренекен ...*

Мĕн асăрхарăр? Шухăшăра пĕтĕмлетĕр, каласа парăр.

Чăваш чĕлхинче **[т], [т'], [д], [д']** сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен 3-мĕш сăпат форминче асăннă сасăсем **[ч]** сасăпа ылмашăнаççĕ. Тĕслĕхрен: *хут — хучĕ, тетрадь — тетрачĕ, сад — сачĕ, кравать — кравачĕ, космонавт — космонавчĕ, специалист — специалисчĕ.*

**293.** Çак япала ячĕсене 3-мĕш сăпат форминче калăр, мĕнле улшăну пулнине ăнлантарăр.

Тетрадь, площадь, предмет, букет, кĕлет, саламат, ĕмĕт.

**294.** Çак сăмахсене 3-мĕш сăпат формине лартса предложенисем туса çырăр.

Йĕкĕт, пĕлĕт, автомат, студент, сехет, пичет, самолет, артист, финансист, фигурист.

## 34. Чăваш чĕлхинчи сасăсемпе вырăс чĕлхинчи сасăсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсем

**295.** Чăваш алфавичĕпе вырăс алфавитне танлаштарăр. Вĕсенче миçешер сас палли?

| | |
|---|---|
| Аа Ăă Бб Вв Гг Дд Ее Ёё Ĕĕ Жж Зз Ии Йй Кк Лл Мм Нн Оо Пп Рр Сс Çç Тт Уу Ӳӳ Фф Хх Цц Чч Шш Щщ ъ Ыы ь Ээ Юю Яя | Аа Бб Вв Гг Дд Ее Ёё Жж Зз Ии Йй Кк Лл Мм Нн Оо Пп Рр Сс Тт Уу Фф Хх Цц Чч Шш Щщ ъ Ыы ь Ээ Юю Яя |

• Алфавитсенче мӗнле уйрӑмлӑхсем пур? Вырӑс алфавитӗнче мӗнле сас паллисем ҫук?

• Алфавитсенчи хӑш сас паллисем сасӑсене пӗлтермеҫҫӗ?

• Мӗнле сас паллисем икӗ сасса пӗлтереҫҫӗ?

Чӑваш ҫырӑвне вырӑс алфавитне тӗпе хурса йӗркеленӗ, ҫавӑнпа сас паллисем тата вӗсен йӗрки, тӗпрен илсен, пӗр пек.

Чӑваш алфавитӗнче вырӑс чӗлхинчипе танлаштарсан 4 сас палли ытларах **(ӑ, ӗ, ҫ, ӳ)**. Вӗсем чӑваш чӗлхинче ҫеҫ тӗл пулакан сасӑсене пӗлтереҫҫӗ.

## Уҫӑ сасӑсем

Чӑваш чӗлхинче 9 уҫӑ сасӑ, вырӑс чӗлхинче — 6. Тӗпрен илсен, чӑваш чӗлхинчи уҫӑ сасӑсемпе вырӑс чӗлхинчисем пӗрешкел илтӗнеҫҫӗ. Танлаштарӑр:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| *чӑв.* | пар | пур | пыр | тир | мел |
| *выр.* | бар | бур | бык | тир | мел |

**[Ӳ]** уҫӑ сасӑ — **[у]** сассӑн ҫемҫе вариантӗ (танл.: *кулӑ — кӳлӗ, пур — пӳр*), вӑл вырӑс чӗлхинче ҫук.

**[Ӑ], [ӗ]** уҫӑ сасӑсем — чӑваш чӗлхинче анлӑ сарӑлнӑ сасӑсем. Вӗсем сӑмахра тӗрлӗ вырӑнта тӗл пулаҫҫӗ:

а) сӑмах пуҫламӑшӗнче — *ӑман, ӗлӗк, ӗнер, ӑшӑх;*

ӑ) сӑмах варринче — *пӑру, пӗлӗт, сурӑх, ҫӗмӗрт;*

б) сӑмах вӗҫӗнче — *тулӑ, кӳлӗ, шурӑ, ҫӗнӗ.*

**[Ӑ], [ӗ]** евӗрлӗрех сасӑсем вырӑс чӗлхинче те пур, анчах та вӗсене ҫырура палӑртмаҫҫӗ. Унашкал сасӑсем вырӑс сӑмахӗн ударени ӳкмен сыпӑкӗнче тӗл пулаҫҫӗ: *по́ле* [полӗ], *мо́да* [модӑ], *ве́чер* [веччӗр], *па́рта* [парттӑ].

Чӑваш сӑмахӗсенче **[ӑ], [ӗ]** сасӑллӑ сыпӑк ҫине ударени ӳкме пултарать. Тӗслӗхрен: *вӑтӑр, хӗрӗх, пӗлӗт.*

Унашкалли вырӑс чӗлхинче пулмасть.

**296.** Сăмахсене вулăр, вĕсенчи сасăсем мĕнле илтĕннине сăнăр. Сăмахри сасăсем мĕн енчен килĕшсе тăнине пĕтĕмлетсе каласа парăр.

Пилеш, палан, кăçал, пĕлтĕр, ыран, виçмине, саккăр, хĕрĕх, пĕрене, пиçиххи, правур, пурнăç, сывлăх, арман, тилĕ.

> **Аса илĕр!**
>
> Чăваш чĕлхинче уçă сасăсем сăмахра хытăлăхпа çемçелĕх енчен килĕшсе тăраççĕ: *вăрман, самана, тăххăр* (хытă сăмахсем); *ĕлĕк, çимĕç, вĕрене* (çемçе сăмахсем).
>
> Вырăс чĕлхинче ун пек килĕшӳ çук: *письмо, смелый.*

## Хупă сасăсем

> Чăваш чĕлхинчи хупă сасăсен йĕркинче вырăс чĕлхинчипе танлаштарсан уйрăмлăхсем пур.
>
> 1. Чăваш чĕлхинче çемçе уçă сасă хăй умĕнче тата хыçĕнче тăракан хупă сасăсене çемçетет: *хĕл* [х’ĕл’], *çĕмĕрт* [çĕм’ĕр’т’], *тир* [т’ир’].
>
> Вырăс чĕлхинче çемçе уçă сасă умĕнчи хупă сасса çеç çемçетет, хыçĕнчине çемçетмест. Т а н л а ш т а р ă р:
>
> | | | | | | |
> |---|---|---|---|---|---|
> | *чăв.* | [т’ир’] | [п’ĕл’ет’] | [п’ир’] | [п’ер’] | [м’ел’] |
> | *выр.* | [т’ир] | [бил’ет] | [п’ир] | [п’еро] | [м’ел] |
>
> 2. Чăваш чĕлхинче сăмах варринчи хупă сасăсем янăраса илтĕнме пултараççĕ, вырăс чĕлхинче ун пек мар:
>
> *чăв.* акать [агат’], касу [казу], сутă [судă],
> *выр.* вика [виккă], лампа [ламппă], машина [машшинă].

**297.** Вулăр. Сăвăра хăш чĕлхесем çинчен каланă?

### Икĕ чĕлхе

Вырăсла та калаçар,
Чăвашла та сăмахлар.
Иккĕшĕ те халь вĕсем
Питĕ туслă чĕлхесем.

*(Н. Ытарай.)*

• Сăвăра синоним сăмахсем пур. Хăшĕсем-ши вĕсем? Çав сăмахсен ытти синонимĕсене пĕлетĕр-и?

• Сăвăçă асăннă чĕлхесем Чăваш Республикинче закон енчен мĕнле чĕлхесем шутланаççĕ?

## 35. Чăваш ударенийĕпе вырăс ударенийĕ

Сăмахсене вулăр. Ударенисене танлаштарăр.

| чăв. | выр. |
|---|---|
| *агроно́м* | *агроно́м* |
| *алфави́т* | *алфави́т* |
| *а́дрес* | *а́дрес* |
| *маши́на* | *маши́на* |
| *учи́тель* | *учи́тель* |
| *радиоприёмник* | *радиоприёмник* |

Сăмахсене нумайлă хисеп форминче çырăр, ударени палли лартăр. Ударени улшăннипе улшăнманнине каласа парăр.

Тĕслĕх: *агрономсе́м — агроно́мы.*

Вырăс сăмахĕсен ударени йĕрки ирĕклĕ: вăл сăмахăн кирек хăш сыпăкĕ çине те ӳкме пултарать. Тĕслĕхрен: *при́стань, зао́чник, рулево́й, меда́ль.*

Сăмахăн тĕрлĕ форминче ударени куçса çӳрет. Танлаштарăр: *лю́ди, люде́й, людьми́; учи́тель, учителя́, учителе́й.*

Вырăс чĕлхинче вариантлă ударениллĕ сăмахсем те пур: *тво́рог — творо́г; ба́ржа — баржа́; каза́ки — казаки́* т. ыт. те.

**298.** Вулăр. Тĕрĕс ударенипе калама хăнăхăр.

Абзац, абрикос, автономи, асфальт, актер, ансамбль, апельсин, азбука, а́тлас — атла́с.

Баклажан, бакалея, банан, барометр, бассейн, бетон, ботаника, буфет, буфетчица, бюллетень.

**299.** Сăмахсем çумне *-ăн(-ĕн), -а(-е), -сем* аффикссем хушса вулăр.

Историк, агроном, бригадир, доярка, вожатăй, дневник, вагон, ванна, директор, диктант, профессор.

- Аффикссем хушăнсан ударени йĕрки улшăнать-и? Каласа парăр.

**300.** Сăмахсене вулăр. Ударени палли лартса çырса илĕр.

Сказуемăй, сказуемăйпа, сказуемăйсăр; больница, больницăн, больницăпа, больницăсем; станци, станцире, станцишĕн, станцисем; театр, театра, театрсем, театрсăр; падеж, (камăнлăх) падежĕ, (вырăн) падежĕнче.

**301.** Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса çырăр. Ударени палли лартăр. Ударени сăмахăн пуçламăш форминче тата аффикс йышăннинче пĕрешкелех-и?

1. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ... теççĕ.
2. Çывăх е пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ... теççĕ.
3. Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсене ... теççĕ.
4. Пирĕн пуплев ... тăрать. Предложени вĕçленнĕ уйрăм шухăша пĕлтерет.
5. Япала ячĕсем ... тăрăх улшăннине япала ячĕсен вĕçленĕвĕ теççĕ.
6. Пĕр йышши членсем пĕр-пĕринпе ... çыхăнса тăма пултараççĕ.
7. *Анчах, çапах* ... умĕн яланах ... лартаççĕ.

Кирлĕ сăмахсен пуçламăш формисем: *глагол, синоним, падеж, антоним, запятой, предложени, союз.*

# ХĂВĂР ПĔЛĔВĔРЕ ТĔРĔСЛĔР

**I. Ыйтусене хуравлăр.**

1. Фонетика мĕне тишкерсе тĕпчет?
2. Сасăсене миçе ушкăна уйăраççĕ?
3. Уçă сасăсем мĕнлисем пулаççĕ?
4. Хупă сасăсем мĕнлисем пулаççĕ?
5. Мĕн вăл сингармонизм?
6. *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ,* ъ сас паллисене мĕнле сăмахсенче çыраççĕ?

**II. Предложенисене çырса пĕтерĕр (е вĕçлĕр).**

1. Фонетика ... тишкерсе тĕпчет.
2. Сасăсене ... ушкăна уйăраççĕ.
3. Уçă сасăсем икĕ ушкăна уйăлаççĕ: ... .
4. Хупă сасăсен ушкăнĕсем: ... .
5. Сингармонизм вăл — ... .
6. *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ,* ъ сас паллисене ... сăмахсенче çыраççĕ.

**III. Тест ыйтăвĕсене хуравлăр.**

**1.** Хăш ушкăнра йăнăш çырнă сăмах пур?

а) Депон, извеçрен, училищĕрен;
ă) станцинче, классран, музыкăна;
б) машинăсем, кофĕпе, партире;
в) учительте, словарьсем, тетрадьлĕ.

**2.** Хăш ушкăнри сăмахсенче пĕтĕмпех *ы* çырмалла?

а) Ç..вăх, ç..лĕм, ч..лай;
ă) ч..шкă, ç..рла, ç..рлахтар;
б) ç..ру, ç..ччĕ, краçç..н;
в) ч..слă, ч..пер, ч..кан.

# ЛЕКСИКА

Вăхăт çитсессĕн калама тесе
Сăмахсене ачашласа усратăп.

*Петĕр Эйзин*

## 36. Лексика çинчен ăнлантарни. Сăмах пĕлтерĕшĕ

Схемăпа текст çине таянса лексика науки çинчен мĕн пĕлнине каласа парăр. Сăмах çыннăн пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнать?

Хальччен илнĕ пĕлӳ çине таянса сăмахсен ушкăнĕсене (хăвăр тĕслĕхсем тупма пултарнă çĕрте) тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

| Сăмахсен ушкăнĕсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Пĕлтерĕшне кура | Мĕнле пулса кайнине кура | Пĕлтерĕш тăрăх çыхăннине кура | Усă курни тăрăх | | |
| | | | Тĕрлĕ ушкăнри çынсем | Тĕрлĕ стильре | Тĕрлĕ истори тапхăрĕнче |
| • пĕр пĕлтерĕшлĕ | • тĕп чăваш сăмахĕсем | • синонимсем | • пурте усă куракannisem | • каласу | • активлă усă куракан сăмахсем<br>• çĕнĕ сăмахсем |
| • нумай пĕлтерĕшлĕ | • йышăннă сăмахсем | • антонимсем<br>• омонимсем | • пурте усă курманнисем | • кĕнеке | • манăçа тухнă, кивелнĕ сăмахсем |

*Сăмахсем, сăмахсем, сăмахсем...* Чĕлхен тĕп пуянлăхĕ, илемĕ — сăмах тĕнчи. Сăмахĕ вара пит нумай — никам ăс-тăнĕ те пурне астуса çитерес çук. Пире ку тĕлĕшĕпе пулăшакансем, уççи-хуппине тупма май паракансем — сăмах кĕнекисем, словарьсем.

Сăмахăмăр! Мĕн кăна тумастпăр эпир унпа! *Сăмаха ил, сăмах кала, сăмах пар, сăмах ту, сăмах çавăр, сăмах туп, сăмах хускат, сăмах хуш, сăмах чĕн* пеккисем кăна мар, *сăмах вакла, сăмах вăрла, сăмах вылят, сăмах çап, сăмах çине тăр, сăмах тат* тенисем те пур-çке-ха! Ку çеç-и: *сăмаха тата вăлтаççĕ, çилпе вĕçтереççĕ, çăтаççĕ, тăсаççĕ, шутараççĕ...* Тепĕр тесен, сăмахĕ хăй те пирĕнпе тем те тума пултарать: *хăтăрать те, хĕтĕртет те, хăтарать те, йĕртет те, култарать те, амантать те, сыватать те*[4]. Çынна путарма та çĕклеме те пултарать. Çавăн пек кăткăс хутшăнусем пирĕн унпа. Вăл тата хăйне хакламаннине юратмасть: уйрăм çын-и, халăх-и — пурне те вырăна лартать. Майне пĕлсен вара (асамçă тейĕн!) темле алăка та уçать, такам кăмăлне те çавăрать. Пăрланнă чĕрене *ирĕлтерет*, чĕре суранне *сиплет* ... . *(Ю. Исаев, Г. Дегтярев.)*

Кирек мĕнле чĕлхере те сăмах йышĕ питĕ пысăк. Чĕлхере усă куракан сăмахсен шутне пĕлсе çитерме те май çук, мĕншĕн тесен вăл пĕрмаях улшăнса тăрать. Вăхăт иртнĕ май кивĕ сăмахсем чĕлхерен тухса ӳкеççĕ, çĕннисем кĕрсе пыраççĕ. Чĕлхери сăмах йышĕ мĕн чухлĕ пулнине словарьсем тăрăх пĕлме пулать пек, анчах та ку таранччен сăмах хисепне тĕп-тĕрĕс кăтартакан словарь нихăш халăхăн та пулман-ха. Н.И. Ашмарин пухса хатĕрленĕ 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» 45 пин сăмаха яхăн пулнине палăртаççĕ пулин те чăваш чĕлхинче шăп та шай çавăн чухлĕ сăмах тесе шантарса калама пултараймастпăр, мĕншĕн тесен чĕлхери сăмахсен йышĕ вĕçĕмсĕр аталанса, пуянланса пырать.

Чӗлхери мӗнпур сӑмах йышне **лексика** теҫҫӗ.

**Сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшӗ** — сӑмахӑн содержанийӗ, урӑхла каласан, сӑмах пурнӑҫри пӗр-пӗр япалана, пулӑма пӗлтерни. Тӗслӗхрен: сӑмах пӗр-пӗр япалана (*сӗтел, юман* т. ыт. те), пулӑма (*ҫумӑр, аслати* т. ыт. те) пӗлтерет, вӗсен паллине (*ҫавракa, лаштра, сивӗ, ҫӗрлехи* т. ыт. те), ӗҫне (*ӳсет, ҫӑвать* т. ыт. те), виҫине (*иккӗ, ҫиччӗ* т. ыт. те) палӑртма пулӑшать.

**Лексика** — грек чӗлхинче *lexis* «сӑмах», «сӑмахлӑ» тенине пӗлтерет

Кашни сӑмахӑн хӑйӗн пӗлтерӗшӗ пур. Тӗслӗхрен, *шкул* сӑмаха илер. Шкул тесе тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ вӗренӳ заведенийӗсене калаҫҫӗ: *пуҫламӑш шкул, аслӑ шкул, пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкул.* Ҫакӑ *шкул* сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшӗ пулать. Калаҫнӑ е ҫырнӑ чух сӑмахсемпе тӗрӗс усӑ курас тесен вӗсен пӗлтерӗшне лайӑх пӗлмелле.

**302.** Пӗлтерӗшӗсем тӑрӑх сӑмахсене тӗрӗс тупӑр та шут хисепӗ тӗлне тивекен сас паллисене криптограммӑна ҫырса тухӑр. Ӗҫе икшерӗн пурнӑҫлӑр: пӗри — пӗрремӗшпе иккӗмӗш ыйтусене, тепри виҫҫӗмӗш ыйтӑва хуравлӑр. Ҫакӑн хыҫҫӑн тетрадьсене пӗр-пӗринпе ылмаштарӑр та хуравсене тӗрӗслӗр. Юлашкинчен криптограммӑра спорт ҫинчен мӗн ҫырнине шыраса тупӑр. Кам маларах тупма пултарчӗ?



**I.** 1, 2, 3, 4, 5, 4 — тыр-пул.

**II.** 11, 14, 7, 13, 8 — тутлӑ апат-ҫимӗҫ.

**III.** 6, 14, 12 — М.Ю. Лермонтов ҫырнӑ сӑвӑ.

**303.** «Чӑвашла-вырӑсла словарьти» (704-мӗш с.) ӳкерчӗксене пӑхӑр. Паянхи кун ҫак япаласемпе усӑ курнине, вӗсен ячӗсене мӗнле палӑртнине, калаҫура усӑ курни енчен тишкерсе ӑнлантарӑр.

Сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕсене ăнлантару е куçару словарĕсенче тупма пулать.

Ăнлантармалли е куçармалли сăмахсене словарьте хура шрифтпа пичетлеççĕ, алфавит йĕркипе вырнаçтараççĕ, кашни сăмаха уйрăм статьяра çырса параççĕ. Ун хыççăн лексика пĕлтерĕшне е вырăсла куçарнине çырса ăнлантараççĕ. Тĕслĕхрен, *Кукка костюм туянчĕ* предложенири сăмахсем çаксене пĕлтереççĕ:

**кукка** аннен пиччĕшĕ е шăллĕ; анне енчи ар тăвана калаççĕ;

**костюм** çие тăхăнмалли çăмăл тумтир;

**туянчĕ** укçа тӳлесе илчĕ.

Куçару словарĕнче вара çакăн пек çырса ăнлантараççĕ:

**туян** покупать, приобретать; **укçалла туянчĕ** приобрести за деньги; **туянса тултар** понакупить (*много всякого товара*); **туянса хур** купить впрок, заранее.

**304.** *Ăрша, вашават, евитле, ентеш* сăмахсем мĕне пĕлтереççĕ? Вĕсен лексика пĕлтерĕшне словарьпе усă курса ăнлантарăр.

**305.** Çут çанталăка сăнăр. Сывлăша, пĕлĕте сăнланă чух усă курма юрăхлă 4 сăмах майлашăвĕ тупса çырăр. Сăмах майлашăвĕсенчи ăнлантару сăмахĕсен лексикăпа грамматика пĕлтерĕшĕсене уçса парăр, вĕсене çак схемăпа йĕркелĕр: 1) «паллă ячĕ + япала ячĕ», 2) «япала ячĕ + япала ячĕ».

Тĕслĕх: *уçă сывлăш, сывлăш юхăмĕсем.*

**Уçă** — лексика пĕлтерĕшĕ: 1. открытый, раскрытый; **уçă алăк** открытая дверь 2. отпертый, незапертый; **çăра уçă** замок отперт 3. открытый, свободный; **çул уçă** дорога свободна 4. просторный, широкий; **уçă пӳлĕм** 1) открытая, незапертая комната 2) просторная комната... 11. свежий, прохладный; чистый; **уçă сывлăш** свежий воздух; **паян тулта кăшт уçăрах** на дворе сегодня немного свежо...

**Уçă** — грамматика пĕлтерĕшĕ: япалан, паллăн, ĕçĕн паллине пĕлтерет, паллă ячĕ, тĕп степеньре.

Чӗлхе вӗрентӗвӗнче сӑмахӑн лексика, грамматика тата сӑмахпа ӑҫта усӑ курнине пула стилистика пӗлтерӗшӗсем пуррине те палӑртаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, япала ячӗн хисепне, падежне, сӑпатне; глаголӑн вӑхӑтне, сӑпатне, хисепне палӑртма пулать. Акӑ *шкул, шкулсем, шкулӑн, шкултан, шкулпа, шкулсӑр, шкулшӑн* сӑмахсене илер. Вӗсен лексика пӗлтерӗшӗ пӗрре: шкул. Ҫак сӑмахӑн тӗрлӗ формисем пӗр-пӗринчен грамматика пӗлтерӗшӗпе — тӗрлӗ падежра тата тӗрлӗ хисепре пулнипе — уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Урӑхла каласан, ку тӗслӗхсенче падежпа нумайлӑ хисеп аффиксӗсем сӑмахӑн пӗлтерӗшне улӑштармаҫҫӗ, вӗсем унӑн грамматика пӗлтерӗшне тӑвакан паллӑсем ҫеҫ.

Кашни сӑмахӑн хӑйӗн стиль уйрӑмлӑхӗ пур: *калаҫ — ӑнлантар, ҫирӗплет, ӗнентер; сӑмахла, пупле, юмахла; пакӑлтат, лӗпӗртет, перкелеш, ҫавӑрса хур* т. ыт. те.

Сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшне тӗрлӗрен ӑнлантарма пулать: 1) ҫывӑх ӑнлава пӗлтерекен сӑмахсемпе: *эксперимент* — опыт — сӑнав, *терт* — асап — хӗн; 2) вӑл пӗлтерекен япалан паллӑрах енӗсене кӑтартса сӑнласа панипе: *ҫуйӑн* — пулӑ, *астра* — чечек, *«Астра»* — кӗпе ҫумалли порошок; 3) пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсемпе усӑ курса: *тӑванлӑх* — «тӑван», *ентешлӗх* — «ентеш» сӑмахсенчен пулнӑ. *-Лӑх(-лӗх)* аффикссем вара ҫав япалан ушкӑнне палӑртма пулӑшаҫҫӗ; 4) сӑмахсен пӗлтерӗшне шута илсе (кун пек мелпе урӑх чӗлхерен йышӑннӑ сӑмахсен пӗлтерӗшне кӑтартнӑ чух усӑ кураҫҫӗ): *орфографи* (орфо — «тӗрӗс», графо — «ҫыратӑп» сӑмахсене пӗлтерет) — чӗлхе наукин тӗрӗс ҫырма вӗрентекен пайӗ, *телевизор* (теле — «аякра», визио — «курни») — аякрине курни.

Сӑмахӑн пӗлтерӗшӗпе пӗлсе те выранлӑ усӑ курни ҫеҫ пуплеве сӑнарлӑ та илемлӗ, ӑнланмалла тӑвать.

**306.** Панӑ сӑмахсен лексика пӗлтерӗшӗсене ҫак схемӑпа килӗшӳллӗ ҫырса ӑнлантарӑр.

1. Ҫывӑх ӑнлава пӗлтерекен сӑмахсемпе: йӑмшак, ӑшӑ, сахал, пӗрремӗш, терт, контракт.

2. Вӑл пӗлтерекен япалан паллӑрах енӗсене кӑтартса сӑнласа панипе: ҫӗкӗ, пӗрлӗхен, кӑшӑл, тухья.

3. Пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсемпе усӑ курса: тӑванлӑх, юманлӑх, хӑватлӑх, пуҫлӑ.

4. Сӑмахсен пӗлтерӗшне шута илсе: телефон, лексика, телеграф, телескоп.

**307.** Лексика пӗлтерӗшӗ тӑрӑх сӑмахсене тупӑр. Ҫав сӑмахсемпе пӗрер предложени ҫырӑр.

1. Шӑллӑм арӑмӗ. 2. Йӑмӑк упӑшки. 3. Хуньӑм хӗрӗ. 4. Анне пиччӗшӗпе шӑллӗ. 5. Тӑван аппа упӑшки. 6. Упӑшка ашшӗ. 7. Упӑшка йӑмӑкӗ. 8. Арӑм аппӑшӗ. 9. Арӑм пиччӗшӗ. 10. Арӑм аппӑшӗн, йӑмӑкӗн упӑшки. 11. Хӑйма уҫласа тунӑ ҫимӗҫ. 12. Сӗтпе ҫӑмартаран пӗҫерсе тунӑ ҫимӗҫ. 13. Чи пысӑк ҫырла.

**308.** Текста ят парӑр. Унӑн планне йӗркелӗр. Текст тӗсне палӑртӑр, ӑна мӗнле стильпе ҫырнине калӑр. Паллӑ тунӑ сӑмахсен лексикӑпа грамматика пӗлтерӗшне ӑнлантарӑр.

Пӗр йӗрпе туртнӑ сӑмахсене ҫывӑх ӑнлава пӗлтерекен сӑмахсемпе улӑштарса предложенисем йӗркелесе пӑхӑр. Предложенисен шухӑшӗ улшӑннипе улшӑнманнине ӑнлантарӑр.

Астӑватӑп-ха, ешӗл ҫулҫисене ачаш ҫилпе шӗпӗртеттерсе кӳршӗсен *лупас** ҫывӑхӗнче ӳсетчӗ вӑл. Ҫӳллӗччӗ, илемлӗччӗ. Лапсӑркка тураттисем[1] ҫӗре ҫитиех усӑнатчӗҫ.

Эпир, хур чӗпписем сыхлама тухнӑ вӗт-шакӑр, час-часах выляттӑмӑр ват йывӑҫ айӗнче. Янкӑр тӑрӑ *ҫанталӑкра* хӗртсе пӑхакан хӗвел пайӑрки-сӑннисенчен, йӗпе-сапара ҫапса ҫӑвакан ҫумӑр лӳшкемӗнчен хӳтӗленеттӗмӗр.

Кам лартнӑ-ши ӑна, кӳршӗсен хӳми ҫумӗнчех лӑстӑртатса ӳсекен ҫав лапсӑркка хурӑна? Яланах тӗксӗм ҫӳрекен

çиллес Çтаппан ашшĕ-ши е ун аслашшĕ-ши? Кирек кам пулсан та тăтăшах ырăпа асăнаттăмăр эпир çав çынна. Курăрха: хăй хыççăн еплерех чаплă палăк хăварнă! *(Л. Маяксем.)*

• **Текстри сасăсен шучĕ сас паллисен шутĕнчен нумайрах сăмахсене пĕр йĕркене, сасăсенчен сас паллисем нумайраххисене тепĕр йĕркене çырса илĕр.**

**309.** **Панă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уçса парăр, вырăсла куçарăр. Икĕ чĕлхе хушшинче мĕнле уйрăмлăх пуррине ăнлантарăр.**

Куç шăрçи, пуç муклашки, куç харши, куç тĕкĕ, хăрпăкĕ, куç тухтăрĕ, сăмса вĕçĕ, сăмса кăкĕ, çиййĕ, тĕпĕ, юха сăмса, куç хĕс, куç тăртанса кайнă, куç шуррипе пăхса ил, куçа чарса пăрах, куç виçи, куç ултавĕ, сăмса çунатти.

## 37. Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем

Ӳкерчĕксене сăнăр. Вĕсем пĕр-пĕринпе мĕн енчен çывăх? Панă тĕслĕхсем хăш ӳкерчĕксемпе тӳр килнине палăртăр, *çунат* сăмахăн пĕлтерĕшĕсем аталанса кайнин йĕркине ăнлантарăр.







лĕпĕш çуначĕ самолет çунатти арман çунатти

*Çунат* сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ татах та пур пулсан тупса палăртăр. Сăмахăн лексика пĕлтерĕшне ăçтан тупса пĕлме пулать?

Чăваш сăмахĕсем, ытти чĕлхесенчи пекех, пĕр пĕлтерĕшлĕ те, нумай пĕлтерĕшлĕ те пулма пултараççĕ. Хăшпĕр сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлĕ кăна пулаççĕ. Тĕслĕхрен, *çӳç* сăмахăн пĕр пĕлтерĕш çеç — вăл этем пуçĕ çинче ӳсекен ăпалана пĕлтерет.

Сăмахсен ытларах пайĕ нумай пĕлтерĕшлĕ. Сăмахпа литература чĕлхинче нумай вăхăт хушши усă кураççĕ пулсан унăн çĕнĕ пĕлтерĕшĕсем аталанса каяççĕ. Акă *куç* сăмаха илсе пăхар:

*1. Куçа çӳп кĕчĕ. 2. Кантăкăн пĕр куçĕ ваннă. 3. Йĕп куçĕ ытла та пĕчĕк. 4. Эпĕ кăвакарчăн куçне питĕ юрататăп.*

Çак тăватă тĕслĕхре *куç* сăмахăн пĕлтерĕшĕ кашни предложенире тĕрлĕрен. Пĕрремĕш предложенире вăл анатоми терминĕ — этем ӳт-пĕвĕн пайне, иккĕмĕш предложенире чӳрече кантăкĕн уйрăм лаптăкне кăтартать, виççĕмĕш тĕслĕхре çĕлемелли йĕпĕн çип тирмелли унки, тăваттăмĕш предложенире вара ботаника терминĕ — чечек ячĕ пулать.

**310.** Тупсăмне тупăр. Сăмахăн пĕлтерĕшне мĕнле майпа уçса панă? Ăнлантарăр.

1. Ку виçепе çĕр виçнĕ чух усă курнă. Вăл вунă чалăшпа танлашнă — ... . 2. Тăснă сулахай аллăн пӳрне вĕçĕнчен пуçласа тăснă сылтăм уран пӳрни вĕçĕчченхи виçе мĕнле виçене пĕлтернĕ? 3. Çак виçепе йывăç пӳртсен çӳллĕшне пĕлнĕ? Миçепе танлашни, шел пулин те, паллă мар.

**311.** Текста вулăр, ят парăр. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса çырăр.

Ачасем шкул пахчинче йăрансем тунă, тĕрлĕ çимĕç лартнă. Сăнамалăх тулăпа пăрça та акнă. Çапла ĕçленĕ чух ачасем акă мĕн курнă.

Кашни *пĕрчĕре* шăтса ӳсмелли *тĕвĕ* пур, ăна *пурнăç* тĕвви теççĕ. Вăл типĕ пĕрчĕ ăшĕнче çимесĕр, ĕçмесĕр тăрать. Аксассăн çав пĕрчĕ тăпрара ăшăпа тата нӳрĕпе шĕвет. Пурнăç тĕвви вара вăранать. Вăл пĕрчĕн сĕткенне пĕчĕк ача хăй амăшĕн кăкăрне ĕмнĕ пек ĕмме тытăнать. Унтан пĕчĕк *кипкине* çурса апат шырама çĕрелле тымар ярать. Çӳлелле çеçке сара пуçлать. Çапла пĕрчĕрен калча шăтса ӳсет. Вăл çитĕнсе çитсен *шăркана** ларать. Шăрки тăкăнсан пучахра пĕрчĕсем пула-пула лараççĕ.

*тĕвĕ — тĕвви*
*пулă — пулли*
*кулă — кулли*

• Предложенисенчи чарăну паллисене мĕншĕн лартнине калăр.

**312.** **«Чăвашла-вырăсла словарьтен»** ***хура*** **тата** ***симĕс*** **сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕсене çырса илĕр.**

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем темиçе япалана, темиçе палла, темиçе ĕçе палăртаççĕ, анчах вĕсен пĕлтерĕшĕсем пĕр-пĕринпе мĕн енчен те пулин çыхăнса тăраççĕ, пĕрпеклĕхсем пур. Тĕслĕхрен, *чĕрĕ кайăк* (сывă кайăк) — вилĕ кайăк, *чĕрĕ сывлăш* (нӳрĕ сывлăш) — типĕ сывлăш, *чĕрĕ шыв* (вĕретмен шыв) — вĕретнĕ шыв, *чĕрĕ ача* (йӳрĕк, правур ача) — мăран ача тенĕ чух *чĕрĕ* сăмах темиçе пĕлтерĕшлĕ, пĕр евĕрлĕрех палла пĕлтерет. Унăн кашни пĕлтерĕшĕн хăйне çывăх тата хирĕçле пĕлтерĕшĕ те пур.

Пĕр сăмах темиçе ăнлава пĕлтерет пулсан ăна **нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах** теççĕ.

Сăмахăн пĕлтерĕшĕ пĕрре çеç пулсан ăна **пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах** теççĕ.

Куçару тата ăнлантару словарĕсенче сăмах пĕр е нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕлме пулать. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшне пĕр статьярах араб цифрисемпе (1, 2, 3...) палăртаççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ. Ку сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине пĕлтерет.

Тĕслĕхрен:

**ЙĔП 1.** Пĕр вĕçĕ çип чикмелли шăтăклă, тепĕр вĕçĕ шĕвĕр, çĕлеме усă куракан хурçă хатĕр. *Çĕвĕ йĕппи. Хăмăт йĕппи.* **2.** Пĕр-пĕр тĕллевпе ятарласа хатĕрленĕ шĕвĕркке япала е пĕр-пĕр хатĕрĕн шĕвĕр вĕçлĕ пайĕ. *Вăлта йĕппи. Шприц йĕппи.* **3.** Лăсăллă (хыр, чăрăш) йывăç çулçи. *Кедр йĕппи.* **4.** Чĕр чунăн хытă та шĕвĕр вĕçлĕ шăрчĕ, пулăсен чикекен çуначĕ. *Чĕрĕп йĕппи.*

• *Йĕп* сăмах тата мĕнле пĕлтерĕшсене уçса парать-ши?

**313.** Çак мĕнрен килет-ши? Шухăшлăр. Тĕслĕхсене тишкерĕр, пирĕн чĕлхе нумай чухне сăмахăн пĕлтерĕшне, çĕнĕ ăнлава мĕнле майпа палăртать? Вырăс чĕлхипе танлаштарса ăнлантарăр.

Хыт кукар, вăрман хуралçи, пан улми, кăркка ами, кăркка ашĕ, пăрçа хутаççи, хăмла çырли, тур палли, куç харши, кăткă тĕмески, пыл хурчĕ, куç шăрçи, тĕне кĕр, ўкĕте кĕрт, тăна кĕр, ватăлса кай, ватăлса çит, вăтанса тăмасть, уçăлса çўрерĕмĕр, Тăван çĕршыв, кăтра çўçлĕ.

**314.** Текста вуласа тухăр, унăн тĕсне палăртăр. Паллă тунă сăмахсенчен пĕр пĕлтерĕшлисене пĕр ушкăна, нумай пĕлтерĕшлисене тепĕр ушкăна кĕртсе пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса çырса илĕр.

*Çу* кунĕсем — июль *уйăхĕ, утă* вăхăчĕ. Эпĕ килте, *шкултан* вĕренсе тухнă та аякка тухса кайма ĕлкĕреймен-ха. Нимĕн те *тăвайман, ĕç* нумай ял çыннин, уйрăмах çулла, *çуркуннепе*[2] *кĕркунне. Сехетпе* кайса сехетпе килеймĕн хиртен. *Ака* пуçланчĕ — хĕвелтен *малтан* тăрса хĕвелтен кайран выртмалла. «Çу кунĕ çулталăк тăрантарать», — теме юрататъ *Мĕкĕте* тете. (*Ю. Смирнова* çырнинчен.)

**315.** *Утăм, чалăш, аршăн, шит* сăмахсем мĕне пĕлтереççĕ? Вĕсен лексика пĕлтерĕшне словарьпе усă курса палăртăр.

**316.** Текста тимлӗ вуласа тухӑр, ӑна тишкерӗр, мӗнле чӗлхепе (стильпе) ҫырнине ӑнлантарӑр. Имет хӑш вӑхӑтри ҫын пулнине кӑтартакан вырӑна, нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тупса палӑртӑр.

Хӑвӑр лайӑх пӗлекен ҫын ҫинчен сирӗн пата килнӗ хӑнана каласа панӑ пек каласа парӑр, унтан «Тантӑшӑм» сӑнлав сочиненийӗнче ҫырса кӑтартӑр.

### Имет

Имет — ҫӳллӗ те илемлӗ ҫын. Хулӑн тесен ытла хулӑнах та мар вӑл, анчах пӑхма тӗреклӗ. Анлӑ кӑкӑрӗ унӑн малалла хӑпарса тӑрать. Алли тунисем вӗрсе тултарнӑ пӳске пек. Ҫӳрессе кирек хӑҫан та каҫӑрларах ҫӳрет. Утасса ярӑнса, чеченнӗн яра-яра пусса утать. Паян вӑл шурӑ пир кӗпепе, симӗс ярапаллӑ шурӑ пиҫиххипе, ҫӳхе чӑлхи ҫинчен ҫиччӗллӗ ҫӑпата* сырса янӑ. Катан пир шӑлаварне чӑлхи ҫийӗн кӑларнӑ. Имет кирек хӑҫан та салтак карттусне тӑхӑнаканччӗ. Паян ҫара пуҫӑнах. Сарӑ вӑрӑм мӑйӑхне икӗ еннелле[1] вӗҫкӗннӗн ҫӳлелле пӗтӗрсе хунӑ. Ҫынсем ҫине пӑхнӑ май Иметӗн хӑмӑр куҫӗ йӑл кулать. (*Илпек Микулайӗ* ҫырнинчен.)

**317.** Текста вуласа тухӑр та унта мӗн ҫинчен каланине ӑнлантарӑр. Ят парӑр. Текст мӗнле тӗллеве пурнӑҫлать? Ӑна мӗнле чӗлхепе (стильпе) ҫырнӑ?

Пуплев этикечӗ — ҫынсем пӗр-пӗринпе тӗрлӗ вырӑнта мӗнле хутшӑнмаллине кӑтартакан правилӑсем.

Сывлӑх сунмалли, тав тумалли, каҫару ыйтмалли, саламламалли, сывпуллашмалли тата ытти ӑшӑ кӑмӑллӑ, евӗклӗ сӑмахсем ҫынсене пӗр-пӗрин хушшинче ҫыхӑну йӗркелеме тата ӑна тытса пыма пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем ҫынсен хутшӑнӑвӗсенчи ырӑ кӑмӑллӑхпа тараватлӑха аталантараҫҫӗ.

Пуплев этикечӗ — халӑх сипечӗн (культурин), кашни ҫыннӑн пӗлтерӗшлӗ пайӗ.

**318.** Эпир ниҫта та — килте те, шкулта та, урамра та — пӗр-пӗринпе хутшӑнмасӑр пурӑнаймастпӑр. Ҫак хутшӑнӑвӑн уйрӑмлӑхӗсене кашни

çыннăн лайăх пĕлмелле. Эсир пур чухне те çак уйрăмлăхсене шута илсе пыратăр-и? Сирĕн хăвăрăн лайăх енсене аталантарас тесен малашне тата хăш уйрăмлăхсемпе ытларах ĕçлемелле?

## Çакна яланах асра тытăр!

### Пуплев этикечĕ

1. Хăвăрăн айăпăршăн, ăнсăртран туса хунă йăнăшăрсемшĕн каçару ыйтма ан манăр.
2. Хăвăра ырă тунăшăн, пулăшу панăшăн тав тума ан ӳркенĕр.
3. Хăвăр мĕнпе те пулин кăмăлсăррине, хăвăрăн туйăмăрсене кашни кĕтесрех, кашни çынпа калаçнă чухнех пĕлтерсе ыттисене ан йăлăхтарăр.
4. Пĕр-пĕр ĕçе тума хăвăра шансах каймастăр пулсан тăватăп тесе сăмах пама ан васкăр, сăмах патăр пулсан — ăна нимле йывăрлăха пăхмасăрах пурнăçлама тăрăшăр.
5. Ыттисене кăсăклантарман ĕçсем пирки хăвăр паллакан çынсемпе пурте илтмелле хыттăн ан калаçăр.
6. Тепĕр çын сăмахне ан пӳлĕр. Ытах мĕн те пулин хушса калас килет пулсан — ирĕк ыйтăр.
7. Тепĕр çынпа калаçнă чухне урăх ĕçпе ан аппаланăр, ăна итлеме пăрахса ытти çынсемпе калаçма ан тытăнăр, йĕри-тавралла ан пăхкалăр.
8. Ăслă хурав илес тетĕр пулсан ăслă ыйту пама пĕлĕр.
9. Хăвăр пĕлмен япала е ĕç пирки шухăшăра калама ан васкăр.
10. Хăвăрпа калаçса тăракан çын сăмахне итлесе пĕтермесĕр ăна пăрахса ан кайăр, питĕ васкамалла пулсан — каçару ыйтăр.

**319.** Сăвăсенчи пытарнă тупсăма тупăр. Ăна хăвăр мĕнле майпа тупнине ăнлантарăр.

1. Пысăк мар вăта арçыннăн
Уттипе танлашĕ ыррăн.
Шутласа пăхсассăм, тусăм,
Вăл паллах пулать-çке...

2. «Çухăр» глаголтан пулать,
Мĕнле виçе, кам калать?
Шутласа пăхсассăм, тусăм,
Вăл паллах пулать-çке...

3. Ҫакӑ виҫе паллипе
Усӑ курнӑ тӗнчипе.
Хӗлӗпе те ҫӑвӗпе
Виҫнӗ пилӗк пӳрнепе.

Вунӑ сантиметртан[3]
Ытларах пулать ялан.
Ячӗ ҫак виҫе паллин,
Чӑнласах та...

## 38. Сӑмахсен тӳрӗ тата куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем

Юпасенчи тӗслӗхсене танлаштарӑр. Пӗрремӗш юпари тӗслӗхсем иккӗмӗш юпари тӗслӗхсенчен мӗнпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ? Вӗсем хушшинче мӗнле пӗрпеклӗх куратӑр?

*тимӗр пӑта* — *тимӗр шапа*
*ӑшӑ сӗт* — *ӑшӑ сӑмах*
*вӗри яшка* — *вӗри чун*

Сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем тӳрӗ те, куҫӑмлӑ та пулма пултараҫҫӗ. Пӗр пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем яланах тӳрӗ пӗлтерӗшпе ҫӳреҫҫӗ: *кӳршӗ, вуннӑ* т. ыт. те. Тӳрӗ пӗлтерӗшлӗ чухне сӑмах япалана тӳрех палӑртать.

Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем тӳрӗ те, куҫӑмлӑ та пулаҫҫӗ. Куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ чухне япаласем, пулӑмсем пӗр пекрех пулнине кура пӗр япалан палли тепӗр япала ҫине куҫать. Ҫавна май сӑмахӑн тӗп пӗлтерӗшӗнчен куҫӑмлӑ пӗлтерӗшсем аталанса каяҫҫӗ. *Тимӗр пӑта* сӑмах майлашӑвӗнче *тимӗр* сӑмаха тӳрӗ пӗлтерӗшпе каланӑ, вӑл пӑтана мӗнрен тунине пӗлтерет. Ҫак сӑмахах *тимӗр шапа* тӗслӗхре куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе усӑ курнӑ. *Тимӗр шапа* тенӗ чухне шапа тимӗр иккенне пӗлтермест, вӑл шапан панцирӗ тимӗр пек ҫирӗп пулнине кӑтартать. Ҫавна пула ӑна тимӗр шапа теме пуҫланӑ. Ҫапла вара *тимӗр* сӑмахӑн тӳрӗ пӗлтерӗшӗпе ҫыхӑнуллӑ куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗ пулса кайнӑ.

Сӑмахӑн куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем ҫыхӑнура ҫеҫ палӑраҫҫӗ.

Япаласем хушшинче мĕн енчен те пулин çыхăннă пĕрпеклĕх пур чухне тĕп япала палли тепĕр япала çине куçнă сăмахсене **куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем** теççĕ: *тăлăх ача — тăлăх хир, кайăк вĕçрĕ — ыйхă вĕçрĕ.*

Тепĕр чух чĕрĕ мар япаласене, çут çанталăкри пулăмсене чĕрĕ чун пек е этем пек сăнласа кăтартаççĕ: *ача вăранчĕ — çут çанталăк вăранчĕ.*

Илемлĕ литературăра сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕпе илемлĕх мелĕ пек анлă усă кураççĕ.

Словарьсенче сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕсене тӳрĕ пĕлтерĕшĕ хыççăн кăтартаççĕ.

**320.** Ăнлантару словарĕпе тупмалли юмах тексчĕсенче пĕр япаланах мĕнле сăнласа панине танлаштарăр. Тупмалли юмах текстĕнче мĕнле илемлĕх мелĕсемпе усă курнине ăнлантарăр. Хăвăр тата икĕ-виçĕ тĕслĕх тупса таблицăна малалла тăсма тăрăшăр.

| Ăнлантару словарĕнчи статья сыпăкĕ | Тупмалли юмахăн тексчĕ |
| --- | --- |
| *Купăста* — нумай çулçăллă, кучанлă, çĕр çинче ӳсекен пахча çимĕç. | Пĕр кĕпе те унăн çук<br>Пĕчĕк чух.<br>Ватлăх кунĕ çитеспе<br>Çĕр кĕпе. *(Купăста.)* |

**321.** Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăр та вĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарăр. Çав сăмахсен тӳрĕ пĕлтерĕшне кăтартма пулăшакан сăмах майлашăвĕсем е предложенисем çырăр.

Ĕç çын чунне тасалăх кӳрет, çын пурнăçне телейлĕ тăвать. Ĕççĕр — телей çук. Пушă çĕрте ĕмĕт тĕвĕленеймест. Ĕмĕте ĕç çеç çунат хушма пултарать. Ĕçпе кăна çын пурнăçĕ тата та илемлĕ. (*Г. Ефимов* çырнинчен.)

**322.** Палăртнă сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр. Пĕрремĕш текста иккĕмĕш текстпа танлаштарăр. Мĕнле уйрăмлăх куратăр? Иккĕмĕш текстри куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмах çаврăнăшĕсене тупăр.

1. — Атя, пичче, пасара.
— *Ҫăпату** ҫук.
— Пичче, ҫăпата туса пар.
— *Пушăт* ҫук.
— Пушăт ăҫта?
— Вăрманта.
— Вăрман ăҫта?

— *Йăлăмра*.
— Ма каймастăн йăлăма?
— Лаша ҫук.
— Лашу ăҫта?
— Пасарта.
— Атя, пичче, пасара.
— Ҫăпату ҫук...

*(Халăх сăмахлăхĕнчен.)*

2. Садсем чечекре... Яштак чиесем, ҫĕмĕрт йывăҫҫисем, ҫатрака* туратлă улмуҫҫисем — пурте шап-шурă та ҫемҫе тумпа витĕннĕ. Аякран пăхсан садсем ҫине кăпăшка ăшă юр ҫуса лартнă пекех туйăнать. Вĕсем ытармалла мар тутлă, кăмăла йăпатакан шăршă сарса лараҫҫĕ. Кăнтăрла ку ырлăха пит асăрхасах каймастăн, анчах каҫхине вара, улăхсенчи ешерекен курăк сывлăмпа нӳрелме пуҫланă чух, кирек кам та киленет ҫурхи чечексен шăршипе, вĕсен тутипе тулнă сывлăша пĕтĕм кăкрипе сывласа ҫăтать. *(Л. Агаков.)*

• Вăййа икшерĕн хăвăр ятăртан выляса пăхăр.

**323.** Вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр, тӳрĕ е куҫăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартăр. Вĕсем илемлĕ литературăра мĕнле илемлĕх мелĕ пек ҫӳреҫҫĕ? Ĕнентерĕр.

Тăван ҫĕршыв... Мĕн чухлĕ *ăшă* туйăм, *ҫутă* ĕмĕт, ырă *шухăш*, сăваплă сăмах *ҫуратать* вăл пирĕн ăшра! Вăл пирĕншĕн ытарма ҫук илемлĕ те пархатарлă. Хамăр кирек ăҫта ҫитсе тухсан та пĕрремĕш хут кун ҫути курнă яла е *хулана* ĕмĕр-ĕмĕрех ырăпа асăнатпăр, *тулли* кăмăлпа юратса, вăй ҫитнĕ таран пулăшса пыма тăрăшатпăр, унта тепĕр хут *таврăнма* е вăхăтлăха та пулин пырса курма ĕмĕтленетпĕр. (*М. Кипек* ҫырнинчен.)

• «Тăван кил» темăпа ăслав сочиненийĕ ҫырăр. Сочиненире усă курнă куҫăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене аялтан пĕр йĕр туртса палăртăр.

Писательсемпе поэтсем хӑйсен кӑмӑл туйӑмне, шухӑшӗсемпе ӗмӗчӗсене, тӗрлӗ пулӑма палӑртма ҫӗнӗ, пӗлтерӗшлӗ, витӗмлӗ мелсем шыраса тупаҫҫӗ. Ҫакна тума вӗсене шӑпах куҫӑмлӑ пӗлтерӗшсем ҫинче пулса пыракан илемлӗх мелӗсем пулӑшаҫҫӗ.

Тӑван литература урокӗсенче эсир вӗсенчен хӑш-пӗрине вӗреннӗ ӗнтӗ.

**324.** Текста вулӑр, унта илемлӗх мелӗсемпе усӑ курнӑ-и? Вӗсем мӗнле илемлӗх мелӗсен шутне кӗреҫҫӗ? Ӗнентерӗр. Вӗсем мӗнле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем?

Вӑрман хӑлхаллӑ тенӗ. Тӗрӗс. Хӑлхаллӑ ҫеҫ пулсан татахчӗ, унӑн тата чӗлхи те пур-ҫке! Тимлесе итлесен кашни йывӑҫ, кашни ӳсен-тӑран, кашни чӗр чун хӑй чӗлхипе калаҫнине туятӑн. Вӗсен калаҫӑвӗнче мӗн чухлӗ тӗлӗнмелли, мӗн чухлӗ этем пӗлменни!.. *(Г. Луч.)* Пуш ҫӑвара ӑҫтан-ха авӑртма чаратӑн? Таса ята витмест хура, таса чуна ӑҫтан варлатӑн? *(С. Шавли.)*

**325.** Текста вулӑр та унӑн тӗп шухӑшне палӑртӑр. Ӑна мӗнле формӑпа ҫырнине ӑнлантарӑр. Каҫхи Атӑл илемне автор мӗнле мелсемпе усӑ курса уҫса парать? Куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсемпе вӑл мӗн тӗллевпе усӑ курнӑ?

### Каҫхи Атӑл

Пӑрахут урапи шыва ҫавӑрса сӗт *пек* шуратать. Икӗ *енче* шурӑ кӑпӑк аманнӑ акӑш ҫунатти пек сӗтӗрӗнсе пырать.

Атӑл *хуллен* хумханать. Пӑрахут хумхатса хӑварнӑ хумран татӑлса *юлнӑ пӗччен* хум *ҫеҫ* хӑйӗн *юлташне* хӑваласа *ҫитме* ӑнтӑлса *чылайччен* хыҫҫӑн чупать, чӑмса ҫухалать те *тепӗр ҫӗртен сиксе* тухать, *юлнӑҫем юлса* пырать. *Хумсем иртсе юлакан маяксене, пӗренесене* ҫӑкӑр *пӗҫерекен* хӗрарӑм пек *енчен енне* унаҫҫӗ. Уйӑх мӗлки Атӑл *ҫине* ӳкнӗ *тӗлте* ылтӑн купи *евӗр* ҫутӑ купаланнӑ. Мӑнтарӑн сӑваплӑ Атӑл шывӗ, ҫут ҫанталӑкӑн ачаш сӑпки! Кам *юратмасть*

пулĕ ĕнтĕ çак асамлă *илеме*! Такам ачашланă *пек*, ăшă çил ваштăртатса *иртет*, шăппăн-шăппăн *тĕлĕрекен* шыв кăкăрне кăтралатса хăварать. *Тӳлек* Атăл пăрахут кăларакан *хумсемпе çеç* хускалать, çутăлас умĕнхи çăмăл та канăçсăр ыйхăпа çывăрать.

• Атăл çинчен ăслав формипе текст йĕркелĕр те икĕ текст хушшинчи уйрăмлăхсене кăтартăр. Ăна çак формăпа çырăр:

Атăл вăл — ...

• Палăртнă сăмахсенчи *е, ю, я* сас паллисем мĕнле сасса палăртнине тата вĕсене мĕншĕн çавăн пек çырнине ăнлантарăр. Правилăна аса илĕр.

**326.** Сăвва тимлĕн вуласа тухăр та *йĕр* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене уçса парăр. Çын пурнăçра мĕнле йĕрсем хăварма пултарать? *Йĕр* сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕшне уçса парас тĕллевпе сăмах майлашăвĕсем тупса çырăр.

### Йĕрсем

Тĕрлĕрен йĕрсем выртса юлаççĕ  
Çĕр çине çуралнă этемрен:  
Ырă çын йĕрне хака хураççĕ,  
Улах çул ултавлă ĕлĕкрен.

*(Н. Ытарай.)*

• *Йĕр* сăмахпа усă курса сăвă йĕркелĕр.

**327.** Текст тăрăх пĕчĕк сочинени çырăр. «Хĕвел пурне те хăй ирĕкĕнче тытать» тенипе эсир килĕшетĕр-и? Мĕншĕнне ăнлантарăр. Ĕçе тунă чух çак ыйтусемпе усă курăр.

1. Текст стильне, тĕсне (калав, сăнлав, ăслав пулнине) палăртăр.
2. Текстри ĕç хăш вăхăтра пулса иртет?
3. Текстра мĕн çинчен каланă, унăн тĕп шухăшне палăртăр, ятне парăр.
4. Текстра автор мĕнле илемлĕх мелĕсемпе усă курнине ăнлантарăр.

5. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш абзацсенчи предложенисен çыхăнăвне кăтартăр.

6. Текстра хускатнă ыйтусем пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Ирхине пире ыйхăран шăнкăртатакан сехет вăрататъ. Ыйхăран вăрманти чĕр чунсене мĕн вăрататъ-ши? Вĕсем те яланах пĕр вăхăтра çывăрма выртса пĕр вăхăтра тăраççĕ-çке-ха.

Пĕтĕм чĕр чунăн сехечĕ — хĕвел. Акă вăл тĕнче хĕрринчи хăйĕн хĕлхемлĕ патакĕсене дирижер пек çĕклесе-сулса ярать те, хăватлă хор кĕрлеттерсе юрлама тытăнать. Акă вăл касхи хĕлхемĕсене каллех дирижер хăйĕн патакне антарнă пек антарать те, хор сасси каллех илтĕнме пăрахать.

Хĕвел тĕнче хĕррине анса çухалать, çутă сӳнет. Кăнтăрлахи янăравлă сасăсем касхи лăпкă сасăсемпе улшăнаççĕ. Хор каллех хăйĕн хăватлă дирижерĕ паллă парасса кĕтет.

Вăхăтăн хуçи — аслă дирижер. Хĕлхемсем çӳлелле ыткăнчĕç кăна — пĕтĕм тĕнче чĕрĕлчĕ, хĕлхемсем аяла анчĕç — пĕтĕм тĕнче çывăрма выртрĕ. Пурнăçăн тикĕс кĕвви ку, кăнтăрлахи тата касхи çемĕсем. Хĕвел мăн упасене те, вĕтĕ ӳпресене те хăй ирĕкĕнче тытать. Пулăсене те, шапасене те, калтасене те. Чечексене те, тĕмĕсене те, йывăççене те. Пире хамăра та... (*Н. Сладков* çырнинчен.)

**328.** Кĕске кулăшла калаçусене вуласа тухăр. Калаçăва кулăшла тума мĕнле сăмахсем пулăшнине ăнлантарăр. Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупса палăртăр. Хăвăр та çавăн евĕрлĕ кулăшсем йĕркелĕр.

**Пĕçерекен чĕрĕ пулă**

— Атăл пуллине ма пăрахут çинче илместĕн?

— Ытла та пĕçерет, çав тери вĕри!

— Чĕрĕ пулă мĕнле-ха пĕçертĕр?

— Хакĕ пĕçерет. (*Ю. Вирьял* çырнинчен.)

**Çиеççĕ**

— Ресторанта Маринепе Укçине апат çисе ларнине куртăм. Ну çиеççĕ, ну çиеççĕ.

— Çын апат çинишĕн ма аплах тарăхас, Максăм?[4]

— Тарăхмасăр чун чăтмасть. Пĕрремĕшпе иккĕмĕшне те илнĕ хăйсем, виççĕмĕшĕ те ал айĕнчех темелле. Вăл çитмест, кўршисене çисе лараççĕ тата. (*В. Енĕш* çырнинчен.)

## 39. Омонимсем

Сăвва вулăр, тупсăмне пĕлĕр. Ўкерчĕксене сăнăр. Вĕсем мĕнле илтĕнеççĕ, мĕнле çырăнаççĕ, мĕне пĕлтереççĕ? Мĕнле пуплев пайне кĕреççĕ?



*Çуртра, кил картинче тасалăх*
*Пĕлсе унпа усă курсан.*
*Чунра хаваслăх та асамлăх*
*Кĕвви мăнаçлăн янрасан.*

*(Н. Брусов.)*



**Омонимсем** тесе пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ. Т ĕ с л ĕ х р е н: **тар** I — çын тарĕ, **тар** II — снаряд тарĕ, **тар** III — тарса ўк, **тар (тара)** IV — тара тытрĕç.

Омонимсене нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен уйăрса илме пĕлмелле.

Темиçе пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр-пĕринпе мĕн енчен те пулин çыхăнса тăраççĕ. Омоним сăмахсен пĕлтерĕшĕсенче вара пĕр пекки нимĕн те çук.

Омоним сăмахсен пĕлтерĕшĕсене словарьте уйрăм статьясенче ăнлантараççĕ, Рим цифрипе палăртаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х:

**шăпăр** I, яп. я. Урай шăлмалли япала.

**шăпăр** II, яп. я. Музыка инструменчĕ.

**Омоним** — грек чĕлхинчи *homos* «пĕрешкел, пĕр пек» тата *onoma* «ят» сăмахсенчен пулнă

**329.** **Омонимсене тупса палӑртӑр, пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарӑр. Сӑвӑ ҫаврӑмӗсенчи, вӗсене йӗркелес ҫӗрте, омонимсен вырӑнне кӑтартӑр.**

1. Сана татах та шавлама йыш кирлӗ,
Эппин, вӑрман, ҫынна итле те туй:
Юман урайсене авса кӗр! кӗрлӗ
Шав-шавлӑ вӑтӑр каччӑн вӑтӑр туй.

*(Я. Ухсай.)*

2. Хама пит йывӑр килнӗ чух
Сана аса илетӗп.
Вара пур йывӑрлӑх та — чух,
Ҫӗклейми мар. Пӗлетӗп.

*(П. Хусанкай.)*

**330.** **Точкӑсем вырӑнне омоним сӑмахсем кӗртсе ҫырса илӗр, вӗсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарӑр. Омонимсен словарӗнчен хӑвӑра килӗшекен омоним суйласа илӗр те ҫакӑн еверлӗ сӑвӑ ҫаврӑмӗсем йӗркелӗр.**

1. Атӑл урлӑ каҫрӑм, атта ...,
Ман умра сар хӑйӑр тап-таса.
Ҫаврӑнса эп пӑхрӑм, юрӑ ...,
Шупашкарӑм, саншӑн савӑнса.

*(Н. Сандров.)*

2. ... тӑвас мар ... —
... тунине пӗлет ... :
... тусассӑн вӗсене
... сӑхас йӑли пур.

*(Н. Ытарай.)*

3. Хӗвел хӗртет. Пахчаҫӑ ...
Пахча та вӑрлӑх тӗрӗслет.
«Тепре, тен, выставка та ...», —
Тесе кӑҫал ӗмӗтленет.

*(П. Хусанкай.)*

4. ... хӗрринчи утине *ҫава* ил те хытӑ ... .

*(Юрӑран.)*

• Палăртнă сăмах халăхăн традициллĕ культуринче мĕнле вырăн йышăннине ăнлантарăр. «Чăвашла-вырăсла словарьти» (712-мĕш с.) ӳкерчĕксене пăхса тухăр, вĕсемпе усă курса «Пурнăç улшăнăвĕ» темăпа ăслав формипе калав çырăр.

**331.** Панă предложенисенчи шухăш мĕншĕн уçăмлă палăрмасть? Кăтартнă пĕлтерĕшсене шута илсе хиствеллĕ предложенисем йĕркелĕр. Предложенисене ырă кăмăллăха палăртакан *тархасшăн* сăмаха тата обращенисем кĕртсе çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Хĕрĕм, сĕте, тархасшăн, сĕркĕчпе сĕрсем. Дима, çăкăру çине, тархасшăн, çу сĕрсем.*

1. Эсĕ вара нумай сĕр. (Хур е мĕн витĕр те пулин кăлар.) 2. Пысăк ту. (Сăрт-ту е ĕçе тума хушни.) 3. Хур кур. (Кайăк-кĕшĕк е асап.) 4. Шăпăр илсе килĕр. (Урай шăлмалли хатĕр е музыка инструменчĕ.) 5. Вăрăм вĕрен. (Çыхмалли е ăс пух.)

**332.** Текста вуласа тухăр. *Кил* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене палăртăр. Вĕсем омоним е нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулаççĕ? Вĕсем хăш пуплев пайĕпе çыхăннă?

Тем тесен те çуралса ӳснĕ ял пирĕншĕн тăван кил пекех паха.

Кил... Сăмахĕ те чĕнсе каланăн туйăнать. Кайран, тĕнче тăрăх ăс илме кайсан, таçти шăтăка пырса çапăнсан та эпир хамăр кӳлкассисемпе шуркассисенех аса илетпĕр. Пĕчĕк чухне курăк çиййĕн çарран чупни, атте пахчинчи хĕрлĕ пан улмисем тăканни, пĕве хĕрринчен шыва пуçхĕрлĕ чăмнисем — нихçан та чĕререн тухмаççĕ! Пурăннă чухне çеç-и, вилсен те хăй ытамнех чĕнет пулĕ çав тăван ен.

Виçĕм çул Кӳлкассине Мускавран[3] Саландаев профессор ӳтне илсе килсе пытарчĕç. Тĕнчипе паллă ученăйччĕ вăл. Чаплăрах вырăн та тупма пултарнă ун валли. Çук çав, сăрт хыçне пытанса ларнă чăваш ялĕн масарĕ çине пытарма хушса хăварнă вăл хăйне.

Çапла, тӗнчери чи хитре çӗршывсенчен илемлӗрех, пуян çӗрсенчен те тулӑхрах пирӗншӗн тӑван кӗтес, тӑван кил. (*В. Петров* çырнинчен.)

• *Кил* сӑмахпа çыхӑннӑ мӗнле чӑваш юррине пӗлетӗр? Вӑл юрра кам юрлать? Сӑмахӗсене аса илӗр. Юррӑн ытарлӑ шухӑш йӗрне тытса пыма литературӑн мӗнле илемлӗх мелӗпе усӑ курнӑ?

**333.** Омонимлӑ сӑмахсен лексика пӗлтерӗшне кӗскен ӑнлантарса çырӑр. Кашни омонимӗпе пӗрер тӗслӗх тупӑр.

1. Кукамай — аннен амӑшӗ.
   Кукамай — ...
2. Ирт — тасат, сайралат.
   Ирт — ...
3. Турӑ — лаша тӗсӗ.
   Турӑ — ...
4. Аш — çӑр.
   Аш — ...
5. Иш — шывра хусканусем туса малалла кай.
   Иш — ...

**334.** Ӑнлантару словарӗнче омоним сӑмахсене тупӑр та вӗсен пӗлтерӗшӗсене çырса илӗр. Кашни сӑмахпа икӗ сӑмах майлашӑвӗ çырӑр.

Тӗслӗх: Авӑр — ӗç хатӗрӗн тыткӑчи: *курка аври, ылтӑн авӑр*; туна: *хӑмла аври, пӑрçа аври*

**335.** Словарьпе усӑ курса çак сӑмахсен омонимӗсене тупӑр та вӗсемпе пӗрер предложени çырӑр.

Пӑрçа, салат, ӑвӑс, карас, каç, йышӑн, тӑвар, çак, пыр, çурӑм, пӑр, авӑн.

**336.** Çак сӑмах майлашӑвӗсене кӗртсе предложенисем тупса çырӑр. Омонимсене аялтан йӗр туртӑр.

1. Салат çи — утӑ салат. 2. Çӗтсе ан кай — кӗпи çӗтӗлтӗр. 3. Ярса пус — пӗр пус. 4. Çӗр лаптӑкӗ — çӗрсе пӗт — çӗр тенкӗ.

## 40. Синонимсем

Сăвă çаврăмĕсене тимлĕ вулăр, паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене танлаштарăр.

1. Лаши ĕçсе тăнăçем
Каччă *калать* сăмахне.

2. Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
*Пакăлтатать* инкĕшпе.

3. Хăй такмакне вăл *калать*,
Хăй аллинчи сăрана
Тăка-тăка *çаптарать*.

(*К. Иванов* çырнинчен.)

**Синонимсем** тесе тĕрлĕрен илтĕнекен, пĕр пуплев пайĕнчен пулнă, çывăх е пĕр тан ăнлава пĕлтерекен, анчах пĕр-пĕринчен е пĕлтерĕш сĕмĕпе, е стиль тĕлĕшĕпе уйрăлса тăракан сăмахсене калаççĕ.

**Синоним** — грек чĕлхинчи *synonymos* «пĕр ятлă» сăмахран пулнă

Вĕсем пĕр япаланах *(телей, ăраскал)*, пĕр пахалăхах *(çирĕп, тĕреклĕ, кĕрнеклĕ)*, пĕр ĕçех *(вĕрен, тĕпче, тишкер)* т. ыт. те пĕлтереççĕ.

337. Точкăсем вырăнне предложени шухăшне уçăмлăрах палăртма пулăшакан синонимсенчен пĕрне хушса çырăр.

1. Çырма тăрăх ... (вичкĕн, çивĕч, йăрă) çил кастарса вĕрет. 2. Вăрăм Павăл çамки çине тапса тухнă ... (мăнă, пысăк, шултра, капмар) тумламлă тарне шăлса илчĕ те тенкел* çине ларчĕ. 3. ... (хитре, илемлĕ, чипер) кĕвĕ каланă пек шăнкăртатса юхаççĕ шыв-шурсем[2]. 4. Хăвалăх хĕрринче çара çерçисем урлă-пирлĕ вĕçсе иртеççĕ, хăвалăх ăшĕнче унта-кунта вĕçен кайăксем ... (юрлаççĕ, чĕвĕлтетеççĕ).

Ҫак сӑмахсенчен хӑшӗ тиркесе каланине ытларах палӑртать?

*Айван — ухмах — тӑнсӑр — ҫурмаккай — тӑрпалтай — тӑрлак.*

Ҫак сӑмахсенчен хӑшӗ хӑвӑртрах куҫнине пӗлтерет?

*Ут — чуп — вӗҫ.*

Ҫак сӑмахсенчен хӑшӗнпе пуплевре нумайрах усӑ кураҫҫӗ?

*Кала — сӑмахла.*

Синонимсем пӗр ӑнлавах тӗрлӗрен палӑртаҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗринчен пӗлтерӗш сӗмӗпе, ҫыннӑн кӑмӑлне палӑртас енӗпе (тиркенипе, мухтанипе, ырланипе т. ыт. те) е пуплевре нумайрах е сахалрах усӑ курнипе уйрӑлса тӑма пултараҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *ӗҫ — лакка, калаҫ — ӗнентер — пакӑлтат.*

Синонимсем калаҫӑва илемлӗ те сӑнарлӑ тума пулӑшаҫҫӗ. Калас шухӑш уҫӑмлӑ та тӗрӗс пултӑр тесен синоним сӑмахсенчен чи юрӑхлине суйласа илме, вӗсемпе кирлӗ пек усӑ курма пӗлмелле:

1) вӗсем пӗр сӑмахах темиҫе хут калассинчен хӑтараҫҫӗ: ***Пысӑк** ҫуртсем хушшипе **капмар** крансен хусканӑвӗ курӑнать.*

2) шухӑша тӗрӗс уҫма пулӑшаҫҫӗ:

*Килчӗ **ырӑ** ҫуркунне, килчӗ ячӗ ӑшӑтса. — **Чипер** ача Сетнерӗн пӗр урхамах лаши пур. (К. Иванов.)* Кунта *ырӑ — чипер* сӑмахсем синонимсем, анчах та вӗсем пур чухне те пӗр-пӗрин вырӑнне ҫӳреме пултараймаҫҫӗ. *Килчӗ чипер ҫуркунне* тесен сӑввӑн илемлӗхӗ ҫухалнӑ пулӗччӗ.

3) юнашар лартса ҫырни шухӑша тарӑнрах, ӗнентерӳллӗрех уҫса пама пулӑшать: *Ахӑрса та, **макӑрса** та, пӗр **йӗрсе, ӗсӗклесе** кӗвӗлет вӑл чи ватӑ тантӑшне хисеплесе. (П. Хусанкай.)*

4) стиль уйрӑмлӑхӗсене кӑтартма пулӑшать: ***Вӗҫсе** пырап конькипе, хӑлхасем хӗп-хӗрлӗ... — Вӑл ерипен, вас-*

*камасăр **утса** тухрĕ. Таçта тухса шăвăнчĕ — таçта тухса вĕçрĕ (пăчланчĕ).*

Синонимсем предложенисене çыхăнтарма пулăшакан мел пек те çӳреççĕ: *Кун **янкăр уяр**. Тӳпе тăрна куçĕ пек **тăрă**. (А. Артемьев.)*

**338.** Скобкăра çырса кăтартнă синонимсенчен кирлине суйласа илĕр, ăна автор тексчĕпе танлаштарăр.

1943 çулхи июльте, «Курск пĕкки» патĕнчи (*хаяр, йывăр, тертлĕ*) çапăçура йывăр аманнă хыççăн, эпĕ Киров облаçĕнчи пĕр ялта госпитальте (*выртрăм, сывалтăм*). Çавăнта ман алла (*пач кĕтмен çĕртен, ăнсăртран, сасартăк, тăрук*) «Вăрçă кунĕсем» кĕнеке лекрĕ. Мĕн тери (*савăнăç, хаваслăх, хавас, савăк, хĕпĕртени*) вăл, темиçе çул чăвашла (*калаçман, пуплемен, юмахламан, сăмахламан*) хыççăн юратнă писатель кĕнекине чăвашла вуласси! *(А. Артемьев.)*

**339.** *Вăхăт, самана, самант* сăмахсем пĕр-пĕриншĕн мĕнле сăмахсем пулаççĕ? Ăнлантарăр. Вĕсен тĕп пĕлтерĕшне палăртăр. Çак синонимлă ярала ячĕсене панă сăмахсемпе çыхăнтарса тĕрĕс пĕлтерĕшлĕ сăмах майлашăвĕсем тăвăр, пĕлтерĕш сĕмĕсенче уйрăмлăх пуррине уçса парăр.

Патша, пирĕн, юлашки, çак, кĕске.

**340.** Синонимсем скобкăри сăмахсемпе çыхăннине кура сăмах майлашăвĕсем йĕркелĕр.

1. Вĕри, хĕрӳллĕ *(шыв, вутă, салам, чĕре)*. 2. Юрла, авăт *(шăпчăк, путене, тăри, куккук, шăнкăрч, автан, шăрчăк, карăш, аслати)*. 3. Шалпар, сарлака *(сатин, кофта, сак, кĕпе)*. 4. Вак, вĕтĕ *(шăрçа, укçа, çумăр, пусма)*. 5. Шултра, мăнтăр, пысăк *(кĕпер, выльăх, улма, ача)*.

**341.** Текстри синонимсен йĕркине — *пĕчĕк, пысăках мар, пĕчĕкçĕ, лутра* — улăштарма май пур-и? Мĕншĕн?

Физкультурăра Коля умĕнче пĕчĕк Маша тăрать. Класра вĕсем иккĕн. Маша çӳллĕшĕпе пысăках мар пулин

те, ҫав тери чӗрӗ. Вӑл пуринчен те хӑвӑрт чупать, вӑйлӑ ишет, аякка сикет, шӳтлеме юрататъ. Ӑна турник ҫине хӑпарма ҫеҫ кансӗр, мӗншӗн тесен Маша ытла та пӗчӗкҫӗ, лутра.

**342.** **Панӑ синонимсене пӗлтерӗш палли ӳссе пынине кура вырнаҫтарса ҫырӑр.**

1. Шултра, пысӑк, капмар, катмар, мӑнӑ, аслӑ. 2. Чурӑс, тӳрккес, чунсӑр. 3. Паллӑ, мухтавлӑ, чаплӑ. 4. Хӑюллӑ, харсӑр, паттӑр, пуҫсӑр, сатур. 5. Савӑнӑҫлӑ, хаваслӑ, савӑк. 6. Лӑпкӑ, йӑваш, кунӗ. 7. Шукӑль, яка, капӑр.

**343.** **Синонимлӑ предложенисене ҫырса илӗр. Куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тупса палӑртӑр.**

## Ҫирӗк

Пирӗн тӑрӑхра ҫырма йышлӑ. Ҫырмари *нӳрӗке* йывӑҫ тытать, анчах пур йывӑҫ та ӳсмест *йӗпе* ҫӗрте. Юман, сӑмахран, типет, хӑрать. Ҫирӗк тиркемест вара *шыва*. Ытла та чӑтӑмлӑ вӑл: хуҫӑлать те — ҫав ҫулах ҫӗнӗ турат кӑларать.

Ҫирӗк тымарӗсем тарӑна каяҫҫӗ, ҫырана ишӗлме памаҫҫӗ, ҫӗр айӗнчи *шыва* ҫӳлелле туртаҫҫӗ. Ҫирӗк нумай ҫӗрте ҫӑл куҫ та чылай.

Ҫирӗк — усӑллӑ та кирлӗ йывӑҫ. Вӑл вутта та лайӑх. Унӑн вут-шанкинчен сӗрӗм тухмасть. Ӗлӗк камин умӗнче ӑшӑнса ларма ҫирӗк вутти ҫунтарнӑ теҫҫӗ. Унтан сӗтел-пукан та нумай тӑваҫҫӗ. Ҫирӗкрен тунӑ сӗтел-пукан ҫӑмӑл, илемлӗ, ҫирӗп пулать.

Ҫирӗклӗхе кайӑк-кӗшӗк те юрататъ. Ҫирӗк вӑррине килӗштерсе ҫиекен кайӑка чӑвашсем ҫирӗк тӑрри теҫҫӗ. (*Н. Сладков* ҫырнинчен.)

• **Паллӑ тунӑ сӑмахсене вырӑнӗпе улӑштарса лартма май пур-и? Шухӑш улшӑнӑвне сӑнӑр. Вӗсем пӗр-пӗриншӗн синонимлӑ сӑмахсем пулнипе пулманнине ӑнлантарӑр.**

Синонимсем пӗр-пӗринчен пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен ҫыв̆ах, апла пулин те вӗсен пӗлтерӗш тата стиль уйрӑмлӑхӗсем пуррине курма пулать.

**Стиль уйрӑмлӑхӗсем** тесе лексика пӗлтерӗшӗсем пӗр пекрех килекен, тӗрлӗ стильте усӑ куракан сӑмахсене калаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, наука стилӗнче ҫак синонимсем анлӑ сарӑлнӑ: *ӗнентер, ҫирӗплет*.

*Ҫурт — кермен, лаша — урхамах, калаҫ — пакӑлтат — сӳпӗлтет* синонимсене илес пулсан *ҫурт, лаша, калаҫ* — пур чухне те усӑ курма май пур сӑмахсем, калаҫу стилӗпе ҫыхӑннӑ сӑмахсем. *Кермен, урхамах* — илемлӗ литературӑра усӑ куракан сӑмахсем, илемлӗ литература стилӗ. *Пакӑлтат, сӳпӗлтет* — кулленхи калаҫура ҫеҫ тӗл пулакан ансат пуплев сӑмахӗсем.

Чӗлхере ятарлӑ синонимсен словарӗсем пулаҫҫӗ. Ӑнлантару, куҫару словарӗсенче те сӑмахсен хӑш-пӗр синонимӗсене илсе кӑтартаҫҫӗ. Сӑмахӑн синонимне вырӑсла-чӑвашла словарьте те шыраса тупма пулать, анчах кун пек чух чи малтан ҫак сӑмах вырӑсла мӗнле куҫнине пӗлмелле: *ҫивӗч* — бойкий — *чӗрӗ, йӳрӗк, правур, вӑр-вар*.

**344**. Пӗлтерӗшне тата чӗлхе (стиль) сӗмне кура скобкӑри синонимсене суйласа илӗр те текста кӗртсе лартӑр. Мӗншӗн ку е вӑл синонимпа усӑ курнине ӑнлантарӑр.

### Ҫӗпӗр

Ҫӗпӗрте пулса курман ҫынна мӗнле кӑтартса памалла Ҫӗпӗр мӗн иккенне, унӑн калӑпӑшне? Ҫав тери (*пысӑк, аслӑ, мӑнӑ, шултра*) вӑл Ҫӗпӗр, ҫав тери (*аслӑ, мӑнӑ, пысӑк*). Хальхи хӑвӑрт ҫӳрекен пуйӑссем кунӗ-кунӗпе, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе чупаҫҫӗ ун тӑрӑх... Йӗри-тавра ҫав-ҫавах ҫатма пек (*тикӗс, такӑр*) уйсем, вӑрмансем тӑсӑлаҫҫӗ, сулахай енче кӳлӗсен кӳлли Байкал тӑрса юлать... Пӗр эрне хушши ҫапла ыткӑн-

сан тин Ҫӗпӗрӗн пӗр вӗҫӗнчен тепӗр вӗҫне тухать хашкана ернӗ (*экспресс, пуйăс*). Калăпăшӗпе Африкăри ҫирӗм-вăтăр патшалăх Ҫӗпӗр чухлӗ ҫук — ак мӗнлерех вăл пирӗн Ҫӗпӗр. Ахальтен мар Ермак, Дежнев, Хабаров пек (*паттăрсен, геройсен*) ячӗсем Ҫӗпӗрпе ҫыхăннă.

Ҫут ҫанталăк пуянлăхӗ пирки калама та кирлӗ мар: вăл — иксӗлми. Ҫӗпӗр вăл юмахри (*пуянлăх, мул*) нӳхрепӗ пек: илнӗҫем тулса пырать. Масштаб та, виҫе те урăхла унта. Ӗмӗт-шухăш та аслăрах.

Ҫынсене те Ҫӗпӗр (*харсăррисене, паттăррисене, хăюллисене, вăйлисене*) юрататъ — хăйне пăхăнтармаллисене ҫеҫ суйласа илет.

**345.** Ҫырса пană синонимсем пӗр-пӗринчен мӗн енӗпе (пӗлтерӗшӗпе е чӗлхе сӗмӗ тӗлӗшӗпе) уйрăлса тăраҫҫӗ? Палăртнă сăмахсемпе илемлӗ литературăран пӗрер предложени тупса ҫырăр.

1. *Ҫи*, кӳп, *чых*, тултар, ҫăт, авăртса яр. 2. *Савăн*, хӗпӗрте, хаваслан, *хавхалан*. 3. *Вӗрен, тӗпче*, тишкер, пăхса тух, шыраса туп (пӗл). 4. Илемлӗ, хитре, чипер, хăтлă, *хӳхӗм*, шеп, кӗрнеклӗ, маттур. 5. Хăюллă, харсăр, *паттăр*, пуҫсăр, *сатур*. 6. *Лăпкă*, йăваш, *кунӗ*. 7. *Шукăль*, яка, *капăр*.

**346.** Текста вуласа тухăр, стилӗпе тӗсне палăртăр. Автор текстра мӗнле синонимсемпе усă курнине, вӗсем пӗр-пӗринчен мӗнпе уйрăлса тăнине кăтартăр. Синонимсене пӗр йӗркене, куҫăмлă пӗлтерӗшсене тепӗр йӗркене ҫырса илӗр. Куҫăмлă пӗлтерӗшсем мӗнле илемлӗх мелӗ пулаҫҫӗ? Ăнлантарăр.

### Лăпкă ир

Кунӗ тӳлек пулнă. Виҫ-тăватă кун ҫил туласа ҫумăр ҫунă хыҫҫăн халӗ уяртнă. Сенкер тӳпе тăп-тăрă. Сӳнме ӗлкӗреймен шултра ҫăлтăрсем илемлӗн йăлтăртатнă. Хӗвел тухăҫӗ ҫуталнăҫемӗн ҫуталса пынă.

Мӗтри лайăх ҫанталăка пăхса савăннă. Уяр чух юлашки сӗлле вырса илесчӗ тесе вăл пусса иртерех тухма шут

тытнӑ. Ҫав шухӑшпа кӗлет* умне хӑвӑрт пырса ларнӑ, тӑлиҫӑпатине илсе урине сырнӑ та тытма* ҫинче ларакан витререн куркапа шыв ӑсса питне ҫунӑ, шӑлӑнма алкумне кӗнӗ. Кунта, стена ҫумӗнчи пӑта ҫинче, шурӑ кӗпе ҫӗтӗкӗ, килте йӑвалланӑ кивӗ шлепке ҫакӑнса тӑнӑ. Мӗтри таса ҫӗтӗкпе шӑлӑннӑ, кӑвакарма пуҫланӑ ҫӳҫне якатса шлепкине тӑхӑннӑ. (*М. Трубина* ҫырнинчен.)

• «Чӑвашла-вырӑсла словарьти» (703-мӗш с.) ӳкерчӗксенчи *кӗлетпе ампара* танлаштарӑр. Халӑх пурнӑҫӗнче вӗсем мӗнле вырӑн йышӑннине ӑнлантарӑр.

**347.** Ҫакӑнти синонимсене пӗлтерӗшре пахалӑх е ӗҫ ӳссе пынӑ йӗркепе вырнаҫтарса тухӑр. Пӗрремӗшпе тӑваттӑмӗш ушкӑна кӗрекен сӑмахсемпе предложенисем йӗркелӗр.

1. Тӗттӗм, тӗксӗм, ӗнтрӗк, ӑмӑр. 2. Сивӗ, уҫӑ, сулхӑн. 3. Пысӑк, катмар, шултра. 4. Лайӑх, чаплӑ, селӗм. 5. Хӑра, пӑшӑрхан, сехӗрлен, шиклен. 6. Макӑр, йӗр, ӗсӗкле, ӳле.

**348.** Панӑ сӑмахсемпе усӑ курса ҫыхӑнуллӑ текст йӗркелӗр. Йӗркеленӗ текстра синонимсене тупса палӑртӑр.

Кӗр ҫитрӗ. Йывӑҫсем тумне улӑштарчӗҫ. Халӗ вӗсем аякран курӑнса лараҫҫӗ.

Пулӑшу сӑмахӗсем: *сарӑ, хӑмӑр, хӗрлӗ, симӗс, ешӗл, илемлӗ, капмар.*

• Ҫак предложенисем пӗр темӑпа ҫыхӑннӑ-и? Мӗншӗн? Вӗсем текстӑн пӗр пайӗ тесе калани тӗрӗс пулнӑ пулӗччӗ-и? Ҫак предложенисем ҫыхӑнуллӑ текстӑн пӗр пайӗ пулчӑр тесен мӗн тумалла? Ӑнлантарӑр.

**349.** «Пӗчӗк уҫланкӑ» темӑпа калав ҫырӑр. Художник куҫӗпе пӑхса уҫланкӑ илемлӗхне ӳкерсе парӑр. Уҫланкӑ илемӗ сире тыткӑна илни ҫинчен хӑвӑрӑн юлташӑра ҫырса пӗлтернӗ пек калав йӗркелӗр. Сирӗн калавӑра вуланӑ хыҫҫӑн унӑн та ҫак вырӑна кайса курас килтӗр.

## 41. Антонимсем

Ӳкерчӗке сӑнӑр та унти хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ пуламсене тупса палӑртӑр. Пуламсене пӗлтерекен сӑмахсемпе усӑ курса предложенисем йӗркелӗр. Предложенисенче хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсемпе усӑ курнин тӗллевне ӑнлантарӑр.





Пӗр-пӗрне хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ пӗр пуплев пайӗнченех пулнӑ сӑмахсене **антонимсем** теҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *тус — тӑшман, ҫамрӑк — ватӑ, ҫутӑ — тӗттӗм, кӗр — тух.*

**Антоним** — грек чӗлхинчи *anti* «хирӗҫ» тата *onoma* «ят» сӑмахсенчен пулнӑ

Антонимсемпе чӗлхере анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Антонимсем пулӑшнипе пурнӑҫӑн, ӗҫ-хӗлӗн, пуламӑн хире-хирӗҫлӗхне витӗмлӗрех-хӗн те уҫҫӑнраххӑн кӑтартма пулать. Шухӑша тарӑнлатнипе пӗрлех антонимсем чӗлхене сӑнарлӑ та витӗмлӗ, курӑмлӑ тӑваҫҫӗ. Тӗслӗхрен:

*Йӑваш* та эсӗ, *шӑллӑ* та,
*Япшар* та эсӗ, *хытӑ* та...
...*Сӑпайлӑ* та, *пуҫтах* та питӗ.
Кӗскен сана мӗскер теес?

*(П. Хусанкай.)*

**350.** Вуласа тухӑр та калава ят парӑр. Текстри паллӑ тунӑ сӑмахсен антонимӗсене тупӑр. Ҫав сӑмахсем мӗнле шухӑша уҫса пама пулӑшаҫҫӗ?

Малтанхи виҫӗ предложение ҫыхӑнтарма пулӑшакан пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсене тупса палӑртӑр.

Пӗррехинче эпир лашасене шыва кӗртрӗмӗр те ҫыран хӗррине илсе тухса ҫума тытӑнтӑмӑр. Шурута юрата-юрата хамӑн пӗчӗк аллӑмсемпе ҫӑватӑп эпӗ. Ҫуса пӗтерсен ҫилхине турама тытӑнтӑм.

Юлташсем мана кӗтсе тӑмарӗҫ, учӗсене утланчӗҫ те фермӑна вӗҫтерчӗҫ.

Эпӗ Шурута пӗр енчен ҫуса пӗтертӗм те тепӗр енне каҫрӑм. Кӑшт *маларах* утрӑм та сасартӑк *тарӑн* ҫӗре анса кайрӑм. Шыв юххи мана пӗве варринелле илсе каять... (*Юхма Мишши* ҫырнинчен.)

**Текста тишкерӗр!**

- Текстри хӑш предложенисем, хӑш сӑмахсем инкек ӑнсӑртран пулса тухнине кӑтартса параҫҫӗ?
- Ача ҫӑлӑнса юлнӑ-ши? Хӑвӑр шухӑшӑра текстри материалпа ҫирӗплетӗр.
- Сирӗн шутпа, ача мӗнле майпа ҫӑлӑнса юлма пултарнӑ?
- Чӗр чунсем ытларах чухне инкекрен камсене, мӗнле ҫынна ҫӑлаҫҫӗ? Текстра ҫакна курма пулать-и? Ӑна текстри мӗнле вырӑнсемпе ҫирӗплетме май пур?
- Мӗнле сӑлтавсене пула ача ҫакӑн пек инкеке кӗрсе ӳкнӗ?
- Ачана юлташӗсем пӑрахса хӑварни вырӑнлӑ-и? Эсир мӗнле шутлатӑр?
- Пӗлмен вырӑнта, уйрӑмах шыв хӗрринче, хӑвӑра мӗнле тытмалла?
- Ӗҫ мӗнле пӗтнине шута илсе калава вӗҫлӗр те ӑна сӑмах вӗҫҫӗн туллин каласа парӑр.

**351.** Сӑмах майлашӑвӗнчи *ҫемҫе* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсене синонимсемпе тата антонимсемпе усӑ курса уҫса парӑр. Вӑл мӗнле пӗлтерӗшлӗ сӑмах пулнине ӑнлантарӑр.

| Сăмах майлашăвĕсем | Синонимсем | Антонимсем |
|---|---|---|
| Çемçе юр | *йăмшак* | *хытă* |
| Çемçе çўç | | |
| Çемçе климат | | |
| Çемçе приговор | | |
| Çемçе шыв | | |
| Çемçе кăмăл | | |

**352.** Паллă ячĕсене антонимсемпе улăштарăр, шухăш тĕлĕшĕнчен ытти сăмахсем те хăйсене улăштарма ыйтаççĕ пулсан вĕсене те улăштарăр. Малтанхи ўкерчĕк мĕнле улшăннине сăнăр. Çак улшăнăва тума мĕн пулăшнине ăнлантарăр.

Хĕвеллĕ ăшă кунсем тăраççĕ. Çўллĕ тўпере çутă та çăмăл пĕлĕтсем майĕпен шăваççĕ. Эпĕ çакна чылай вăхăт хушши сăнаса, киленсе тăтăм, савăнăç туйăмĕ нумайччен манран каймарĕ.

Тĕслĕх: *Сивĕ те тĕксĕм, ăмăр кунсем тăраççĕ.*

**353.** Текстри хĕрсене сăнлама суйласа илнĕ сăмахсем антонимсем пулаççĕ-и? Ăнлантарса парăр. Антонимсен мăшăрĕсем мĕне пĕлтереççĕ (ĕçе, палла, япалана)? Калав, сăнлав, ăслав тĕсĕпе çырнă текстсенче мĕне пĕлтерекен антонимсем ытларах тĕл пулмалла пек? Хăвăр шухăшăра тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

### Таруçпа Маруç

Таруç тăрăхла питлĕ, шуранкарах çутă сăнлă, çўхе туталлă, кăвак куçлă. Маруç кўпшекрех питлĕ, хĕп-хĕрлĕ сăнлă, хулăн туталлă, хура куçлă. Таруç вара яштак пўллĕ, çинçе пилĕклĕ, тирпейлĕ çыхнă ыраш кĕлти* пек. Маруç лутра пўллĕ, тулли кĕлеткеллĕ, пушă çыхнă сĕлĕ кĕлти пек. Тумланасса вĕсем уява та, ĕçе те пĕр еверлĕ тумланса тухаççĕ. Кĕçĕр иккĕшĕ те чĕнтĕрлĕ шурă кĕпе тăхăннă, симĕс саппун çакнă, шурă тутăр çыхнă. (*А. Артемьев* çырнинчен.)

**354.** Панă сăмахсен синонимĕсемпе антонимĕсене тупăр.

Тĕслĕх:

пăлханать — тăвăнать *(син.)*, лăпланать *(ант.)*

Ачаш, имĕр, вичкĕн, пурнăç, ăс-пуç, юлташ, илпек*.

**355.** Текстра антонимсене тупăр, вĕсем мĕнле пуплев пайне кĕнине кăтартăр. Автор мĕн тĕллевпе антонимсемпе усă курнине ăнлантарăр.

## Икĕ Нина

Салампи хула хĕрринчи йывăç пӳртре, пĕр карчăк патĕнче, хваттере вырнаçрĕ. Унпа пĕрле тата икĕ студентка. Пĕри — Соловьева Нина — ял хуçалăх институтĕнче зоотехника уйрăмĕнче вĕренет, тепри — Петрова Нина — педагогика институтĕнче.

Соловьева çарта пулнă хĕр, арçын пек патвар кĕлеткеллĕ, хура хулăн çӳçне арçынла кастарнă, салтакла çирĕп утать, сăмаха пат тӳрĕ татса калать. Ăна шӳтлесе Пысăк Нина тесе чĕнеççĕ. Петрова — тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ, шурă çӳçлĕ хĕр ача, икĕ çӳхе çивĕтне хĕрлĕ хăю татăкĕпе çыхса çӳрет. Ку пуринчен те именет, часах хĕрелет, шăппăн-шăппăн калаçать, ют çынсем умĕнче пытанарах ларма тăрăшать. Ăна хваттерте Пĕчĕк Нина тесе чĕнеççĕ. (*А. Артемьев* çырнинчен.)

• Антонимсемпе усă курса «Икĕ юлташ» е «Икĕ пĕртăван» темăпа пĕчĕк калав çырăр. Антонимсемпе синонимсене аялтан йĕр туртса палăртăр.

**356.** Текста тĕрĕс интонаципе вулăр. Сиктерсе хăварнă сăмахсем вырăнне паллă тунă сăмахсемпе килĕшӳллĕ (хăшĕнпе те пулин тӳр килекен сăмахсен) антонимсене тупса çырса илĕр.

— Мĕн-и, — майĕпен çеç сăмах хускатрĕ Шерккей Тухтар çинчен куçне илмесĕр, — пирĕн пек çынна, Тухтар, санах та калăпăрин, килĕшмест-çке çакăн пек чаплă тум-

тир çакса яни. Хай, мĕнле калас иккен те, чăх йăвинче ăнсăртран, ăнсăртран кăркка чĕппи тухнă пек пулать, çапла мар-и? Санпа çывăхрах тăрса калаççан иксĕмĕр, иксĕмĕр кирек хăçан та пĕр чĕлхе тупаканччĕ-ха. Чăваш çынни вăл *ватти* кăна мар, ... пулсан та вăрăмрах та пысăк тумтире куç хывать. Уншăн тесен — *ăшă* та питĕ пултăр, ... ан çаптăр. Çавă паха, çавă паха. Ахаль, пăхатăп та, ку пиншакĕ сана ... те иккен, чавса тĕлĕнче те çăттă-çăттă тытать-ха, *тăвăртарах* та пулма кирлĕ. Тăвăррине ... çук ĕнтĕ ăна, *шалпаррине* тесен — ... пулать. (*Илпек Микулайĕ* çырнинчен.)

• Шерккей калаçăвне сăнăр, пĕр сăмахпа çине-çине усă курни калаçăва мĕнле сĕм панине ăнлантарăр. Хăвăр çырнине автор тексчĕпе танлаштарăр.

• Текст тăрăх пăхса Шерккей мĕнле çын пулнине пĕр сăмахпа калăр, унăн антонимне тупса палăртăр.

**357.** Çырса илĕр, антонимсене тупăр та мĕнле пуплев пайне кĕнине кăтартăр. Текстра антонимсемпе мĕнле тĕллевпе усă курнине ăнлантарăр.

Кирек епле япалан та хире-хирĕç тăракан икĕ енĕ е икĕ вĕçĕ пур. Куна хирĕç — каç, хĕле хирĕç — çулла, çурçĕре хирĕç — кăнтăр, аяла хирĕç — çиел, пурнăçа хирĕç — вилĕм...

Çав йĕркепех ĕнтĕ савăнăçăн тепĕр енĕ хуйхă, телейĕн инкек-синкек пулса тăрать. Этем пурнăçĕнче хуйхă кăна мар, савăнăç та пурри е инкек-синкек хыççăн телей тупăнни аван ĕнтĕ, савăнăçпа телей хыççăн хуйхă-суйхăпа инкек-синкек сиксе тухни вара хытă пăшăрхантарать. (*М. Кипек* çырнинчен.)

**358.** Хирĕçле танлаштарусемпе усă курса çак темăсенчен иккĕшĕнпе пĕчĕк калав, пĕринпе синквейн çырăр.

1. Вăрçă тата мир. 2. Этем характерĕн вăйлă тата вăйсăр енĕсем. 3. Паттăрлăх тата хăравçăлăх.

Т ĕ с л ĕ х: Вăрçă тата мир.

Вăрçă — этемлĕхĕн хăрушă тăшманĕ. Вăл миллион-миллион çынна, этем тунă пурлăха пĕтерет, çунтарать, салатать. Кашни киле хуйхă, куççуль илсе килет. Мир вăл — этемлĕх çуначĕ, аталану çăл куçĕ, халăхсем, çынсем хушшинчи туслăх, тăванлăх. Çемьери, кашни ача пичĕ çинчи савăнăç, пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарнă тулăх пурнăç.

**359.** **Ваттисен сăмахĕсен пĕрремĕш пайне иккĕмĕш пайĕпе çыхăнтарăр, антонимсене çырса илĕр, вĕсем мĕнле пуплев пайне кĕнине кăтартăр. Каларăшсенчи антонимсен вырăнĕпе пĕлтерĕшне ăнлантарăр.**

| | |
|---|---|
| 1. Ăслă çыннăн ĕç нумай, | ватă хулă хуçăлать. |
| 2. Тĕрĕслĕхе мухтаççĕ, | кай-кай теме йăла çук. |
| 3. Йăнăш йăнтарать, | кĕçĕнни ан пӳлтĕр. |
| 4. Çамрăк хулă авăнать, | укçа вара ăслине çеç кăмăллать. |
| 5. Çамрăкла вĕренмесен | ухмахăн сăмах нумай. |
| 6. Асли сăмахне | кулса тухса каять. |
| 7. Килекен килтĕр те, | ултава хурлаççĕ. |
| 8. Укçана ăсли те, ухмаххи те юрататать: | ватăлсан вĕренме хĕн вара. |
| 9. Кил-кил теме йăла пур, | кайма та пĕлтĕр. |
| 10. Укçа вăл йĕрсе килет те | тĕрĕс тӳрлетет. |

**360.** **Текстра тĕл пулакан антонимсене тупса палăртăр, мĕне кура сăмахсем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса çырса илĕр.**

Т ĕ с л ĕ х: *шăрăх* — *сивĕ* — температура паллисене кура.

**Кăмпа**

Эх, тапса тухнă та кăмпа! Мĕн тĕрли кăна çук пулĕ: тӳме пек пĕчĕкки те, сунчăк пек пысăкки те. Пĕрерĕн, икшерĕн, ушкăнпа, кĕтӳпе, черетпе, кукăр-макăр йĕрпе, карти-картипе ӳснисем пур. Сапаланса шăтнисем, купаланса шăтнисем. Карттус сăмси пек лараканнисем, пĕр рет çийĕн тепĕр

ретпе тухнисем. Хĕрлĕ ăвăс çулçи тĕслисем, сарă хурăн çулçи, хăмăр юман çулçи, симĕс сирень çулçи тĕслисем. Чернил пек кăваккисем, утмăл турат пек сенкеррисем. Юр пек шуррисем, кăмрăк пек хурисем... (*Н. Сладков* çырнинчен.)

• **Предложенисенче антонимсемпе тата пĕр йышши членсемпе усă курни автора мĕнле ӳкерчĕк тума, мĕнле шухăша йĕркелеме пулăшнă? Ăнлантарăр.**

**361.** **Ваттисен сăмахĕсен иккĕмĕш пайĕсене антонимсемпе усă курса вĕçлĕр. Антонимлă сăмахсене кăтартăр.**

1. Çĕрте малта пыр, пинте ... . 2. Ăслă çынпа тус пулсан ăслă пулать, ... . 3. Пур пĕрле, ... . 4. Ырă çын çынтан кулмасть, ... . 5. Касма çăмăл, ... . 6. Лаша вĕçерĕнсен тытăн, ... .

## 42. Словарьсемпе усă курасси

Ӳкерчĕксене сăнăр. Эсир тата мĕнле словарьсем пĕлетĕр? Вĕсен айне мĕн çырса хунă пулăттăр? Вĕренӳре хăш словарьсемпе ытларах усă куратăр?



1.



2.



3.

1. Эпĕ сăмахсене тĕрĕс çырма вĕрентетĕп. Тĕрĕс çырма вĕренес тетĕн пулсан мана час-часах уçкаласа пăх.

2. Эпĕ чăвашларан вырăсла, вырăсларан чăвашла куçарма вĕрентетĕп. Ку çеç те мар, чăваш сăмахĕсен пĕлтерĕшĕсене те ăнлантарса паратăп. Сăмахсен пĕлтерĕшĕсене пĕлес тетĕн пулсан мана тытса пăхма ан ӳркен.

3. Эсӗ мана алла илсен кашни сӑмахӑн пӗлтерӗшӗпе е пӗлтерӗш ярӑмӗпе, ҫирӗпленнӗ ҫыхӑнӑвӗсемпе тата стиль уйрӑмлӑхӗпе паллашма пултаратӑн. Тӑтӑш усӑ куракан сӑмахсемпе пӗрлех сайра тӗл пулаканнисемпе те, кивелнисемпе пӗрлех вӗр ҫӗннисемпе те усӑ курма вӗрентетӗп.

Словарьсем сӑмахсене тӗрӗс ҫырма вӗрентнисӗр пуҫне вӗсен тулли пӗлтерӗшне, лексика варианчӗсене, авалхи пулӑвӗпе паянхи кун-ҫулне ҫутатаҫҫӗ. Чӗлхе тӗпчевҫисем словарьсене икӗ пысӑк ушкӑна пайлаҫҫӗ:

1) **ӑнлав словарӗсем** — энциклопеди, логика, философи, поэтика словарӗсем;

2) **чӗлхе словарӗсем** — тӗллевне кура — ӑнлантару, орфографи, куҫару (чӑвашла-вырӑсла), орфоэпи (тӗрӗс вуласа калаҫмалли), этимологи, диалектологи, фразеологи, синонимсен, антонимсен, омонимсен словарӗсем пулаҫҫӗ.

Сӑмахӑн уйрӑм пӗлтерӗшӗсене араб цифрипе палӑртса уйрӑм статьяра ҫырса ӑнлантараҫҫӗ.

Тӗп сӑмах хыҫҫӑн пыракан словарь текстне словарь статйи теме йышӑннӑ. Словарь статйинче тӗрлӗ кӑтарту (грамматика, стилистика), сӑмах тӗрлӗ ҫыхӑнура пӗлтерӗш сӗмӗсене улӑштарнине кӑтартакан тӗслӗхсем, ӑнлантарса пани е тепӗр статьяна вулама сӗнни пулма пултарать.

Сӑмахӑн омонимне Рим цифрипе кӑтартаҫҫӗ.

Словарьсен тытӑмне пӗлни сӑмахсен пӗлтерӗш тӗсӗсене калаҫупа ҫырура тӗрӗс усӑ курма пулӑшать.

Французсен паллӑ писателӗ А. Франс словаре кӗнекесен кӗнеки тенӗ, эпир ӑна урӑхла — сӑмах кӗнеки тетпӗр.

**362.** Омоним сӑмахсене словарьте мӗнле палӑртнине аса илӗр. Словарьсемпе усӑ курса пилӗк мӑшӑр омоним тупӑр, вӗсен пӗлтерӗшӗсене ҫырса илӗр. Икӗ мӑшӑрӗнчи омонимсемпе предложенисем тупса ҫырӑр.

Тĕслĕх:

**лап I** низина, плоский, плашмя
**лап II** совсем, совершенно

*Пирĕн ял лапа вырнаçса ларнă. Ачан хăлхи лапах питĕрĕнсе ларчĕ.*

**363.** *Йăва, кăра, пахча, паттăр, кăшăл, вăйлă* сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕпе предложенисем çырăр. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕсене «Чăвашла-вырăсла словарьте» шыраса тупăр.

**364.** Сăвва вырăсла куçарăр.



**Çулçăсем**

— Кам сăрланă-ши, анне,
Вĕрене çулçисене?
Пулнă тăнă симĕсрен
Хĕрлĕ, сарă та кĕрен.
— Сăрлаканĕ — кĕркунне, —
Хуравларĕ ман анне.

*(В. Эктел.)*

**365.** Орфографи словарĕнчен *ф, ц, щ, ъ* сас паллисемлĕ вунă сăмах çырса илĕр. Вĕсем мĕнле чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем пулнине ăнлантарăр.

**366.** Пирĕн тăрăхра пурăнакан мĕнле чĕр чунсен ячĕсене пĕлетĕр? Вĕсен ячĕсене «Чăвашла-вырăсла словарьпе» усă курса çырса илĕр. Пĕр-пĕр чĕр чун çинчен каласа парăр, презентаци хатĕрлĕр.

**367.** Хăвăра килĕшнĕ чĕр чуна усрава илме ыйтса аçăр-аннĕр патне çыру çырăр. Çырăва вуланă хыççăн унта сире ирĕк памасăр тăмалли пĕр сăлтав та ан пултăр. Çырура сирĕн мĕнле шухăшсене палăртмалла? Хăвăрăн шухăшăрсене мĕнле майпа аçăр-аннĕре ĕнентермелле? Ăнлантарăр.

**368.** Çак текстпа усă курса «Чăваш чĕлхинчи словарьсем» темăпа пĕчĕк сочинени çырăр. Сочиненире çак шухăшсене палăртса хăварăр:

1. Чăваш чĕлхин мĕнле словарĕсене пĕлетĕр? Вĕсен уйрăмлăхĕсем, пĕлтерĕшĕ.
2. Чăваш чĕлхи урокĕсенче эсир мĕнле словарьсемпе паллашрăр?
3. Словарьсен тытăмĕ.
4. Словарь тăрăх мĕн-мĕн пĕлме пулать?
5. Словарьсен авторĕсем.
6. Словаре камсем валли кăларнă?
7. Эсĕ словарьпе ĕçлеме юрататăн-и?

### Малтанхи чăваш словарĕ

Шведсенчен чăвашсемпе интересленекенни никамран малтан Страленберг пулнă. Филипп-Иоган Страленберг, Швеци çарĕн офицерĕ пулнăскер, 1709 çулта Полтава патĕнчи пысăк çапăçăва хутшăннă. Кунта ăна вырăс çарĕ тыткăна илнĕ. Кун хыççăн вăл нумай вăхăт Çĕпĕрте пурăннă. Çак хушăра Çĕпĕр çĕрĕн историйĕпе географине çырнă. Çĕпĕр карттине ӳкернĕ. Раççейре пурăннă вăхăтра вăл чăваш чĕлхипе те интересленнĕ. Чăваш чĕлхин пĕчĕк çеç словарьне тунă.

Ку вăл чи малтанхи чăваш словарĕсенчен пĕри пулнă. Унта мĕнпурĕ те çирĕм сакăр сăмах кăна кĕнĕ. Çав шутра «хĕвел» сăмах та пур. Тахçанхи чăваш çынни, урăх çĕршыв çыннине хăйĕн чăваш чĕлхипе паллаштарнăскер, «хĕвел» сăмаха асăнмасăр хăварман! Маттур! (*Уйăп Мишши* çырнинчен.)

**369.** «Чăвашла-вырăсла словарьти» (706-мĕш с.) ӳкерчĕксемпе усă курса çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр. Вĕсем халăхăн традицилле культуринче мĕнле вырăн йышăннине «Вĕсем пурнăçра кирлĕ пулнă...» темăпа çырнă калавра уçса парăр.

Тарасаллă çăл*, лаххан*, сĕт витри, тирĕк, чĕрес*, турчăка*, тăвар килли, калак, çатма аври, хуран ывси, ывăс, такана*, савук*, ухват.

## 43. Ятарлă сăмахсем (Профессионализмсем)

Ҫак сăмахсемпе мĕн ĕҫ тăвакан ҫынсем усă кураҫҫĕ? Сăмахсене профессисем тăрăх ушкăнласа ҫырса тухăр. Сăмахсен пĕлтерĕшне пĕлмесен словаре пăхăр.

*Сава, ăйă, вĕркĕч, сунтал, суфлер, авансцена, реплика, кувалда, кулиса, карă, режиссер, стадион, хĕскĕч, турнир, матч, гимнастика, хоккей, боксер, теннис, судья, бильярд, кросс.*

Чĕлхен мĕнпур йышĕнче ҫынсен уйрăм ушкăнĕнче ҫеҫ усă куракан сăмахсем пур. Ун пек сăмахсем шутне пĕр-пĕр профессипе ҫыхăннă, ҫав ĕҫре ĕҫлекен ҫынсем усă куракан ĕҫ хатĕрĕсене, вĕсен ĕҫне пĕлтерекен сăмахсем кĕреҫҫĕ. Пĕр-пĕр ĕҫе ăста пĕлекен ҫынсем — специалистсем — халăх чĕлхинче тĕл пулсах кайман сăмахсемпе те усă кураҫҫĕ.

Тĕслĕхрен: *диагноз, вакцина, пинцет, рентген* — врачсем ĕҫре час-час усă куракан сăмахсем; *ăйă, сакруй, сава, тĕрĕ пăчки, ал пăчки, карă* — столярсен чĕлхинче анлă сарăлнă сăмахсем.

Пĕр-пĕр профессире ҫеҫ усă куракан ятарлă сăмахсене **профессионализмсем** теҫҫĕ.

Профессионализмсем те майĕпен халăхра пурте усă куракан сăмахсем пулса каяҫҫĕ, мĕншĕн тесен пурăна киле вĕсен пĕлтерĕшне пĕтĕм халăх пĕлсе ҫитет.

Профессионализмсене ăнлантармалли уйрăм словарьсем, справочниксем пур: «Медицина терминĕсен словарĕ», «Географи терминĕсен словарĕ», «Чĕлхе терминĕсен ăнлантаруллă словарĕ», «Социаллă сăмахлăхăн вырăсла-чăвашла словарĕ», «Ял хуҫалăх терминĕсен словарĕ» т. ыт. те.

Пĕтĕмĕшле словарьсенче профессионализмсене *спец.* тесе палăртаççĕ, вăл — *специальное (ятарлă сăмах)* тенине пĕлтерет; *техн.* тесе çырни *техника сăмахĕ* пулнине пĕлтерет.

**370.** Текста вуласа тухăр. Унта мĕнле професси çинчен калаçу пырать? Çав профессипе çыхăннă сăмахсене çырса илĕр, вĕсен пĕлтерĕшне уçса парăр. Вĕсенчен хăшĕсене пурте усă куракан сăмахсем теме пулать? Профессионализмсем сире текста ăнланма кансĕрлеççĕ-и? Мĕншĕн?



— Çак çипсене кумми теççĕ, — ăнлантарчĕ хĕрарăм. — Урлă çиппине, ак çакна, ураççи тетпĕр.

Çавăнтах вăл хĕç*, ăса*, çĕрĕ* мĕн тума кирли çинчен ăнлантарса пачĕ. Ялтан килнĕ хĕр ачасем вĕсене курнă, пĕлеççĕ иккен, анчах ялти пир станĕн хĕç шăлĕсене хăмăшран тăваççĕ, кĕррине* çĕлен çипрен çыхаççĕ. Ăси те тимĕр мар. Миккул пăхнă та тĕлĕннĕ: кĕрри пĕр чарăнми ташласа тăни, ăсипе çĕрри вĕçĕмсĕр чупни, хĕçĕ каллĕ-маллĕ çӳрени уншăн сăмахпа кала пĕлмелле мар кăсăк тенипе кăсăк ĕнтĕ.

— Ку ак, катан пир чĕркекенни, хивси* пулать. Пир тăрăхне яка та тикĕс тĕртес тесен тăтăшах карăнтарса тăмалла. Çав ĕçе хивси тăвать. Ăнлантăр-и? *(В. Ухли.)*

**371.** Текста вуласа тухăр та ят парăр, профессипе çыхăннă сăмахсене çырса илĕр.

Иван Иванович Çирĕклĕ Кӳлле вăтăр пилĕк çул каялла килнĕ (ку шутран пилĕк çулне вăл вăрçăра ирттернĕ). Ял çыннисем калана тăрăх, ĕлĕк Иван Иванович амбулаторире пĕчченех ĕçленĕ: терапевчĕ те, хирургĕ те, куçпа шăл

тухтăрĕ те хăех пулнă. Паллах, тухтăр патне ытти ялсенчен те çӳренĕ чирлисем. Çавăнпа таврара Иван Ивановича палламан çын та çук. Чăн та, хăшĕнне вара пуçне, чĕрине, куçне ыратма чарнă вăл, хăшĕнне шыççине, çăпанне тӳрлетнĕ, сикнĕ урине, аллине лартнă. Анне калană тăрăх, ача чухне мана та сив чиртен сыватнă.

Йывăр вырткансем патне ав хăй çӳрет. Унпа пĕрле ĕçлекен Шура ятлă çамрăк фельдшерица асли каланипе рецептсем çырать, уколсем, тĕрлĕрен процедура тăвать. Чăнах та, таса чунлă, пысăк чĕреллĕ çынсем çеç хăйсен ĕçне чун-чĕререн парăнса ĕçлеççĕ. (*В. Сатай* çырнинчен.)

**372.** Текста иккĕн вулăр. Репликăсенчи чарăну паллисене шута илсе кашни хăйĕн шухăшĕ тĕрĕссине ĕнентерме тăрăшакан интонаципе вулăр. Эсир кам шухăшĕ тĕрĕс тесе шутлатăр? Профессипе çыхăннă сăмахсене тупса палăртăр.

### Кам пулмалла?

— Мĕн хушнине турăмăр, айта ларса канар, — терĕ Павлик мăн çынла. — Валька, эсĕ ӳссен кам пуласшăн? — ыйтрĕ вăл.

— Манăн летчик пулас килет, унтан та ытларах, Андриян Николаев пек, — космонавт, — пĕлтерчĕ хăйĕн ĕмĕтне Валька[4].

— Эпĕ, атте пек, комбайнер пулатăп, — терĕ Павлик. — Çĕр çинче чи кирли — çăкăр. Ун пирки учительница та калать. Акă эпĕ çăкăр ӳстерекенни пулатăп, ман ĕç — чи кирли.

— Летчик е космонавт та кирлĕ çĕр çинче. Тĕслĕхрен, санăн инçе хулана васкаса çитмелле. Мĕнпе хăвăртрах çитме пулать? Самолетпа. Е тата çынсем Уйăх çине вĕçме пуçлаççĕ. Кам илсе каять сана, э-э? Космонавт! Вăл, летчик пек, космос карапне тытса пырать! — парăнмарĕ Валька та.

— Тытса каях карапна, эпӗ ӳстернӗ ҫӑкӑрсӑр нумаях вӗҫеймӗн! Ирӗксӗрех ман пата телеграмма яратӑн: «Ҫӑкӑр пӗтрӗ, Павлик тусӑм, ярса пар!» — тесе. Вӑт камӑн ӗҫӗ — чаплӑ ӗҫ, э-э?

— Эпӗ хирӗҫ мар сан ӗҫе. Тӗрӗс, ҫӑкӑр — кирлӗ япала. Астӑватӑн-и, Игорь Павлович: «Космос карапӗсем ҫут ҫанталӑка тӗпчеҫҫӗ, ял хуҫалӑхне нумай пулӑшу параҫҫӗ», — тесе каланине. Апла пулсан, ку та чаплӑ ӗҫ! (*Л. Мартьянова* ҫырнинчен.)

• Калавӑн тӗсне, ӑна мӗнле чӗлхепе (стильпе) ҫырнине палӑртӑр. Текст чӗлхи илемлӗ литература чӗлхинчен мӗнпе уйрӑлса тӑнине ӑнлантарӑр.

• Чарӑну паллисене мӗншӗн лартнине калӑр. Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисем ҫинчен аса илӗр.

• «Манӑн ӗмӗт» темӑпа сочинени ҫырӑр, вӑрттӑн шухӑшӑрсене хӑвӑрӑн чи ҫывӑх ҫыннӑра, тӗслӗхрен аннӗре, каласа панӑ пек шухӑшласа ҫырӑр. Пулас сочиненин стильне ӑнлантарӑр.

**373.** Хӑш сӑмахӑн е сӑмахсен пӗрлешӗвӗн пӗлтерӗшне йӑнӑш уҫса панӑ?

1. Обстоятельство — ӗҫ мӗнлелӗхне, вӑхӑтне, вырӑнне, сӑлтавне т. ыт. те кӑтартакан кӗҫӗн член.
2. Предложенин никӗсӗ — подлежащипе сказуемӑй.
3. Профессионализмсем — чӗлхере анлӑ сарӑлнӑ, час-час усӑ куракан сӑмахсем.
4. Пӗр йышши членсем — пӗр ыйтурах тӑрса предложенире пӗр сӑмахпах ҫыхӑнакан членсем.

## 44. Йышӑннӑ сӑмахсем

Йышӑннӑ тата тӗп чӑваш сӑмахӗсем ҫинчен эсир мӗн пӗлетӗр? Каласа парӑр.

Йышӑннӑ сӑмахсем ҫинчен ҫырнӑ текста тимлӗн вуласа тухӑр, унӑн планне тӑвӑр. Текста вуласа тухнӑ хыҫҫӑн мӗн ҫӗнни пӗлтӗр? План ҫине таянса каласа парӑр.

Чӗлхери сӑмахсем пурте пӗр харӑс пулса кайман. Чӑваш чӗлхинче чи авалхи сӑмахсем те, каярахпа пулса кайнисем те, хальтерех пулнисем те пур. Урӑх чӗлхесенчен йышӑннӑ сӑмахсем те сахал мар.

Йышӑннӑ сӑмахсенчен ытларах пайӗ ҫӗнӗ япаласемпе пулӑмсене пӗлтерекен сӑмахсем пулнӑ.

Чӑваш чӗлхинче, ученӑйсем тӗпчесе пӗлнӗ тӑрӑх, вырӑс чӗлхинчен улшӑнса калаҫу урлӑ кӗнисем: *апат, пӗрене, пӑрӑс, купӑста, кӗрпе;* улшӑнмасӑр кӗнисем: *трактор, тетрадь, галстук, демократи;* мари (*кукӑль, тенкел, чӗкеҫ*), тутар (*юлташ, минтер, чечек*), араб (*авал, мерчен, вӑхӑт, телей*), перс (*йӗтес, сурпан*) тата ытти чӗлхесенчен йышӑннӑ сӑмахсем ытларах тӗл пулаҫҫӗ.

Вырӑс чӗлхинчен калаҫу урлӑ кӗнӗ сӑмахсене мӗнле калатпӑр, ҫапла ҫыратпӑр. Ҫырупа кӗнисене, тӗпрен илсен, вырӑс чӗлхинче мӗнле ҫырма йышӑннӑ (пуҫламӑш формӑра), ҫапла ҫыратпӑр.

**Ӑнлантарӑр!**

- Мӗншӗн чӗлхерен хӑш-пӗр сӑмахсем тухса ӳкеҫҫӗ, теприсем чӗлхене кӗрсе пыраҫҫӗ?
- Сӑмахсене ют чӗлхерен йышӑнасси мӗнле сӑлтавсенчен килет?
- Сӑмах йышне пуянлатса пыма май паракан ҫул-йӗре палӑртса тухӑр.
- Урӑх чӗлхерен йышӑннӑ виҫӗ чӗлхе терминне ҫырса илӗр. Вӗсем мӗне пӗлтереҫҫӗ? Чӑваш чӗлхине вӗсем ӑҫтан кӗнӗ?

**374.** Вуласа тухӑр та йышӑннӑ сӑмахсене кӑтартӑр. Вӗсем мӗнле чӗлхерен тата хӑш вӑхӑтра кӗнине ӑнлантарса парӑр. Текстра калаҫу камсем ҫинчен пырать, вӗсем ҫинчен эсир тата мӗн пӗлетӗр?

Иванов алӑка сӑпайлӑн шаккаса кӗчӗ. Вӑл хура костюмпа, ҫемҫе ҫӑматӑпа, калушне коридорта хывса хӑварнӑ; жилетки айӗнчен, чӑлт шурӑ кӗпе умӗпе, лӗпӗш пек хура бант курӑнать. Тӗксӗм ҫырӑ ҫӳҫне сулахайран уҫса сылтӑмалла тураса хунӑ.

«Ашшӗ пекех чипер, анчах ун пек тӗреклӗ мар, шуранкарах, имшертерех», — шухӑшларӗ Яковлев ҫамрӑк ҫынна куҫпа виҫсе.

— А-а, Константин, кӗтеттӗм сана, ирт тӗпелерех, ыйткалакан пек алӑк патӗнче ан тӑр.

Директор Кӗҫтука хулӗнчен ҫавӑтса сӗтел умне лартрӗ, типографи сӑрри шӑрши кӗрекен кӗнекене тыттарчӗ. (*А. Артемьев* ҫырнинчен.)

• Предложенисенчи антонимсене аялтан пӗр йӗр, синонимсене икӗ йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

**375.** Ӳкерчӗксем тӑрӑх ӗлӗкхи виҫене палӑртакан сӑмахсен чӑвашла ячӗсене ҫырӑр, вӗсен пӗлтерӗшне ӑнлантарӑр. Сирӗн шутпа, вӗсем хӑш чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсем шутланаҫҫӗ? Мӗншӗн?




**376.** Йышӑннӑ сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарӑр. Вӗсен ҫумне синоним пулакан тӗп чӑваш сӑмахӗсем лартса ҫырса илӗр.

Тӗслӗх: *аромат — ырӑ шӑршӑ.*

Библиотека, презент, задани, известь, конфликт, кобура, учитель, начальник, писатель, информаци, январь, поэт, сироп, система.

Тӗрӗслесе пӗлмелли сӑмахсем: *вулавӑш, парне, вӗрентекен* е *вӗрентӳҫӗ, кӑрлач, шерпет, йӗрке, ҫыравҫӑ, ӗҫ* е *хушу, акшар, йӗнӗ, хирӗҫӳ, пуҫлӑх, сӑвӑҫӑ, пӗлтерӳ.*

**377.** Текстри хӑш сӑмахсем урӑх чӗлхерен кӗнӗ? Вӗсем мӗнле майпа кӗнӗ сӑмахсем шутланаҫҫӗ?

### Кашни япала хӑй вырӑнӗнче пулмалла

Ваҫҫа ирхине хӑйӗн япалисене шыраса хӑшкӑлать. Пӗр чӑлхи унӑн тенкел ҫинче, тепри сӗтел айӗнче выртать. Хӑрах кӑҫатти кравать айӗнче, хӑраххи кӑмака ҫинче. Ваҫҫа кашни ир ҫапла хӑй япалисене шыраса вӑхӑта иртерет. Вӑл тепӗр чухне урока та ӗлкӗреймест.

Ҫыннӑн кашни япали хӑй вырӑнӗнче пултӑр. Вӗренекен ачан тетрадьсем, кӗнекесем, ручкӑпа кӑранташсем яланах сумкӑра пулмалла. (*К. Ушинский* ҫырнинчен.)

• Сирӗн пурнӑҫра К. Ушинский ҫырнӑ евӗр тӗслӗхсем тӗл пулаҫҫӗ-и? Эсир хӑвӑр япалӑрсене мӗнле усратӑр? Каласа парӑр.

Сӑмахсене урӑх чӗлхерен йышӑннипе йышӑнманнине, хӑш чӗлхерен йышӑннине этимологи словарӗнче вуласа пӗлме пулать.

**Этимологи** — чӗлхе наукин пӗр пайӗ. Вӑл сӑмахсем мӗнле пулса кайнине тӗпчет. Тӗслӗхрен: *ялан, юлташ* — тутар чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсем. Сӑмах пуҫламӑшӗнче **й** сасӑ, ун хыҫҫӑн **а, у** сасӑсем тӑраҫҫӗ пулсан вӑл сӑмах тутар чӗлхинчен кӗнине пӗлтерет.

Чӑваш чӗлхинче халӗ усӑ куракан **б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ** сас паллиллӗ сӑмахсем пурте урӑх чӗлхерен йышӑннӑскерсем. Вӗсенчен чылайӑшне вырӑс чӗлхинчен е вырӑс чӗлхи урлӑ урӑх чӗлхесенчен йышӑннӑ. Тӗслӗхрен: *дневник, будильник, диаграмма, журнал.*

**378.** Сӑмах диктанчӗ ҫырӑр. Панӑ сӑмахсенчен хӑшӗсем йышӑннӑ сӑмахсем шутланаҫҫӗ? Мӗнле паллӑ тӑрӑх вӗсене йышӑннӑ сӑмахсем теме май пур?

Электрификаци, пичче, пичке, радиофикаци, пуҫ, шкул, географи, автобиографи, ҫӗр, фотографи, асанне, савӑнӑҫ,

орфографи, горизонт, механизаци, информаци, демонстраци, хĕвел, резолюци, хăмăт, биатлон, кризис, кредит, кислород, велодром.

**379.** Мĕнле шутлатăр, *вершук** хăш чĕлхерен, мĕнле майпа кĕнĕ сăмах? Унăн пĕлтерĕшне уçса парăр. Таблицăпа усă курса хăвăр çемьери çынсен çӳллĕшне сантиметрпа виçĕр те вершука çаврăр, çемьен вăтам виçине шутласа тупăр. *Вершук* сăмахăн пĕлтерĕшĕ ваттисен сăмахĕсенче уçăмлă палăрнине тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр. Пĕлтерĕшĕпе пĕрешкел чăвашла тата вырăсла тӳр килӳсене тупса танлаштарăр.

Тĕслĕхрен: *Сам с вершок, а голова с горшок = Пĕкĕрен çӳллĕ, автанран лутра (... ?)*

| Çемье | Сантиметр | Вершук |
|---|---|---|
| Атте | 182 | 41 |
| Анне | | |
| Пичче | | |
| Аппа | | |
| Эпĕ, Салампи | | |
| Вăтам виçе | | |

**380.** Ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсен лексика пĕлтерĕшне уçса парăр. Панă сăмахсен пĕлтерĕшне уçса панă чух ăнлантарăва çак схемăпа тытса пырăр:

—— вăл — .

Орфографи, биографи, телефон, телевизор, телескоп, географи, телеграмма.

**381.** Палăртнă сăмахсем хăш чĕлхерен кĕнĕ? Мĕншĕн çапла шутлатăр? Текста вуласа тухăр та ăна ят парăр. Пĕрремĕш абзацри предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннă? Ятпа хушамат çын пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнаççĕ? Ăнлантарăр.

*Юратать* Вася хăйĕн амăшне. Ара, ăна *епле юратмăнха* ĕнтĕ! Вася амăшĕ мĕн тери ăслă та ырă, мĕн-мĕн кăна

тума пӗлмест пулӗ! Каҫсерен вара Васьӑна тем ҫинчен те каласа парать.

Паян Вася *шкултан яланхи* пекех таврӑнчӗ те ашшӗ патне васкарӗ. Лешӗ картишӗнче вутӑ ҫуратчӗ. Ывӑлӗ хуйхӑллине курчӗ те ашшӗ ҫӗкленӗ пурттине ҫапла сывлӑшрах тытса тӑрса васкавлӑн ыйтрӗ:

— Мӗн пулчӗ, ачам? Тем инкек мар пуль те?..

— Ҫук, инкек мар, — пуҫне ҫӗклемесӗрех каларӗ Вася. Кӑштах чӗнмесӗр тӑчӗ те: — Пирӗн хушамат пур-и? — тесе ыйтрӗ.

— Пур паллах, — хуравларӗ ашшӗ. — Пур! Хушамат пур пирӗн. Эпир Чапаевсем... Чапаевсем эпир. (*Юхма Мишши* ҫырни тӑрӑх.)

• Сӑмахсем ют чӗлхерен кӗнине мӗнле те пулин паллӑсем тӑрӑх пӗлме пулать-и? Ҫав уйрӑмлӑхсенчен хӑвӑр пӗлекеннисене кӑтартса тухӑр.

**382.** Ваттисен сӑмахӗсене тӗрӗс ҫыхӑнтарӑр та вӗсен пӗлтерӗшӗсене уҫса парӑр. Вӗсем мӗнле пулма вӗрентеҫҫӗ?

| | |
|---|---|
| 1. Ху вӗренсе ҫитмесӗр... | пурӑнаймӑн. |
| 2. Усал ӗҫ тусан... | ан мухтан. |
| 3. Алӑк патӗнче вырӑн пур чухне... | ҫынна вӗрентме ан хӑтлан. |
| 4. Хӑвӑнта ҫуккипе... | ан тапӑн. |
| 5. Юр ҫинче... | ырӑ ят илтеймӗн. |
| 6. Вӑй ҫитменнине... | тӗпеле кайма хушмаҫҫӗ. |
| 7. Чее пул та... | кӑмпа ан шыра. |
| 8. Ялан ҫын йӑпатнипе... | ҫынна ан мӑшкӑлла. |

**383.** Вырӑс чӗлхинчен калаҫу урлӑ йышӑннӑ сӑмахсен ушкӑнне палӑртӑр.

1. Пичке, витре, пӗрене. 2. Ферма, фронт, шофер. 3. Атте, анне, аппа. 4. Ӑмӑрту, выля, сӗт. 5. Кӑвакарчӑн, эрудит, йӑмралӑх.

**384.** Вуласа тухăр, каласа параканăн чĕлхине сăнăр. Вырăсла-чăвашла çырнă сăмахсен чĕлхери вырăнне палăртăр. Текста литература нормисемпе килĕшӳллĕ юсаса çырса илĕр.

Паян эпĕ мамăран письмо илтĕм. Вăл çырать, что сывлăх япăхах мар тесе. В апреле месяце ăна пенси повышать туса панă. Пире çитес эрнере пĕтĕм семьяпах яла пырса курма приглашать тăвать.

*хальтен-халь*
*хальхи*
*хальлĕхе*
*ху хальлĕн*
*хăть*

Пирĕн мама ватă: скоро çитмĕл пилĕк çул тултарать. Эпĕр ăна хамăр пата хулана килсе пурăнма приглашать тăватпăр, но мама ни в какую. Сирĕн патра унта тет, эпĕ от скуки ухмаха еретĕп тет. Ялта хăть каçсерен пускил карчăкĕсемпе пухăнса калаçса ларатпăр тет.

Если так подумать, тĕрĕс калать мама. Действительно, хамăр с утра до вечера на работе, дети в школе — ăçтан унта целый день тăват стена хушшинче никампа та общаться тумасăр, ним ĕç тумасăр пурăнма пултартăр-ха вăл? Подумали-подумали, вара хальлĕхе пусть ялтах пурăнтăр терĕмĕр. Потом видно будет...

## 45. Кивелнĕ сăмахсем

Мĕнле шутлатăр? Мĕнле сăмахсене кивелнĕ сăмахсем теççĕ? Ӳкерчĕксене сăнăр. Ку япаласемпе ăçта тата хăçан усă кураççĕ? Ӳкерчĕкри япала ячĕсен синонимĕсем пур-и?


Хушпу


Тевет


Шупăр


Тухья



Алка



Ама



Шӳлкеме



Сурпан

Пурнăҫ пĕр вырăнта тăмасть, вĕҫĕмсĕр улшăнса, ҫĕнелсе пырать. Ҫавна май ҫынсем хăш-пĕр ĕҫ хатĕрĕсемпе, тĕрлĕ япалапа усă курма пăрахаҫҫĕ. Вара ҫав япаласене пĕлтерекен сăмахсем те манăҫа тухаҫҫĕ, хăш-пĕр чух чĕлхерен пачах тухса ӳкеҫҫĕ е вĕсемпе сайра хутра ҫеҫ усă кураҫҫĕ. Хальхи саманара *вулăс, уес, кĕпĕрне, пурмис, мăскал, патман* сăмахсене чылайăшĕ пĕлмест, мĕншĕн тесен вĕсене пĕлтерекен япали е ăнлавĕ халĕ ҫук.

Япалипе пĕрлех манăҫа тухнă сăмаха **историзм** теҫҫĕ.

Историзмсем шутне япала ячĕсем ҫеҫ кĕреҫҫĕ: 1) авалхи хатĕрсен ячĕсем — *хăрт* (вăрҫă пуртти), *айпăлта* (ҫурма ҫавракa пуртă) т. ыт. те; 2) кивĕ тум ячĕсем — *хушпу, тухья, шупăр, сурпан, тевет* т. ыт. те; 3) кивĕ виҫе ячĕсем — *пăт, кĕрепенкке, мăскал, чалăш* т. ыт. те.

**385.** Ăнлантару словарĕнчен ĕлĕкхи виҫе паллисене кăтартакан кивелнĕ сăмахсене ҫырса илĕр. Кашнин пĕлтерĕшне кĕскен палăртăр.

Тĕслĕх: *аршăн = 71,1 см.*

**386.** Пĕрремĕш колонкăна арҫынпа хĕрарăмсем кулленхи пурнăҫра усă куракан виҫе паллисене, иккĕмĕш колонкăна ҫĕр виҫе паллисене, виҫҫĕмĕш колонкăна шĕвек тата тĕпренекен япаласен виҫе паллисене ҫырса илĕр.

**Утăм*, хăлаҫ*, чалăш*, вĕрен*, ана-пӳ, ҫухрăм*, йӳн*, сыпăк, пӳрне*, ал лаппи*, шит, чике*, хур, аршăн*, вершук,**

сăвăм, пĕр хутăр, ана*, патман, авăнлăх, çуравăнлăх, урапалăх, тырă чĕресĕ, кунтă, такана, алтăр, чӳлмек, тирĕк, курка, пасма, чĕрес, патьен, ленкес, пичке, витре, çĕклем, ытам, ывăç, кĕсье.

**387.** **Кивелнĕ сăмахсене тупса палăртăр, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр, хăш ушкăна кĕнине кăтартăр. Вĕсене кивелнĕ сăмахсен çак ушкăнне мĕншĕн кĕртнине ăнлантарăр.**

1. Айпăлта* айăпĕ тимĕрçе тивнĕ. *(Ват. сăм.)* 2. Тĕменре* тĕрли пур. 3. Енлĕкне тытиччен тирне ан сӳ. 4. Ир çил самаях тамалчĕ. *(М. Кипек.)* 5. Путăксемпе варсемпе çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет. 6. Сунаслă çынна чечек шăршлаттармаççĕ. *(Ват. сăм.)* 7. Хĕр чухнехи ырлăха хĕрĕх йытăпа шырасан та тупаймăн. *(Ват. сăм.)* 8. Пӳрнĕ ăна пӳлĕхçĕ* кĕске ĕмĕр, йывăр кун. *(К. Иванов.)* 9. Сиктĕрме* урапа, йĕс ӳрече*. Хăш хĕрринчен сиксе ларам-ши? Ай-хай, тăванăмсем, пĕр чунăмсем, хăш хулăртан тытса утам-ши? *(Халăх сăмахлăхĕ.)* 10. Настаççи пӳрте кĕрсе кивелнĕрех шупăрне хывса хучĕ, каçхи апат хатĕрлеме тытăнчĕ. *(К. Петров.)*

**388.** **Текста вулăр та кивелнĕ сăмахсене тупăр. Вĕсем хальхи вăхăтра мĕнле виçене палăртнине ăнлантарса çырăр, кивелнĕ сăмахсен хăш ушкăнне кĕнине кăтартăр.**

**Тĕслĕхрен:** *тӳтрешке = теçеттинăн (1,09 гектар) 1/4 пайĕ = чĕрĕк гектар.*

Элшелĕнче ята висĕ хирĕнче те висĕ тӳтрешкешер* çĕр тивет теççĕ; 548 ят теççĕ пулас. Анара икĕ çур пилĕк* хисеплеççĕ. Çурпилĕкре икĕ тӳтрешке хисеплеççĕ; тӳтрешкере пилĕк хăлаç. Ку енчи çĕр — хура çĕр. Хирте чул таврашĕ, хăйăр пĕрре те çук. Хирте тырă пулнă çул начарах пулмасть теççĕ: анара 16-шар, 17-шар, 18-шар, урапа тырă ларать теççĕ. Урапинчен вара 8-шар, 10-шар, 12-шер пăт тырă тухать теççĕ. (*Г.Т. Тимофеев* çырнинчен.)

- **Элшелĕнчи ял çыннисем мĕн чухлĕ çĕрпе усă курнă? Шутласа тупăр.**

☐ Хальхи вăхăтра усă куракан сăмахсемпе килĕшӳллĕ кивелнĕ сăмахсене словарьпе усă курса пĕрле çырса илĕр. Кашни мăшăрти сăмахсен пĕлтерĕшĕсене танлаштарса пăхăр. Эсир калаçура ытларах хăш юпари сăмахсемпе усă куратăр?

Çырмалли тĕслĕх: *Пурçăн = тарай.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| *пурçăн* | *ант* | *свидетель* | *касамат* |
| *ялав* | *тарай* | *перо* | *пăран* |
| *тупа* | *элем* | *тĕрме* | *калем* |
| *хĕрес* | *амак* | *путек* | *нишлĕ* |
| *чир* | *хуç* | *чирлĕ* | *кӳнтелен* |

Чĕлхери хăш-пĕр сăмахсем кивелсе манăçа тухаççĕ, вĕсем вырăнне çĕнĕ сăмахсем çуралаççĕ. Эсир мăшăрласа çырса илнĕ сăмахсем пĕр пек ăнлавсенех пĕлтереççĕ. *Тарай, элем, ант, хуç, амак, кӳнтелен, калем, касамат, пăран, нишлĕ* сăмахсем тахçан авал чăваш чĕлхинче хăйсен пĕлтерĕшне уçăмлă палăртнă.

Юпасенчи малтанхи сăмахĕсем — халь пурте пĕлекеннисем, анчах та вĕсем каярах пулса кайнă сăмахсем шутланаççĕ. Çапла вара, япали кивелмест, ăна пĕлтерекен сăмахĕ кивелет те, ун вырăнне çĕнĕ сăмах тупăнать.

Куллен усă курма пăрахса çĕннисемпе улăштарнă сăмахсене **кивелнĕ сăмахсем** е **архаизмсем** теççĕ.

Архаизмсен хальхи чĕлхере яланах синонимĕсем пулаççĕ. Архаизмсене хăйсене тĕллĕн сайра калаççĕ. Вĕсем е ваттисен сăмахĕсенче, е сăмах çаврăнăшĕсенче, е мăшăр сăмахсенче тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен: *Саватсапа, ача-пăча, йĕпкĕн хура* сăмахсенчи *сапа, пăча, йĕпкĕн* пайсем хăйсен пĕлтерĕшне çухатнă. Вăл сăмахсем кивелсе чĕлхерен тухса ӳкнĕ, анчах *сапа* — «сават» пĕлтерĕшлĕ, *пăча* — «ача» пĕлтерĕшлĕ, *йĕпкĕн* «хура» пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнă тесе калама пултаратпăр.

Архаизмсем шутне япала ячĕсем çеç мар, ытти пуплев пайĕнчи сăмахсем те кĕреççĕ. Тĕслĕхрен: *Атсан атă пулать, пуссан пушмак пулать. (Ват. сăм.)* Кунта *атсан* тени *тусан* тенине, *пуссан* тени *пăссан* тенине пĕлтерет.

*Çут хуçса лар* тени *ура хуçса лар* пĕлтерĕшлĕ пулнă.

*Тенти пуçне менти сăхать* тени *кантăр пуçне çерçи сăхнине* пĕлтерет.

Кивелнĕ сăмахсемпе авалхи пурнăçа сăнласа паракан илемлĕ литература произведенийĕсенче анлă усă кураççĕ.

Историзмсемпе архаизмсене словарьсенче *кив.* (кивелнĕ сăмах) тесе палăртаççĕ.

**389.** **Тĕслĕхсенчи кивелнĕ сăмахсене тупăр, вĕсен пĕлтерĕшне словарьте шырăр, май пур таран ăнлантарса парăр. Кивелнĕ сăмахсене урăххисемпе ылмаштарма май пур-и? Вĕсем ку таранччен мĕнле майпа сыхланса юлнă?**

1. Йыхрав илтĕнчĕ. Курап эп:
Ман тăхăм (тен, ман ывăлах)
Тĕнче уçлăхĕнче пырать пек
Халь йĕлтĕрпе вашлатнăнах.

*(П. Хусанкай.)*

2. Ырлăхран ырман теççĕ. 3. Этем шавкăнĕ час тӳрленмест. 4. Терт пур та, термен çук. 5. Чĕр пуç вилмест, амалет. 6. Услан кайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк вăй вылять. *(Туп. юмах.)* 7. Юрлăн чăххи хур пек курăнать. 8. Йĕпе çине сапа. 9. Ялта чух сейĕр туйăм хуçаланать ман чĕрере. *(Ю. Скворцов.)*

**390.** **Чăвашсен ĕлĕкхи каларăшĕсен пĕлтерĕшне словарьпе усă курса ăнлантарăр. Каларăшсене задача услови пек йĕркелĕр. Ĕçе икшерĕн тăвăр: пĕри ваттисен сăмахĕсенчен задача условине тутăр, тепри хуравне шыраса туптăр, вĕсем хальхи вăхăтри мĕнле виçене кăтартнине ăнлантарăр.**

Тĕслĕхрен: *1) Пĕр шит те юлмасть тени пĕр-пĕрин хушшинчи çывăхлăха кăтартать. Мĕн чухлĕ çывăх пулнă-ши вĕсен хушши? Шыраса туп. 2) Шит = 2 ал лаппи, 18—33 сантиметрпа танлашнă. Пĕр шит те юлмасть тени пĕр-пĕринчен 18—33 сантиметр та юлманнине пĕлтернĕ.*

1. Пĕр шит те юлмасть. 2. Чавса çывăх та, çыртма çук. 3. Кирек ăçта кайсан та аршăнра тăвата шит. 4. Ана — пĕр авăнлăх, хăрах йăран — çур авăнлăх. 5. Хăлаçпа хăлаç пĕр тан мар. 6. Чике старик, хур сухал. 7. Инкекпе инкек хушши пĕр утăм анчах. 8. Кашкăр çурнă ĕне катка çурă сĕт панă тет. 9. Икĕ алă — пĕр хăлаç. 10. Утмăл çухрăм кайса килсен утмăл çулхи çынпа калаç. 11. Юр йĕп çăрти пек шăтăкран пĕр пасма кĕрет.

**391.** Панă тĕслĕхсенче кивелнĕ сăмахсене тупăр, вăл архаизм е историзм пулнине калăр. Тупмалли юмахсен тупсăмне тупăр.

1. Исенет те писенет, çулталăксăр тапранмасть. 2. Акарин те макарин, ыран-паян килмесен ÿкетĕп те вилетĕп. 3. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи. 4. Тенти пуçне менти сăхать. 5. Пырать пыракка пырне. *(Ват. сăм.)* 6. Тĕменте тĕрли пур. *(Ват. сăм.)*

**392.** Задачăсене шутлăр. Кивелнĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр.

1. Кермен тăршшĕ виçĕ чалăшпа танлашрĕ пулсан вăл миçе метр пулать? 2. Кермен тăршшĕ виçĕ хăлаçпа танлашрĕ пулсан вăл миçе метр пулать? 3. Кермен тăршшĕ виçĕ чикепе танлашрĕ пулсан вăл миçе метр пулать? 4. Ĕмĕр тăршшĕ вĕрен тăршшĕ мар пулсан вĕрен тăршшĕ миçе метр? 5. Пĕр кашăк тикĕт пĕр чĕрес пыла пăсать пулсан пĕр кашăк тикĕт чĕресри миçе кило пыла пăсать? 6. Тăрна пăрçашăн çĕр çухрăмран çуран килнĕ пулсан ăна пăрçашăн миçе километр е метр килме тивет? 7. Çула тухсан йĕп те пăт йывăрăш пулсан çула тухсан йĕп йывăрăшĕ миçе килона çаврăнать?

**393.** Кивĕ виçе паллисене палăртакан сăмахсене аялтан туртса палăртăр, вĕсем халăх пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине, пĕлтерĕшĕсене уçса парăр. Кивелнĕ сăмахсен ушкăнне кăтартăр.

1. Кăвакарчăн хăйĕн амине темиçе çĕр çухрăмран та шыраса тупать теççĕ. 2. Йĕп чиксен те куç курмасть. 3. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă, пĕчĕк пичкен сăри лайăх. 4. Ĕлĕк пĕр çăпалапа вун иккĕн тăраннă. 5. Чавса çывăх та — çавăрса çыртма çук. 6. Атăла алтăрпа айтараймăн. 7. Кривнĕк петак мар. 8. Тайăлнă пăтавкка тулмасть. 9. Аршăнпа виçеççĕ, ăскăчпа ăсаççĕ. 10. Хуран хăлăпĕ хура пулать.

Чĕлхере сăмах йышĕ вĕçĕмсĕр ӳссе пырать. Пурнăç аталанса пынă май çĕнĕ сăмахсемпе сăмах ушкăнĕсем те çуралаççĕ.

Çĕнĕ япаласемпе пулăмсене тата ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсене **çĕнĕ сăмахсем** е **неологизмсем** теççĕ.

Неологизм вăл — чĕлхене нумаях пулмасть кĕнĕ сăмах е халĕ çеç кĕрекенни. Çĕнĕ сăмахпа пурте усă курма тытăнсан вăхăт иртнĕ май вăл неологизм пулма пăрахать.

Тĕслĕхрен: *ăслăлăх, автоçул, ентешлĕх (пĕр енчисем), ĕçтеш, авточарăну, толерантность, юлташлăх (товарищество), мультимеди, продюссер, Интернет.*

**394.** Çак сăмахсем халĕ неологизмсем пулаççĕ-и?

Илĕрткĕч, калав, курăк, ĕçтăвком, сăпатла, курав, хĕрӳ, канашлу, ĕçтешсем, ентеш, малашлăх, тĕпчевçĕ, пахалăх, лару, чĕлхеçĕ, ăсчах, тимĕрçĕ, пĕлтерĕш, хăрушсăрлăх, коммерци, компьютер, фирма, слайд, ипотека.

**395.** «Чăвашсен кивĕ виçе ячĕсем» проектпа ĕçлĕр. Кивĕ виçе ячĕсемпе çыхăннă материал пуçтарăр, ăна ăçта тупма пулнине палăртăр. Сăмахсен пĕлтерĕшне виçе палли енчен уçса парăр. Чăвашсем ытларах мĕнле виçесемпе усă курнă? Вĕсем хальхи вăхăтра мĕнле виçепе тан лашаççĕ, мĕнле виçене палăртаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

## 46. Диалект сӑмахӗсем

Радиора, театрта, телевиденире, кӗнекесенче, хаҫат-журналта, шкулта тата ытти ҫӗрте те усӑ куракан чӗлхене **литература чӗлхи** теҫҫӗ.

Уйрӑм вырӑнта, пӗр-пӗр районта, ялсенче ҫеҫ усӑ куракан сӑмахсене **вырӑнти калаҫу сӑмахӗсем** е **диалект сӑмахӗсем** теҫҫӗ.

Словарьсенче унашкал сӑмахсене *диал.* тесе палӑртаҫҫӗ.

Чӑваш чӗлхинче виҫӗ диалект: **тури диалект, анатри диалект** тата **хутӑш диалект**. Ку диалектсем пӗр-пӗринчен лексика, фонетика тата грамматика тӗлӗшӗнчен уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Тӗслӗхрен: турисем *о*-па калаҫаҫҫӗ (*порнӑҫ, пор, олттӑ, орпа*), анатрисем — *у*-па (*пурнӑҫ, пур, ултта, урпа*). Анатрисем *асатте, аппа, ҫерҫи, анне, кишӗр* сӑмахсемпе усӑ кураҫҫӗ пулсан турисем ҫав сӑмахсем вырӑнне *маҫак, акай (аки), сала кайӑк, апи, шӗкӗнтӗр* теҫҫӗ.

Чӑваш литература чӗлхи анатри диалект ҫинче никӗсленнӗ.

Литература чӗлхи нормине тури диалект паллисем те кӗнӗ. Тӗслӗхрен, сӑмахсем ҫине пусӑм ӳкесси. Анатри чӑвашсем сӑмахӑн юлашки сыпӑкӗ ҫине пусӑм тӑваҫҫӗ пулсан тури чӑвашсен калаҫӑвӗнче пусӑм ӑҫта пуласси **ӑ, ӗ** сасӑсем пуррипе ҫуккинчен килет.

Писательсемпе поэтсем хайсен произведенийӗсенче диалектизмсемпе усӑ курнине час-часах асӑрхама пулать. Ун пек чухне диалектизмсем произведени геройӗ хӑш вырӑнта ҫуралса ӳснӗ ҫын пулнине кӑтартма май параҫҫӗ.

**396.** А. Артемьев ҫырнинчен илнӗ диалога интонаципе рольсем тӑрӑх вуласа тухӑр. Хӑш сӑмахӗсене тури чӑваш, хӑшӗсене анатри чӑваш калать? Ҫав диалект сӑмахӗсене литература чӗлхинче мӗнле калама йышӑннӑ?

Те хĕр, те хĕрарăм ихиклетсе кулса ячĕ.

— Чăвашах-çке! Эп сире вырăс пуль тесеччĕ. Сер темиç чĕлхепе те йорлатăр та...

— Эппин, чăвашлах калаçар.

— Литературни попляма пĕлмес çав эп, пиçмест ман чăвашла. Сер ав пет йосо попляттăр.

— Мĕнлерех калаçаççĕ вара сирĕн енче?.. Эпĕ сирĕн енчи улах юррине астăватăп...

Хавасланнă Айдаров пианино клавишĕсем çине икĕ пӳрнепе пускаласа пĕр çавра юрласа илчĕ те, иккĕшĕ те ахăлтатса кулса ячĕç.

— Пет йосо! — ăнланмалла мар чĕлхепе кăшкăрчĕ Эльвира.

— Чăвашла калăр-ха.

— Чăвашлах-çке, пит лайăх тетĕп. Ком пек йорă илтменччĕ: хăр шотласа кăлартăр поль?

**397.** Çак сăмахсенчен хăшĕсем пурте усă куракannисем, хăшĕсем диалект сăмахĕсем пулнине калăр. Сăмахсене икĕ юпана уйăрса çырăр. Иккĕн ĕçлĕр, пĕрремĕш ушкăна кĕрекен сăмахсене пĕри, иккĕмĕш ушкăна кĕрекен сăмахсене тепри çырăр. Тетрадьсене ылмаштарса тĕрĕслĕр.

1. Петяк, путек. 2. Хул, хăвăл. 3. Кăккăр, кăкăр. 4. Масар, çăва, куринке, парми. 5. Парня, парне. 6. Эрĕм, армути. 7. Вă°рман, вăрман. 8. Çурăм, çан, тӳрт, каçан.

**398.** Текста интонаципе икшерĕн вулăр. Унти диалект сăмахĕсене литература чĕлхинчи сăмахсемпе килĕшӳллĕ çырса илĕр.

— Пыраймастăп пулĕ. Инçе çула çӳресе урам ахаль те чатанланса кайрĕ.

— Çатанланса?

— Чатан* урампа вăл ту çине улăхаясси пулмĕ... Улăхасси...

— Олăхĕ тени пирĕн вара пит сахал. Вутă кирлĕ таран тăвимастпăр. Çаранĕсем те хытса ларнă та.

— Ай-уй! Ан тӗлӗнтерех, кин! Вутта вӑрманта тӑваççӗ, улӑхра мар...

— Вӑрманти вотӑ вӑл. Ӑна выльӑхсем çимеççӗ.

— Тьфу! Тинке тухать эсӗ калаçнипе. Юри мӑшкӑлласа калаçатӑн пулмалла. Тинкене илтӗн!

— Мӗн тӑвам эпӗ сан тенкӳпе!

— Мӗн?!

— Хамӑннах тенкӗсем пор тетӗп. *(Иван Мучи.)*

**399.** Схема çине таянса пуплевре усӑ куракан сӑмахсем çинчен пӗтӗмӗшле каласа парӑр.




## 47. Литература нормине пӑхӑнман сӑмахсем

Пурӑнан пурнӑçра пирӗн тӗрлӗ çӗрте тата тӗрлӗ çынпа калаçма тивет. Шкулта пӗр тӗрлӗ, килте, çывӑх çынсемпе, юлташсемпе тепӗр тӗрлӗ калаçнине палӑртса ватӑпа ватӑлла, çамрӑкпа çамрӑкла тенӗ мӗн ӗлӗкренех кун пирки. Диалогра шухӑша калаçупа пӗр вӑхӑтра йӗркелесе пыраççӗ. Калаçнӑ чухне вара сӑмахсене суйласа тӑма, шухӑша туллин те çыхӑнуллӑ йӗркелеме вӑхӑт çук. Кунта

шухăша каласа пĕлтерме пуплев мĕнле лару-тăрура пулса иртни, сăмаха мĕнле интонаципе (сасăпа) калани, питкуçа хускатни, ал-урана вылятни пулăшать. Çавăнпа та кун пек чух (ку стильре) калас сăмахсене пурне те каламаççĕ, предложенисене час-часах çыхăнусăр йĕркелеççĕ.

Калаçу чĕлхи уйрăм лару-тăрура кăна вырăнлă.

Çывăх пĕлекен çынсем пĕр-пĕрин хушшинче **ирĕклĕ е (ахаль) калаçу сăмахĕсемпе** те анлă усă кураççĕ.

Ахаль (ирĕклĕ) калаçу сăмахĕсем литература чĕлхин нормине пăхăнмаççĕ.

**Ахаль калаçу** сăмахĕсем **лайăх сĕмлисем** те, **ырă мар сĕмлисем** те пур. Лайăх сĕмлĕ хăш-пĕр ахаль калаçу сăмахĕсем (*шаплат, мăнттай, чĕрĕл*) литературăра та усă курма юрăхлă. Вĕсем произведени сăнарлăхне ÿстерме пулăшаççĕ, геройсен чĕлхине тĕрĕсрех те сăнарлăрах кăтартма май параççĕ.

**400.** Панă сăмахсенчен хăшĕсемпе илемлĕ литературăра, хăшĕсемпе калаçура çеç усă курнине шута илсе ушкăнласа çырса илĕр. Сăмахсене мĕнле тата мĕншĕн çавăн пек çырмаллине ăнлантарăр.

Урхамах, çамрăк, эреветлĕ-теветлĕ, мерчен, ахах, мĕшĕлти, кахал, лĕпĕртет, юмахла, сăмахла, калаç, шăрçа.

Именÿсĕр те тÿрккес сăмахсене **литература нормине пăхăнман е тиркевлĕ сăмахсем** теççĕ. Вĕсем калаçу стилĕн тепĕр уйрăмлăхĕ, унăн пĕр енĕ пулса тăраççĕ. Кун йышши сăмахсем ансат пуплевре те тĕл пулма пултараççĕ.

**Ырă мар сĕмлĕ** (*çатăртат, пакăлтат, лĕпĕртет, чанкăлтат, пасар ту*) сăмахсем илемлĕ литература произведенийĕсенче усă курма юрăхлă мар. Илемлĕ литературăра пĕр-пĕр геройăн сăнар уйрăмлăхне шута илсе йĕркеленĕ чух çеç усă курма майлă. Кун пек сăмахсене словарьте *разг.* е *прост.* тесе палăртаççĕ.

**401.** **Текста кирлӗ интонаципе рольсем тӑрӑх вулӑр. Геройӑн уйрӑмлӑхне палӑртма автор мӗнле сӑмахсемпе усӑ курнӑ? Вӗсене тупса палӑртӑр.**

— Чим-ха, хӑспатин миравай, каласа пӗтерем... Ҫӑкӑра алран туртса илчӗ те ятлаҫма пуҫларӗ: «Ы-ы, эсремет пырӗ! Ҫиессине те ҫын пек ҫиме пӗлместӗн, лаша пек хыпатӑн! — тет. — Сан тӗпсӗр катка хырӑмна ҫӑкӑр ма-ар, салат пӑтти чыхса тултарасчӗ!» — тет.

... — Ҫаплах, ара, ҫаплах, малалла калатӑп... Мӗн, кин кукӑль пӗҫернӗ те кукӑль ҫиет. Кинӗ-ӗм терӗм. Мана, ват ҫынна, кукӑль шӑл ҫеммиччӗ те терӗм. Сан кукӑль тутлӑ-ши терӗм. Ҫапла каларӑм анчах, ман кин хар-р! кӑҫкӑрса пӑрахрӗ: «Ҫӑха-ан-н! Кукӑль тата сана-а, сана мулча чулӗччӗ-ӗ!» — терӗ.

— Ӑҫта апла каларӑм? Ма суятӑн, вилменнӗ. Суять вӑл, ан ӗненӗр ӑна. Ҫӑхан тесе эпӗ ҫӑвара та уҫман. Лепле вӑл! (*Ф. Павлов* ҫырнинчен.)

• *Катка* сӑмахӑн пӗлтерӗшне «Чӑвашла-вырӑсла словарьти» ӳкерчӗклӗ словарьпе (706-мӗш с.) усӑ курса уҫса парӑр.

**402.** **Текста вулӑр. Калаҫу сӑмахӗсене тупса палӑртӑр. Вӗсем сӑмахсен хӑш ушкӑнне кӗреҫҫӗ?**

1. Пыр, эсӗ те унпа пӗрле таплаттар! 2. Ӗҫетре-ҫиетре, вылятра-кулатра, пире хапӑл тӑватра. Хапӑл тӑватӑр пулсан икӗ утӑм малалла иртетпӗр, хапӑл тумастӑр пулсан виҫӗ утӑм йӑкӑртатса каялла чакатпӑр. 3. Ҫӳрет пуль ҫав муталанса, аташса... 4. Ан ҫывхар, пумилкке юлашки! Ах, пумилкке! Сирӗн ая пулас тӑк ҫак ҫӗр ҫинче утса та ҫӳрем мар!

**403.** **Ҫырса илӗр. Палӑртнӑ сӑмахсем хӑш стиле кӑтартакан сӑмахсем пулнине каласа парӑр. Ун пек сӑмахсем кулленхи калаҫу лексикин сийне кӗреҫҫӗ-и?**

Чуна ҫу кунӗн *сипечӗпе* антӑхтарса тӑрисем тӑрлатаҫҫӗ. Ҫав сасса тӑнласан чӑн тӳпене *ҫӑтмахӑн* пин кӗвӗрен пӗр

кĕвĕ шăратакан *селĕм* шăнкăравне çакса хунă тейĕн. Хĕр пуçĕ çине, кăкăрĕ, кĕлетки çине хĕвел тĕнчи *ахах-мерчен* тăкать. Утма çул, тулăпа вир пуссипе *ярăнса* пыракан-скер, чечеклĕ улăха чупса анса кайрĕ, тăпăлкка кăна юхан шыв умне çитсе перĕнсе чĕлпĕрне карт туртса карăнтарчĕ. Улăх *ытамĕнче* ачан кăн-кăвак куçĕ пек тăп-тăрă шыв *шăнкăртатса* выртать: шăнкăр-шăнкăр... Тăнласан шыв пуплевне — халь-халь сăвă каласа ярассăн туйăнать. Юхан шыв урлă ансăр каçă. Уçтук пушмакĕсене хыврĕ те каçă çинче ярăнса пăхрĕ. Сăпка пек лăнкăр-лăнкăр тăвать вăл.

• **Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене аялтан йĕр туртса палăртăр.**

**404. Текста сăнăр. Калаçу стилĕн тĕсĕсене тупса палăртăр. Диалогсенче вырăнсăр пуплевĕн тĕслĕхĕсем пур-и? Рольсем тăрăх вулăр.**

### Больницăра

— Эсир, Михаил Порфирьевич, куратăп та, юлашки вăхăтра больницăна час-часах çÿреме пуçларăр, — тет пĕри. — Мĕнпе чирлетĕр вара?

— Чирлесси-мĕнĕ... Апат анми пулчĕ.

— Врач мĕн калать?

— Иртсе каять тет. Уçă сывлăшра ытларах çÿреме хушать...

— Э-э, ĕненсе ларах вăл врачсене! Суяççĕ вĕт вĕсем, лăплантараççĕ[2]. Пирĕн çуртра пĕр çын пурччĕ. Вăл та сирĕн пекех апат анманнипе аптраса пурăнчĕ, юлашкинчен шăмми-шакки çеç тăрса юлчĕ. Иртнĕ уйăхра пытартăмăр шеремете. Рак пулнă унăн...

Çак сăмахсене илтсен чирлĕ çын аллипе чĕри тĕлне ярса тытать те ларнă çĕртех тĕшĕрĕлсе анать.

— Мĕн пулчĕ сире, Михаил Порфирьевич?! — шикленсе ÿкет тепри. — Эй, врач, сестра, çын вилет!.. *(А. Горшков.)*

**405. Пуплев этикечĕпе паллашăр. Çакăнта кăтартнă правилăсенчен хăшĕсем сирĕншĕн çывăх, хăшĕсене эсир яланах тытса пыратăр? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.**

## Çакна яланах асра тытăр!

### Пуплев этикечĕ

1. Хăвăр тĕл пулса калаçакан çыннăн кăмăлне вăхăтра туйма пĕлĕр: хăçан вăл эсир калаçнине килĕштерет, хăçан хăвăр чĕнмесĕр тăни лайăхрах.

2. Кампа та пулин пупленĕ чухне калаçу ытлашши хĕрсе каять пулсан сăмаха урăх çĕрелле пăрса яма тăрăшăр.

3. Хăвăрăн шухăшăра никам умĕнче те хӳтĕлеме ан именĕр, анчах оппонента тӳрккес сăмахсемпе ан кӳрентерĕр, чăркăшланса ан кайăр.

4. Хăнара хăвăра сăпайлă тытма пĕлĕр: ытлашши нумай калаçса хăвăр çине пăхтарма ан тăрăшăр.

5. Ларуран, хăнаран ыттисенчен иртерех каймалла пулсан çакăн çинчен ертӳçе е кил хуçисене пурин умĕнче те пĕлтерни аван мар: сире кура ыттисем те киле кайма тапранĕç.

6. Пĕр-пĕр инкеке лекнĕ е йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çынна хăвăр палланипе палламаннине пăхмасăр ырă сăмахпа лăплантарма ан ӳркенĕр. Ялан асра тытăр: вăхăтра каланă ăшă сăмах йывăр лару-тăрури çынсемшĕн сиплĕ эмелрен те усăллăрах.

7. Пĕр-пĕринпе калаçса тăракан икĕ çын калаçăвне вĕсем чĕнмесĕр хутшăнни сăпайлă мар. Ытах лару-тăрăва е ситуацие кура хутшăнмалла пулсан вара калаçăва самантлăха чарма ирĕк ыйтмалла.

8. Калаçнă чухне шӳтлеме те пĕлмелле, анчах виçерен иртсе кайса, çынсене хăвăра пысăка хурса кӳрентересрен яланах асăрханмалла.

**406.** Текста вулăр, чĕлхине сăнăр. Унăн тĕп шухăшне палăртăр. *Муклашка* сăмаха автор мĕнле пĕлтерĕшпе усă курнă? Вăл мĕнле сăмахсен шутне кĕрет? Текстăн содержанине мĕнле сĕм парать?

Инçех те мар, вĕтлĕхре, шăпчăк юрă *шăрантарма* пуçларĕ. Йăкăнат мучи пĕр кана ним чĕнмесĕр итлесе тăчĕ.

— Ха, епле *хивре* юхтарать. Çак кайăка шăпчăк теççĕ, Ванюк.

— Хăш кайăка, асатте?

— Çак кайăка тетĕп.

— Эп курмастăп-çке.

— Ха, муклашка темерĕн, — кулчĕ Йăкăнат. — Кайăкне ăна курма хĕн. Вăл *чăтлăхра* пурăнать. Пăхма нимех те мар вăл, çерçи евĕрлех. Юрри вара чуна *савăнтарать*. (*В. Алентей* çырнинчен.)

• **Палăртнă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уçса парăр, синонимĕсене кăтартăр.**

## Лексика тишкерĕвĕ

### Тишкерӳ йĕрки

1. Сăмахăн лексика пĕлтерĕшне палăртăр.
2. Сăмах миçе пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр.
3. Сăмахăн синонимĕпе антонимне (пур пулсан) кăтартăр.
4. Сăмах текстра (предложенире е сăмах майлашăвĕнче) тӳрĕ е куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр.
5. Сăмах омоним пĕлтерĕшĕпе çӳреме пултарнине палăртăр.
6. Словарьте сăмаха мĕнле ятарлă паллăпа е сăмахпа (*калаç., диал., техн., куçăм., ятар.*) палăртнине кăтартăр.

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

Чĕлхе — ӳт пайне пĕлтерет *(выльăх-чĕрлĕх чĕлхи, çын чĕлхи)* — лексика пĕлтерĕшĕ.

Ку сăмах темиçе пĕлтерĕшлĕ: чĕлхе, калаçу, калаçни, пуплев (*вырăс чĕлхи, чĕлхе культури, чĕлхе тĕксе пăх*).

Унăн антонимĕ — *чĕлхесĕр (чĕлхесĕр янавар).*

*Чĕлхе* сăмаха çак текстра куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курнă. Унăн куçăмлă пĕлтерĕшсем татах та пур: *чĕлхе тытса килчĕç* (тыткăн); *вут чĕлхи, чĕлхе çаврăнмасть, чĕлхен чаракĕ çук.*

Словарьте ку сăмаха омонима палăртакан ятарлă паллăпа (II) кăтартнă. Вăл сăмах омонимлă (пуплев тенине палăртать).

Ку сăмаха словарьте тата çакăн пек ятарлă паллăсемпе палăртнă: *диал.* блины; *куçăм.* лампа чĕлхи; ◇ вăрăм чĕлхе (болтун); пыллă чĕлхе (подхалим)...

**407.** Текста тимлĕ вуласа тухăр. Текстăн тĕп шухăшне каласа парăр. Эсир ун çинчен мĕн шутлатăр? Текстăн стильне, тĕсне (калав, сăнлав, ăслав) палăртăр. Паллă тунă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене словарьпе усă курса ăнлантарса çырса илĕр.

| |
|---|
| *пăяхам* |
| *хуньăм* |
| *пăятам* |
| *хунчăкам* |
| *йысна* |
| *хуняçа* |

Хальхи вăхăтра чăвашсем хăйсен тăванĕсене ытларах ятпа, ашшĕ ячĕпе хисеплесе чĕнме хăнăхса пынăран *ĕçкей, пăяхам, пултăр, пултăр кĕрÿ, пултăр кин, пуçана, (аслă, вăталăх) хĕр пултăр, хĕрсем, хунчăкам*[5], *хуньăм, пăятам, пăянам, хунякам, хуняма, хуняçа, ывăл пултăр, ывăлсем, инке, кукка, ват (мăн) асатте, мучи, йысна, аппа, чипер ывăл*[5] тата ытти ятарлă ятсем (терминсем) пуплевре сайра хутра кăна тĕл пула пуçларĕç. Çапла майпа пирĕн хутшăнура тăван халăхăмăрăн ĕмĕрсем тăршшĕнче ăсласа тунă сăмахсем пĕрин хыççăн тепри тухса пыраççĕ. Калаçу официаллă сĕм[5] туянса илемлĕхĕпе сăнарлăхне çухатать. Çынсем хушшинче ăру-тăванлăх туйăмĕсем майĕпен-майĕпенех сĕвĕрĕлеççĕ. Çавна май чĕлхемĕр пысăк[5] çухату тÿсет. Ун пек ан пултăр тесен тăван чĕлхе[5] сăмахĕсене май пур таран пуплевре сыхласа хăварма тăрăшмалла.

Шутласан, *хунчăкам, ĕçкей, хĕрсем (упăшка йăмăкĕ), хунякам, пултăр* йышши ăру-тăванлăх терминĕсене архаизмсен (кивелнĕ сăмахсен) ретне куçарма нимĕнле сăлтав та çук: вĕсем пурте пирĕн чĕлхере упранса юлма тивĕçлĕ сăмахсем. (*А. Горшков* çырнинчен.)

• Мĕншĕн автор çавăн пек шутлать? Ăнлантарăр.

**408.** Текста вулăр, çырса илĕр, писатель чĕлхине сăнăр. Автор хăçанхи пасара тата мĕн пасарне сăнлать? Çакна пĕлме мĕнле сăмахсем пулăшаççĕ? Сирĕн куç умне мĕнле ӳкерчĕк тухса тăчĕ? Çав ӳкерчĕке йĕркелеме автора мĕн пулăшнă? Автор мĕншĕн сăмахсене пĕрин хыççăн теприне каласа каять?

Пасар, хула урамĕнче, лавккасемпе çырма хушшинчи анлă лаптăкра, йăшăлтатать-çăрăлать, кăшкăрать, юрлать, кĕçенет, макăрать, ĕнĕрлет[5], вăрçать, чĕнет, хăвалать, кулать, кăтиклет, какалать... Тусанĕ кунта, шăрши-марши[5], шăни-пăванĕ; алă çупса хаклашни-килĕшнисем; тĕрлĕ чĕлхепе калаçнисем, вырăсла ятлаçни; чăпта куписем, хăмла, çăпата[5], сават-сапа, апат-çимĕç, ĕç хатĕрĕсем; бурлакĕ, грузчикĕ, манахĕ, пупĕ, чиновникĕ, хĕрĕ-арăмĕ, ачи-пăчи, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ, сутаканĕпе илекенĕ, кăтартаканĕпе куракане. (*Хв. Уяр* çырнинчен.)

- Текстри синонимсемпе антонимсене тупăр.
- Пĕр йышши членсем предложенире мĕнле член пулнине аялтан туртса палăртăр.
- Çак текстпа усă курса паянхи пасара сăнласа парăр. Сăнлăх тума пулăшакан сăмахсемпе пĕлсе те вырăнлă усă курăр.

**409.** Текста вуласа тухăр, куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене, синонимсене, антонимсене тупăр.

### Тăван Атăл

Тăван халăхăн улăпла Атăлĕ! Кирек ăçта кайсан та пуçăмран тухма пĕлместĕн эсĕ. Пурнăç шăпи[5] таçта илсе çитерсен те сан патах таврăнатпăр эпир, санăн ывăл-хĕрӳсем.

Атăл хĕрринче шухăша кайса виçесĕр нумай тăма пулать. Аслă Атăл анлă. Калаçатăп та унпа, савăнатăп та. Эпир ватăлатпăр ав, эс ватăлмастăн, Атăл. Эс — улăп[5], эс вăйлă.

Çиччĕре чухне Çич çырмана ĕне çитерме çӳреттĕмĕр. Ĕмĕрне те манаймăп шăнкăртатса юхакан Çич çырмари çăл шывне. Выртса ĕçеттĕмĕр çав шыва. *Тӳлеккĕн* çеç юхса выртатчĕ вăл, васкамасăр Таяпа çырмине тухатчĕ. *Таяпа çыр-*

*ми — Кĕçĕн Пăлана, Кĕçĕн Пăли — Аслă Пăлана, Аслă Пăли — Сĕвене, Сĕви — Атăла...*

Атăл ытамĕнче халăх ӳссе çитĕнчĕ. Тăван халăхăмăр, Атăл евĕр, ăслă та пултаруллă, ĕçчен те тавçăруллă, таса чунлă та уçă кăмăллă.

*Çич çырма çăлĕ, ан типсемччĕ. Пăла шывĕ, ан пĕтсемччĕ. Сĕве шывĕ, ан чаксамччĕ. Атăл, ан ватăл! (Г. Волков.)*

• Палăртнă предложенисен тытăмĕсене сăнăр. Тӳлек шыв юххине сăнлама пулăшакан предложенисене тупса вулăр. Çав меле тума автора мĕн пулăшнă? Ăна юлашки абзацпа танлаштарăр, интонаципе вулăр. Вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх куратăр? Юлашки абзацри предложенин интонацийĕ сире мĕнле шыв юххине аса илтерчĕ? Шухăша вăйлатас тĕллевпе автор предложенисене мĕнле йĕркеленĕ?

• Текстри обращенисене тупса палăртăр.

• Текстпа усă курса ирĕклĕ диктант çырăр.

## ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛМЕЛЛИ ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Лексика науки мĕне тĕпчет?

2. Сăмахăн лексикăпа грамматика пĕлтерĕшĕсене тĕслĕхсем çине таянса ăнлантарса парăр.

3. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

4. Тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем çинчен каласа парăр.

5. Мĕнле сăмахсене омонимлă сăмахсем теççĕ? Омонимсене нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен мĕнле уйăрса илмелле? Тĕслĕхсемпе танлаштарса ăнлантарăр.

6. Мĕнле сăмахсене синонимлă сăмахсем теççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

7. Синонимсемпе тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе калаçура, çырура хăçан, мĕн тĕллевпе усă кураççĕ?

8. Орфографи словарĕ тесе мĕнле словаре калаççĕ? Вĕренӳре вăл мĕн енĕпе пулăшса пырать?

9. Артистсен пурнăçĕнче анлă усă куракан сăмахсемпе предложенисем йĕркелĕр. Хăвăра килĕшекен пĕр-пĕр артиста сăнласа парăр. Сăнарĕпе юлташăра паллаштарăр.

10. Вырăс чĕлхинчен калаçу тата çыру урлă кĕнĕ сăмахсене çырса танлаштарăр. Уйрăмлăха ăнлантарăр.

11. Историзмсемпе архаизмсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Кун йышши сăмахсен чĕлхери пĕлтерĕшне ăнлантарса парăр.

12. Неологизмсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Тĕслĕхсем тупса парăр.

13. Текстсенчи антонимсен пĕлтерĕшĕсене уçса парăр.

14. Тиркевлĕ сăмахсемпе калаçура, çырура хăçан усă кураççĕ?

**410.** Текста вуласа тухăр, текстăн тĕп шухăшне палăртăр, план тăвăр. Ку текстра мĕнле профессипе çыхăннă сăмахсем тĕл пулаççĕ?

## Яланхи пурнăç

Пурнăç — театр мар. Этем ĕмĕрĕ[5] мĕнле иртнине хăш-пĕр спектакльте ик-виç сехетрех куратăн, унта кашни минутрах кулăшла е хăрушă ĕç пулса иртет, кашни минутрах актерсем савăнаççĕ, хуйхăраççĕ, тавлашаççĕ, юратаççĕ, ылханаççĕ. Анчах этем ĕмĕрĕ ик-виç сехетре вĕçленмест. Никама ыр тумасăр, çăлмасăр, юратмасăр унăн пурнăçĕнче кунсем, эрнесем, уйăхсем е хăш-пĕр чухне çулсем те майĕпен иртсе пыраççĕ, çапах та этем ĕмĕрĕ, çут çанталăк ялан пĕр пек *лăпкă* тăрайман пекех, улшăнусăр, пăлханусăр лăпкă иртме пултараймасть.

Пурнăçра асран кайми самантсем пулаççех, анчах сцена çинчи пек хăвăрт мар, питĕ вăраххăн пулаççĕ. Йывăрлăхсем[3] умĕнче пуç тайма кирлĕ мар, вĕсене çĕнтерсе пымалла. (*А. Артемьев* çырнинчен.)

• Текстран антонимлă сăмахсене çырса илĕр. Палăртнă сăмахăн антонимĕсемпе синонимĕсене тупăр та предложенисем йĕркелĕр.

**411.** Палăртнă сăмахсем тӳрĕ е куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнине калăр. Çав сăмахсен синонимĕсене те, антонимĕсене те тупăр.

Тĕслĕх: *ăшă* (куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмах) *куç: кăмăллă — сивĕ, хаяр.*

*Ăшă* куç; *ăшă* сĕт; *ăшă* йăва; *ăшă* çил; *ăшă* тумтир; *ăшă* ыйхă.

*Пысăк* çурт; *пысăк* çын; *пысăк* температура; *пысăк* уяв; *пысăк* урам; *пысăк* ĕç; *пысăк* кĕнеке.

Ĕçleme *лар*; ку çурт нумай *лармалла*; юр *ларчĕ*; улмуççи чечеке *ларчĕ*; сĕтел хушшине *лар*.

Çипе *тат*; тӳмене *тат*; кантăр *тат*; кĕпе аркине *тат*; çурхи шыв çула *татнă*; ĕмĕте *тат*.

*Çинçе* пилĕк; *çинçе* сасăллă купăс; *çинçе* çип.

**412.** Текста ят парăр, унăн тĕп шухăшне, темине палăртăр. Тĕп шухăша уçса пама пулăшакан пулăмсене палăртса тухăр. Текстра тĕл пулакан синонимсене кăтартăр, вĕсене мĕнле тĕллевпе усă курнине ăнлантарăр. Текстри хăш предложенири сăмахсем *таса* тата *илемлĕ* сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уçса пама пулăшаççĕ? Ăнлантарăр. Палăртнă сăмахсене синонимсемпе улăштарса пăхăр.

*Таса* та *илемлĕ* ир. Пĕтĕм çут çанталăк *аслă* уяв тăвать тейĕн. Кун янкăр *уяр*. Тӳпе тăрна куçĕ пек *тăрă*, пĕр шурă пĕлĕт те курăнмасть. Улăхсемпе варсенчи *çăра* тĕтре хĕвел тухнă-тухман сирĕлсе пĕтрĕ, çул тусанне вырттарнă сывлăм та типрĕ, вăл сулхăнри çерем çинче кăна ахахăн-мерченĕн йăлтăртатать-ха, ешĕл курăка таптасан *нӳрĕ* йĕр юлать. Выльăх кĕтĕвĕ хире ирех тухнă та çырма-çатра тăрăх саланнă, *ешĕл* çерем çинче путексем тăрст-тăрст! сиккелесе çӳреççĕ. Хăвалăх хушшипе юхса выртакан *мăн* çырма тăрăх кĕтӳçĕ пушши шартлатни илтĕнсе каять. Ӳркенмен тăрисем, тӳперен куçа курăнман çĕр-çĕр пĕчĕк шăнкăрав çакса янă евĕр, ĕмĕрхи хаваслă юррине шăрантараççĕ. (*А. Артемьев* çырнинчен.)

- Пĕрремĕш предложенипе юлашки предложени хушшинчи çыхăнăва ăнлантарăр.
- Эсир хĕвел тухнă вăхăта курнă-и? Хĕвел тухнă вăхăта, çĕнĕ кун пуçламăшне сăмах вĕççĕн (юлташăра каласа панă пек) сăнласа парăр.

**413.** Текста рольсем тăрăх вулăр. Ят парăр. Мĕнле стильпе çырнине калăр.

Мăнукĕ асламăшне мĕншĕн ăнланаймасть? Асламăшĕ миçемĕш çулсенче çуралнине палăртăр. Çав вăхăта палăртма мĕнле сăмахсем пулăшаççĕ? Вĕсене çырса илĕр. Синонимĕсем пур пулсан кăтартăр.

## I

— Асанне, киле час *ҫитеппĕр-и*?

— Хăй ҫутнă ҫĕре ҫитеппĕр.

— Мĕншĕн хăйă ҫутаççĕ? Кăмака чĕртеççĕ-и-мĕн?

— Кăмака чĕртмеççĕ, кăмакине ĕнтĕ пасăрах хутса ҫунтарнă.

— Апла пулсан мĕн тума хăйă[5] ҫутаççĕ?

— Ҫутă пулма.

— Мĕншĕн ҫутă пулма? Хăйăран тĕтĕм тухать.

— Мĕнле хăйă ҫутни ҫинчен каласатăн эсĕ, ачам?

— Эсĕ ху каларăн-ҫке, хăйă ҫутнă ҫĕре *ҫитеппĕр* тесе.

— Сăмаххи ҫапла. Акă тĕттĕмленсен пирĕн ялта *электрицă* ҫутаççĕ. Ҫав вăхăта хăй ҫутнă вăхăт теççĕ.

## II

— Ĕлĕк электрицă мар, краççын та пулман. Эпир ҫамрăк чух хăйă чĕлсе кăмакара типĕтеттĕмĕр те ҫĕрĕпе ҫав хăййа пĕрерĕн-пĕрерĕн ҫунтарса ларattăмăр.

— Алăпа тытса-и?

— Ҫук, алăпа мар. Хăййа ăна *хăй чикки** ҫине хĕстернĕ, хăй чикки айне валашкапа шыв лартнă. Кăмрăкĕ вара ҫав шыва ўксе *чашлатаччĕ*.

— Тĕтĕм тухман-и-мĕн ҫав хăйăран?

— Тĕтĕм тухмасăр — тухнă. Арласа ларattăмăр та вара, сăмса шăтăкĕсем хуп-хураччĕ. Пит-куç та, кĕпе те *хуралаччĕ*.

— Апла питĕ хĕн пулнă пулĕ?

— Хĕн.

— Апла ҫутăпа кĕнеке вулама май пулман-тăр?

— Эпир ҫамрăк чухне кĕнеке вуламан. Кĕнеки те пулман.

— Ытла та начар пулнă-ҫке. (*М. Ухсай* ҫырнинчен.)

• Текстри ачан асламăшĕ вырăнĕнче сирĕн тăванăр (ҫул тăрăх тишкерсен) кам пулма пултарать? Ăна чăвашсен ăру-тăванлăх терминĕпе мĕнле палăртмаллине калăр. Эсир хăвăр аса илнĕ ҫынна курнă-и, паллатăр-и?

• Палăртнă сăмахсем мĕнле сăмахсен ушкăнне кĕреççĕ? Вĕсене хальхи вăхăтра мĕнле калатпăр тата мĕнле çыратпăр?

• *Хĕн* сăмахăн синонимне тупăр.

• *Хăй чикки* сăмахăн пĕлтерĕшне таранрах ăнланма «Чăвашла-вырăсла словарьти» (705-мĕш с.) ӳкерчĕке пăхăр.

**414.** Тупмалли юмахсен тупсăмне тĕрĕс тупса шут хисепĕ тĕлне тивекен сас паллисене криптограммăна çырса тухăр. Криптограммăри ваттисен сăмахне кам маларах тупма пултарчĕ? Палăртнă сăмахăн лексика пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

**I.** 10, 9, 13, 4, 11, 3, 1 — Лăпă-лăпă çунатлă, 62 туратлă, хăтлă-хăтлă кĕпеллĕ.

**II.** 2, 12, 5 — Çут тĕнчере мĕн мăнтăр?

**III.** 1, 8, 3, 1, 7 — Пуçĕ тура, хыçĕ çурла.

**IV.** 6, 9, 3 — Пăхма çăмăл, пӳрт урлă ывăтса каçарас çук.

**V.** 13, 4, 5, 14 — Ай-уй! Ан тивех — ӳкетĕп.

**VI.** 12, 7, 15 — Малта сенĕк, кайра *çулăк*, варринче пичке.

| | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ,, | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 1 | 7 | 3 | 1 | |
| 8 | 9 | 3 | | 10 | 1 | 11 | 1 | 2 | 2 | 12 | ’ |
| 3 | 9 | 5 | 13 | 1 | 11 | 12 | | 10 | 9 | 7 | 3 |
| 1 | | 11 | 14 | 5 | 13 | 12 | 7 | 15 | 3 | . | ,, |

## ХĂВĂР ПĚЛĚВĚРЕ ТĚРĚСЛĚР

**I. Предложенисене çырса пĕтерĕр.**

1. Сăмах мĕне те пулин пĕлтерни — ... .

2. Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмах тесе ... , нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах тесе вара — ... . Сăмах пĕр пĕлтерĕшлĕ е нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине ... пĕлме пулать.

3. Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тесе ... сăмахсене калаççĕ.

4. Синонимсем тесе ... , антонимсем тесе вара ... калаççĕ.

5. Омонимсем тесе ... сăмахсене калаççĕ. Омонимсене ... пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен уйăрса илме пĕлмелле. Омонимсене словарьте ... ăнлантараççĕ, ... палăртаççĕ.

6. Пĕр-пĕр профессире çеç усă куракан сăмахсене ... теççĕ.

7. Неологизмсем вĕсем — ... .

8. Историзмсем тесе ... , архаизмсем тесе вара ... калаççĕ.

9. Чăваш чĕлхинче виçĕ диалект: ... .

10. Тури диалектпа ... районĕсем калаçаççĕ.

11. Чăваш литература чĕлхи ... çинче никĕсленнĕ.

12. Пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем — ... .

13. Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем — ... .

**II. Тест ыйтăвĕсене хуравлăр.**

**1.** Хăш сăмахăн пĕлтерĕшне тĕрĕс мар кăтартнă?

а) **Ĕнчĕ** — шапа хуранĕнче чăмăртанса пулакан хаклă йышши чул (ытларах шуранка тĕслĕ); ахах, мерчен;

ă) **ĕнтрĕк** — хĕвел анса ларнă хыççăнах е хĕвел тухас умĕн пулакан çурма тĕттĕм вăхăт; каç пултти, тĕттĕм çутă;

б) **ĕнтрĕклĕ** — уяр, янкăр, уçă, таса;

в) **ĕнтĕркке** — имшер, хавшак, вăйсăр, начар.

**2.** Панă сăмахсенчен хăшĕ синоним пулмасть?

а) Ырхан; ă) хыткан; б) нĕрсĕр; в) имшер.

**3.** *Ăраскал, ырлăх, телей, шăпа, тивлет* сăмахсем:

а) антонимсем; ă) синонимсем; б) омонимсем; в) диалект сăмахĕсем.

**4.** Словарьпе усă курса пĕр пĕлтерĕшлĕ çеç пулакан сăмаха тĕрĕс палăртăр.

а) Аш; ă) ашак; б) ашăк; в) ашкăн.

**5.** *Шăвар* сăмаха куçăмлă пĕлтерĕшпе каланă тĕслĕхе тĕрĕс тупса палăртăр.

а) Çумăр калчасене лайăх шăварчĕ;
ă) юнпа шăварăннă çĕр;
б) лашана кашăкпа шăвармаççĕ;
в) шăварман уйсем.

**6.** Кивелнĕ сăмаха кăтартăр.

а) Чашăк; ă) алтăр; б) кашăк; в) кĕленче.

**7.** Ĕлĕкхи виçе пĕлтерĕшне уçăмлă палăртакан ваттисен сăмахне тупăр.

а) Алтăр çăлтăр çич çăлтăр, çиччĕшĕ те çут çăлтăр.
ă) Çыншăн йĕп те илме хушман.
б) Кирек ăçта кайсан та аршăнра тăватă шит.
в) Аçу-аннӳн ани-çаранне нихçан ан ман.

**8.** Мĕн вăл историзм?

а) Пĕр-пĕр профессире усă куракан сăмах;
ă) куллен усă курма пăрахса çĕннисемпе улăштарнă сăмах;
б) япалипе пĕрлех манăçа тухнă сăмах;
в) вырăнти калаçура усă куракан сăмах.

# СĂМАХ ТЫТĂМĔПЕ СĂМАХ ПУЛĂВĔ. ОРФОГРАФИ

## 48. Сăмах тымарĕ тата аффикссем

Сăмахсене вулăр, танлаштарăр. Кашни юпари сăмахсенче пĕрешкел пайсем пур-и? Вĕсен хăш пайĕ пĕрешкел — сылтăмри-и е сулахайри-и? Сăмахсен хăш пайне уйрăмшарăн вуласан та ăнланма пулать? Хăш пайне вуласан ăнланма май çук?

| | | |
|---|---|---|
| *лаша-сем* | *пулă-çă* | *юлташ-ăн* |
| *çын-сем* | *юмах-çă* | *юлташ-а* |
| *кĕнеке-сем* | *хăмла-çă* | *юлташ-па* |

Сăмах пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăрать. Чи кирлĕ пайĕ — **тымар.** Ун çумне хушăнса пыракан пĕлтерĕшлĕ пайсене **аффикссем** теççĕ. Тĕслĕхсем: *çыр-у, çыр-у-лăх, çыр-ав-çă, çыр-акан-сем-пе.*

Ку тĕслĕхсенче *çыр* — сăмах тымарĕ, ыттисем аффикссем пулаççĕ. Сăмахăн темиçе аффикс та пулма пултарать. Тĕслĕхрен: *юман-лăх-ра, ĕç-ле-кен-сем-пе.* Тепĕр чухне сăмахра аффикс пулмасть. Тĕслĕхрен: *эпĕ, вăл, ыран, пур, çук, кăвак.*

**415.** Вулăр. Сăмах тымарĕсем çумне мĕнле аффикссем хушăннине калăр. Тымар çумне хушăнакан аффикссем миçе вариантлă? Мĕншĕн?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| пĕлӳ | вăйлă | шутла | юманлăх | тимĕрçĕ |
| çыру | илемлĕ | йĕрле | шĕшкĕлĕх | суйлавçă |
| пару | хăватлă | кăкла | çăкалăх | кĕслеçĕ |
| лару | хаваслă | чирле | йăмралăх | купăсçă |

**416.** Вулăр. Сăмахсен тымарне тата аффиксĕсене тупăр. Тымар çумне миçе аффикс хушăннине калăр.

1. Çыр, *çыру*, çырулăх, çырулăхпа.
2. Пĕл, пĕлӳ, пĕлӳлĕх, пĕлӳлĕхшĕн.
3. Вула, вулав, *вулавçă*, вулавçăсем.
4. *Кала*, калав, калавçă, калавçăсемпе.

• Паллă тунă сăмахсемпе ыйтуллă предложенисем тупса çырăр.

**417.** Сăмахсене вулăр, вĕсен тымарне тата аффиксĕсене тупăр. Аффикссем мĕнле пуплев пайĕ çумне хушăннине калăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| лару | çĕмĕртлĕх | пысăклат | хăнала |
| хушу | хурăнлăх | пĕчĕклет | парнеле |
| пĕлӳ | ăвăслăх | тикĕслет | купала |
| вĕренӳ | çырлалăх | кăтралат | тӳмеле |

• Ку сăмахсенчи аффикссем ытти сăмахсем çумне хушăнма пултараççĕ-и? Хушăнаççĕ пулсан тĕслĕхсем тупса калăр.
• Кашни юпари пĕрер сăмахĕпе туйăмлă предложенисем туса çырăр.

**418.** Кам нумайрах? Сăмах тымарĕсем çумне тĕрлĕ аффикс хушса çырăр.

Куç, хыр, лар, пар, мухта, сăмах, юмах, илем, вăй.

**419.** Çак сăмахсене мĕнле майпа икĕ ушкăна уйăрма пулать? Ушкăнласа çырăр.

I. Çыру, кĕнеке, лаша, пĕлӳ, лару, вăрман, суту, макăру, урам, ĕненӳ, тарăху, сăрт, кĕпер, ăмăрту.

II. Вучах, кăмака, юманлăх, мачча, çăкалăх, тирпейлĕх, вĕрене, тĕрĕслĕх, шăплăх, хурăн, шĕшкĕлĕх, кĕрĕклĕх, çирĕк, юман, куçлăх, питлĕх.

III. Пулă, сунарçă, элекçĕ, пулăçă, юмах, утарçă, çăлтăр, лавçă, юмахçă, кĕслеçĕ, сунар, хуралçă, тимĕрçĕ, йĕлтĕрçĕ, кĕсле, тĕпчевçĕ, хыпар.



**420.** Ӳкерчӗке лайӑх сӑнӑр, унта мӗн-мӗн ӳкернине калӑр. Панӑ сӑмахсемпе сӑмах майлашӑвӗсене кӗртсе «Паянхи ял» калав ҫырӑр.

Юратнӑ ял, кирпӗч ҫуртсем, асфальт ҫул, ял ҫӗнелет, ҫурт купала, Культура ҫурчӗ, лавкка, палисадник, илемлӗ чечексем, автомобиль, шкул ачисем, вӑтам шкул, учитель, портфель, вӗренекенсем, йытӑ.

**421.** Аффикссене шута илсе сӑмахсене виҫӗ ушкӑна уйӑрса ҫырӑр.

*Тавлашу,* ёмкӗч, кӑшкӑру, номерле, пӑркӑч, *пӗлтерӳ,* уявла, ӑскӑч, сӳреле, хӗскӗч, ӑсату, *йӗрле.*

- Сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем сире паллӑ-и? Ҫак аффикссемлӗ тата мӗнле сӑмахсене пӗлетӗр?
- Паллӑ тунӑ сӑмахсемпе пӗрер ыйтуллӑ предложени туса ҫырӑр.

**422.** Текста тӗрӗс чарӑнусем туса вулӑр. Палӑртнӑ сӑмахсене ҫырса илӗр, тымарне тата аффиксӗсене кӑтартӑр.

### Лантӑш

Чечексем пурте илемлӗ, анчах ҫуркуннепе чи вӑйлӑ та ырӑ *шӑршӑллӑ* чечек аса килсен лантӑша ҫитекенни нимӗн те пулмӗ. Унӑн шӑрши — вӑрман сулхӑнӗ, *тӗттӗмлӗх,* шӑла шантаракан ҫӑл шывӗ тата темӗнле... асамлӑх.

Чăлт шурă шăнкăравсем пек çакăнса тăраççĕ пĕр туна çинче лантăш *чечекĕсем.* Тачка туна çинче вĕсене икĕ енчен хулăн вăрăм çулçăсем хӳтĕлеççĕ.

Лантăша *вăрманта* тупма çăмăлах мар. Вăл ăçта кирлĕ унта ӳсмест.

• Эсир лантăш чечекне курнă-и? Вăрманта ӳсекен тата мĕнле чечексене пĕлетĕр? Презентаци хатĕрлĕр, класра тантăшăрсем умĕнче тухса калаçăр.

Вулăр. Танлаштарăр. Мĕн асăрханине пĕтĕмлетĕр, каласа парăр.

| | | |
|---|---|---|
| *сĕтел — сĕтелĕ* | *çурт — çурчĕ* | *урапа — урапи* |
| *çĕлĕк — çĕлĕкĕ* | *турат — турачĕ* | *лаша — лаши* |
| *автан — автанĕ* | *пӳрт — пӳрчĕ* | *кĕнеке — кĕнеки* |
| *вăрман — вăрманĕ* | *хут — хучĕ* | *качака — качаки* |

> Хăш-пĕр сăмах çумне аффикс хушăннă чух сăмах тымарĕн вĕçĕ кăшт улшăнать. Вăл улшăнасси сăмах тымарĕпе аффиксран килет.

**423.** Панă сăмахсем çумне *-ĕ (-и)* аффикс хушса çырăр. Мĕнле улшăну пулнине калăр.

Пахча, турат, карта, ĕне, клуб, шкул, билет, дневник, юмах, кăранташ, пĕлĕт.

• Виçĕ сăмах суйласа илĕр те туйăмлă предложенисем туса çырăр. Чарăну палли лартассин уйрăмлăхĕсене ăнлантарăр.

## 49. Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем

Сăмахсене танлаштарăр. Сăмах тымарĕпе аффиксĕсене тупăр.

*юмахăн* *юмахçă*
*юмахсем* *юмахла*

Хăш юпари сăмахсен аффикс хушăннипе пĕлтерĕшĕ улшăннă? Хăш юпари сăмахсен форми çеç улшăннă? Хăвăр шухăша пĕтĕмлетсе калăр.

Аффикссем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: **сăмаха улăштараканнисем** тата **сăмах тăваканнисем.**

Сăмаха улăштаракан аффикссем çĕнĕ сăмах тумаççĕ, вĕсем сăмахăн формине çеç улăштараççĕ. Ун пек чух сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ улшăнмасть. Тĕслĕхсем: *ача — ачан, ачана, ачара, ачаран, ачапа, ачасăр, ачашăн; туп — тупрăм, тупнă, тупакан, тупмалла.*

Чăваш чĕлхинче япала ячĕсемпе местоименисем вĕçленеççĕ, глаголсем сăпатланаççĕ. Вĕсен аффиксĕсем — сăмаха улăштаракан аффикссем. Тĕслĕхрен, япала ячĕ: *çумăр — çумăрăн, çумăра, çумăртан*; глагол: *вула — вулатăп, вулатăн, вулать, вулатпăр, вулатăр, вулаççĕ, вуларăм, вуларăн, вуланă, вулакан.*

**424.** Вулăр. Хăш сăмахсем вĕçленеççĕ, хăшĕсем сăпатланаççĕ? Икĕ ушкăна уйăрса сăмахсене пĕрисем вĕçлĕр, теприсем сăпатлăр.

Вула, мăйăр, итле, кĕвĕ, савăнăç, çывăр.

• Глаголăн тата япала ячĕн икшер формине илсе ыйтуллă предложенисем тупса çырăр.

Сăмаха улăштаракан аффикссем сăмахсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарма тата пĕр-пĕр сăмахăн пĕлтерĕшне конкретлăрах тума кирлĕ:

а) *сĕтел ури (сĕтел ура* темеççĕ), *ял урамĕ* (*ял урам* темеççĕ), *хулара пурăнатăп (хула пурăнатăп* темеççĕ). Ку тĕслĕхсенче аффикс пĕр сăмаха тепринпе çыхăнтарать;

ă) *хĕрлĕ кофта — хĕрлĕрех кофта, сахал калаç — сахалтарах калаç.* Ку тĕслĕхсенче аффикс сăмах пĕлтерĕшне конкретлăрах тăвать.

Сăмаха улăштаракан аффикссем тепĕр чух çĕнĕ сăмах тума пултараççĕ. Тĕслĕхрен: *каçпа, ирпе, каярахпа.*

**425.** Точкăсем выранне кирлĕ аффикссем лартăр та предложенисем туса çырăр.

Ферма.. *(ăçта?)* ĕçлет, пасар.. *(ăçтан?)* таврăнтăм, кино.. *(ăçта?)* кай, юлташ.. *(кама?)* куртăм, хула.. *(ăçта?)* пурăнатăп, тасалăх.. *(мĕншĕн?)* кĕреш, машина.. *(мĕнпе?)* çӳрет, хула.. *(ăçта?)* анне.. *(кампа?)* кайрăм, вĕренӳ.. *(мĕнре?)* малта пыр, ӳкерчĕк.. *(мĕнсĕр?)* кĕнеке, лаша.. *(мĕне?)* пушă.. *(мĕнпе?)* çап.

**426.** Скобкăри сăмахсем çумне кирлĕ аффикссем хушса предложенисене вулăр. Аффикс мĕн тума кирлине калăр.

Каçхине (çĕр) кутсăр-пуçсăр çил-тăман ахăрчĕ, (ир) хирĕç тин лăпланчĕ. Пур (çĕр) те кĕрт хӳсе тултарнă. (Уй) ниçта та йĕр курăнмасть. *(С. Аслан.)*

**427.** Калавра *çăкăр* сăмаха сиктерсе хăварнă, скобкăра унăн ыйтăвĕсене çеç панă. *Çăкăр* сăмаха кирлĕ падежра лартса калава вулăр. *Çăкăр* сăмахăн формисем хăш сăмахсемпе çыхăннине калăр. Çыхăнтаракан аффикссене тупăр.

Халăх мĕн авалтан *(мĕне?)* хисеплеме вĕреннĕ. *(Мĕне?)* хисеплесси — халăх чĕринче çыраннă таса та пархатарлă саккун. Ĕмĕртен килекен йăла-йĕрке, ваттисен сăмахĕсем пурте çав таса саккуна çирĕплетеççĕ. Халăх ăнланăвĕнче *(мĕн?)* пуринчен те çӳлерех, пуринчен те маларах тăнă, пуринчен те аслăрах пулнă. Çавăнпа халăх *(мĕнрен?)* мала иртме хушман.

Тăвар — *(мĕнĕн?)* чи çывăх юлташĕ. Чи хисеплĕ хăнана халăх çăкăр-тăварпа кĕтсе илет. Тупа тăвас пулсан та чăваш çынни шăлĕпе *(мĕн?)* татăкĕ çыртса тупа тунă.

Эпир, ĕç çынни ывăлĕ-хĕрĕ, хура *(мĕн?)* çисе ӳснĕ. Хура *(мĕн?)* çиекен ниçта та хур пулман. Эпир те хур пулмăпăр, умри *(мĕн?)* татăкĕнчен татăлмăпăр. *(А. Ĕçхĕл.)*

• *Çăкăртан мала иртме хушман, ниçта та хур пулман* тенисем мĕне пĕлтереççĕ?

**428.** Аффикссем хушса сăмах майлашăвĕсене çырăр. Аффикссене сăмах тымарĕ çумне мĕн тума хушнине калăр. Вĕсем мĕнле аффикссем?

Вăрман.. кай, кино.. таврăн, кăранташ.. çыр, урок.. пĕтрĕç, ял клуб.., шкул.. кай, анне.. пулăш, юлташ.. кала.

Сăмах тăвакан аффикссем çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тăваççĕ. Вĕсем ытларах япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол çумне хушăнаççĕ:

япала ячĕ + аффикс: *юман+лăх, апат+лан, пăра+ла;*

паллă ячĕ + аффикс: *çĕнĕ+лĕх, çамрăк+лăх, таран+ +лат;*

глагол + аффикс: *лар+у, лар+кăч, шан+ăç, тат+ăк.*

**429.** Çырса панă сăмахсене икĕ ушкăна уйăрса çырăр: пĕринче сăмах формисем, тепринче аффикс хушăнса пулнă çĕнĕ сăмахсем пулччăр.

Аталану, юмахран, хăналăх, тăвансем, илемлет, таканла, аталаннă, канăç, кӳлĕре, хисепле, вулама, сĕркĕч, тутăрпа, типĕ, миршĕн, типнĕ, çунăк, выльăхсем, купăсçă.

**430.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр. Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикслă сăмахсене тупăр, çырса илĕр.

1. Тĕрĕслĕх ĕмĕрлĕх теççĕ. 2. Чăнлăх вилĕмрен хăтарать. 3. Тĕрĕслĕх хĕвелтен çутăрах. 4. Пирĕн тĕп пуянлăх — çынсем. 5. Туслăх хамăртан килет. 6. Çурхи кун çурма ăслă. 7. Тĕрĕслĕхе мухтаççĕ, ултава ылханаççĕ.

- Сăмах тăвакан аффикссем хăш пуплев пайĕсем çумне хушăннă?

**431.** Пĕр-пĕр ваттисен сăмахĕн пĕлтерĕшне ăнлантарса пĕчĕк калав çырăр.

Сăмахсене вулăр та танлаштарăр. Сăмаха улăштаракан аффикссене тупăр. Вĕсене кăларса пăрахсан мĕн юлать? Сăмах тымарĕ кунта хăшĕ?

*юман* — *юманлăх*
*юманăн* — *юманлăхăн*
*юмана* — *юманлăха*
*юманра* — *юманлăхра*

Сăмахран ăна улăштаракан аффикса кăларса пăрахсан юлакан пайĕ **сăмах тĕпĕ** пулать. Пĕрремĕш юпари сăмахсен тĕпĕ — *юман,* иккĕмĕш юпари сăмахсен — *юманлăх.*

Сăмах тĕпĕ е тымартан *(çыр, куç, тимĕр, çăка),* е тымарпа сăмах тăвакан аффиксран *(çыру, куçлăх, тимĕрçĕ, çăкалăх)* тăрать.

Тымартан çеç тăракан сăмаха **пĕрремĕшле сăмах** теççĕ: *тус, сиен, пух, эрне, кăк, выç, юмах, куç, алă, ура, хăлха, çÿç, хăяр, путек.*

Тымар çумне сăмах тăвакан аффикс хушăннипе пулнă сăмаха **иккĕмĕшле сăмах** теççĕ: *лару, туслаш, сиенлет, пуху, хырлăх, шутла, кăкла, выçă, юмахçă, пахчаçă, ларкăч, чĕнÿ, ĕмкĕч.*

Чăваш чĕлхинче икĕ сăмах тымарĕ сасă енчен улшăнса пĕрлешнипе пулса кайнă сăмахсем те пур: *асатте* (<аслă атте), *асанне* (<аслă анне), *улмуççи* (<улма йывăççи), *анкарти* (<авăн карти).

**432.** Панă сăмахсем çумне аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсем туса çырăр: пĕрисем *-çă(-çĕ)* аффикспа пулччăр, теприсем — *-лăх (-лĕх)* аффикспа. Пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслĕр.

*Хурама,* мыскара, халап, яшка, ирĕк, вĕçев, паха, тĕпчев, чĕлхе, *утар,* тÿсĕм, *пахча,* çамрăк.

• Палăртнă сăмахсемпе ыйтуллă предложенисем туса çырăр.

**433.** *-У(-ÿ), -ăк(-ĕк), -кăч(-кĕч)* аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсем туса çырăр. Мĕнле пуплев пайĕ пулнине калăр.

Сĕн, *хуç,* хыр, сып, ерç, *вĕр,* кан, пăс, çап, *хăр,* чар, пус.

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

**434.** Кам маларах? *-Ла(-ле), -лан(-лен), -лат(-лет)* аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсем туса çырăр.

Ут, сасă, вăрăм, *чее,* хак, пĕтĕм, чир, шыв, *кахал,* хӳтĕ, çемçе, суха, *сахал,* йĕр, тĕрĕс.

• Палăртнă сăмахсемпе туйăмлă предложенисем туса çырăр.

**435.** Сăмахсен тымарĕсене палăртса çырса илĕр.

Пĕрлеш, мирлеш, майлаш; типĕт, шĕвĕрт, мăкат; начарлат, çăмăллат, *тӳрлет;* хаярлан, *ĕмĕтлен,* мăклан; шавла, тĕрле, ывăçла; кăкар, *кăвакар.*

• Палăртнă сăмахсемпе ыйтуллă предложенисем тăвăр.

**436.** Сăмахсен тымарĕсене кăтартса çырса илĕр. Паллă ячĕсем мĕне пĕлтернине калăр. Палăртнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр.

Çĕрĕк, *катăк,* хĕсĕк; таркăн, вĕçкĕн, выçкăн; *йӳçĕ,* вилĕ, хытă, уçă; тачкамас, *çăмламас,* туратламас.

**437.** Кам нумайрах? Сăмах тăвакан аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсем тăвăр.

Ăста, ăслă, шанчăк, тӳрем, кăмака, сăвă, лав, çĕвĕ, тыт, çыхăн, йышăн, вĕçлен, хуп, йĕрке, паха, йыш, шик, тĕссĕр, шăрçа, илем.

**438.** Иккĕмĕшле сăмахсене тупăр та çырса илĕр. Сăмах тĕпне, тымарне, сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссене тĕслĕхре кăтартнă пек палăртăр.

**Тĕслĕх:** çырулăхпа.

Пулăçăсенчен, юманлăхра, юлташсемпе, танлаштарусем, савăнăçлă, пурнăçланать, мухтанчăка, тикĕтлерĕ, çинçешке, куçлăхсемшĕн, ĕнентерӳ, юмахçăран, пысăкрах.

**439.** Сăмахсене вулăр, сăнăр. Вĕсене мĕнле ушкăнсене уйăрма май пур? Ăнлантарăр. Ушкăнласа çырса илĕр.

*Касăк*, чĕлĕ, хиркĕч, анăç, уçкăч, хĕсĕк, *сыпă*, пурăнăç, хушăк, шыçă, тытăç, шăтăк, *майкăч*, каçă, путăк, кулă, сĕркĕч, катăк.

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр.

**440.** Сăмахсене вулăр. Вĕсене мĕнле ушкăнлама пулать? Хăвăр шухăша ĕнентерĕр. Сăмахсене çырса илĕр, аффикссене аялтан туртăр. Вĕсем мĕнле аффикссем пулнине ăнлантарăр.

1. Савала, суранлан, ыталаш, *илемлет*, вакла, *çумăрлан*, симĕслет, хаклаш, вĕренле, капăрлат, хăмпăлан, кутăнлаш, çӳпĕле.

2. Сухаçă, макăру, пуянлăх, çăткăн, *çилхемес*, тыткăн, кӳренӳ, элекçĕ, *тĕрĕслĕх*, мелкемес, тĕпчевçĕ, *ăмăрту*, чупкăн, шурлăх.

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем тăвăр.

**441.** Сăмахсене вулăр. Вĕсем пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмахсем пулнине калăр. Иккĕмĕшле сăмахсем мĕнле аффикссем хушăнса пулнă? Çавнашкал аффикслă пĕрер сăмах хушса калăр.

Çыртăк, хупă, ĕмкĕч, ӳкĕнĕç, кĕвĕле, илемлен, çăмăллат, витле, сăтăрçă, хĕрхенӳ, тавралăх, вăйламас.

• Пилĕк сăмах суйласа илĕр те вĕсемпе ыйтуллă предложенисем туса калăр.

**442.** Çак япала ячĕсенчен нимĕнле аффикс хушмасăр глаголсем тума пулать-и? Мĕнле?

Каç, тĕк, лакăм, пас, çип, пит, рис, тав.

**443.** Кам малашрах? Çакăнта миçе япала ячĕ?

Калав, курак, ăрăс, Урал, уйăх, ăвăс, сăран.

**444.** Çак глаголсенчен нимĕнле аффикс хушмасăр урăх глаголсем тума пулать-и?

Вит, кĕт, туп, хуп, хыç, каç, сăх.

**445.** Схемăна пăхăр. Пĕр тымартан иккĕмĕшле сăмах миçе тума май пуррине сăнăр, пĕтĕмлетӳ тăвăр.




> **Пĕр тымартан иккĕмĕшле сăмах темиçе те тума пулать. Тĕслĕхсем:** ***лар — лару, ларкăч; пĕл — пĕлӳ, пĕлӳлĕх, пĕлтер, пĕлтерӳ.***
>
> **Иккĕмĕшле сăмахсем çумне урăх аффикссем хушса каллех çĕнĕ сăмахсем тума май пур. Тĕслĕхсем:** ***çыр — çыру — çырулăх, пĕл — пĕлӳ — пĕлӳлĕх, çĕн — çĕнтер — çĕнтерӳ — çĕнтерӳçĕ.***

**446.** Иккĕмĕшле сăмахсем мĕнле пулнине тĕслĕхри пек ăнлантарăр.

Тĕслĕх: *çĕнтерӳçĕ* сăмах *çĕнтерӳ* сăмахран, *çĕнтерӳ* сăмах *çĕнтер* сăмахран, *çĕнтер* сăмах *çĕн* сăмахран пулнă.

Çĕнтерӳçĕ, савăнăçлă, суйлавçă, çырулăх, мухтанчăк, ăсталăх, тăрăшуллă, пĕлтерĕшлĕ, шутла, мухтавлă, пултарулăх.

**447.** Кам маларах? Сăмахсене виçĕ ушкăна уйăрса çырăр: сăмах тăвакан пĕр аффикс хушăннисене, икĕ аффикслисене, виçĕ аффикслисене.

Савăнăçлă, курăнăç, шыçă, ăслăлăх, чăтăмлăх, çутă, тĕпчевçĕ, хăравçă, йĕрлевçĕ, шăтăк, куçаруçă, танлаштару, çарамас, çыпăç, выçăх, патшалăх, тӳремлĕх.

**448.** Ӳкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнласа панă? Эсир камсене куратăр? Вĕсем ăçта каяççĕ? Ачасен сăн-пичĕ мĕнле? Ачасенчен виççĕшĕ мĕн тăваççĕ? Вĕсем çак класс ачисемех-ши?



• Ӳкерчӗкпе усӑ курса «Ҫуркунне ҫитрӗ» ятлӑ сочинени ҫырӑр. Сочиненире сӑмах тӑвакан тата сӑмаха улӑштаракан аффикслӑ тӗслӗхсене икшер тупӑр та аялтан йӗр туртса палӑртӑр.

## 50. Аффикслӑ сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси

**-Лӑ(-лӗ), -ла(-ле)** аффикссем усӑ сасӑпа тата **[л]** хупӑ сасӑпа пӗтекен сӑмахсем ҫумне хушӑнсан аффиксра икӗ **л** ҫырмалла:

а) *шӑмӑ+лӑ=шӑмӑллӑ, кӗпе+лӗ=кӗпеллӗ, ӑшӑ кӑмӑл+лӑ=ӑшӑ кӑмӑллӑ, ҫутӑ хӗвел+лӗ=ҫутӑ хӗвеллӗ;*

ӑ) *укҫа+ла=укҫалла, кивӗ+ле=кивӗлле; кӑшӑл+ла=кӑшӑлла, эмел+ле=эмелле.*

Ытти чухне яланах пӗр **л** ҫыраҫҫӗ: *хыҫлӑ, чаплӑ, моторлӑ, чирлӗ, мухтавлӑ, интереслӗ; кӗтесле, кулӑшла, ӳкӗтле, сунасла, чӑвашла, ӗмӗрле, ҫӳпӗле.*

**449.** Панӑ сӑмахсем ҫумне кӑтартнӑ аффикссене хушса ҫырӑр. Вӗсене мӗнле ҫырмаллине калӑр.

*-Лӑ(-лӗ):* кӑмӑл, каю, ҫунат, тӑрӑшу, тӑн, сасӑ, шӑмӑ, мел, укҫа, тӑвар, лачака, йӗрке, тӗтре, тӳме, диагональ, сухал.

*-Ла(-ле):* хурал, укҫа, ача, эмел, сунас, ачаш, пукане, кĕнеке, ҫӳле, эмел, ҫĕнĕ.

• Аффиксĕсем хăш сăмахра иккĕмĕшле сăмах тунине, хăшĕнче форма тунине пĕтĕмлетсе калăр.

**[Л]** сасăпа пĕтекен сăмах ҫумне **-лăх(-лĕх)** аффикс хушăнсан икĕ **л**, ытти чухне пĕр **л** ҫырмалла:

а) *ҫăмăл+лăх=ҫăмăллăх, йĕкел+лĕх=йĕкеллĕх, ывăл+ + лăх=ывăллăх;*

ă) *ырă+лăх=ырăлăх, тӳрем+лĕх=тӳремлĕх, чĕрĕ+ + лĕх=чĕрĕлĕх, мухтав+лăх=мухтавлăх.*

**450.** Кам маларах? Панă сăмахсем ҫумне *-лăх(-лĕх)* аффикс хушса иккĕмĕшле сăмахсем тăвăр, вĕсене мĕнле ҫырмаллине каласа парăр.

Чее, йĕрке, илем, йăмра, шĕшкĕ, ҫăмăл, хуҫа, ҫук, авал, чул, ҫамрăк, кахал, тĕс.

Хупă сасăпа пĕтекен паллă ячĕ ҫумне **-ăн(-ĕн)** аффикс хушăнсан сăмах вĕҫĕнчи хупă сасă вăрăмланать. Ăна икĕ сас палли ҫырса палăртмалла: *паттăр+ăн=паттăррăн, симĕс+ĕн=симĕссĕн, кăвак+ăн=кăваккăн.*

**451.** Панă сăмахсем ҫумне *-ăн(-ĕн)* аффикс хушса ҫырăр. Мĕнле ҫырнине ăнлантарăр.

Пысăк, хастар, пĕчĕк, ҫăмăл, тăвăл, вăрăм, вăрах, ахаль, кичем, чипер, ҫивĕч, ҫирĕп, хăмăр, чăпар, лайăх.

Уҫă сасăпа тата **[т]** сасăпа пĕтекен глаголсем ҫумне **-тар (-тер)** аффикс хушăнсан яланах икĕ **т** ҫырмалла: *вула+тар=вулаттар, ĕҫле+тер=ĕҫлеттер, кĕскет+тер=кĕскеттер, ларт+тар =ларттар, кала+тар=калаттар.*

Ытти чухне пĕр **т** ҫыраҫҫĕ: *виҫ+тер=виҫтер, пĕл+тер= =пĕлтер, кас+тар=кастар, ҫап+тар=ҫаптар.*

**452.** Панă сăмахсем çумне *-тар(-тер)* аффикс хушса çырăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине ăнлантарăр.

Ирт, вула, ĕçле, вырт, салат, вакла, çыр, пĕл, сăмахла, сып, ишĕл, имен, виç, пуй, ывăн, çун, хӳтĕле, тӳле, типĕт, кулян.

**453.** *-Лă(-лĕ), -ла(-ле), -лăх(-лĕх), -ăн(-ĕн), -тар(-тер)* аффикслă сăмахсемпе кашнинпе пĕрер предложени тупса çырăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине каласа парăр.

**454.** Кам нумайрах? Çак сăмахсем çумне аффикссем хушса çырăр. Вĕсене мĕнле çырмаллине калăр.

Тĕслĕх: *çыру — çырулла, çырулăх.*

Çыру, çирĕк, пĕлӳ, вĕç, асфальт, хытă, çепĕç, çил-тăвăл.

**455.** Вулăр. Тĕрĕс çырма хăнăхăр. Мĕнле аффикссем хушăннине астуса юлăр.

Музей — музейăн, *музея*, музейран, музейсăр; мавзолей — мавзолейăн, мавзолея, мавзолейра; сарай — сарайăн, сарайра, сарайран; юбилей — юбилейăн, юбилея, юбилейра, юбилейпа; учебник — учебникăн, учебникра, учебниксăр; дневник — дневникăн, *дневникра*, дневниксăр; старик — *старикăн*, старика, старикпа.

- Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса калăр.

## 51. Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем. Хутлă сăмахсене тĕрĕс çырасси

Икĕ юпара çырнă сăмахсене вуласа танлаштарăр. Вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Сулахайра çырнипе сылтăмрин пĕлтерĕшĕсем мĕнле? Пĕтĕмлетӳ тăвăр.

| | |
|---|---|
| *анкарти* | *авăн карти* |
| *асанне* | *аслă анне* |
| *кĕçĕр* | *ку çĕр* |
| *тăвайкки* | *ту айкки* |
| *кăçатă* | *кĕççе атă* |

Икĕ е виçĕ тымартан саса енчен улшăнса пĕрлешнĕ сăмаха **хутлă сăмах** теççĕ. Хутлă сăмахсене яланах пĕрле çыраççĕ. Тĕслĕхсем: *кăçал* (<ку çул), *улмуççи* (<улма йывăççи), *асатте* (<аслă атте), *асанне* (<аслă анне).

Асăннă тĕслĕхсенчен çакă курăнать: хутлă сăмахсем сăмах майлашăвĕсем пĕрлешнипе пулса кайнă. Ун пек чух сăмахсем сасă тĕлĕшĕнчен кăшт улшăнаççĕ.

Хутлă сăмахсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

1) сăмахсем кĕскелсе пĕрлешнипе пулнисем: *кăçатă* (<кĕççе атă), *пиçиххи* (<пилĕк çыххи), *хутруççи* (<хутăр йывăççи). Унашкал сăмахсем чĕлхе аталанса пынă май хăйсем тĕллĕнех пулса кайнă, вĕсене ятарласа туман.

2) вырăссен хутлă сăмахĕсен чăвашла çавăрттарса тунă тӳр килĕвĕсем: *райхаçат* (<район хаçачĕ), *электрохунар* (<электричество хунарĕ), *литкаç* (<литература каçĕ), *литпĕрлешӳ* (<литература пĕрлешĕвĕ).

**456.** Аяларах çырса панă хутлă сăмахсене сăнăр. Вĕсем мĕнле сăмах майлашăвĕсенчен пулса кайнине калăр.

Ыхрути, картиш, кĕçнерни, вырсарни, армути, çуртри, çуркунне, кĕркунне, çăраççи, çăварни, чĕркуççи, кĕçĕр.

**457.** Предложенисене вулăр. Хутлă сăмахсене тупăр та вĕсен пулăвне ăнлантарăр.

1. Утă капанĕсемпе улмурисем енчен фермăсенелле каякан çулсем çинче кăна тепĕр чух тулли тиевлĕ машина е урапа-çуна курăнкалать. *(Г. Орлов.)* 2. Пристаньрен ансан Петĕр автовокзала кайма шутларĕ. 3. Пӳртре çуркунне шăрши. 4. Салампие пурте алă çинче çĕклесе çӳреме хатĕр, ун çинчен райхаçатра та ырласа çыраççĕ. *(А. Артемьев.)* 5. Манăн аппа мединститутра вĕренет. 6. Çăварни иртсен виççĕмĕш каç ял халăхĕ урамра çӳреме чарăнчĕ. *(Илпек Микулайĕ.)*

**458.** Предложенисене вуласа тухăр. Вĕсенчи хăш-пĕр сăмах майлашăвне пĕрлештерсе хутлă сăмахсем тăвăр та предложенисене çырса илĕр. Хутлă сăмахра мĕнле улшăнусем пулнине каласа парăр.

1. Ку улма йывăççисем манран сана парне пулччăр. 2. Авăн карти хыçĕнчи лăпсăркка улма йывăççин хура мĕлки çеç палăрать. 3. Альтук вырăс эрни кун ирхине ирех района тухса кайрĕ. 4. Çтаппан тĕпленĕ кĕççе аттине тăхăнса ячĕ. 5. Ачасем ту айккинче ярăнаççĕ.

Чăваш чĕлхинче пуçламăш сасăсене е сас паллисен ячĕсене пĕрлештерсе тунă хутлă сăмахсем пур, анчах та вĕсем сахал тĕл пулаççĕ: *ШĔМ* (<Шалти ĕçсен министерстви), *ЧПУ* (<Чăваш патшалăх университечĕ), *ЧППУ* (<Чăваш патшалăх педагогика университечĕ).

Унашкал сăмахсене **аббревиатурăсем** теççĕ. Çӳлерех асăннă тĕслĕхсене çапла каламалла: *ШĔМ* [шĕм], *ЧПУ* [чăпăу], *ЧППУ* [чăпăпăу].

Чăваш чĕлхинче вырăссен юри кĕскетсе тунă сăмахĕсем пур. Вĕсене пуçламăш сас паллисене е сасăсене пĕрлештерсе тунă: *ООН* [оон], *ЕГЭ* [йэгэ], *БАМ* [бам], *ТАСС* [тасс]. Вĕсем чăваш чĕлхишĕн хутлă сăмахсем шутланмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене чăвашла вăрăмлатса калама пулмасть.

**459.** Сăмахсене вулăр. Вĕсене хăш чĕлхерен йышăннине тата вĕсен пĕлтерĕшĕсене калăр.

Билет, театр, вертолет, ГЭС, *радиоприемник*, электроаппарат, кормокухня, *фотоаппарат*, видеопроектор, телепроект, электрочейник.

- Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

Чăваш чĕлхинче икĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă ял ячĕсем йышлă тĕл пулаççĕ. Вĕсене пĕрле çырма йышăннă.

Тĕслĕхсем:

| | | |
|---|---|---|
| **касси (кас)** | **ял (ел)** | **çырма** |
| Çĕмĕрткасси | Çĕньял | Мăнçырма |
| Çĕнкас | Сăрьел | Типçырма |
| **пуç** | **вар** | **ушкăнь** |
| Çăлпуç | Типвар | Ванькушкăнь |
| Уйпуç | Хуравар | Яккушкăнь |
| **ту** | **уй** | |
| Чĕкету | Кивуй | Хĕрлĕçыр |

**460.** «Пирĕн районти ял ячĕсем» темăпа проект хатĕрлĕр.

**461.** Хăвăр таврари кӳршĕ ял ячĕсене алфавит йĕркипе çырăр. Вĕсенчен хăшĕсем икĕ тымарлă?

**462.** Предложенисене вулăр. Хутлă сăмах пулакан ял ячĕсене тупăр, вĕсене мĕнле çырмаллине калăр.

1. Çиçĕмкассинче ачасем пурте тенĕ пекех пĕр кил-йышăн — Шаймурзинсен. *(Н. Мартынов.)* 2. Капраловсен килçурчĕ Малтикасра, ансăртарах урамра, ватă йăмра айне пытаннă. *(Н. Мартынов.)* 3. Çав кун Çерушпа Полина ĕçе кайма пĕрлех тухрĕç, тусанлă урапа çулĕпе Варпуçнелле утрĕç. *(Н. Мартынов.)* 4. Сăрçире хăна çуртĕнче халь вăл, хамах кайса уйрăм пӳлĕм илсе патăм. *(И. Лисаев.)* 5. Вăтакас тĕлĕнче Çавал урлă каçă çук, вăхăтлăх кĕпер Мăн Çавалкас пуçĕнче. *(А. Ĕçхĕл.)*

## 52. Сăмах вырăнĕнче çӳрекен пĕрлешӳсем, вĕсен тĕсĕсем, тĕрĕс çырасси*

Панă тĕслĕхсене танлаштарăр. Вĕсем мĕн енчен пĕр пек, мĕн енчен уйрăм?

---

*Ку тема материалне Ю. Виноградов ĕçĕнчен илнĕ («Сăмах вырăнĕнче çӳрекен пĕрлешӳсем, вĕсен тĕсĕсем, тĕрĕс çырасси» темăна вĕрентмелли тĕслĕх материал // Халăх шкулĕ. — 2013. — 1 №. — 20—22 с.).

| | |
|---|---|
| *пӳрне — палец* | *кача пӳрне — мизинец* |
| *хуран — котел* | *апат хуранĕ — желудок* |
| *кас — резать* | *касса ил — отрезать* |
| *вула — читать* | *вуласа тух — прочитать* |

Чăваш чĕлхинче ăнлава пĕр сăмахпа та, сăмах пĕрлешĕвĕпе те палăртма пулать: *çĕр, улма — çĕр улми; шăл, туна — шăл туни; тӳрĕ, кăлар — тӳрре кăлар; ӳс, çит — ӳссе çит.*

Пĕрлешӳсенчен пĕрисем ят пĕрлешӳсем пулаççĕ (*кача пӳрне, шăмат кун, пит çăмарти, минтер пичĕ, апат хуранĕ, ура кĕлли*); теприсем — глагол пĕрлешӳсем (*касса ил, туртса кăлар, вуласа тух*).

Пĕрлешӳри сăмахсене пĕр-пĕринчен яланах уйрăм çыраççĕ.

**463.** Пăхăнтаракан сăмах улшăннине кура сăмах пĕрлешĕвĕсен пĕлтерĕшĕ епле улшăннине сăнăр. Хăвăр шухăша пĕтĕмлетĕр.

пит **çăмарти** — щека
пит **шăмми** — скула

вĕçсе **кил** — прилететь
вĕçсе **кай** — улететь
вĕçсе **хăпар** — взлететь
вĕçсе **ан** — слететь

**464.** Тĕслĕхсене вуласа тухăр. Пĕлтерĕш енчен килĕшсе тăракан тӳр килӳсене ушкăнăн-ушкăнăн çырса тухăр.

| | |
|---|---|
| шухăша кай | пурнăçла |
| пурнăça кĕрт | хапăлла |
| сăмах пуçла | шыва кĕрт |
| хапăл ту | шӳтле |
| шӳт ту | шухăша пут |
| сăтăр ту | калаçма тытăн |
| чăпăл ту | сиенле, сиен ту, сăтăрла |

**465.** *Çăл куçĕ, шыв куçĕ, çĕр улми куçĕ, йĕп куçĕ, кантăк куçĕ, чĕп куçĕ* пĕрлешӳсемпе чăвашсем мĕне-мĕне палăртаççĕ? Ят панă чухне çынсем япалан мĕнле паллине шута илнĕ?

**466.** М.И. Скворцовпа А.В. Скворцова хатĕрленĕ «Чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарĕн» (Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2014) 160-мĕш страницине вуласа тухăр. Вырăсла пĕр сăмахлă ятсемпе чăвашла икĕ сăмахлă ятсен тӳр килĕвĕсене мăшăрăн-мăшăрăн çырса илĕр. Ятсем мĕне-мĕне пĕлтернине калăр.

**467.** Текста вулăр, ят парăр.

Тӳпери сăрт-ту тăррисенче çĕлĕк еврĕлĕ çăмăл пĕлĕтсем татăла-татăла тухаççĕ. Çав çĕнĕ пĕлĕтсем теменле *япалана* та аса илтереççĕ: пир тĕркине те, мамăк купине те, упа сарри çулçине те, сурăх кĕтĕвне те, упасен ушкăнне те, *юмахсенчи* улăпсене те... Тӳпере мĕн-мĕн кăна курмастăн пулĕ çак самантра! Унта куçа курăнман художник тăтăшах ӳкерчĕк тăвать тейĕн. (*М. Козлов* çырни тăрăх.)

- Паллă тунă сăмахсенчи сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр пек-и? Ăнлантарса парăр.
- Сăмах вырăнĕнче çӳрекен сăмах пĕрлешĕвĕсене тупăр, вĕсене мĕнле çырмаллине калăр.

## 53. Мăшăр сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси

Вулăр, танлаштарăр. Икĕ юпара çырнă сăмахсем хушшинче уйрăмлăх пур-и? Вĕсем мĕнле пуплев пайне кĕреççĕ?

| | |
|---|---|
| *сĕтел-пукан* | *сĕтел тата пукан* |
| *атă-пушмак* | *атă тата пушмак* |
| *улма-çырла* | *улма тата çырла* |
| *улăх-çаран* | *улăх тата çаран* |

*Сĕтел-пукан* тени сĕтелпе пукана çеç пĕлтерет-и? Ăнлантарăр.

Чăваш чӗлхинче пӗр пуплев пайне кӗрекен сăмахсене мăшăрлатса каланă иккӗмӗшле сăмахсем пур. Ун пек сăмахсене **мăшăр сăмахсем** теççӗ. Мăшăр сăмахсене яланах дефиспа çыраççӗ. Тӗслӗхсем: *сӗтел-пукан, аттеанне, çăкăр-тăвар, ир-каç, ирӗн-каçăн, ватӑ-вӗтӗ, паяныран, тӗрӗс-тӗкел.*

Мăшăр сăмах яланах пӗтӗмлетӳ пӗлтерӗшлӗ. Тӗслӗхрен: *сӗтел-пукан* тени сӗтелпе пукана çеç пӗлтермест, ку шута шкап та, этажерка та, тумбочка та кӗрет.

Мăшăр сăмахсен пӗр тӗп ударени пулать, вăл яланах иккӗмӗш сăмах çине ӳкет.

**Асăрхăр!** Мăшăр сăмахсене паллă ячӗллӗ сăмах майлашăвӗсемпе пăтраштарма юрамасть. Вӗсене яланах уйрăм çырмалла: *çутă кăвак, тӗксӗм кăвак, шупка кăвак, йӗпкӗн хура, тӗксӗм симӗс.*

Кунашкал тӗслӗхсенче икӗ сăмахӗ те паллă ячӗ пулать. Малтанхи паллă ячӗ иккӗмӗшӗн уйрăмлăхне çеç кăтартать: *çутă кăвак кофта, тӗксӗм симӗс тутăр, шупка кăвак чечек.*

**468.** Çак сăмахсенчен мăшăр сăмахсем тăвăр. Вӗсем мӗне пӗлтернине калăр.

*Сӗтпе турăх,* ашпа какай, вутăпа шанкă, хаçат тата журнал, ир тата каç, ăслă тата тăнлă, *юрă* тата *кӗвӗ.*

• Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

**469.** Текста вулăр. Мăшăр сăмахсене тупăр та çырса илӗр.

Çынсем пăр çăвасран хытă хăрарӗç — нумай тытăнса тăнă шăрăх çанталăк хыççăн ун пек хăрушă инкеке кӗтсех тăр. Хăш-пӗр ăнман çулсенче пăр уй-хирти пӗтӗм тырра, килти пахча çимӗçсене ним юлми çӗмӗрсе каять. Çулталăкӗпех кулянатăн вара уншăн.

Паян тусанлă тăвăл куç-пуç курăнми ахăрса, çавăрттарса иртсе кайсан пăр çурӗ, анчах сиен кӳмеллех мар, вӗтӗ

пăрçа пек шăкăр-шăкăр çеç тăкăнкаларĕ. Кайран вара çумăр çитсе чашлаттарчĕ. (*А. Лазарева* çырни тăрăх.)

**470.** Эсир аслатиллĕ çумăр çунине сăнанă-и? Хăвăр мĕн асăрханине кĕскен çырса парăр.

Юпасенчи сăмахсене вулăр, пĕр-пĕринпе танлаштарăр. Хăш юпари сăмахсем тĕрĕс мар? Мĕншĕн?

| | |
|---|---|
| *аш-какай* | *аш-пулă* |
| *çăкăр-тăвар* | *çăкăр-пăтă* |
| *ирĕн-касăн* | *ирĕн-çĕрĕн* |

Кирек мĕнле сăмаха пĕрлештерсе каланипе мăшăр сăмах пулмасть. Ăна сылтăм юпара çырса кăтартнă тĕслĕхсем лайăх çирĕплетеççĕ.

Мăшăр сăмах тытăмĕнчи уйрăм сăмахсем пĕр-пĕриншĕн:

1) синонимсем пулмалла: *аш-какай, ӳй-хир, апат-çимĕç, ĕлĕк-авал, ăслă-тăнлă;*

2) антонимсем пулмалла: *ир-кас, лару-тăру, ватă-вĕтĕ, хĕлĕн-çăвĕн;*

3) пĕр йышши ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем пулмалла: *сĕт-турăх, çăкăр-тăвар, сĕтел-пукан, атă-пушмак, ал-ура, шăна-пăван.*

Хăш-пĕр мăшăр сăмахсем авалах пулса кайнă. Ăна иккĕмĕш пайĕнче сыхланса юлнă авалхи сăмахсем çирĕплетеççĕ. Вĕсем халĕ уйрăммăн тĕл пулмаççĕ: *савăт-сапа, юр-вар, ача-пăча, тĕрĕс-тĕкел, карта-хура.*

*хăна-вĕрле*
*йĕпе-сапа*
*арăш-пирĕш*
*хутран-ситрен*
*татăк-кĕсĕк*

**471.** Мăшăр сăмахсене вулăр та вĕсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕрлешнипе пулса кайнине калăр.

Шыв-шур, урлă-пирлĕ, сас-чӳ, юрă-кĕвĕ, çурт-йĕр, виç-тăват, пит-куç, ирĕн-касăн, унта-кунта.

**472.** Сăмахсене малтан вуласа тухăр, кайран суйласа илĕр те мăшăр сăмахсене пĕрлештерĕр. Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

Ĕлĕк, хал, *вăй,* вĕтĕ, *сӳрĕк,* укçа, вата, авал, сĕт, унталла, тенкĕ, выльăх, кунталла, ӳрĕк, *чĕрлĕх,* çу.

**473.** Кам маларах? Сăмахсем çумне вĕсен синонимĕсене хушса мăшăр сăмахсем тăвăр.

*Ĕлĕк,* какай, хĕн, *çаран,* тăнлă.

• Палăртнă сăмахсемпе ыйтуллă предложенисем туса çырăр. Ыйтăва мĕнпе палăртнине калăр.

**474.** Панă сăмахсем çумне вĕсен антонимĕсене хушса мăшăр сăмахсем тăвăр. Паллă тунă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

Ватă, *унта,* хура, каç, илӳ, *хĕлĕн.*

**475.** Сăмахсем çумне пĕр йышши ăнлава пĕлтерекен сăмахсем хушса мăшăр сăмахсем тăвăр.

Çĕлен, пушмак, турăх, păван.

**476.** Чăвашсем кăна хатĕрлекен апат-çимĕç çинчен словарьсемпе ытти кĕнекесенчен материал пухса тантăшăрсем умĕнче тухса калаçăр.

**477.** Мăшăр сăмахсене вулăр. Вĕсен тытăмĕнчи иккĕмĕш сăмаха тимлĕ сăнăр. Халĕ çав сăмахсем уйрăммăн тĕл пулаççĕ-и?

Арăш-пирĕш, армак-чармак, асар-писер, выльăх-чĕрлĕх, ача-пăча, аш-пăш, ăс-хакăл, ĕç-хĕл, йĕпе-сапа, йĕри-тавра, кӳршĕ-аршă, савăт-сапа, сас-хура, тăван-пĕтен, тĕрĕс-тĕкел, тимĕр-тăмăр, тути-маси, урлă-пирлĕ, хуйхă-суйхă, шăв-шав, ытлăн-çитлĕн, яш-кĕрĕм.

**478.** Ваттисен сăмахĕсене вулăр. Мăшăр сăмахсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕрлешнипе пулнине калăр. Мăшăр сăмахсенче сăмаха улăштаракан аффикссем пур-и?

1. Ача-пӑчана мул париччен ӑс пама хушнӑ. 2. Кӳршӗсӗр кил-ҫурт ҫавӑраймӑн. 3. Кӗпе-тумтир ан ҫӗтӗлтӗр тесен ӑна тӑхӑнмалла мар. 4. Кӳршӗ-аршӑ лайӑххи килти ҫемьепе пӗрех. 5. Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ теҫҫӗ. 6. Пӗри ака-сухара, ҫиччӗн сӗтел хушшинче. 7. Пӳрт-ҫурт тытма тӑн-пуҫ кирлӗ. 8. Выльӑх-чӗрлӗх пӑхмасӑр пулмасть.

*вут-шанкӑ*
*шыв-шур*
*улма-ҫырла*
*хаҫат-журнал*
*чӑх-чӗп*

Сӑмаха улӑштаракан аффикссем мӑшӑр сӑмахӑн икӗ пайӗ ҫумне те хушӑнма пултараҫҫӗ: *ҫӗрӗм-шывӑм, вӗҫӗ-хӗрри, хӑшӗ-пӗри, тырра-пулла.*

Аффикс ытларах мӑшӑр сӑмахӑн иккӗмӗш пайӗ ҫумне хушӑнать: *хӑш-пӗрне, йӗпе-сапара, сӑн-сӑпачӗ, атте-аннепе, атӑ-пушмакпа.*

**479.** Текста вулӑр, ят парӑр. Мӑшӑр сӑмахсене ҫырса илӗр, вӗсем мӗнле сӑмахсем пӗрлешнипе пулнине палӑртӑр. Сӑмаха улӑштаракан аффикссем мӑшӑр сӑмахсем ҫумне мӗнле хушӑннине каласа парӑр.

Акӑ ҫуралнӑ ҫӗршывӑм! Ҫул хӗррипе — шурӑ хурӑнсем, яштак хырсем, лаштра юмансем, лӑпсӑркка ҫӑкасем, лутра шӗшкӗлӗх. Уя тухсан инҫетри-инҫетри ялсем курӑнаҫҫӗ. Юр кайса пӗтнӗпе пӗрех ӗнтӗ, ҫырма-ҫатра ҫеҫ палӑркалать. Умра тӑван ялӑм, килӗм-йышӑм, тусӑм-тантӑшӑм... Ҫунат пулас пулсан халех унта вӗҫсе ӳкӗттӗм!.. Паянах вӗсене курса ыталатӑп-ҫке! Ӗненме те йывӑр...

Ыррӑн-сыввӑн таврӑнатӑп. Эй, аслӑ асатте-асаннесен юратнӑ ҫӗрӗ-шывӗ! *(А. Артемьев.)*

**480.** Ӳкерчӗке тимлӗ пӑхӑр. Ачасене ят парӑр. Ҫак ыйтусене ҫырмасӑр хуравлӑр.

Ку ӗҫ хӑҫан пулнӑ? Галя ӑҫтан тухать? Миша ӑҫта кӗрет? Вӗсен аллинче мӗн куратӑр? Лавккана тата кам килнӗ? Ун аллинче мӗн? Лавккара мӗн сутаҫҫӗ? Эсир ӑна мӗнле пӗлтӗр? Тата мӗн-мӗн сутакан лавккасене пӗлетӗр?

| | | |
|---|---|---|
| канфет | апат-çимĕç | апельсин |
| лимонад | аш-какай | арбуз |
| мармелад | сĕт-турăх | груша |
| пĕремĕк | алсиш | иçĕм |
| шоколад | кăçатă | мандарин |
| печени | пиçиххи | персик |
| торт | савăт-сапа | лимон |




• Ӳкерчĕк тăрăх «Лавккара» сочинени çырăр. Сочиненире рамка ăшĕнче çырнă сăмахсене суйласа илсе усă курăр. Хăвăр лавккана кайнине, унта мĕн-мĕн курнине аса илĕр.

• Мăшăр тата хутлă сăмахсене аялтан йĕр туртса палăртăр.

## 54. Икĕ хут калакан сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси

Вулăр, танлаштарăр. Сăмаха икĕ хут калани мĕне пĕлтерет?

| | |
|---|---|
| *Сарă-сарă чечексем.* | *Сап-сарă чечексем.* |
| *Хир-хир урлă каçрăмăр.* | *Хирсем урлă каçрăмăр.* |
| *Уява пин-пин çын килнĕ.* | *Уява темиçе пин çын килнĕ.* |

Пуплеври пěр-пěр сăмаха икě хут каласçě. Çырура икě хут калакан сăмахсен пайěсене дефиспа уйăрса çыраççě: *пин-пин, нумай-нумай, каларăм-каларăм, курки-куркипе.*

Пěр сăмаха икě хут каланипе çěнě сăмах пулмасть, сăмахăн форми çеç улшăнать.

Икě хут калакан япала ячě çав япала нумайййине пěлтерет: *ял-ял, чашки-чашки, кунě-кунěпе.*

Паллă ятне икě хут калани палла вăйлатса кăтартать: *шурă-шурă* хут листисем, *хěрлě-хěрлě* чечексем, *хитре-хитре* кěвěсем.

Икě хут каланă хисеп ячě япала нумайййине е хисеп паллах маррине пěлтерет: *пěр-пěр* кěнеке ил, *вун-вун* кěнеке туянчě, *пин-пин* ялта хěрÿ ěç пырать, *вуншарăн-вуншарăн* ушкăнланă.

Глаголсене те икě хут каласçě. Ку вара ěç нумай вăхăта тăсăлнине пěлтерет: *çыртăм-çыртăм, вуласан-вуласан, çÿрерě-çÿрерě.*

**481.** Икě хут калакан сăмах мěнле пуплев пайě пулнине калăр. Икě хут калакан сăмахсене мěнле сăмахсемпе (синонимсемпе) ылмаштарма май пур?

1. Вăл пěрре ашшě çине, тепре пиччěшě çине пăха-пăха илчě. *(Ç. Элкер.)* 2. Эпир шавла-шавла пěве хěррине анатпăр. *(А. Медведев.)* 3. Хумкка ларчě-ларчě те тухса кайрě. Кăмăлě тулнă пек те, тулман пек те туйăнчě ăна. *(В. Алентей.)* 4. Каçхи хулан тěп урамě пин-пин çутăпа ялкăшать. *(Л. Таллеров.)*

**482.** Икě хут калакан сăмахсене вулăр. Сăмаха улăштаракан аффикссем икě хут калакан сăмахăн хăш пайě çумне хушăннине калăр.

*Ут*: утрăм-утрăм, *çул*: çултан-çул, *ир*: ир-ирех, *юрла*: юрласан-юрласан, *кун*: кунран-кун, *пěр*: пěр-пěринпе, *çÿл*: çÿле-çÿле, *тěл*: тěлме-тěл, *кун*: кунě-кунěпе.

**Икĕ хут калакан сăмахсем тĕрлĕ аффикссем йышăнма пултараççĕ. Аффикссем сăмахăн кашни пайĕ çумне те, уйрăмшарăн та хушăнма пултараççĕ.**

**483.** Вулăр, аффикссем сăмахăн хăш пайĕ çумне хушăннине калăр. Палăртнă сăмахсемпе предложенисем туса çырăр.

*Лавĕ-лавĕпе,* машини-машинипе, ĕмĕр-ĕмĕрех, *пĕр-пĕринчен*, алла-аллăн, *куллен-кун*, пĕрне-пĕри, кам-кам.

**484.** Текста тĕрĕс чăрăнусем туса вулăр. Икĕ хут калакан сăмахсене тупăр, пĕлтерĕшĕсене калăр. Икĕ хут калакан сăмахсен пайĕсене дефиспа уйăрса текста çырса илĕр.

Кунĕ уяр, ăшă. Хĕвел пăхать. Ялти халăх, çурри ытла та пулĕ, аслă урама тăрăх ушкăнăн ушкăнăн сырăнса илнĕ. Çитĕннисемпе ватăраххисем пÿрт çумĕсенче, урам кĕтессисенче хăмасенчен тунă саксемпе пĕренесем çине лара лара тухнă. Нумайăшĕ урисем çинчех пĕр пĕринпе сăмахласа, савăнса, ахăлтатса тăрать. Хушăран хушăран вĕсем хыттăн ахăра ахăра яни илтĕнет. (*Хумма Çеменĕ* çырни тăрăх.)

**485.** Сăмах майлашăвĕсене вулăр та икĕ хут калакан формăсемпе ылмаштарăр. Вĕсемпе кайран предложенисем туса çырăр.

Тĕслĕх: *шап-шурă юр — шурă-шурă юр.*

Шап-шурă юр, нумай шухăшларăм, хĕп-хĕрлĕ чечексем, тĕмиçе вунă ача хушшинче, питĕ вĕтĕ хуртсем.

**486.** Калава вулăр, ят парăр. Хутлă, мăшăр, икĕ хут калакан сăмахсене тупăр, вĕсене мĕнле çырмаллине калăр.

Шурăмпуçне хĕрлĕ сăн çапрĕ. Шупкаланса, кĕренленсе сарăлнăçем сарăлчĕ. Тухас-и, тухас мар-и текен сарă хĕвелĕн те кĕçех хĕрри палăрчĕ. Кайăк-кĕшĕк паçăртанпах юрă шăрататать. Пин-пин сасăпа янăрать аслă вăрман. (*Г. Луч.*)

- Калавра мĕнле вăхăта сăнласа кăтартнă? Мĕн вăл шурăмпуç?
- Эсир хĕвел тухнă вăхăта сăнанă-и? Ун пирки мĕн калама пултаратăр?

## ХĂВĂР ПĔЛĔВĔРЕ ТĔРĔСЛĔР

**I. Ыйтусене хуравлăр.**

1. Сăмах пĕлтерĕшлĕ мĕнле пайсенчен тăрать?
2. Аффикссем миçе тĕрлĕ пулаççĕ?
3. Мĕнле сăмаха пĕрремĕшле сăмах теççĕ?
4. Иккĕмĕшле сăмах мĕнле пулать?
5. Мĕнле сăмаха хутлă теççĕ?
6. Мăшăр сăмах тесе хăшне калаççĕ?
7. Мăшăр тата икĕ хут калакан сăмахсене мĕнле çырмалла?

**II. Предложенисене çырса пĕтерĕр.**

1. Сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем — ... .
2. Аффикссен тĕсĕсем — ... .
3. Пĕрремĕшле сăмах вăл — ... .
4. Иккĕмĕшле сăмах вăл — ... .
5. Хутлă сăмах вăл — ... .
6. Мăшăр сăмах вăл — ... .
7. Мăшăр тата икĕ хут калакан сăмахсене ... çырмалла.

**III. Тест ыйтăвĕсене хуравлăр.**

**1.** Хăш ушкăнри сăмахсене пурне те дефиспа çырмалла?

а) Çултан çул, сап сарă, ăс пуç;
ă) тырă пулă, хăш чух, кунран кун;
б) пĕр пĕрне, йăмăх хĕрлĕ, кăмăл туйăм;
в) шап шурă, сайра хутра, сĕм тĕттĕм.

**2.** Хăш ушкăнра йăнăш çырнă сăмах пур?

а) Пултаруллă, ăмăртуллă, тăванлă;
ă) хастарлăх, тăвăрлăх, пуçаруллă;
б) аваллăх, хăюллăх, çăмăллăх;
в) калчаллă, сĕткенлĕ, каюллă.

# V КЛАСРА ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛСЕ ПĔТĔМЛЕТЕССИ

1. Чĕлхе ăслăлăхĕн хăш пайĕсем сасăсене, сăмахăн лексика пĕлтерĕшне, сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене, сăмах майлашăвĕпе предложенисене тишкерсе тĕпчеççĕ?

2. Орфографи чĕлхе ăслăлăхĕн хăш пайĕсемпе тачă çыхăннă?

**487.** Таблицăна пăхса тухăр, кашни юпана чĕлхе ăслăлăхĕн пайĕсем тишкерекен ăнлав ячĕсене çырăр. Ăнлав ячĕсене таблица айĕнче çырса кăтартнă.

| Фонетика | Лексика | Сăмах пулăвĕ | Синтаксис |
|---|---|---|---|
| | | | |

*Усă курмалли сăмахсем:* предложени, сăмах, сасă, сăмах майлашăвĕ, синоним, хупă сасă, антоним, ударени, хутлă сăмах, уçă сасă, аффикс, сăмах тĕпĕ, омоним, предложени членĕ, уçă сасăсен килĕшĕвĕ, чĕнӳ сăмахĕ, мăшăр сăмах, пĕр йышши член, хутлă предложени.

## 55. Синтаксиспа пунктуаци

**488.** Калава вулăр, ят парăр. Текстра пĕр йышши членлă предложенисем пур-и? Вĕсене палăртăр, пĕр йышши членсене мĕнле чарăну паллисемпе уйăрнине каласа парăр.

Кăçалхи çуркунне йĕркеллĕ килчĕ. Юр васкавлăн та турткалашса тăмасăр ирĕлчĕ[4]. Тăрисемпе шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç те килнĕ-килмен юрă шăрантарма пуçларĕç. Курак тăманĕ те вăйлă пулмарĕ. Хăмла плантацийĕнче çак çур-

кунне тăрăшмалли, вăй хумалли пайтах пулчĕ. Кивелнĕ юпасене улăштарчĕç, хăмла пахчине чылай пысăклатрĕç. Халĕ хăмла калчисем çур метр ытла ӳсрĕç ĕнтĕ. Паян хăмла пахчинче уйрăмах çĕкленӳллĕ, хаваслă шăв-шав илтĕнсе тăрать. Хăмлаçăсен сăн-пичĕ те хальччenхинчен çутăрах, илемлĕрех. Мĕн калăн ĕнтĕ, ырă, савăнăçлă ĕç вĕсен паян. Парка çĕкленнĕ «пепкесене» кăларас тесен пралукран явăнтарас пулать. Вĕсен çулĕ яланах çӳлелле, мĕншĕн тесен çӳлте усă çил, ылтăн хĕвел, кĕмĕл пек çутă пĕлĕтсем. Хăмла вара пуринчен те çӳле хăпарасшăн. *(В. Алентей.)*

- Текста 1-мĕш сăпатран каласа парăр.

**489.** Ӳкерчĕке сăнăр. Панă сăмахсемпе усă курса пĕчĕк калав çырăр. Текстра пĕр йышши членлă предложенисемпе те усă курăр.



1. Шкул, теплица, чечек, тюльпан, калча, лейка, тăпра, торф, савук, кантăк, пленка, чӳрече.
2. Хĕрлĕ, кăвак, симĕс, хитре, ăшă, савăнăçлă.
3. Ларт, ӳстер, кăпкалат, çумла, шăвар.

**490.** Текста вулăр, ят парăр. Пĕр йышши членлă предложенисене тупăр. Пĕр йышши членсем союзпа е союзсăр çыхăннине, вĕсене мĕнле чарăну паллисемпе уйăрнине каласа парăр.

Кукша пуҫ чечекпе тӗл пулас тесен улӑха е вӑрмана кайма кирлӗ мар. Пахчана тух та унӑн сарӑ чечекне кашни утӑмрах курма пултаратӑн. Хӑлха ҫакки куракӗ тенӗ ӑна тата.

Ку чечекӗн чӑвашла ячӗсем татах пур: майра пуҫ, сӗтлӗ курӑк, мамӑк курӑк, вӗҫекен курӑк, пуҫ курӑк, ҫӑмарта курӑк, хурхулӑх, хӗрлӗхен курӑк, сар чечек.

Чечекре виҫӗ эрне хушши ларнӑ хыҫҫӑн кукша пуҫ тӗссӗрленет, мамӑк пуҫ кӑларать. Тепӗр эрнерен парашют евӗр вӑррисем ҫилпе вӗҫме пуҫлаҫҫӗ.

Кукша пуҫ ҫуркунне ир чечеке ларать. Сарӑ чечексем ҫийӗн пыл хурчӗсем йышлӑн вӗҫеҫҫӗ, пылак сӗткене пухса юлма васкаҫҫӗ. (*«Тантӑш»* хаҫатран.)

• Кукша пуҫ чечекӗн ытти ячӗсене алфавит йӗркипе ҫырса илӗр. Сирӗн ялта ку чечеке урӑхла калаҫҫӗ пулсан ӑна та словаре хушса ҫырӑр.

**491.** Вулӑр. Текст планне тӑвӑр, ун тӑрӑх кӗскен каласа парӑр.

### Хураҫкапа ӑсан

Пӗррехинче эпӗ Лариван мучипе вӑрмана кайрӑм[4]. Пирӗнпе пӗрле Хураҫка та лӗпӗстетсе пычӗ.

Акӑ хутӑш вӑрмана кӗтӗмӗр. Кунта кӗреш юмансем, яштака ӑвӑссем тата шӗшкӗсемпе вӗренесем ӑмӑртмалла тенӗ пек ӳсеҫҫӗ.

— Тӑхта-ха, — тытса чарчӗ мана мучи. — Тимлӗрех сӑна-ха ҫав вырӑна.

Мучи каланӑ вырӑна пӑхатӑп. Юман ҫывӑхӗнче, ҫулҫӑллӑ вырӑнта, ӑсан хӑй чӗпписемпе ларать.

Ҫав вӑхӑтра йывӑҫсем хушшинчен Хураҫка чупса тухрӗ. Ҫакна ӑсан асӑрхарӗ те йытӑ еннелле вӗҫсе кайрӗ, анса ларчӗ. Хураҫка чӑлтах пуҫне ҫӗклерӗ, чарӑнса тӑчӗ, унтан кайӑк ҫине сиксе ӳкрӗ.

Эпӗ хӑранипе мучирен ярса тытрӑм: «Хураҫка ӑсана тытать вӗт. Эх, айван кайӑк...» Мучи ман еннелле пӑхрӗ те кулса ячӗ:

| |
|---|
| *тытать* |
| *килет* |
| *юлать* |
| *ҫиет* |

— Ан хăра, тытаяс çук ăна Хураçка. Асăрха.

Чăнах та, Хураçка хăй патне çитсенех ăсан сывлăша çĕкленчĕ те кăшт аяккарах кайрĕ. Хураçка вара каллех унталла вирхĕнчĕ. Ăсан Хураçкана астарать, анчах хăй патне çывхарсанах аяккалла вĕçсе каять. Кĕçех курăнми те пулчĕç вĕсем.

Кăшт вăхăт иртсен ăсан каялла чĕпписем патне вĕçсе килчĕ. Çапла майпа ăсан чĕпписене çăлса хăварчĕ. (*Н. Иванов* çырни тăрăх.)

- Тÿрĕ пуплевлĕ предложенисене тупăр, вĕсен схемисене ÿкерĕр.

**492.** Текста вулăр, унăн тĕсне палăртăр.

Пуху хыççăн ачасем Атăл хĕррине тухрĕç. Тин çеç çумăр çуса кайнă та, *бульварти лапсăркка* çăкасем хушшинчи *асфальт* сукмаксем тĕкĕр пек йăлтăртатса выртаççĕ. Лăпкă çил вĕрет, хĕвел пăхать, кайăксем юрлаççĕ. Атăл урлă карăнса тăракан асамат кĕперĕ *халь халь* сирĕлсе каяс пек *хумлăн хумлăн* чĕтресе илет. Асамат кĕперĕ айĕпе пăрахутсем шуса иртеççĕ, вĕсен шурă тĕтĕмĕ ирхи тĕтре пек шурса пырать. *(А. Клементьев.)*

- Хутлă предложенисене тупăр, мĕнле чарăну паллисем лартнине ăнлантарăр.
- Палăртнă сăмахсене мĕнле çырмаллине калăр, ун хыççăн предложенисене çырса илĕр.

**493.** Вуласа тухăр. Текст миçе пайран тăрать? Кашни пайĕнче мĕн çинчен каланă?

### Йăлăмра

| |
|---|
| *шупка кăвак* |
| *çутă кĕрен* |
| *тĕксĕм хĕрлĕ* |

Йăлăмра лăсăллă вăрман ытларах. Лăсăллă вăрманта сывлăш питĕ сиплĕ, уçă, таса. Пуринчен ытла хырлăхра çÿреме лайăх. Кунта хура вăрманти пек чăтлăхсем, урана чăлханакан çатăрка курăксем тĕл пулмаççĕ[4].

Йăрăс та тем çӳллĕш хырсем хушшинче чи хаклă йышши кавир пек мăк ӳссе сарăлнă. Вăл шупка кăвак тĕслĕ çипрен çыхнă чĕнтĕр пек курăнать. *(Г. Харлампьев.)*

- Пĕр йышши членлă предложенисене тупăр, пĕр йышши членсем ансăр е анлă пулнине калăр.
- Эсир мĕнле лăсаллă йывăççене пĕлетĕр?

## 56. Фонетикăпа графика. Орфографи

**494.** Кирлĕ сăмахсем лартса предложенисене çырса пĕтерĕр.

1. Чĕлхе ăслăлăхĕн сасăсем çинчен вĕрентекен пайне ... теççĕ. 2. Пуплев органĕсем шутне çаксем кĕреççĕ: ... . 3. Пуплеври сасăсене ... ушкăна уйăраççĕ: ... сасăсем, ... сасăсем. 4. Чăваш чĕлхинче ... уçă сасă. Вĕсем çаксем: ... . 5. Чăваш чĕлхинче ... хупă сасă, вĕсем çаксем: ... . 6. Чăваш алфавитĕнче ... сас палли, вырăс алфавитĕнче ... сас палли.

**495.** Малтан хытă уçă сасăсемпе, кайран çемçисемпе пуçланакан тата пĕтекен пĕрер сăмах тупса калăр.

**496.** Вулăр. Текста шухăшĕ енчен миçе вĕçленнĕ пая уйăрма пулать?

Çил вăл — сывлăш юхăмĕ. Çĕр çинче пĕр вырăнта сывлăш питĕ хĕрсе каять, тепĕр вырăнта сивĕнет. Вара çил çуралать. Аялтан сивĕ сывлăш вĕрет, çӳлтен — ăшă сывлăш. Сивĕ çĕрте ăшăтиччен, шăрăх çĕрте сивĕтиччен çил çаплах вĕрсе тăрать.

Çулла çурçĕрте каç пулмасть. Тĕрĕссипе, каçĕ пулатьха, çыннисем те çывăрма выртаççĕ. Хĕвел çеç анса лармасть, тавралăх та тĕттĕмленмест.

Хĕлле вара хĕвеле пач та кураймастăн. Тавралăх çутăлмасть. Ку вăхăта поляр каçĕсем теççĕ.

- Шавлă хупă сасăсемпе пуçланакан тата пĕтекен пĕрер сăмах тупса çырăр.
- Çурçĕр çинчен эсир мĕнле кĕнекесем вуланă? Унти çут çанталăк пирки мĕн калама пултаратăр?

**497.** Текста вулăр, ят парăр. Малтан хытă сăмахсене, унтан çемçисене çырса илĕр. Усă сасăсен килĕшĕвне (сингармонизма) пăхăнман сăмахсем миçе? Вăл сăмахсенче сингармонизма хăш сасăсем пăсаççĕ?

Сукмак çаплах анаталла илсе анать, çăл куç патне пырать. Çăл куçне пура янă, ытлашши шывне юхса тухма валак лартнă. Çăл куçĕнчен инçех мар — пысăк юман[1] валашка. Тултарсан — çирĕм витре кĕрет. Шывĕ унта пурха, пĕтмен, анчах ăшăнса кайнă. *(А. Емельянов.)*

**498.** Калава вулăр, ят парăр. Сингармонизма пăхăнман сăмахсене суйласа çырса илĕр.

Хĕвел ăшши çапнăран пĕтĕм çут çанталăк çĕрлехи ыйхăран вăранса çитрĕ. Курăксем çинче сывлăм шăрçисем типеççĕ. Сывлăш ăшăнать те сулхăнрах çĕре куçса йывăç çулçисене чӳхентерет. Чие чătлăхĕнче йăва çавăракан кайăксем чĕвĕлтетеççĕ. Йăмрасем[1] енчен куккук авăтса ячĕ. Анатра, ферма патĕнче, ĕнесем мĕкĕреççĕ, хурсем какалаççĕ. *(Г. Краснов.)*

**499.** Сăвва илемлĕ вулăр. Хăш сăмахсенче шавлă хупă сасăсем янăраса илтĕнеççĕ? Мĕнле позицире? Çав сăмахсене çырса илĕр, янăракан хупă сасса пĕлтерекен сас паллисене аялтан йĕр туртса палăртăр.

Чăваш сăмахĕ — мулăм ман,
Кăмăлăмпа та чăвашах эп.
Анчах эп вырăспа танах
Хăюллă пултăм, пултăм паттăр.
Ăшра янратчĕ яланах:
Эпир Российăра пурнатпăр.

*(П. Хусанкай.)*

- Эсир сăвă авторĕ çинчен мĕн пĕлетĕр? Унăн мĕнле хайлавĕсене вуланă?

**500.** Калава вулăр, ят парăр.

Çурхи кун каç еннелле сулăннă. Шăрантарса пăхакан хĕвел ăшшинче пĕтĕм çут çанталăк чĕрĕлнĕ. Юр айĕнчен

халь кăна тухнă çĕр ирĕккĕн сывласа, пăсланса выртать. Сукмак хĕрринчи тункатасем çумĕнче çĕлен калчи çинçешке симĕс чĕлхине кăларнă. Йывăç кăчкисем кӳпчесе хăмăрланнă. Вăраннă вăрманта кайăк-кĕшĕк туй тăвать. (*А. Артемьев* çырни тăрăх.)

- Хупă сассăн çемçелĕхĕ юнашар уçă сасăран килмен сăмахсене шыраса тупăр, çырса илĕр. Хупă сасăсен çемçелĕхне унашкал тĕслĕхсенче мĕнле палăртаççĕ?

**501.** Предложенисене вулăр, вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсене тупăр. Ударени хăш сыпăк çине ӳкнине калăр. Пуçламăш формăра ударени хăш сыпăк çине ӳкет?

1. Пирĕн таврари вăрмансенче çитĕнекен вĕренене ботаниксем «шĕвĕр çулçăллă вĕрене» тесе ят панă. *(Н. Матвеев.)* 2. Володя калама чарăнсанах Федька лав çине витнĕ брезента уçса ячĕ. *(Л. Агаков.)* 3. Çамрăк[1] пулсан та вăрçă вăхăтĕнче Ганс вĕçĕмех бригадирта ĕçленĕ. *(А. Ĕçхĕл.)* 4. Тăтăшах кĕнекесемпе брошюрăсем вулатпăр та ĕç ăсталăхне ӳстеретпĕр. (*«Капкăн»* журналтан.) 5. Владимир Мешковăн виçĕ картинине Третьяков галерейине илнĕ. *(Хв. Уяр.)* 6. Электричествине те, радионе те кĕртнĕ. Газпа телевизор кăна çук. (*«Капкăн»* журналтан.) 7. Йывăççем айĕн *ешĕл* курăкпа чечек газонĕсен тăрăхĕ выртнă. *(Уйăп Мишши.)*

**502.** Калава вулăр. Чарăну паллисене ăнлантарăр. Паллă тунă сăмахсене çырмалли правилăсене аса илĕр.

Кăнтăр çилĕ кăтра хурăнсене, яштак ăвăссене, мăнаçлă юмансене лăпкăн *ачашлать*. Çулçăсем алă çупсах *ташлаççĕ*. Лапсака çăка турачĕсем хушшинче пĕр ушкăн кайăк тем пирки *тавлашать*. Лăпкăн лара пĕлмеççĕ хăйсем, туратран турат çине *вĕçеççĕ*. Часах вĕсем ушкăнпах юнашар йывăç çине вĕçсе *лараççĕ*. Каллех чĕвĕл-чĕвĕл, чик-чирик...

## 57. Лексика

**503.** Сăмахсене вулăр. Лексика пĕлтерĕшĕсене шута илсе вĕсене таблицăри тивĕçлĕ юпана çырăр.

| Синонимсем | Антонимсем | Омонимсем |
|---|---|---|
| | | |

Лаша, ăшă, кайра, кӳршĕ, тус, ут, куян, турать, çул, çамрăк, симĕс, тăшман, сивĕ, пускил, шăпăр, вată, лутра, мулкач, сулă, ешĕл, тар, малта, çӳллĕ, вĕрет, çул, карас, уçă.

**504.** Калава вуласа тухăр та ят парăр.

Çуркунне пуçламăшĕнче тĕлĕнмелле *хитре* кунсем пулаççĕ. Çанталăкĕ иртен пуçласа каçченех хĕвеллĕ те лăпкă. Тӳпе утмăл турат çеçки пек кăн-кăвак. Çак вăхăтра пĕр-пĕр çӳллĕ сăрт çине *улăхатăн* та çирĕм-вăтăр çухрăмри вăрмансемпе улăхсене, ялсемпе хула хĕррисене куратăн. «Епле *анлă* иккен ман Тăван çĕршывăм», — тесе шухăшлатăн хавхаланса, çурхи сиплĕ сывлăша кăкăр тулли сывласа. Пĕлетĕн-ха, ку вăл — аслă Тăван çĕршывăмăрăн пĕр пĕчĕк пайĕ кăна.

• Палăртнă сăмахсен синонимĕсене тупăр, ылмаштарса вулăр.

**505.** Вулăр. Антоним пулакан сăмахсене тупăр. Вĕсене аялта панă сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр.

1. Çырма хĕрринчи çăкасем тутлă шăршă сараççĕ, шурă çĕмĕрт çеçкисем илемĕпе мухтанаççĕ. 2. Иртнĕ çул пан улми нумай пулчĕ. 3. Хăш-пĕр кун çанталăк питĕ сивĕ тăчĕ. 4. Икĕ тус шăппăн калаçрĕç. 5. Инçетре каçса кайсах куккук авăтать. 6. Çуркуннехи ĕç хакĕ кĕркунне курăнать.

Кирлĕ сăмахсем: *тăшман, çуркунне, сахал, хыттăн, хура, йӳçĕ, ăшă, çывăхра, кĕркуннехи.*

## 58. Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ. Орфографи

**506.** Сăмахсене икĕ юпа туса çырса илĕр: пĕрремĕшĕнче — иккĕмĕшле сăмахсем (сăмах тăвакан аффикс хушăннисем), тепринче сăмах формисем (сăмаха улăштаракан аффикс хушăннисем) пулччăр.

**Хăюллă, хăюлăх, вĕренӳ, вĕренмешкĕн, сыпăнуллă, хастаррăн, ирттер, пĕлӳ, пĕлӳлĕх, краклат, чĕвĕлтет, кăвакар, пилешлĕх, телейлĕ, вырăсла, мечĕкле, туслăх, кăмăллă, йăмрасем, суйлавçă, чечеклен, шкулта.**

**507.** Сăвва тĕрĕс те илемлĕ вулама вĕренĕр. Çакăн пек сăмахсене тетраде çырса илĕр: 1) вăрăм хупă сасăллисене; 2) дефис урлă çырнисене. Вĕсене мĕнле çырмаллине астуса юлăр.

**Çĕнĕ ĕмĕре кĕретĕп çĕнĕ юррăмпа**

Çĕнĕ ĕмĕр пуçланнă ятпа
Мĕн сунам-ши сире, мĕн сунам? —
Йышăнсамăр хĕрӳллĕ салам!
Çĕрĕм-шывăмăра юратса,
Тăванах халăха ыр сунса
Ĕмĕрех туслăхра[2] пурăнар,
Хĕрӳ ĕç лаççинче туптанар!
Ĕмĕрех Çеçпĕл пек тăрăшар,
Çеçпĕл пек хисеплер, юратар
Хамăр çепĕç тăван чĕлхене,
Тăван халăх сăвви-юррине...
Мĕн сĕнем-ши тата, мĕн сĕнем-ши? —
Çĕршывра хуçалантăр илем!
Пил илер аттерен-аннерен.
Тӳпере çут хĕвел ялкăшни,
Çĕршывсем туслăхра пурăнни —
Çав çĕклет, ăшăтать чунăма,
Çав чĕнет пурнăçа юратма!

*(В. Давыдов - Анатри.)*

• Пĕр йышши членлă предложенисене тупăр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

**508.** Предложенисене вулăр. Палăртнă тĕслĕхсем мĕнле сăмахсем пулнине, вĕсене мĕнле çырмаллине аса илĕр, каласа парăр. Ун хыççăн çавăн пек сăмахсене тетраде çырса хурăр.

1. *Çуркунне* пĕтĕм çут çанталăка чун кĕни паллă-ха. Çулла еннелле вара йывăç-курăк та, *кайăк-кĕшĕк* те вăй илсе çитеççĕ, çӳлелле кармашаççĕ. *(Н. Максимов.)* 2. Ача-пăча шавĕпе кĕрлесе тăракан урам хиртен таврăнакан выльăх-чĕрлĕхĕн çĕр тĕрлĕ сассипе тулса ларчĕ. Унта-кунта сурăхсем макăрни, ĕнесем кахаллăн ĕнĕрлени уйрăмах чĕрене çывăх, ырă туйăм çуратать. *(Е. Осипова.)*

• Пĕр йышши членлă предложенисене тупăр, чарăну паллисене ăнлантарăр.

**509.** Текста илемлĕ вулăр. Икĕ хут калакан сăмахсене тупăр. Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине тата мĕне пĕлтернине калăр.

Пăт-пат! ӳкеççĕ тумламсем. Юхаççĕ вĕсем, васкаççĕ, часах пĕр шарлава çитрĕç. Çитрĕç те çĕнĕрен малалла юхрĕç, васкарĕç тумламсем. Юхсан-юхсан çырмана шăнкăртатса[2] кĕчĕç. Пырса кĕчĕç те хумханчĕç, кăпăкланчĕç, шавларĕç, кĕрлерĕç.

Тумламсем савăна-савăна, кула-кула, пăркалана-пăркалана малаллах ыткăнчĕç. Ăçта каяççĕ, мĕншĕн васкаççĕ вĕсем?

Пĕчĕк çырмари тумламсем пысăк-пысăк çырмана юхса анчĕç. Пĕчĕк çырмари шывпа пысăк çырма шывĕ пĕрлешрĕç. Пĕрлешрĕç те мăнаçлă юхăм пулса тăчĕ. Юхсан-юхсан тумламсем ГЭС пĕвине пухăнчĕç. Вара хăватлă вăйпа кĕрлеттерчĕç турбинăсене. *(М. Белов.)*

• Аффикссем хушăнса пулнă иккĕмĕшле сăмахсене тупăр. Вĕсен пулăвне ăнлантарăр.
• Мĕн вăл ГЭС? Эсир ГЭС курнă-и?

**510.** Вулăр. Икĕ хут калакан сăмахсене тупăр. Вĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарăр.

1. Шурă-шурă хăпарту пек
Шурă пĕлĕт чăмăртанчĕ,
Ярăнса ишсе çӳрерĕ,
Кăвакарчĕ, вăй пуçтарчĕ.



*(С. Шавли.)*



2. Ăмăрт кайăк, ăмăрт кайăк,
Эс таçта та вĕçсе кайăн.
Ил мана хăвпа пĕрле
Тӳпене, çӳле-çӳле.

*(Юхма Мишши.)*

**511.** Предложенисене çырса илĕр. Мăшăр сăмахсенче дефис лартма ан манăр.

1. Манăн аслă аппа пир авăр комбинатĕнче çип арлакан цехра ĕçлет. 2. Кольăн чăмăр пит куçĕ тап-таса, çĕнĕ уйăх пек. 3. Йывăç çулçисем пур енче те вутăн хĕмĕн ялкăшаççĕ. 4. Çăвĕпех йĕпе сапа тăчĕ иртнĕ çул. 5. Паян атте тул çутăлнă çутăлман ĕçе тухса кайрĕ.

**512.** Вуласа тухăр. Текст планне тăвăр. Ун тăрăх каласа парăр.

### Хаклă туссем

Вăрман этеме мĕнле кăна ырлăх памасть пуль! Вутă çунтарса пӳрте ăшăтаççĕ. Йывăçран хут-кăранташ, сĕтел-пукан, пӳрт-çурт тăваççĕ.

Вăрманăн чи хăрушă тăшманĕ — хурт-кăпшанкă. Пĕрисем йывăççен çулçисене, вăрри-тĕшшине сиенлеççĕ, теприсем хуппине кăшласа хăртаççĕ. Çапах та вăрман ӳсет. Ăна çав хăрушă хурт-кăпшанкăран хӳтĕлекенсем — вĕçен кайăксем. Миллионшарăн тытса çиеççĕ вĕсене вĕçен кайăксем.

Кайăксемшĕн вăрман — тăван кил, вăрманшăн кайăксем — чи хаклă туссем. (*Г. Харлампьев* çырни тăрăх.)

# ĂНЛАНТАРУ СЛОВАРĔ

**Айпăлта** — пĕчĕк пуртă, платник пуртти.

**Алка** — тухья ҫине хăлха тĕлĕнчен ҫакса яракан кĕмĕл тенкĕллĕ эреш. Хăлха ҫакки.

**Ал лаппи** — 5 пӳрнепе (10,25 сантиметрпа) танлашнă.

**Алма** — ҫурăм, кăкăр ҫине ҫакмалли капăр. Ăна укҫатенкĕрен, хурт пуҫҫинчен, шăрҫаран эрешлесе тăваҫҫĕ.

**Алманчă** — хырçă-куланай, налог пуçтаракан ҫын.

**Алтăкла** — шăтар, шăтăк ту.

**Ама** — хĕрарăмсен мăйран кăкăр ҫине ҫакакан капăрлăхĕ. Сăран ҫине виҫ-тăвată ретпе ҫĕленĕ.

**Ана** — **1.** Тыр-пул ӳстермелли уй. Акса, лартса хăварнă е акма хатĕрленĕ ҫĕр лаптăкĕ. **2.** Ана-пӳ — ҫĕр лаптăкĕн виҫи. Ку пысăк виҫе палли шутланнă. Ытларах чухне вăл 80 чалăшпа, е 8 вĕренпе, танлашнă.

**Аршăн** — ĕлĕкхи тăршшĕ виҫи: 71,12 см, 1835 ҫулччен — 72 см. XVI ĕмĕрте вырăссем тутарсенчен илнĕ сăмах, чавса тенине пĕлтерет. Пĕр аршăнта 2 чавса е тăвată шит, е 15 (16) «хуҫлатнă» шĕвĕр пӳрне сыппи (вершук).

**Атма** — пулă тытмалли хатĕр.

**Ăмăр I** — хăш-пĕр чĕр чунсен кăкăр умĕ.

**Ăмăр II** — **1.** Пĕлĕтлĕ, тĕксĕм, тĕтреллĕ; **2.** *куҫăм.* Салхуллă, сӳрĕк.

**Ăрша** — тырă пиҫнĕ вăхăтра уйра пулакан сарă тусан; шăрăх ҫанталăкра ҫĕртен ăшă пăс хăпарни.

**Ăса** — ҫĕрĕ ҫинчи ҫипе пир ҫине урлă хумалли хатĕр.

**Базилик** — апата техĕм кӳрекен курăк.

**Вар** — ишӗлсе тӑракан сӑртлӑ ҫырма е курӑк пусса лапаланнӑ ҫырма.

**Вашават** — килен-каяна хисеплекен, таравват, этеплӗ, кӑмӑллӑ, уҫӑ кӑмӑллӑ, юмарт.

**Вершук** — ӗлӗкхи тӑршшӗ виҫи. Вырӑссенчен илнӗ виҫе. 1835 ҫулччен 4,5 сантиметрпа танлашнӑ, унтан вара — 4,44 сантиметрпа. Чӑвашсем ҫак виҫене 2 пӳрне хулӑнӑшӗпе танлаштарнӑ.

**Вӗрен** — ӗлӗкхи тӑршшӗ виҫи, ҫӗр виҫнӗ чух усӑ курнӑ. Вӑл вунӑ чалӑшпа танлашнӑ. Анчах та хӑш чухне вӗрен йӗпенсе тӑсӑлса кайма та пултарнӑ. Ҫавна пула виҫе тӗрӗс мар тухнӑ. Ҫакӑнтан хӑтӑлас тесе вӗрен вырӑнне сӑнчӑрпа усӑ курма пуҫланӑ.

**Евитле** — каласа пар, пӗлтер, хыпар ту, шалӑп пар.

**Енлӗк** — вӑрманти тискер кайӑксем, чӗр чунсем.

**Ентеш** — пӗр тӑрӑхра ҫуралнӑ ҫынсенчен пӗри, пӗр енчи ҫын; янташ.

**Ӗмпӳ** — патша, хуҫа, ертӳҫӗ.

**Ӗнтӗркке** — имшер, хавшак, вӑйсӑр, начар.

**Ӗнтрӗк** — хӗвел анса ларнӑ хыҫҫӑнах е хӗвел тухас умӗн пулакан ҫурма тӗттӗм вӑхӑт; каҫ пултти, тӗттӗм ҫутӑ.

**Ӗнтрӗклӗ** — уяр мар, тӗтреллӗ, пӗлӗтлӗ, тӗксӗм.

**Ӗнчӗ** — шапа хуранӗнче чӑмӑртанса пулакан хаклӑ йышши чул (ытларах шуранка тӗслӗ); ахах, мерчен.

**Илпек** — **1.** Пуян, ытлӑ-ҫитлӗ. **2.** Нумай, йышлӑ, тулли-ех. **3.** Тухӑҫлӑ, пуян тырӑ-пул, пахча ҫимӗҫ. **4.** Ҫирӗп, арканман, сӳнмен. **5.** Пархатарлӑ, ырӑ.

**Имӗр** — **1.** Ҫӑр, тӳ, ҫӑрса ҫемҫет. **2.** Пусса лапчӑт, нимӗр. **3.** Тапта, пусар, пусӑрӑнтар. **4.** Амант, ват, катса пӑрах, сусӑрлат. **5.** *куҫӑм.* Ҫӗнтер, пусар.

**Йӑлӑм** — улӑх-ҫаран, шыв илекен айлӑм; ейӳ айлӑмӗ.

**Йӗс** — пӑхӑр ҫине цинк ярса шӑратнӑ металл.

**Йӳн** — пурари пӗренесен пӗр ҫавра речӗ.

**Катер** — ырлӑх, тивлет, пехет, ӑнӑҫлӑх.

**Кӑнӑҫ** — ҫырлах, лӑплан.

**Кӗлет** — çуллахи çурт, япаласем е тыр-пул хумалли çурт. Ампартан пӗчӗк (2×3 — 3×4 тӑваткал метр).

**Кӗлте** — тыр-пула вырса, тунисене пуçтарса çыхнӑ кӑшӑл.

**Кӗрӗ, кӗр** — урасси çиппине уçса хума кирлӗ хатӗр. Икӗ хушӑри патак çине (аялти, çӳлти) йӑлласа, варринче çипписене тӳлесе пырса, çыхса çакнӑ çип карти. Çӳлти, аялти картасенчен тӑрать. Çӳлти кӗрӗ (икӗ кӗрӗ) патаккисене хӑлтӑрмач урлӑ стан мӑйраки çине çакаççӗ. Аялти кӗрӗ патаккисене ура пусмин кантрисенчен çыхаççӗ. Çипе кӗрӗ, хӗç витӗр кӑлараççӗ, стана кумаççӗ.

**Кутамас** — патвар, сарлака, тапчам.

**Кутник сакки** — ларкӑч, сак, тенкел. Алӑк е кӑмака çумӗнче ларнӑ.

**Кӳнтелен** — пӗр-пӗр ӗç-пуç мӗнле пулса иртнине курнӑ çын.

**Лаххан** — савӑт, ӑшӑх катка. Виçӗ уралла е икӗ хӑлхалла лаххансем пулнӑ.

**Лупас** — çӳллӗ мар аслӑк, çине пӗр еннелле тайлӑк туса витнӗ. Лупас юпасем çинче ларать. Лупас айне карта тытнӑ. Ӑшӑ çанталӑкра унта путек-сурӑх е хур-кӑвакал хупнӑ.

**Мерчен** — вӗтӗ, хаклӑ чултан тунӑ йӑлтӑркка шӑрçа, шапа хуранӗнче чӑмӑртанса пулакан хаклӑ йышши чул (ытларах шуранка тӗслӗ); ахах, ӗнчӗ.

**Пилӗк** — авалхи çӗр виçи, теçеттин (хальхи виçепе — 1,09 га). Налук, куланай виçи пек те çӳренӗ, тыррӑн 1/5 пайне хыснана панӑ.

**Пӳлӗхçӗ** — этеме ырлӑх-пурлӑх валеçсе паракан ырӑ Турӑ, ӑна тата кашни çынна çуралсан шӑпа валеçсе паракан тесе шутланӑ.

**Пӳрне** — пӗр пӳрнере виçӗ сыпӑк; кил-хуçалӑхра усӑ куракан виçе палли, кунта пӳрне хулӑнӑшне шута илеççӗ. Вӑл 2,05 сантиметрпа танлашнӑ.

**Резолюци** — йышӑну. Пуху, митинг йышӑнавӗ.

**Реферат** — кӗнекере е статьяра мӗн çырнине кӗскен каласа пани.

**Савук** — ăскăч. Çăнăх, шыв ăсмалли, çӳп-çап пуçтармалли савук.

**Сак** — ураллă тăсмак ларкăч. Тăрăхла, урлă, вăрăм, выртса тăмалли, кутник саккисем пулаççĕ.

**Салăк** — хуллен, вăрах.

**Сăхман** — чăвашсен çиелтен тăхăнмалли тумĕ.

**Сиктĕрме** — шăчă, шалçа.

**Сурпан** — хĕрарăмсен пуçа сырмалли тĕрĕллĕ тăрăхла тумĕ. Пит шăлли майлă вăрăм (250×30 см), вĕçĕсене тĕрĕлесе е тĕртсе, чĕнтĕрлесе илемлетнĕ.

**Çава** — утă, тырă çулмалли хатĕр. Çавана çурла хыççăн шутласа кăларнă.

**Çатрака** — вĕтĕ туратсем, çапă, шанкă.

**Çăпата** — пушмак, ура тумĕ.

**Çĕрĕ** — ăса çине лартмалли çĕрĕ. Ун çине хултăрчăпа ураçа çиппине авăраççĕ. Пир-авăр тĕртмелли хатĕрсен шутне кĕрет.

**Çухрăм** — тĕпчевçĕсем калана тăрăх, ку сăмах «çухăр» глаголтан пулнă. Пĕри çухăрнине тепри илтекен тăрăх, хушă. Апла пулсан ку виçе — сасă ăçта çити илтĕнме пултарнипе çыхăннă. Пĕрремĕш Павăл патша вăхăтĕнчи çухăрнă-илтĕннĕ хушă — 280 аршăн (200 м) шутланнă, 1835 çултан — пĕр çухрăм (1066,8 м), 1917 çул хыççăн — 1000 м.

**Такана** — курите, пысăк чашăк, валак — савăт; ăшăх курите, валашка, кункăра. Çурнă йывăçа малтан тул енчен чутласа çӳхетнĕ, унтан вар ăшне чакаланă.

**Тараса** — çĕклев, кĕвенте.

**Тарасаллă çăл** — пусă, унта шыв ăсса кăлармалли хатĕр, çĕклев пур.

**Тату** — мирлĕ, лăпкă, вăрçă-харçăсăр, шăкăл-шăкăл килĕштерсе пурăнни.

**Тăлăп** — çиелтен тăхăнмалли ăшă тум.

**Тевет** — хĕр упраçăн хулпуççи урлă çакмалли капăрĕ. Тевете сулахай хулпуççи урлă çакаççĕ.

**Тенкел** — кĕске сак.

**Теçеттин** — çĕр лаптăкĕ; авалхи çĕр виçи. 1835 çул хыççăн патшалăх теçеттинĕ — 1,0925 га. «Десятина» сăмах тыр-пулăн 1/10 пайне патшалăха тӳленĕрен чĕлхере çирĕпленнĕ.

**Тĕкĕрç** — ухăллă çар çынни.

**Тĕмен** — пысăк йыш, пысăк ушкăн. *Тĕпсĕре тĕмен çитмен* текен ваттисен сăмахĕнче çак сăмахах «пысăкки», «нумаййи» тенине пĕлтерет.

**Туйра** — çамрăк юманлăх.

**Турхан** — феодаллă Руçри çĕр улпучĕ, пĕчĕк феодал.

**Турчăка** — кăмакаран кăвар туртмалли çекĕллĕ тимĕр.

**Тӳтрешке** — теçеттин чĕрĕкĕ, 1/4 пайĕ.

**Тытма** — карлăк.

**Укăлча** — ял çумĕнчи, ял таврашĕнчи вырăн.

**Униче** — ял çумĕнчи çерем, çĕр, вырăн.

**Утăм** — пусăм; виçе палли, пысăках мар вăтам арçын уттипе танлашнă. Хальхи виçепе 88 см пулнă.

**Уяр** — янкăр, уçă, таса.

**Ӳрече** — урапа кашти.

**Хăй чикки** — виçĕ уралла, икĕ е тăватă туратлă чарак. Турачĕсем çинче тимĕр чĕрнесем. Чĕрнисем çине хăйă чикнĕ. «Урисем» çумĕнче шайккапа (лаххандпа) шыв лартнă. Çунакан хăйă кăварĕ шайкка çине ӳксе сӳнет.

**Хăлаç** — сарнă алăсенчи вăтам пӳрнесем хушши. Çак виçе 213 сантиметрпа танлашнă.

**Хĕсмет** — служба, çар ĕçĕ.

**Хĕç I** — пир тĕртнĕ чухне ураçа çиппине хĕстермелли тура евĕр хатĕр. Шутлă шăллă. Шăлĕсене енчĕклесе тунă йывăç рамăсене лартаççĕ. Ураçа çиппине ăсапа туртса хывсан хĕçпе хĕстереççĕ, ура пуссипе кĕрĕне улăштараççĕ, кунча çипписене (сĕм) хупса тытсан хĕçе каялла тĕртсе кăлараççĕ. Унтан каллех ура пусса ураçа çиппине хураççĕ, хĕçпе хĕсеççĕ. Çапла пир тĕртеççĕ.

**Хĕç II** — касмалли, чикмелли вăрçă хатĕрĕ.

**Хивсе** — пир станĕ çинче тĕртнĕ пире çавăрса туртса тăракан йĕтĕр, валик. Варринче тăрăхла çурнă хушă пур. Йĕтĕр пуçĕнче туя лартмалли тăватă шăтăклă купташка пур. Хĕснĕ пире туртса тăма купташкари шăтăка туя (стан туйине) тăхăнтараççĕ. Хивсе хулăнăшĕ 6—7 см, урлăшĕ станран 20—30 см сарлакарах.

**Хулкка** — путăш, ишкĕч.

**Хур** — ĕлĕкхи тăршшĕ виçи, 2 чике, 82 сантиметрпа танлашнă.

**Цитата** — текстран тĕп-тĕрĕс илсе кăтартни.

**Чалăш** — тăснă сулахай алă пўрни вĕçĕнчен пуçласа тăснă сылтăм уран пўрни вĕçĕччен шутланă. Вырăс халăхĕсен евĕр, 2,48 м пулма пултарнă. XIX—XX ĕмĕр пуçламăшĕччен «чалăш» тата «хăлаç» сăмахсене синоним пек усă курнă. Çавăн пекех чăвашсем чалăша *патак* «палка» тесе палăртни те тĕл пулать.

**Чатан** *диал.* — уксах.

**Чĕмпĕр** — хальхи Ульяновск хулин малтанхи ячĕ.

**Чĕрес** — савăт. Йывăçран чакаласа, кăшăлласа, тĕплесе, хупăласа тунă савăт. Йывăç витре.

**Чике** — ĕлĕкхи тăршшĕ виçи, 2 шит: чике хуçланăвĕнчен пуçласа ал чăмăрĕ таран. 41 сантиметрпа танлашнă.

**Шăпăр** — чăвашсен вĕрсе каламалли музыка инструменчĕ.

**Шăрка** — чечек тусанĕ.

**Шерепе** — нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах: сĕтел çитти шерепи, сĕлĕ шерепи, хăмла шереписем.

**Шит** — 2 ал лаппи, 18—33 сантиметрпа танлашнă.

**Шупăр** — чăваш хĕрарăмĕсен шурă пиртен çĕленĕ пĕрмечеллĕ ĕлĕкхи тумтирĕ.

**Шўлкеме** — чăваш хĕрарăмĕн кăкăр умне çакмалли вĕтĕ тенкĕпе шăрçаран тунă эрешĕ.

**Явкай** — кăнтăрла иртнĕ хыççăнхи вăхăт. Кăнтăрлапа хĕвел аничченхи вăхăт.

# ТУПМАЛЛИ

*Тăван чĕлхе* . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Пуçламăш классенче вĕреннине аса илесси**

1. Сасă тата сас палли. Алфавит . . . . . . . . . . . . . 5
2. *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллисене çырасси . . . . . 7
3. Сăмах тымарĕ. Аффикссем . . . . . . . . . . . 9
4. Пуплев пайĕсем: япала ячĕ, паллă ячĕ, местоимени, глагол . 11
5. Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . . . . . . . 17
6. Ыйтусăр тата ыйтуллă предложенисем. Туйăмлă (кăшкăруллă) предложенисем . . . . . . . . . . . . . 19
7. Текст. Унăн пайĕсем . . . . . . . . . . . . . . 22

**Синтаксис. Пунктуаци**

8. Чĕнӳ сăмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . 27
9. Текст теми, тĕп шухăшĕ . . . . . . . . . . . . . 31
10. Хутлă предложени. Çыхăну паллисĕр хутлă тата сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . . . . . . . . . . . . . 34
11. Текст планĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
12. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем . . . . . . . . . . . 46
13. Сăнлав. Калав. Ăслав . . . . . . . . . . . . . . 52

*Хăвăр пĕлĕвĕре тĕрĕслĕр* . . . . . . . . . . . . . . 56

**Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи**

14. Алфавит. Вĕреннине аса илни . . . . . . . . . . . 57
15. Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ . . . . . . . . . . 59
16. Уçă сасăсене палăртакан сас паллисем . . . . . . . . 63
17. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ . . . . . . . . . . . 64
18. Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни 71
19. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем сингармонизма пăхăнманни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
20. Стильсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 73
21. Хупă сасăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 78
22. Ялан янăравлă хупă сасăсем . . . . . . . . . . . . 80
23. Шавлă хупă сасăсем . . . . . . . . . . . . . . . 83
24. Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ . . . . . . . . . 87
25. Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртасси . . . . . . 90
26. Хупă сасăсем вăраммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси . . 93
27. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 100

28. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . 102
29. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *ф, ц, щ, ъ* сас паллисене çырасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . 104
30. Ударени (пусăм) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 107
31. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи ударени . . 110
32. Сăмахри усă сасăсем тухса ӳкме пултарни . . . . . . . . 113
33. Сасăсен ылмашăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 116
34. Чăваш чĕлхинчи сасăсемпе вырăс чĕлхинчи сасăсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсем . . . . . . . . . . . —
35. Чăваш ударенийĕпе вырăс ударенийĕ . . . . . . . . . . 119
*Хăвăр пĕлĕвĕре тĕрĕслĕр* . . . . . . . . . . . . . . . . . 121

**Лексика**

36. Лексика çинчен ăнлантарни. Сăмах пĕлтерĕшĕ . . . . . 122
37. Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем . . . . 128
38. Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем . . . . . . . 134
39. Омонимсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
40. Синонимсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 144
41. Антонимсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 151
42. Словарьсемпе усă курасси . . . . . . . . . . . . . . . 157
43. Ятарлă сăмахсем (Профессионализмсем) . . . . . . . . . 161
44. Йышăннă сăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 164
45. Кивелнĕ сăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 170
46. Диалект сăмахĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 177
47. Литература нормине пăхăнман сăмахсем . . . . . . . . . 179
*Хăвăр пĕлĕвĕре тĕрĕслĕр* . . . . . . . . . . . . . . . . . 192

**Сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ. Орфографи**

48. Сăмах тымарĕ тата аффикссем . . . . . . . . . . . . . 194
49. Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем . . . . 197
50. Аффикслă сăмахсене тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . . . 205
51. Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем. Хутлă сăмахсене тĕрĕс çырасси 207
52. Сăмах вырăнĕнче çӳрекен пĕрлешӳсем, вĕсен тĕсĕсем, тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 210
53. Мăшăр сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . 212
54. Икĕ хут калакан сăмахсем, вĕсене тĕрĕс çырасси . . . . 217
*Хăвăр пĕлĕвĕре тĕрĕслĕр* . . . . . . . . . . . . . . . . . 220

**V класра вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси**

55. Синтаксиспа пунктуаци . . . . . . . . . . . . . . . . . 221
56. Фонетикăпа графика. Орфографи . . . . . . . . . . . . 225
57. Лексика . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 228
58. Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ. Орфографи . . . . . . . . . . . 229
*Ăнлантару словарĕ* . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 232

*Учебное издание*

**Сергеев Леонид Павлович**
**Андреева Евдокия Александровна**
**Брусова Галина Федоровна**

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ
# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

**Учебное пособие для 5 класса**


Редактор *А.Г. Владимирова*
Художники *И.Е. Калентьева, А.В. Семенова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технические редакторы *Е.Е. Фомина, Л.К. Егорова*
Корректоры *Е.П. Казакова,*
*З.И. Гаврилова, М.Н. Арсентьева, Л.Д. Васильева*
Компьютерная верстка *Э.В. Кирилловой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—956600.
Подписано к печати 05.06.14. Формат 70×90[1]/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 17,55.
Тираж 4 250 экз. Заказ № 756. Изд № 100.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс: (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1».
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

110,00

Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2255-7